ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕМ

ТРАКТĂР

ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА КРИТИКĂ
АЉМАНАХĔ

ÇИЧЧĔМĔШ
КĔНЕКЕ

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР — 1938

Е. ЕЛЛИЙЁВ.

ЧЁН ТИЛКЕПЕ.

Калав.

„..Старые настроения часто одолевают колхозников, и они поддаются тому, что угодно кулаку, хотя самого кулака как будто в данном колхозе и нет".

К. Ворошилов. Речь от 19 февраля 1932 на 1-ом Всесоюзном с'езде колхозников-ударников.

Вăл тилкепе Самай çуртне ун ирĕкĕпе лекмен. Кӳлсе килнĕ пулнă колхозран лаша. Тислĕк тăкма кӳлсе килнĕ. Тăкса пĕтернĕ Самай. Лашине калле леçме хăйĕн вăхăчĕ пулман, куран: арăмне, Кулин инкене, леçме йанă.

Кулин инке тесессĕн, пĕлетĕр ĕнтĕ есĕр: хура вăл, шăтарас пек пăхакан хура куçлă, хура вăрăм çиттунилĕ, тап тăп тупалă тирпейлĕ арăм; пĕлтĕр-ха ун çинчен нумай калаçрĕç: колхоза панă лаши тенелпе килне килсе çаклансан виçĕ кун витерен кăларман, тет; çитерсе усранă. Лаша сухалнă тесе калаçа пуçласан çеç вăрттăн кăларса йанă, тет. Тен, есĕр те илтвĕ пулĕ-ха ăна. Çавхатер хытă, çуртшăн тăрăшакан арăм ĕнтĕ; пĕрмай килшĕн, кил вађђи тăрăшакан арăм

Çав арăм ĕнтĕ, лашана калле колхоза леçнĕ чухне лаши çумĕнчи чĕн тилкепене салтса йулат те, ун вырăнне хăйсен кив тилкепине—мунчала тилкепине çыхса йарса колхоз картишне леçме кайат. Лере никам та астумаст. Коњухсем пулман-и ĕнтĕ? Мĕнле пулнă-тăр. Килне килсен Кулин инке чĕн тилкепене кĕлете алăк хыçнех, курмала мар çĕре çакса хурат; упăшкине каламаст те.

Самай пĕлет ун çинчен виççĕмĕш кун кăна. Кĕлетре тем ухтарнă чухне çакăнса тăракан чĕн тилкепене курах кайнă. Пӳрте кĕрсен:

— Мĕнле тилкепе унта, кĕлетре, çакăнса тăрат? — тесе ыйтнă арăмĕнчен.

Арăмĕ чĕмнен. Темскер кăмака умĕнче муталаннă. Самай, арăмĕ сикменнине кура, хытарах, çилĕлех ыйтнă:

— Мĕнле тилкепе çакăнса тăрат, тетĕп?

Сиснĕ ĕнтĕ Самай: тикĕсех мар, аллисем арăмĕн мĕшĕлтетеççĕ тĕлсĕр, куçĕсем йалтраççĕ, Самай çине пăхма хăймасăр.

— Колхозăнне улăштарса йултăм, — терĕ вăл, вăтаннă пек, упăшки çине пăхса.

Самай харах кăшкăрса пăрахрĕ:

— Мĕн есĕ, ĕмĕр çука... вăрлама шухăш тытнă!

— Мĕн вăрлани вăл? — халĕ ĕнтĕ хăйне-хăй тĕрек тупса ляпкăн кăна тавăрат Кулин инке. — Ун вырăнне тилкепе панă вĕтĕ.

Самай темшĕн ку чухне хирĕç тавăрма сăмах тупайман. Сăмах тупайманнине кура, арăмĕ пушшех хытара пуçланă.

— Ун пеккине те вӑрлани тесессӗн...

— Пӗлсен ара... — тата хытӑрах кӑшкӑрнӑ Самай. — Мӗн кӑтартассӗ... Пӗлетӗн-и есӗ ҫавна?

— Ей, пӗлме ӑшшӗ! — шанчӑклӑ пусарнӑ Кулин инке. — Унта ҫӗр тилкепе те. Тахӑшӗ улӑштарнӑ. Ӗмӗрне те никам та пӗлес ҫук.

— Пӗлмӗҫ-ха! Кӗтсе тӑр! — пӑхӑннӑ сасӑпа, темле шухӑша кайса, тӗкелдлемесӗрех хушса хунӑ Самай.

— И-и — унта, ҫаҫи, — пӗтӗмпех ҫийеле тухса йӑпата пусларӗ Кулин инке. — Хаҫ унта пӗр чӗн хӑмӑт пӑйавӗ ҫук. Саккӑр теттӗн-и-ха. Пурте илсе пӗтернӗ. Пирӗн пек мар, вӑрлани тесе тӑмаҫҫӗ. Епӗр ӑна — кӑшт ӗмӗрте пӗрре илсенех: — „вӑрлани, вӑрлани“. Ниҫта кайса кӗрейместпӗр. Ӑҫта, тур ҫырлах! — мӑшкӑлашса тутине те тӑсрӗ. Упӑшки сассипе: „вӑрлани, вӑрлани“ тесе витлерӗ. Ҫапла чӑн ҫийеле тухсан кӑна виртлешет Кулин инке.

— Мӗн вӑрлани пулмала вӑл? — крутта кӑна каллех хӑй сасси ҫине куҫрӗ. — Пирӗн ӑҫта кайат ара. Пирӗн укҫапа илеҫҫӗ пуҫ ӑна.

Куҫне ҫеҫ тӗлӗнсе хытарчӗ Самай; ним те чӗнмерӗ. Килӗшмен ҫӗртенех, килӗшес мар тенӗ ҫӗртенех, арӑмӗн сӑмахӗсем хӑйӗнне турӗҫ.

„Каларӑшне, пурте вӑрласан“, — терӗ вӑл хӑй ӑшӗнче,— пӗри те вӑрламасан ӑна...„ — Унтан шухӑшне татса тула тухрӗ.

Тепӗр кун ҫапла иртрӗ. Тепӗр кун та вӑрласа хӑварнӑ чӗн тилкепе асран каймарӗ. Темӗскер чуна пӑшӑрхантарат: ырӑ мар пек туйӑнат, вараланнӑ пек, сӑтӑр тунӑ пек. Каҫпала вӑл тилкепене арӑмӗнчен вӑрттӑн, ӑна систермесӗр, леҫсе пӑрахас тесе те шухӑшласа хӑварчӗ. „Астумасӑр улшӑнса йулнӑ, тейӗн те — ӗҫ те пӗтрӗ!“ терӗ, хӑйне хистесе. Анчах, ҫавӑнтах, ырӑ мар пек те туйӑнса, халех кайма вӑхӑт та ҫук пек туйӑнчӗ.

„Таҫта тармӗ-ха! Ыран та леҫӗп!“ — тесе пусарчӗ вӑл шухӑшлӑ пуҫа. Ыран та ҫитрӗ: „Т ҫта тармӗ-ха, тепӗр кун та леҫӗп. Мӗн уншӑн. Пурпӗрех епӗ ӑна леҫетӗп“.

Тепӗр кун хайхи: „Мӗншӗн хаҫчен леҫмерӗн?“ тейессӗн туйӑнчӗ. Тата кам пӗлет: „Вӑрласа хӑварса хаҫчен леҫмен“, теме пултарӗҫ. Калӗҫ те... Санах айӑплӗҫ“.

Аптранӑ йеане вӑл, тилкепи патне кӗлете кӗчӗ. „Тен, тытӑп та леҫӗп те“ тесех кӗчӗ, тилкепине те тытрӗ. Анчах ҫутта тухсанах, тилкепен ҫемҫе, ҫутӑ сӑранне курсанах, шел пек туйӑнсах кайрӗ тата.

„Каларӑшне, ытла чечен вӗт-ха вӑл... Хӑварсан та... Мӗне тӑрат иккен колхозшӑн пӗр тилкепе. Сисӗнмест те вӑл, — шухӑшласа илчӗ вӑл тилкепене тӑскаласа,— хаклӑ тӑрат вӗт-ха вӑл!“

Тилкепи чӑнах ытла чипер: чӑмӑр, саккӑрла йавнӑ, вӗҫӗсене виҫ тӗлте укаласа тӑснӑ; йака ҫавхатер — пӗр сыпӑ пекки ҫук. Ун пек тилкепене тытсанах: — куҫ умӗнче вӗҫеҫҫӗ лайӑх лашасем, ҫил ҫунасем, илемлӗ ут таврашсем... Ех, лайӑх йапалана тыткалама та кӑмӑллӑ!

Мӗнле шухӑш кӳртмест пирс йапала. Мӗнле ирсӗр ӗҫ тумастпӑр епӗр йапала урлӑ. Мӗнле ҫавӑрмаст, пӑтраштармаст пирӗн

шухӑша ҫав хамӑр тунӑ йапала. Чӑннипех йапала тыткӑнӗнче вӗт епӗр пурӑнатпӑр. Мӗн тӑвассу пур. Капиталисӑм тивлечӗ.

Самай та акӑ: „Тен, тытӑп та леҫӗп те“ тесех кӗчӗ. Тытрӗ, пӑхрӗ тилкепене. Тэмскер каларӗ тилкепи. Сасӑсӑр темскер каларӗ. Тӗкеллесех каларӗ пулас: Ав Самай тилкепине калле меллесе ҫакса хучӗ. Аллипе тата ҫинчен сӑтӑркаларӗ:

„Маннӑ та пулӗ ӗнтӗ ҫухалнине. Мӗн унта тата астутарса ҫӳремеле!“

Татах тилкепи ҫине пӑхрӗ. Татах тилкепи тем каларӗ, куран:

„Леҫнипе те ҫав ӑраснах ырра тухаймӑн. Хӑнах вӑрҫӗҫ. Ыйтсан парӑп Елле татах. Епӗ ӑна вӑрлас тесе илмен вӗт“. Кӗлетрен тухрӗ. Ҫӑмӑллӑн сывларӗ. Темскер ӗнсе ҫинчен йӑваланса аннӑ пек туйӑнчӗ. Хӑйне хӑй пусарчӗ вӗт етем!

Пурте епӗр ҫапла. Мӗнле те пулин сӑлтав, мӗнле те пулин хамӑра йурӑхлӑ шухӑш тупатпӑр тупатпӑрах хамӑр ӗҫе тӳрре кӑларас тесе. Мӗнле таса мар ӗҫ пулсан та, шыра-шыра тупатпӑр мӗн те пулсан. Унтан лӑпланнӑ пек пулатпӑр. Хамӑра хамӑр умӑрта чиста, емӗш.

Тепӗр кун Самай пурпӗрех колхоз правленине шикленерех кӗчӗ. Кӗрсенех: „Акӑ вӑрӑ“ тесе кӑтартассӑн туйӑнчӗ. Ҫавӑнпа вӑл кӗрсенех кашни куҫӗнчен тӗпчерех пӑхрӗ, тӗпеле иртмесӗрех, мӗн калаҫнине итлеме пуҫларӗ. „Тилкепе ҫухални ҫинчен калаҫмаҫҫӗ-и“.

Чӑнах, сӑмах йапаласем ҫухални ҫинчен пулнӑ. Заҫедани мӗн мар — ахаљ ҫеҫ калаҫса ларнӑ. Бригадир, уҫӑ туталӑ, шурӑ шӑллӑ, куҫне мӑчӑ-мӑчӑ пӗрмай хупакансккер, йапаласем ҫухала пуҫланинчен тӗлӗннӗ:

— Мӗнле ха вӑл, кӑҫал йапаласем ытла ҫухала пуҫларӗҫ? Ҫак уйӑх хушшинче пӗр тилкепе, пӗр ҫӗнӗ чӗн тилкепе, пӗр чӗн урхалӑх таҫта кайса кӗчӗҫ. Урапана пӗрне улӑштарса йулнӑ. Мӗн тӗлне килчӗ-ха ку? Кулак темеле-и ӗнтӗ ӑна?

— Таҫта-ха вӗсем, кулаксем. Кулаксене туйӑттӑмӑрччӗ ӗнтӗ,— хушса хунӑ пӗр чӗрӗ куҫлӑ кайри сак ҫинче ларакан колхозник. Ана хӑй умӗнче Иван тесе чӗннӗ, хыҫӗнче Раслука Йарапарӑв тесе чӗннӗ. — Те ҫӗр ҫӑтат̆ вӑл йапаласене?

Тинкерсех пӑхрӗ ун ҫине Самай. Лешӗ пӑхсанах куҫне тартнӑ. „Ку та, ман хӑраххӑм, ҫаклатнӑ пуљ мӗн те пулсан“, шухӑшласа илчӗ Самай. — „Ҫавӑнпа вӑл кулаксем шырат̆ те“.

Сасартӑк темскер куҫ ҫинчен, шухӑш ҫинчен сирӗлнӗ. Хӑй вӗт вӑл кулак. „Ак ку — Иван, акӑ кулак. Вӗсем иккӗшӗ колхозӑнне вӑрланӑ. Кулак та колхозӑнне вӑрлат̆. Мӗнтен уйрӑм-ха епӗр кулакран?“

Ҫавӑнтах вӑл хӑйне колхозран инҫе, инҫе туйнӑ. Колхоз ҫемйи мар, унӑн сӑтӑрҫи. Вӗсем Иванпа иккӗшӗ пӗрле. Ҫыхӑннӑ. Пулунпа ҫыхӑннӑ. Кулаксемпе ҫыхӑннӑ. Хӑвӑртрах тарас килнӗ Самайӑн Ивантан. Анчах темскерпе ҫыхӑннӑ пек туйӑннӑ. Темскерле пӗрлехи ирсӗр ӗҫ ҫыхнӑ пек туйӑннӑ.

— Ҫав пур ҫав ӗнтӗ хамӑр колхозрах... Кулак майлӑ ӗҫлекенсем. Ҫавсен ӗҫӗ вӑл, — йулашкинчен хутшӑнтарса хунӑ бригадир. — Ҫавсене тӗрӗслес пулат̆.

Тӗлӗнмеле: — „ҫавсем“, „савсен“, „ҫавсене“ тени темшӗн савӑнтарнӑ. Колхоз йапалисем, тилкепесӗр пуҫне, тата та ҫухални темшӗн кӑмӑла ҫӗклевӗ. „Самай кӑна мар вӗт вӑрлаканни. Самай ӗмӗрте пӗрре илнӗ, урӑх ӗмӗрте те илес ҫук. Тепрев ҫавна кӑна пӑхса ҫӳрет. Каларӑшне, ҫынсем илнӗ ҫӗрте есӗ ним те илмесен, — ун чухне есех, Самай, вачар ҫын пулатӑн. Кулак-тӑк кулак — тепӗр йевчен. Ан тив, кулак пулам. Кулаксемпе пӗрле пулам Темскерех паман-ха мана колхоз та Халӗ! Темскер курмала колхозӗ те. Те пӗтмеле-ха? Пӗтин тата тепре каласан“.

Пӗтӗмпех лӑпланса килне вӑл таврӑнчӗ. Каҫхине пуйан Пулин патне кайса каласса ларма шухӑш та тытрӗ. Унпа колхоз пӗтесси ҫинчен лайӑх кӑна калаҫма. Килне кӗрсен тепӗр хут кӗлете кӗрсе тилкепине каллех тӑскаласа пӑхрӗ Унтан каллех ҫакса хучӗ. Татах пӑхрӗ. Тилкепе тӑрат ҫакӑнса тахҫантан, авалтан ҫакӑнса тӑнӑ пек... Хускатас килмест. Кӗлет илемне кӳрет. Ҫурт тулӑхне пӗлтерет. Ирӗксӗр хускатат тӗпри шухӑша:

„Кам пӗлет пурӑван кунҫула. Темскерле май ҫаврӑнмала-ха. Темскер курмала. Тен, татах лашалӑ пулмала пулӗ. Ун чухне хайхи тилкепе те кирлӗ пулӗ. Чен тилкепе вӗт-ха вӑл. Ытла лайӑх. Так ахалех ухмаха йерсе леҫсе пар-ха. Ун чух такам та ухмах тийӗ“.

Ҫӑварни ҫитрӗ ҫапла. Иртсе те кайрӗ. Типӗ ерни пуҫланчӗ. Кулин инке ҫав ерне ре тытӑнчӗ кӗлле ҫӳреме. Ытларах кӗл тӑва пуҫларӗ килте те. Ир те, каҫ та, кӗлӗрен килсен те, кӗлле кайаччен те...

Пӗрре ҫапла Кулин инке чӗркуҫҫи ҫинче кӗлтуса ларнӑ вӑхӑтра, тилкепи ҫинчен манӑҫа пуҫланӑ Самай, тӳшек ҫине ҫыварма выртнӑскер, арӑмӗнчен йури шӳтле ыйтрӗ:

— Тилкепе вӑрлани ҫинчен турра каласа патӑн-и-ха? Каҫарат-и вӑл сана?

— Вырт ӗнтӗ суйланса, ват супнӑ, шуйттан! — хӗресне хывма чарӑнса харр! кӑшкӑрса пӑрахрӗ Кулин инке. — Ӗҫӗ-хӗлӗ пӗтнӗ!

Унтан каллех малала кӗлтурӗ:

— „...Епӗр хамӑра парамлӑ пулнисене каҫарнӑ пек, пирӗн ҫылӑхсене те каҫар пире; ҫылӑха ан кӳрт пире, усалтан хӑтар пире“. — тесе пӗтерчӗ те, ури ҫине тӑчӗ. Унтан чӗрҫиттине салтса упӑшки ҫумне выртрӗ те, сасартӑк виртлесе ыйтрӗ:

— Сик леррех! Есӗ турра каласа патӑн-и-ха? Сана каҫарат-и вӑл? Мана мӑшкӑласа тӑратӑн!

— Епӗ вӑрламан вӗт, — лӑпкӑн кӑна хушрӗ Самай, — сана ҫылӑх — мӗн пулсан та.

— Нумай лӑркаса выртатӑн-и-ха, тупата... Ак, шуйттан ҫӑпати! Ҫав сӑмаха та каламӑттӑм ҫак таса ернере. Есӗ мана ҫылӑха кӳртме кӑна ҫуралнӑ. Антихрис, шуйттан!

Самай пӗлет арӑмне Пӗлет йепле ӑна хӑш чухне витерме те.

— Ҫылӑхран кӑна калатӑп, — тет вӑл, йури хуйхӑрнӑ пек пулса, — мавшӑн пулсан, хӑт те колхоз лашине варла.

Арӑмне ку сӑмах пӗртак ҫемҫетет. Хаҫ Самайа ҫийеле тухма ҫӑмӑл пулчӗ, мӗншӗн тесен Кулин инке ҫылӑхран хӑракан арӑм. Ҫылӑхран хӑраса вӑл пысӑкрах праҫниксенче кӗлле ҫӳрет, типӗ

тытат; праҫник каҫсенче упăшкипе пӗрле выртмаст. Чирлесен-тусан ҫынҫилли тăктарат, ваттисене хыват; чăн аслă турă тесе, Микулăн турра тата хӗртсурта хисеплет; хăш чухне турă сăмахне итлеме Пулун патне те ҫӳрекелет. Пӗр вăхăтра Кулин инкене паптиса та тухнă тесе калаҫкаларӗҫ те. Те тӗрӗс пулчӗ вăл, те ҫын сăмахӗ кăна. Мӗнле пулсан та, Пулуна вăл пит хисеплеччӗ. Ун патне час-часах ҫӳрекелеччӗҫ. Халӗ те вăл выртвă ҫӗрте пӗлтӗр Пулун патӗнче калаҫнă сăмаха асне илсех кайрӗ. Выртсан-выртсан вăл хăйне хăй пусарасшăн, упăшки чӗнменнине кура, вулашма пуҫларӗ:

— Темскер уншăн ҫылăх пулмала. Елле вăл пӗр-пӗр ҫыннăн-и. Хуҫалă йапалана илнӗ пулсан — татах. Ку вӗт хуҫасăр. Ха, уншăн сăвап пулат, тенӗччӗ Пулун тăван. Антихрис йăвине салатнăшăн — мӗн ҫылăх пулмала. Ҫылăх пулӗ тесе шухăшламастăп та епӗ ăна... Ил аллуна! Ăҫта хуран? Те ҫывăрса кайнă? А-а-а-х!.. Ей, турă. Ху патшалăхна кӗрсен патшалăхăнта асна ил мана. Ашшӗн, ывăлӗн, ҫветтуй сывлăшӗн...

...Вăл каҫ такки лайăх ҫывраймарӗ Кулин инке. Такки ҫав тилкепе асран каймарӗ.

Ирхине тăрсан, упăшкипе нимскер те калаҫмарӗ, пӳрт ăшчикне кăшт-кашт тирпейлекелерӗ те, хăвăртрах кӗлле тухса кайрӗ. Сисрӗ Самай: шутлӗ каланă сăмах арăмне пăшăрхантарма пуҫланине. Ку пӗртак темшӗн савăнтарчӗ те, анчах ҫавăнтах хăйӗн ăшне те манăҫа пуҫланă пăшăрхану хуллен сăрхăнса кӗнине сисрӗ.

Кантăрла иртерехпе арăмӗ кӗлӗрен килчӗ. Сăхсăхрӗ. Тумтирне хыврӗ. Пичӗ тухса кайнă чухнехи пек мар. Лăпкă хаљ, нимскерле пăшăрхану та палăрмаст. Самай йури ним те чӗнмерӗ.

Арăмӗ сӗтел ҫине тирпейле пуҫларӗ, чей лартрӗ. Самай каллех хаш! хуйхăрса йачӗ. Пӗлтӗр, имӗш, ун ҫылăхӗшӗн хуйхăрат.

Ҫиме те ларчӗҫ. Самай ним те чӗнмерӗ. Хаш! та хаш! Хаш! та хаш! хуйхăра пуҫларӗ. Шеллерӗ, куран, Кулин инке те пăхса лара-лара.

— Ес такки ҫав тилкепешӗн хăш та хаш! хуйхăратни? Мӗн пулнă сана? — Упăшки ним те чӗнменнине кура, татах пуҫларӗ.

— Пайан пуппа калаҫрăм ентӗ... Ҫылăх каҫарттарнă чух ыйтрăм. „Колхоз тилкепине улăштарса йултăмăр, уншăн ҫылăх пулат-и“, терӗм те... „Ҫук! — терӗ. — Вăл ҫылăх мар, — терӗ. — Мӗншӗн тесен, — терӗ, — вăл колхозăн пурлăхӗ, — терӗ.— Вăл туласа, тăпăлтарса, вăрласа пухнă пурлăх, — терӗ. — Вăрланине вăрласан ҫылăх ҫук, ҫылăх малтан вăрлакана кайат“, — терӗ. Унтан тата темскер Соломонсем ҫинчен каларӗ те, ăна ăнланаймарăм.

— Аха... — терӗ пӗртак ҫӗкленсе Самай. Арăмӗ айăпсăр калаҫса ларнине курсан, вăл пушшех чӗре патӗнче темле кăвасак туйа пуҫларӗ, калăн, арăмӗ ăшӗвчи пăшăрхану лӗтӗмпех калле куҫрӗ Самай ăшне. Пуринчен ытла „вăрланă“ тенӗ сăмах ырă маррăн ыраттарчӗ.

— Унтан тата: „вăрлани та мар вăл, — терӗ.— Мӗншӗн тесен, вăрласан хуҫа пулат, — терӗ.— Колхозра кам хуҫа? Унти пурлăх вӗтӗ манăн та, санăн та, унăн та... пурин те. Камăнне вăрланă

есӗ? Никамӑнне те вӑрламан. Хуҫасӑр йапалана вӑрланӑ. Вӑл тунипе пурпӗрех. Апла пулсан ҫылӑх та ҫук,—терӗ.

— Пуп, ара, вӑл калӗ,—пӗтӗмпех пӑшӑрхана пуҫлаҫа хушрӗ Самай.—Пуп, ара, вӑл колхоза кураймаст те, пӗтересшӗн тӑрӑшат те... Есӗ те пӗтересшӗн-им ара колхоза? Пуп! Пуп, тенӗ те, каҫнӑ кайнӑ. Пуп вӑл—тем те калӗ!

— Пуп калӗ мар, ђађи,—каллех ҫӗкленчӗ Кулин инке.—Тӗрӗсне калат вӑл. Хамӑрӑнне ав икӗ мӑшӑр ·ӑран хӑмӑт, пӗр тилкепе, икӗ ҫуна, пӗр урапа илсе кайрӗҫ. Ай-йай, ун чухне аван марччӗ. Ҫынсем мӗн панӑ? шалча-и? Манӑн ҫук теҫҫӗ те, чи лайӑх сбруйсене пытарса хӑвараҫҫӗ. Епӗр апла хӑтланма шухӑшламан та... Тепрев хӑй пама мар, ҫаклатма пӑхат-тӑр-ха. Пирӗн хӑмӑтсем пур-ши унта? Пирӗн тилкепе пур-ши? Вӑрласа пӗтернӗ пулӗ ӗнтӗ тахҫанах.

Самай чӑнах асне илет: вӑл кутӑруҫӑн хӑйӗн хӑмӑчӗсене курман. Те вӗсене пӗр ҫӗре хунӑ, те вӑрласа пӗтернӗ...

„Каларӑшне,—шухӑшлат вӑл арӑмӗ сӑмахӗсене хӑлха вӗҫӗпе итлесе,—илчӗҫ, илчӗҫ манран, мӗн чухлӗ йапала панӑ. Тепринчен нимскер те илмен. Вӑлах лайӑх хисепре. Ха, вӑлах вӑрлат. Пӗртте сан пек—„ырӑ мар-ши“ тесе тӑмаст“. Анчах хӗрнӗ шухӑш хаљ кунпа пусӑрӑнаймаст, тата, йӑпатакан шухӑш шырат:

„Лаша пӑхакансен астӑварах памала. Ҫапла вӗрентмеле-ха вӗсене. Ӳлӗмӗнчен чӗрӗрех пулччӗр“.

Ку шухӑш иртсе кайат те, тепӗр шухӑш ун вырӑнне йӑпатма ӗлкӗрет.

„Кам тата апла урӑх хӑтланат. Пӗртен-пӗр раз иккен. Урӑх тем парсан та колхозӑн пӗр шӑрпӑкне те илмест. Куна та вӗт вӑл хӑй илмен. Арӑм—шуйттанӗ. Ан тив ӗнтӗ, пӗрре илнӗ тӗк... илнех пултӑр“.

Ку шухӑш татӑлса ҫухалса ӗлкӗреймест, тепри ҫупӑрлат: „Патшалӑхӑн те хытӑрах айӑпламала вӑрлакансене. Тек вӗсене пуҫӗсенчен шӑлса каҫарат. Пӗлтӗр, ара, Куҫмасене вӑрлӑх пытарса хӑварнӑ ҫӗртен тытрӗҫ те, ним те тумарӗҫ. Ҫав пуҫлакансене хытӑрах авмаллачче. Пурте хӑраса тӑрӗччӗҫ“.

Татах та татах суйласа, вӑл тӗрлӗ хӑй майлӑ шухӑш пуҫне кӳртет. Пуп сӑмахне, Пулун сӑмахне вӑл аса илет. Вӗсем те пӑртак лӑплантарнӑ пек туйӑнаҫҫӗ. Вӗсем те тӗрӗс пек туйӑнаҫҫӗ. Унтан аса килет—хӑйсем асаплапса колхоз туни. Мӗн чухлӗ мӑшкӑл курман вӑл колхоз пирки. Ха, виҫӗм ҫул кӑна унпала вӗт йалти пӗр „ырӑ ҫын“ калаҫмастчӗ. Ҫавна асне илсен тата чӗре хытӑрах ырата пуҫлат. Мӗншӗн-ха ҫапла асаппа пуҫласа йанӑ колхоза хаљ вӑрласа ҫаратасшӑн тӑрӑшмала... Пурте вӑрласан мӗскер курӗ колхоз. Колхоза пӗтересшӗн-и вӑл? Ҫук, пӗтересшӗн мар. Вӗсемпе пулмасан камсемпе? Чӗре темскерле сарӑлат ӑшра, чӗре мӗн пур ӑша тулнӑ пек туйӑнат; чӗре ҫинче сиккелеҫҫӗ пек тӗрлӗрен тӗрлӗ шухӑшсем: вӑйли, вӑйсӑрри, тӗлли, тӗлсӗрри, майли, хирӗҫҫи... Ӑнтан каймала.

— Леҫсех пӑрахмасӑр мура,—тет вӑл ҫинӗ хыҫҫӑн ҫывӑрма выртнӑ арӑмӗ йенеле ҫилӗпе пӑхса. Арӑмӗ выртат хеперсӗр; ахӑрнех тӗлӗкӗнче те ҫук-тӑр. Вӑл пушшех ҫиллентерет Самайа.

Тепĕр кун колхоз правленинче каллех çав йапаласем çухални çинчен илте-илте килне пырса кĕчĕ Самай хайар.

— Сан пирки акă... Темскер курăн-ха! — кĕрсенех кăшкăрчĕ вăл арăмне. — Мĕн ĕçлеме илсе йулнă-ха вăл çав тилкепене?

— Мĕн тата? — пĕр хăрамасăрах ыйтрĕ арăмĕ.

Самай чĕнмерĕ. Пĕлет вăл арăмне йепле вирлĕрех хирĕçтерме.

— Мĕн пулнă тетĕн? — тарăхса кăшкăрчĕ Кулин инке. — Пĕлнĕ-им ара? — кăшт хĕресленчĕ. Шикленчĕ те пулас.

— Мĕн пулчĕ? — арăмĕнчен те çӳлерех çĕклерĕ сассине Самай. (Калас пулат: вĕсем кирек-мĕне те çапла кăшкăрашса калаççĕ. Хирĕçмесĕрех кăшкăраççĕ. Йали çапла та ĕнтĕ).

— Пулсан кăна-и? Пĕлсен, ара, мĕн пуласса пĕлетĕн-и есĕ? Тĕрмене вунă çула ăсататăн вĕтĕ... Мур! Çав сăмаха та каламăттăм.

— Ăсанчĕ тата! Асту! — мăшкăлашса, йĕрĕннĕ пек кăшкăрчĕ Кулин инке. Вăл упăшки кăшкăраша пуçласан, кăшкăрмасăр, çĕлен пек чашкăрса калат вара. Халь пушшех. Хărани хăратнине тăманнине кура упăшкине чунтан питлеме пуçларĕ.

— Ей, тулмаст те, тулмаст ĕнтĕ... тфу! — терĕ вăл чĕрепех. Унтан сассине çӳлерех çĕклерĕ.

— Çынсем тилкепе мар, урапа вăрлаççĕ... Асăнче те çук. Ку пĕр тилкепе кĕлеткине илнĕ те... Пĕтет, пĕтет ĕнтĕ. Пĕтĕмпе йĕрĕнтерсе пĕтерчĕ. Хăлха йĕрĕнсе çитрĕ ĕнтĕ. Леçсе пар! Тахшине кирлĕ! Çĕпĕре ан йаччĕр, асту! Йе персе вĕлерĕç ака.

Сассине вăл тата çӳлерех çĕклерĕ.

— Пĕтереççĕ ĕнтĕ... Ырă чуна. Ей! Пулмаст шуйттан! Лӳппер! Кĕлĕмçĕ. Çав сăмаха та каламăттăм, çăвар тути сайа йарса.

— Мĕн тумала, ара, çав тилкепе? — татах кăшкăрчĕ Самай.— Çапла пăхса тăма илсе йултăн-шим ĕнтĕ? Кам илет ара ăна хаљ? Кама кирлĕ! Хаљчен вăрламаннине, ĕмĕр çука хăтланатăн.

Самайĕ те чейе. Пĕлет арăмне мĕн калаcа тавăрмалине,— „вăрă“ тенĕ сăмах ырă сăмах марçке-ха.

— „Вăрланине“, „вăрланине“,— тутине чăсса мăшкăласа илчĕ Кулин инке. — Ăçта, тур çырлах! Таса чун. Вăрлани пулат-и çав, ухмах. Ай, тур, тупата, тертлентерме кăна çуралнă џулĕ есĕ маншăн. Çав ухмаха килсе пуçа чикрĕм! Ай, туру! Тфу! Пăх-ха есĕ ăна. Хамшăн-им епĕ çавхатер тăрăшатăп, хамшăн-им, есрелĕ? Вăт, чун тертлентермĕш, шуйттан. Мана кăна кирлĕ-им? Çурт пултăр, çурт пултăр тесе çĕрĕн-кунĕн лара-тăра пĕлмесĕр супатăн та... Пăх-ха есĕ ăна,— вăлах „вăрă“ тесе мана ăнтан йарат. Вăт, аçа çапманскер, ват супнă, халер. Çав сăмаха та каламăттăм çылăха кĕрсе. Епĕ пулмасан есĕ, вĕтĕ, çӳремеле йаппар пек. Çурту та пулас çук санăн, пурлăху та пулас çук Пĕр епĕ пулнипе тăрат те-ха!

Ним тума аптранă Самай хурланса та пăхрĕ.

— Есĕ кăна ĕнтĕ çуртра ĕçлетĕн. Пĕр есĕ кăна иккен!

— Ĕçлеместĕн темеççĕ сана, — лăплантарса каларĕ Кулин инке.— Чуна ан тертлентер. Çавна калаççĕ сана!

— Ырă-им ара вăл? Колхоз йапалине илви! — татах сассине хăпартса Самай кăшкăрчĕ. — Ес те ил, еп те илем. Мĕн курат вара ун чухне колхоз?

— Пар, ара! Леçсе пар! Леçсе пар! — çӗнӗрен тилӗрсе кайрӗ Кулин инке. — Ей! Етсемӗри! Етем те етем пулат. Тӗнчере те çук пуҫ сан пекки. Чуп тертленгермӗш, шуйттан! Халех леçсе пар. Вӑрласа йултӑм та, те... Каçарӑр ӗнтӗ, те... Арама, те, суда парӑр, те... Епӗ айапла мар, те! Кус! Мен-ха пуçна усса таратан! Леçсе пар! Тӗп пултӑн çав тилкепене!

„Леçсе пар“ тенӗ сӑмах та хӑш чухне „ан леç“ тенӗ пекех илтӗнет. Çавӑн пек, çапла арӑмӗ тилӗрнӗ хыççӑн, леçме пулни пушшех тирпейсӗр пӑтравса кайрӗ. Икӗ çултан пӗри те йулмарӗ.

Физикӑра çавӑн пек закон пур: икӗ вӑй йапалана ик йенеле пӗр пек туртсан, çав йапала нихӑш йенне те сулӑнмаст, хӑй йӗр тупса çав йӗрпе шӑват. Çав закона етем тӗлӗшӗпе те калама пулат. Етем те çапла, кивви те çӗнни те ик йенеле туртсан, иккӗшӗ те пӗр вайпа туртсан, варринчи йӗрпе шума пуçлат. Анчах етем вӑрах çапла тӳсеймест. Пӗр пӗр çӗнӗ чӑрмав тӗл пулсанах, пӗр-пӗр тӗмескене такӑнсанах, етем варринчи йӗре çухатат те, вайсенчен пӗри, вӑйлӑраххи, туртса илет вара.

Самай та çапла икӗ вӑй хушшине ӑнсӑртран кӗчӗ тӑчӗ. Пер вӑйӗ туртат колхоз çумне: „Леç хӑвӑртрах тилкепене“, тет. — „Колхоз санӑн авнӳ, ана çаратни киревсӗр йапала“, тет. Тепӗр вайӗ туртат кил çумне: „Çуртра йӗп те çухалмаст“, тет. „Пур йапала çӑкӑр ыйтмӗ“, тет. „Колхозшӑн пӗр тилекепе темех мар“, тет.

Хашне итлемеле? Хашӗн йенне суланмала. Ие варрипе пымала и? Нимскер те пӗлмест Самай. Темскер кӗтет-ха вал? Темскер çине-тарсах тӗкеллессе кӗтет. Таçти айаккинчи вӑй килсе хӑш йенне те пулсан тӗртсе йарасса кӗтет.

Самайа нумай кӗтмеле пулмарӗ. Тӗкеллекенни ним тума пӗлмен çӗртен çул кӑтартса паракканни сиксе тухрӗ кӗтмен çӗртенех. Колхозан сасартак тата икӗ чӗн хӑмӑт çухалчӗ, вӗр-çӗнӗ хӑмӑтсем.

Самай ун çинчен пӗлчӗ çав кун ирхинех. Кулин инке таçтан пӗлсе килчӗ.

— Хайхи колхозӑнне икӗ хӑмӑтне тахӑшӗ çаклатнӑ, тет. Ав хайхи: ырӑ-ши ку, ырӑ мар-ши, тесе тӑмаççӗ. Пӗр епӗр кӑна мар! Епӗр ана, темскер пулнӑ пек, ӑнтан кайрӑмӑр çав тилкепепе Çынсен авӑ асӗнче те çук.

Пит уçӑ, лӑпкӑ сасӑпа каласа пачӗ Кулин, калӑн, вӑл савӑнат колхозӑн йапалисем, тилкепесӗр пуçне, тата çухалнӑшӑн. Самай та чӑн малтанах хӗпӗртенӗ пек пулчӗ.

„Веç! Епӗ кӑна мар! Ыттисем те. Пӗр епӗ кӑна тӳрӗ пулнипе... Пурте тӳрӗ пулмасан!..“

Чарӗччӗ Самай хӑй шухӑшне, мел пулсан, çак тӗлте. Çук вӗт-ха, пуç вӑл татах ӗçлет, татах çӗнӗ шухӑш сӗтӗрсе кӑларат:

„Тен, епӗ тилкепене илнине курах ыттисем те илме пуçларӗç пуҫе. Тен, епӗ пуçласа йаракан пулса тӑратӑп! Ун чухне вара мӗн пуриншӗн епӗ айӑплӑ. Çак хӑмӑтсемшӗн те. Епӗ пуçласа йараканни!

Ку шухӑш та иртсе кайрӗ. Пуçра темскер тӗтрелӗ йапала ыраттарса сарӑлчӗ. Куç кӗленчелевчӗ, хытрӗ...

— Кӗçӗр пуху пулмала, — терӗç-ха. Кайатӑн-и ес? — хытвӑ

шухăша тӗртсе сăмах хушрӗ Кулин инке.—Кайса пăх-ха! Тилкепе çинчен хускатмӗç-и тата. Пирӗн çине калаççӗ пулсан, епӗ илмен, те... Кăшт суйа кирлӗ вăл!

— Ан лар ӗнтӗ çăварна карса, чорт!—сасартăк кăшкăрса пăрахрӗ Самай.—Сан пирки мӗн пур пăтăрмах! Упшур! Хап сăнатăн çынăнне! Теме кирлӗ!

Арăмӗ чӗнмерӗ. Пӗлет вăл: хăçан Самайа кăшкăрса хăратма пуррине, хăçан хăратас çуккине.

Чăнах та, Кулин инке халӗ ӗлӗкхи пек кăшкăрса пăрахнă пулсан, Самай хăй те пӗлмест мӗн тума пултарнине. Çавхатер çилӗ капланса килчӗ ăша. Шăнăçайми пулче. Темле вăй килсе çапрӗ. Иккӗленчӗклӗ чӗре хускалчӗ, таçта сулăнма пулчӗ турткаланчӗ. Тепӗр вайлă тӗртӳ кӗтсе чӗтренсе хытрӗ. Шайрăлнă вырăнсем кăна чӗрене ыраттарса тата темӗскер пулмалине кӗттерчӗç.

...Каçхине собранийе чӗвмесӗрех кайрӗ. Маларах та çитрӗ. Вăл пыраччен мӗн пурӗ вун-вуник çын кăна пынă пулнă.

Кӗрсенех—йутла туйрӗ Самай Йыш йышăнман йатă пек. Пурте ун çине йӗрӗнсе пăхнă пек туйăнчӗç. Пурте алă тăсса: ака вăрă! тесе калассӑн туйăвчӗ. Алă пама та Самай хăйаймарӗ. Кӗчӗ те пӗр кӗтессе хӗсӗнчӗ. Итле пуçларӗ.

— Ку собранийе,—терӗ çӳлӗ, чăнкă çамкалă председатӗл.—колхоз пурлăхӗ ытла çухала пуçланăран пухрăмăр. Кулаксен сăтăр тăвакан ӗçӗ пӗтмест. Урăх йенӗпе колхоза сийен тăвас çуккине кура, кулаксемпе унăн агӗнчӗсем колхоз йапалине вăрласа та пулин сăтăр тăвасшăн.

Калама çук тӗплӗ тăнласа ларчӗ Самай. Апла вăл докладсене нихăçан та итлекен марччӗ Мӗн пур сăмаха уншăн çеç калавă пекех итлерӗ. Итлесен-итлесен хăй те тӗлӗнсе кайрӗ: ӗлӗк „кулак" тенине ӗненмен, вăскăртмали тӗл тесе, кăна шухăшланă,—халӗ кулак чӗррӗн куç умне килсе тăчӗ. „Сăтăр тăваççӗ" тенине ӗненмен, сăмах çукран сăмах тесе кăна шухăшланă;—халӗ сатăрçă ӗçӗ çавхатер куç умӗнче—аçтан-ха ăна тунав? Пурте чӗрӗлчӗç. Пурте тăвăнтарса куç умне килсе тăчӗç. „Кулак вӗгӗ — хам", терӗ ăшӗнчен.—„Кулак—ман ăшра, ман шухăшра, ман ӗçсенче Мӗн пур кивви кулакран, мӗн пур маннă тилкепене леçме чаракан шухăшсем çав кулакран пулнă, тем те пӗр килмен йапала çав кулаках шухăшлаттарнă. Çурта колхозран мала хуви те çав кулакранах; арăм сăмахӗсем, ун ӗмӗчӗсем Пулунпа пупӗ ӗмӗчӗсемпе çыхăннă вӗтӗ. Мӗнтен вӗсем унтан уйрăм-ха вара".

Тавлашмастăп: тен, чăн çаплах та шухăшламан пул Самай, шухăшсем, тен, аплах таса тухман-тăр, анчах çавăн пеккине туйнă ӗвтӗ вăл, хăйӗн шухăшӗсем хăйне питлевиве уйрамах туйнă. Ахалӗн мӗвшӗн-ха вăл председатӗл халăх пурлăхне сыхлас тӗлӗшпе кăларнă постановленийе вуласа парсан, пуху илтмелех кăшкăрса йачӗ:

— Вот ку лайăх... Тахçанах çапла кирлӗ...—Пуху „тӗрлӗрен" ыйтусем çине куççан, Самай, вăрттăн тула тухан пек турӗ те, тилкепене илме тесе, хуллен килне кайрӗ.

Самай килне ҫитсен нимскер те шухăшласа тăмарĕ. Арăмне те ним те каламарĕ. Пӳрте те кĕмерĕ. Тилкепене вăрттăн кĕрсе илчĕ те, сăхман айне ҫакса, колхоз правлени йенне сулăнчĕ.

Вăл ҫитнĕ ҫĕре лере собрани саланма пуҫланă. Ҫынсенчен пăрăнкаласа вăл колхоз правлени умне ҫитрĕ. Правлĕнинчен колхоз предҫедатĕлĕпе уполномоченăй пĕр-пĕринпе калаҫса тухнă. Вĕсем туха пуҫласанах Самай кĕтессе тăрса, итле пуҫланă.

— Да... — тенĕ предҫедатĕл. — Ку вăрлува йепле пĕтермелеха? шухăшла есĕ акă: йапала вувҫĕ етеме кирлĕ мар, — вăл ăна илет. Тилкепене илсе йулаҫҫĕ вĕт, мĕне кирлĕ-тĕр? Лашисем ҫукҫке-ха лапасса. Урхалăха та час улăштарса йулаҫҫĕ. Мĕн тăваҫҫĕ ĕнтĕ унпа? Калăн, пăхса тăма илеҫҫĕ Ех, етем!

— Мелкобуржуазная стихия! Ничего не поделаешь! — ҫăмăллăн сăмахланă уполномоченăй. — Ҫурт, кил, йапала — ҫак хаклă пулнă ĕлĕкхи хресченшĕн. Ҫавсене вăл кĕлтунă. Ҫавсене пăхăннă. Йапала етем шухăшне йертнĕ. Халĕ те-ха ҫав капиталисăм тивлечĕ пирĕн ҫинчен сирĕлмен. Частная собственность нумай ĕмĕр етеме пăхăнтарса пурăннипе унăн инстинкне кĕнĕ. Ҫавăнпа етем, хăш чухне ăсĕпе колхозшăн пулсан та, ăс хыҫĕпе колхоза хирĕҫ пырат. Ну, ничего. Ҫитĕ вăхăт, Маркс каларăшне, йапаласем пăхăнтармĕҫ, — хăйсем пăхăнĕҫ.

Итлесе тăракан Самай пурне те ăнланайман, анчах темшĕн уполномоченăй сăмахĕсем шанчăклă, пĕлсе каланă сăмахсем пек туйăннă. Пĕртак вĕсем савăнтарнă та.

— Хальхи етем пуҫĕ — ҫĕнĕ ҫĕр, — татах калаҫнă хĕрсе кайнă уполномоченăй, — нумай-ха ăна тирпейлемеле, нумай-ха ун ҫинче ĕҫлемеле — ҫум-курăк ан шăттăр тесе. Ҫум курăк вĕт вăл кĕтмен ҫĕртенех шăтат. Таҫтан лекет унăн вăрри? Хăш чухне мĕн тĕрлĕ таҫта ĕҫленĕ пек ĕнтĕ пĕр ҫум курăк та шăтас пек мар; пăхатăн, — пер-ик виҫ ернеренех ҫумламала пулат. Етем пуҫĕ те ҫавах. Мĕн тĕрлĕ ĕнентернĕ пек ĕнтĕ, мĕн тĕрлĕ ҫĕнни йенне ҫавăрнă пек. Сисместĕн те, ҫав етемех лаплаттарат хурат пире йурăхсăр, кулака йурăхлă ĕҫ. Капиталисăм калчи кĕтмен ҫĕртенех шăтса тухат. Ҫавăнпа пирĕн сыхă тăмала та... Кашни калчана тĕрĕслемеле. Тата темскер каларĕ уполномоченăй, анчах инҫе кайнипе илтĕнми пулчĕ. Вĕсем инҫе кайсан, Самай тилкепине хума ырăн пăхкаларĕ, анчах каллех капла вăрттăн пăрахса хăварни ырă мар пек туйăнчĕ. Тĕрмерен хăраса пăрахнă пек туйăнчĕ.

Хăраса пăрахас пур, пăрахмаст те вăл. Хăрас пур, пытарат те... Анчах, йепле-ха кӳртсе памала? Мĕн шухăшлĕҫ. Ҫынсем тухса пĕччĕр тесе тата пĕртак кĕтрĕ Самай.

„Правлениче пĕр ҫын та пулмасан сакайне хуратăп та тухатăп“.

Ҫапла кĕтсе тăнă чухне сасартăк хыҫалта тахшин чĕнчĕ.

— Есĕ мĕн кунта тăратăн? Ата!

Кӳршĕ Уртем иккен. Шартах сикнĕ Самай лăпланчĕ.

— Тӳме татăлчĕ те-ха.

— Е-е! — терĕ Уртем.

Утрĕҫ. Тилкепе каллех ҫапла сăхман айĕнче килне килчĕ.

Арăмĕпе пĕр сăмах каласмасăрах выртрĕ вăл кас. Час сывраймарĕ. Собранинче илтнĕ сăмахсене çĕнĕрен аса иле пуçларĕ. Пуринчен ытла асран каймарĕç уполномоченăй сăмахĕсем: ăна вăл хăй ăшĕнче темиçе хут та каларĕ.

„Йапала етеме пăхăнтарат... Çитĕ вăхăт: етем йапаласене пăхăнтарĕ...“

Темскерле ăшă, шантаракан сăмахсем пек вĕсем туйăнчĕç. Йалта шанмали пур пек туйăнчĕ, тасалмали, çĕнелмели. Çакна пурне те манса, çак çитес кунсем патне хăвăртрах çитес килчĕ.

Арăмĕ канлĕ çывăрнине тăнларĕ. Ăна та касарнă пек пулчĕ: „Айăплă та мар вĕт вăл! Çурт! Çуртшăн! Ав мĕн чухлĕ йапала çуртра. Каларăшне, вĕт вĕсем пурте курăнми çыхăсемпе етеме çыхса тăраççĕ. Вĕсем пурте: „Ак çакна ту, урăхла тусан йурамаст“, тесе тăраççĕ. Куç турăш умне ӳкрĕ Вăл та йапала. Вăл та пăхăнтарат, ытти йапаласем те çав турă пекех мар-и вара? Вĕсене те епĕр кĕлтумастпăр-и? Каллех хăлха умĕнче: „йапала етеме пăхăнтарат...“ тени. Ир йенне çеç йăвăррăн çывăрса кайрĕ. Йăвăррăн, ыратакан пуçпа çывăрнипе, çĕрĕпе усал тĕлĕксем курчĕ.

...Тилкепине çĕклесе леçме кайат пек... Сăхман айне çакнă пек, çул çинче пуп тĕл пулчĕ пек, пуп та мар — Пулун пек. Кăчăк туртса йăхăрчĕ пек те, тилкепене хыпала пуçларĕ пек. „Пар, ман тилкепене илтĕн“, тесе туртат пек. Ку парасшăн мар пек, леш пĕрмай туртат пек. Тилкепи мăйа пăва пуçларĕ пек. Унтан председатĕл тӳхрĕ пек, председател те мар, уполномоченăй пек. Вĕсем кĕрмешнине пăхса пуçĕсене сулаççĕ пек: „Йапала етеме пĕтерет“! Ку каласа парасшăн пек: мĕнпурне. Пулун çăварне хуплат пек. Пĕрмай туртат пек хăй. Тилкепе такки пăват те, пăват пек. Сывлама тăвăнтарчĕ пек. Кăшкăрасшăн пек, сасă тухмаст пек... Хашкаса вăранчĕ Самай.

„Хальте, тĕлĕкре иккен...“

Савăнчĕ. Мăйĕнчен ыталанă арăмĕн аллине сирчĕ. Уççăн сывларĕ. Чĕре лăпкăн тапа пуçласан, вăл татах астума тытăнчĕ: „Çук-и-ха мĕн те пулсан пăшăрхантаракан йапала?

Пур! Каллех тилкепе! Леçмен тилкепе!..“

Ирчченех çывраймарĕ.

Ирхине тăрсан, тилкепене пӳрте илсе кĕчĕ, меллерĕ, тумланчĕ те тилкепене илсе правлени йенне тухса утрĕ.

Арăмĕ нимĕн те чĕнмерĕ.

Правленийе кĕрсе, тилкепине вырăнне çаксах хучĕ. Мĕн пур çын умĕнче. Вăтану тавраш нимскер те пулмарĕ.

— Арăм ухмахĕ улăштарса йулнă.

Пурте пĕр тапхăра çаврăнса пăхрĕç, унтан харкам хăй ĕçĕсене ĕçлеме пуçларĕç.

Тин пуç çинчен темле йăвăр йапала сирĕлчĕ. Çăмăллăн Самай килне таврăнчĕ.

Килĕнче каллех арăмĕ тилкепе çинчен пĕр сăмах та каламарĕ.

Темиçе кун иртрĕ. Çавăнтан кайран, халĕчен те вĕсем тилкепе çинчен хускатман, хускатас та çук-тăр, ахăрнех.

Сĕнчел, Тутар респ.

ИЛЛЕ ТУКТАШ.

ÇАНТАЛĂК.

Сăвă.

„Мы должны дать бой злым силам природы, мы все „от мала до велика" обязаны бороться за счастье нашей великой страны. Мы должны знать, что нет в мире силы более мощной, чем сила коллективной разумной воли. Чудеса на земле творит разум, только он и никто больше. Засуху необходимо уничтожить и она будет уничтожена".

М. Горький.

I.

„Çанталăк чарусăр...
Çанталăк уйар.
Шевле çивиттийĕ
Тĕтрелĕ.
Сар пурçăн çилхелĕ
Тырпуллă уйа
Хĕвелĕ ĕнтесшĕн,
Есрелĕ..."

„Çанталăк чарусăр,
Çанталăк вĕри.
Сунасĕ хĕрӳлĕ çилĕн.
Ах, выçă вилетпĕр.
Вилетпĕр-им?
Ах, вилĕм çывхарчĕ...
Вилĕм..."

II.

Çук, çанталăк,
Текех асаймăн.
Большевиксем сана
Асма памаççĕ.
Ак микрофон
Чĕтрет пĕр майăн —
Радиограмсем
Сывлăша касаççĕ:
Итлĕр!
Итлĕр!
Итлĕр!
Çакна тăна кĕрĕр,
Пурте!
Çĕр-шыва
Ĕнтекен сывлăш витрĕ.
Кĕрешĕве çĕкленĕр
Ăна хирĕç.

Уйар çанталăк
Чăрсăрран,
Тискеррĕн
Уйхир çине
Анасласа пăхатĕ.
Итле, Вăтам Атăл,
Итле ес, Эринск[1]!
Атакăна тухма
Тăрăр хатĕр!

Сирĕн пата
Тĕп вăйсене йаратпăр.
Изотерми отречесене
Васкатăр...
. . . .

Вăрçăри йулашки зарйад пек
Сиввĕн кашни калорине
Сыхлаччăр.
Електронлă,
Тĕтĕмлĕ снарйадпа
Пăрсене
Траншейсенчен кăларăр.

III.

Приказ саланчĕ
Пĕтĕм таврана.
Хĕвел тути
Йерĕлсе чĕтренчĕ.

---

[1] Эринск — эра сăмахран, хула йе край йачĕ пек туса çырнă.

Мучирен пуçласа
Пионер таранах
Ĕççыннисем
Кĕрешĕве çĕкленчĕç.

Ак каранат
Траншейăсен çăварĕ,
Сивĕ фонтанĕ
Пĕлĕте тĕтĕретĕ.
Пĕкĕрĕлет
Тип çанталăкăн варĕ —
Ав хĕвел
Куççулне йухтаратĕ.

Çук, йĕместĕ вăл халь —
Тулхăрат.
Хĕвеле сулхăнлатрĕ
Сивĕ лăм.
Ак хирсенче,
Йешĕл улăхра
Çутăлса шăрçаланчĕ
Сывлăм...

Хыпарсем ĕлкĕреççĕ кĕç çех.
Тăшмана çитессийĕ
Инçе-и?
Ашхабатран
Самольотпа вĕçсе
Кустанайа пырат
Федоçейĕв.

Сĕмленет
Тĕтĕрелĕ инçет.
Те хĕррисĕр вăл халь,
Те хĕрилĕ?
Анчах ав
Йешĕл улăх çинче
Йарăнат Федоçейĕв ескадрилйĕ...

Çирĕмик самольот —
Кайăк-хур —
Сывлăша тĕтĕмĕпе авăрларĕç.
Сехетрен-и хайхи,
(Акă жур!)—
Пĕлĕтсем капланмашкăн
Пуçларĕç.

Федоçейĕв — сăнавçă сăнат.
Вăл пĕлет:
Кĕтмеле çăмăра та.
Акă сывлăш виçи усăнат —
Унăн нўрлĕхĕ
Утмăл градăс.

Акă çиçĕм...
Кĕрлет аслати...
Ракетсем,
Сывлăша есĕр чăмăр!
Зонтикне карăнтарчĕ радис.
Акă хай
Тăкса йачĕ те çăмăр.

Редакцирен. „Çутçанталăкăн хайар вăйĕсене хирĕç пирĕн вăйлă кĕрешў уçмала, епĕр пурте, „пĕчĕкрен пуçласа пысăкки таранах", хамăрăн аслă çĕршыван телейĕшĕн çапăçма тивĕçлĕ. Пирĕн çакна пĕлмеле: тĕнчере коллективлă ăсхакăл ирĕклĕх вăйĕнчен хăватлăрах вăй урăх çук. Çĕр çинче тĕлĕнмеле ĕçсене ăсхакăл тăват, пĕр вăл кăна, урăх никам та мар. Типçанталăка пĕтерме кирлĕ, вăл пĕтмеле", тенĕ аслă писатĕл М. Горйки.

Чăнахах та, пĕрлешнĕ ăсхакăллă вăйхал „хăватсем" тăват. Ăна Совет çĕршывĕн ўсĕмĕсем, наукăри çĕнтерĕвĕсем (стратостат вĕçни, Туркçиб туни, Днепростанци тата ытти сене та аса илер) аванах кăтартса параççĕ. „Çанталăк" савăра асăннă хăватсем те социалисăм тăвакан çĕршывшăн ытлах та инçери „тĕлĕкле ĕмĕтсем" çех мар.

Пирĕн халĕ Совет çĕршывĕнче уйхире шăварасси, искусствĕннăй çăмăр çутарма май тупасси тăрах пысăк сăнавсем пыраççĕ. Пĕлтĕр авă типçанталăкпа (засуха) кĕрешес ыйтупа пухнă пĕтĕм Сойузри конференцире палла учонăйсем ку телĕшпе пысăк сăнавсем çинчен, распах самольотсемпе тухса тип çилсемпе кĕрешсе пăхни çинчен каласа пачĕç.

Пайанхи Федоçейĕвсем (çав сăнавçăсем) — ĕçхалăхĕн нумай мĕлйуалă массине типçанталăка хирĕç хăватлă кĕрешўре йертсе пыракан паттăр комсоставсенчен пĕрисем, теме йурат.

Еçхалăх литературин те ку кĕрешўре хурере çапкаланас пулмаст. Сăнавсен çĕнтерĕвĕсемпе, харсăр шухăшĕсемпе те хавхаланмала, массăна мобилизацилеме пултармала. Тукташ сăвви — пĕчĕк сăнав, ыйтăва сĕртĕнсе пăхни кăна-ха.

ВАЛЕНТИН АХТУБАЙ.

ÇУРАКИ СĂВВИСЕМ.

Çурхи кăмăл.

Каллех чĕрем сикки —
Хăйулă çурхи ташă.
Каллех çупат Çавал
Çут-шурă кăчăкпа.
Тăванăмçăм!..
Тăванăм, теп, йулташăм! —
Çурхи хĕртен хĕвел
Кĕрет-тĕр ман хĕве,
Йе ахаљ çеç
Илемлĕн кăчăклат...
Лăпкавлă çурхи çил,
Кĕрет ав çăмăл-çăмăл.
Лăпкавлă çурхи çил
Лĕпленчĕ хĕвел те.
Ёп хам та... ирĕлтĕм.
Ман çирĕп,
çăмăл кăмăл
Кăварлансах
Йуратрĕ çур кунне.
Мĕн-ма тесен —
Вĕри ĕçре илемлĕ çуркунне
Кăмăлăма
Хаваслăн чĕвĕлтет.
Çурхи кунсем...
Машинĕ те,
Лаши те
Пултăр сывă!
Унпа пайан
Хаваслăн тапăçат
Ман цехăмра
Çурхи вĕри çĕршывăм.
Унпа ман вăй,
Ман çирĕп, çамрăк вăй
Татусăр канăçа.
Унпа та шел
Çак класлă картара
Кулак алли
Амантнă трактăра.
Çурхи кунсем!..
Вĕри çурхи çĕршывăм
Чĕнет ĕçе:

— Ачамçăм, тет,
Клас туйăмне ан çывăрт! —
Ёнер кулак
Тухатчĕ пăшалпа.
Пайан ак вăл
Шăп-шăппăн пăшăлтат —
Çуракине
Чарасшăн хирĕçет.

Çурхи кунра
Тухмаст кулак тек уççăн.
Хăрат тăшман
Тек уççăн тытăшма.
Анчах та çке,
Тăванăмçăм, кĕр уççăн,
Пăсат кулак
Ертеллĕ пурлăха,
Хуллен çĕртет
Сар ылттăн вăрлăха...
Тăванăмçăм,
Пĕтмен вĕт-ха тăшман...

Çурхи кунсем!..
Хитре, хавас тавралăх!..
Пур кĕтесре
Вăй-хал хĕрӳ хĕрет
Хăй май хăватлă та,
Хăй май сатур, авраллăн...
Цехра,
Бригадăра
Хăйулă шав тăрат:
— Машинсене
Хăй срукĕнче йарасчĕ,
Йарасчĕ уйхире!
Унпа чĕрем сикки —
Хăйулă çурхи ташă.
Унпа çупат Çавал
Çут-шурă кăчăкпа.
Унпах тăванăмçăм,
Тăванăмçăм,
Йулташăм,

Çурхи хĕртен хĕвел
Кĕрет те ман хĕве,
Кăмăлăма
Хаваслăн кăтăклат.

Вĕрех,
Вĕре чĕре тулти хаваслăх!
Нихăçан чĕремерсем
Йĕмен çапăçура!
Тăванăмсем!..

Йулта памсем,
Хăйулăн!
Нихăçанхи пек
хăйулăн,
çивечрех
Ывăниччен
хĕрсе,
вĕри чĕçр
Большевикла
илер иртен çура!

„Христус вускрес"!

„Христус вускрес!"
Христус паллăкĕ — йун вăл,
хĕрес.
Тĕлĕнме мĕн-ха пултăр кунта?
Йумаха кашниннех пĕлмеле—
Вăлă кашни çултах
„Чĕрĕлсе вĕçтерет пĕлтеле".

„Христус вускрес!.."
Христус паллăкĕ—йунлă хĕрес.
Хаш йенче çак христус курăнат,
Çавăнта — хĕрессем...
Пирен йун тăкăнат.

I.

Манас çуккă.
Примере те акă.
Пире йунлă катлет
Тума тапă Колчакăн
Çарĕнче,
Тĕрлĕрен охвицер пулнă тулăх,
Тата тĕрлĕрен вăрă-жулĕк.
Анчах йачĕ вĕсен чип чипер—
Хисепленнĕ христус йачĕпе.

II.

Ак тата пĕр пример.
Деникина илер.
Штыккине ге ăна,
Хĕççине те мул панă.

Çарĕнче ун татах тĕрлĕ бандă
Витĕнейнĕ христус йачĕпе.
Тапа илер чипер:
Çакăнга ĕнтĕ йунлă хĕрес:
Ак йепле вăл „христус вускрес".

III.

Илĕр тепĕр ултав шапана —
Римри паппăна.
Капитал умĕнче
И есшĕн хисеп
Христус йачĕпе витĕнсе
Вăл хĕреслĕ поход та пуçларĕ.
Анчах...
Ĕç тухмарĕ
Чăтаймарĕ ултавлă хĕрес.

„Христус вускрес!"
Хисеплетĕр христус „чĕрĕлнине",
Мĕн-ха тупрăр кунта çĕннине?!.

IV.

Тепĕр факта калатăп сире.
Нумайах та пулмаст, Франциреа
Чĕрĕлейĕрĕ „светуй" Пуанкаре.
Çак ултав чун çăлан
Империалисăмлă вăрçăра
Мелйунсем йухтаран йун çăрах
Тене кĕчĕ,
Вай ичĕ.
Çавăнпа çĕр çине
„Çветуй сывлăшĕ анчĕ пулас..."
„Çветуй сывлăшĕ" —
Тĕрлĕ вилĕмлĕ газ.
Кам пулса войнара
Çак „светуй сывлăшне"
Аванах анланат.

[1] Ку сăвва вырăсли тăрăх çырнă.

Анчах, кун ҫинчен
Вакламастпăр сăмах.
Ак ăҫта кунта чăнлăх
Тăнлăр:
Пуанкаре пĕтересшĕн комуни-
сăма
Пуҫтарат те „светуй сынсене",
Ку йенне ăсатат вĕсене.
Майламашкăн „савапла" ĕҫне,
Ултавлă промпарти ĕҫне.
Астăватăр, кĕрлерĕ процесс.

V.

„Христус вускрес!.."
Кăшкăрат кăҫ та ир
Морган банкир —
Паллă капиталист —
Хăй вăл сектант,
Хăйех йевангелист.

Вăл сире вĕрентет:
„Ҫĕр ҫинче ĕмĕтпе, тет, ан ашкăн.
Ҫылăхлă сынсене, тет, ҫăл-
машкăн
Нушапа асапа та вĕрен, тет.

Вĕрен, тет,
Хуҫапа банкира пăхăнма...
Етемсем — кашнийех тăванла.
Вĕсене хирĕҫме аванмар..
Тра-ра-ра, тра-ра ра, тра ра-рай.
Ҫĕр ҫинче пулĕ, тет, тутлă рай".

VI.

„Христус вускрес!.."
Пуп сĕнет чуптума
Пăнтăхайнă хĕ. ес.
Ҫакăн пек вăхăтра аванах
Алла кĕнĕ, „чипер" айвана
Клас тăшманĕ — кулак —
Ҫаратат кула-кулах.
Пуп йурлат:

„Пулăр, тет, ҫĕр ҫинче ереветлĕ,
Чарăр хăвăр вĕҫен ĕмĕтĕре...
Акă есĕр кăвак пĕлĕтре
Часах пулăр телейлĕ, тивлетлĕ..."

Анчах, мĕн пире пĕлĕтҫи,
Мĕн пире пуп-кулакăн йурри!?
Пайан пултăр пире
Ҫĕр ҫинче мĕн пурри
Пайан:
Мĕн ĕҫлен, ăна ҫи!

Ав, пайан хĕрĕнет мăн ака!
Хĕрĕнет болъшевиклă ака, —
Ĕҫсынни ĕҫре ҫăкăр тупат.
Ав тив, пуп чуптăват кулака,
А кулак чуптăвайтăр пупа.

Пĕлсе ситнĕ епир пурнăҫра
Болъшевиклă ҫурхи акана!
Клас тăшманĕ йепле курнăҫлат.

Мункунра, вăл, христус йачĕпе
Амвунран ҫăвар туллан карат:
„Епир пурте, сынсем — тăвансем.
Пурнăр пурте вăрҫмасăр, чипер!"
Анчах, ерехмет!
Улталаймăн пире турăпа,
Улталаймăн пире ерехпе!..
Савпала — ĕмĕрхи ерешмен.
Епĕр хатĕр хастар кĕрешме!

Ей, уйхирĕн ĕҫҫынĕ, итле!
Пирĕн лозунг:
Ҫурхи акана
Пĕтерер вăхăтра,
болъшевикле!
Ей, колхозник!
Ĕҫре харсăр пул!..
Пĕр минут та
Ан пултăр прогул!

Савăнăҫлă вăхăт.

Савăнăҫлă вăхăт.
Йăнкăр уйĕ-хирĕ!
Хĕпĕртевлĕ хĕрĕн —
Савăнăҫлă вăхăт!

Чĕремҫĕмĕр ирĕк,
Ĕҫĕмĕр — ертеллĕ...
Ой! та хĕпĕртевлĕ
Ĕҫре илнĕ ирĕк!

Ирĕкĕмĕр çирĕп,
Йышăмăр — бригадă...
Атăр, ĕçе атăр!
Пиçĕр ĕçре çирĕп!

Йăлтăр вут хĕвелĕ —
Ĕçĕн бригадирĕ...
Култăр иртен-ирĕн
Кăмăлла хĕвелĕ.

Акайрăмăр тулă,
Ӳсĕ вăлă ыра,
Ой! та ӳстĕр ырă
Суртлă тута тырă!

Акайрăмăр йăвă
Суртлă тутă сĕлĕ.
Ой! та ӳстĕр селĕм
Пулгăр тутă-йăвăр!

Акайрăмăр йасмăк,
Клевер, сĕлĕ, тула...
Ой! та ӳстер тутă,
Уй туллă хаваслăх!

Шупашкар — Калайкасси, 1938 ç.

АРКАДИ ЁÇХЕЛ.

ВЁРИ ЁÇÇИНЧЕ.

Сăвăсем.

Тĕксĕм кăвак кĕпелĕ ир
Шăналăка ваекав килсе уçăт:
Ей, ыйăхна часрах типтелĕн сир,
Хирти мухтавлă, ирĕклĕ хуçа!

Вара часрах шултра куçусене
Чĕртетĕн те—вĕсем сан вуткăвар.
Ипне ăшă шăмшак кăшт çӳçенет,
Çӳçенвине киле манса хăвар.

Йавравлă уçă ир. Телейлĕ ĕç.
Лаша çитсе кӳлетĕн те:—Пошла!
Чĕрем, хăйуланса хиреле вĕç,
Ыраш кĕлтипеле тухса ташла!

Тантăшсемпе кĕлте еп турттарап,
Мĕн чул чăн ылтăвăн йавран
кĕлте!
Аван-çке йухтармашкан ыр тăра
Сӳнми хĕвел хире тухнă тĕлте.

Кĕрнеклĕ молотилкă йĕтемре
Трактăрпала пĕр йурă кĕвĕлет.
Йун çĕнĕле тапсассăн етемре
Хире тухма та çăмăл хĕвеле.

Кĕлте, атсемĕр, васкарах тийĕр,
Ёлкĕрлеймесĕр молотилкăна!
Çапла калат вунсакăр çулти хĕр,
Мана илет ун куçĕ тыткăна.

Мĕн чул кĕлте! Мĕн чул
пуйăнлăх, пурлăх!
Ак еп лавпа пырап йĕтемелe.
Хĕрсем, тавайăр, вултарулăн
йурлар,
Йурра тĕнче вĕçне çитермеле!
Мĕн чул кĕлте: Мĕн чул
хавальлă йурă!
Аван-çке лав çумпе утса пыма
Кунта хаваслăх урăх, ĕçе урăх,
Кунти хĕвелĕн урăхла тымар.

Лавăм çинче еп ирĕлетĕп пĕтĕм.
Ыраш шăрши ытла та пит аван,
Авал-и пирĕн колхоза ес кĕтĕн!
Манпа кĕлте турттаракан тăван,

Ак йĕтемре хĕрсе çапаççĕ авăн.
Сив шыв илсе ав килчĕ сарă хĕр.
Сана, сана, ман çунатлавнă тавăм,
Вĕри ĕççилĕ, сивĕ шывлă çĕр!

Мĕн чул ыраш! Лавсем çине
тийеççĕ
Пуласлăха ваҫҫи. Мĕн чул хăват
Çапла, хирти сухал—ĕçчен чейеçĕ
Коммунала хĕрсе çĕн çул хыват.

Кунта çĕршывăн тухăçла хăвачĕ
Петĕм тĕнче кисренмеле кĕрлет.
Уетах аз, хăрнă хĕрĕх пĕр тăпачĕ
Усреççĕ ав, вилĕмĕсем пĕрлех.

Харпăрлăхсă, татах-ши хыçмала
Тырпулă ăнманна—тип ĕнсӳнех?
Анчах имшер лашу йулат-çке
хыçала,
Пырат хăртаннă пурнăçу сӳвсех.

...Телейлĕ каç. Киле хаҫ
таврăнатпăр.
Куратăп епĕ йалала кĕрсен:
Анкартинчи пĕр хăрăк авăна та
Ишсе антарнă Çиллимес хĕрсем.
Ачаранпа, Хура авăн вучахе
Мана вилĕм хапайĕн хăратат.
Аван тăхне унне савман вуçах еп,
Пĕтех, çунса кĕлевнĕ урата!

Ак еп килте Йашка аван-çке питĕ.
Аш, сĕт те ман çителĕклех килте.
Ак еп куратăп ырă ыйăх витĕр
Ыранлăха.
Пуç айĕнче вĕри кĕлте.

Хирти йурату.

1.

Хӗвел сирчӗ хӗллен канӑҫне;
Уйхирте савӑнат ҫамрӑк йышӑм.
Йуратӑвӑм унтах ман ӗҫлет,
Кӗрешет Сталинла ҫуракишӗн.

Пит аван уйхирпе ӑлӑхма,
Анлӑ уй ывӑнми ыр хӗвеллӗ.
Тек кунта йывӑшан хурлӑх мар.
Ҫамрӑк трактар йурлат
хурҫӑ-меллӗн.

Ҫӗкленет ӗмӗрхи тусан.
Авалхи хыт-хура тӑпӑлат.
Еп уйа полеводӑн тухсан
Йуратап ҫак шултра тӑвӑла.

Ав хӗвел, тусанра ҫухалат;
Ҫухалсах, ҫухалсах кайӗ-шим?
Ах савни, уҫҫӑнрах сухала,
Ҫухалмаст ыр хӗвелӗн ӑшши!

Хумхатат трактӑр анлӑ ҫӗре,
Вайла шав тӳпене кисретет.
Пурӑнат манан халлӑ чӗре:
Йурату Сталинла ӗҫре, тет.

Савнине ыталат чӗр тусан,
Ун кулли тусанра ҫухалат.
Еп уйа полеводӑн тухсан,
Савни, ес тарӑнрах сухала.

Анлӑ тӑвӑл хайарран кӗрлет,
Ҫӗмӗрлет кивӗ мӗскӗн „Аран“.
Каҫ пулсан савнипе перле
Таварнмашкӑн аван ҫменӑран.

2.

Ман савни Сталинла ҫӗнтерӳҫӗ,
Сӑвӑри хӗрсем пек капка мар.
Ҫавӑнпа тутӑхми машӑр куҫӗ
Илӗртет урӑхла лӑпкама.

Йулташсемӗр, пӗлеттӗр-и есӗр,
Ман савни уйхире тӑвӑллат?
Ахаљ мар анӑҫра ав вӗчесӗр,
Алхаймаҫ пирӗн пек тӑвала.

Тӑрӑ ҫилӗ ашӑ та ӑшӑ;
Ҫамрӑксем йурара йарӑнаҫ.
Шухӑшпа манан сӑвӑлӑ ӑшӑм
Ҫунса кӗчӗ сӳнми тарӑна.

Пӗр-пӗрне йурататпӑр сӑмахсӑр.
Мӗнле тупан сӑмах, мӗскерле?
Вал, чанах та-ҫке, тӑвӑллӑ
харсӑр,
Вӗт, ҫаксен йунӗпе ӗҫ кӗрлет.

Уҫӑ сывлӑш йанравӗ пит лайӑх,
Ҫамрӑк йурӑ каҫа сывлӑмлат.
Шур садри мелйун чӗлӗхле кайӑк
Кевелет чӗр ри саввама.

Йунашар — сивӗнми хӗр чӗрийӗ,
Ҫемӗлет чунӑма та вӑлах,
Вӑл ҫӗклет ҫемҫе хумлӑ вӗрийӗн
Ман ӑшри тинӗсле тӑвӑла.

Чашлама -шывӗ пек кулли тӑрӑ,
Мана уҫҫӑн ӗҫме пар ӑна!
Ман чӗрен пешӗл улӑхӗ тӑрӑх
Ун ҫурхи куҫӗсем йарӑнаҫ.

В. И. КРАСНОВ.

ТĂВАЛЛА[1].

Роман.

Иккĕмĕш кĕнекин малали сыпăкĕсем.

18. Килти сĕрĕм.

Саҫук алăкран кĕнĕ-кĕменех арăмĕ ăна йытă пек хярах ҫыпҫăнчĕ.

— Йара кун йартлатса ҫӳретĕн, есрелĕ! Вăт мăшкăл, тĕнче кулли! Ҫынсем пур, вăрман касма кайаҫҫĕ. Укҫа тăваҫҫĕ, а есĕ, найумчăкла, йал тăрăх ҫил хăваласа ҫӳретĕн. Апат тĕлне пĕлместĕн вĕт, выҫăх пăху тăву ҫук сан... Халĕ те ырă ҫынсем пĕҫҫисене ҫапа-ҫапа кулаҫҫĕ. Вăт мăшкăл..

Лашине апат парса кĕнĕ Саҫук Йеҫука хирĕҫ ҫăвар уҫмарĕ. Майĕнчи шарăхне салтса кашта ҫине ҫакса хучĕ те, сентре ҫинчи хаҫат куписем патне кармашрĕ.

Йеҫук пушшех те чăхăмҫăланса тапăртатса кайрĕ. Ҫак кунсенче пухăннă ҫиллине шăнараймасăр, вăл ним тума пĕлмест. Кăвакарнă тутине чăмласа, тепĕр хут упăшкине тулама тапратре.

Саҫук итлемест. Йут хыпарсем халĕ ăна питĕ интереслеҫҫĕ. Йалта та ун ҫинчен нумай ыйтусем паркалаҫҫĕ. „Вăрҫă пулмала", тет. Ҫавăнтах Китай границинче пулса иртнĕ хыпарсене астурĕ. Кĕркуҫ батраксемпе чухăнсем Хусан патĕнче шуррисемпе менле хăватлă кĕрешнисем ҫинчен каласа панисене пĕр саманрах астуса илчĕ. „Хĕ, пултăр-ха ҫав вăрҫă, первейех хам эрĕкпе ҫырăнатăп. Ҫапла ирĕкрен ҫырăнакансем вĕсем мĕн чухлĕн е-е! Папă Пий хĕресне хăш вырăнта пăрахса хаварнине астумĕ!"

Ака вăл тата шалти ĕҫсем ҫине куҫрĕ Арăмĕ ҫавах темскер лăркат Саҫук, „хĕрарăм лăрканине пăхсан, политикăран та, пурнăҫран та таҫта аташса йулма пултаратăп", тесе шухăшларĕ, арăмĕ ҫине кӳренсе. Ҫавăнтах: — „Вĕрентес пулат", — терĕ унăн пĕр шухăшĕ. — „Да, верент-ха, пĕр шăмă кышлама вĕреннĕ йытта масăр ҫеҫ вĕрентме пултарат", — терĕ тепĕр шухăшĕ.

Каллех вăл арăме ҫинчен манма пуҫларĕ.

— Ах, пăх-ха, ҫакăнта хут, мамăк ҫук, хăлхана чикĕттĕм.

— Ан ҫĕмĕрл-ха есĕ, мĕн килле сана, ак пах-ха, игле... Саҫски округра, ҫĕнерен округ пулес ку, пысăк совхоз „Гигант" туна. 170 000 гектар! Ҫ кан чухлĕ акакан ҫĕр!.. Ши-ши! — шăхăрса йачĕ Саҫук — Вăл, ҫĕр, миҫе трактăр унта. Ват ырлăх..

Саҫук пуҫĕнче вĕҫĕ-хĕрри курăнми уйхир сарăлчĕ. Тракторсем айакран хура нарасем пек курăнса сарлатса, пысăк ҫĕре йĕри-тавра хуратса ҫавăрнаҫҫĕ. Ҫын сахал, мĕн пысăкеш

[1] Пуҫламĕшĕ „Трактăрăн" 4—5—6-мĕш кĕнекисенче.

çĕр сухаланат. Аа... Хăçан çавăн пек трактăрсем Чăваш çĕршывĕнче кĕрлĕç-ши? Пулатех вăл, тесе шутларĕ хĕпĕртесе Саҕук. Пирĕн те тимĕр-тĕмĕре, йепле те пулсан çав усăсăр выртакан кĕмĕлсене пуçтарас пулат. Çавăнтах ун пуçĕнче лав-лав кĕмĕл, трактăр пĕрле пăтранчĕç.

Арăмĕ чышкипе сĕтел çиве чăнкăртаттарчĕ.

Саҕукăн пуçĕнчи тутлă шухăшсем веçех саланса кайрĕç:

— Мĕн пулчĕ сана? Мĕн есĕ уратăн?

— Ара, çав шуйттан хаçату сине антихрис пыл сĕрсе пачĕ-им? Мĕн пур унта! Йе вăл сан хырăмна тăрантарат-и, йе çийе питĕрет-и? Салма паçăрах вĕреме кĕнĕ, нимĕрленсе кайрĕ пуҕ йашку, çи хут, кўп! Вăт, ман телей ăçта, çимакурпа çыхлантăм, сăнсăр, пачĕ турă мана упăшка! Ех-ех-хеех-х... Йепле ку упăшкапа пурăнас?

Иртеппех Саҕук çăварне пĕр татăк çăкăр хыпман. Хырăмĕнче çапăçу. Йеҕук пĕр чарăнмасăр пустуй çĕмрĕлнĕшĕн Саҕук чăтаймарĕ, арăмне карт! пўлсе лартрĕ.

— Йе, çитĕ! Телейсĕр, телейсĕр, калăн унтан пуçне урăх сăмах тупаймастăн. Çав виçĕ пуслăх сăмахупах хăлхана çĕртрĕн ..

— Сан сăмахусем хаклă тăраççĕ çав! Какш, кулкус, унта аваннисене тупăн-ха, майрала çўретĕн! — Саҕук арăмĕ ик аллипе икĕ йенчен пилĕкне чăмăртаса авкаланса çаврăнчĕ.

— Мĕн есĕ çук сăмахсемпе лĕпĕртететĕн. Луччă салмуна антар-ха. Тавай, çитер, сывлăшпа тăранма ăслă çынсем халĕ шутласах кăларайман-ха. Мĕн пустуйах çăвар тутине сайа йамала.

— Апла еппин, есĕ пустуйа лăпăртатмастăн, иккен! Пыйтлă куракеемшĕн кувĕ-кувĕпех чупса çўрени пустуй лапăртатни мар-ши вăл? Кам сана пĕр пус укçа парĕ? Йе вĕсен спаçипипе тăрантарас тет-ним çемйуна. Ак кĕпе арки татăлса ўкет. Çип çук, пĕр метр пусма татти илсе памастăн Кам питĕрĕ çак шăтăка. Сахиме пек ват карчăксем, йĕмсĕрсем, килсе çĕлесе парĕç-ши?

Çĕтĕк кĕпе аркине Саҕук патне çывхартрĕ.

— Тытăн та çĕле. Аллуна сутăн илмен, — хăвăн. Пуйан хĕрĕ вĕт, неуштă сан виçĕ çул хушшинчех çийе тăхăнмали те йулман, мĕнле апла вăл...

— Атте-анне килĕнчен темĕн те илсе килнĕ пулĕ, унта сан ĕç çук. Есĕ ху мĕн илсе патăн-ха...

— Мĕн пур — пĕтеччен, пĕтсен унта куç курĕ... Малашнехи йĕмшĕн пуçа çĕмĕрес мар Йе, çитĕ ĕнтĕ. Ахаҕ те калама çук ывăннă, тата есĕ пуçа минкретететĕн. Укçа... Укçа... Йепле есĕ халĕ те мана ăнланса çитейместĕн, миçе хут каламала, епĕ укçашăн ĕçлеместĕп, тесе. Есĕ хăвăннех перетĕн; йашку нимĕрленнĕ пулсан, йашкуна антар ав.

Саҕук сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Йеҕук сĕтел хушшинче те канаçлăх памаст. Хире хирĕç ларса пысăк сенкер куçĕсене шывлантарачченех Саҕука йăх турĕ.

Саҕук ăна иглеми пулчĕ. Пулат иккен тĕнчере хĕрарăм. Пĕр мăскал та ăсĕ çук, савăнпа та ăнмарĕ, пуйан, куштан хĕрĕ

пулнăскер. Хам та çав ухмах, вĕсен таврашне çулăхрăм, туприне хĕрĕнсе илни пĕтерчĕ.. Етем ывăљ-хĕрĕ çыннăн пуйанлăхне вихăçан та ан пахтăр çав, — тесе шутларĕ Саљук хăй ăшĕнче.

Шухăшĕ çак тĕле çитсен, Саљук арăмĕ çине сăнаса сивĕ куçпа пăхрĕ. Арăмĕн харăм пек хуп-хура çăра куçхаршисем çыпăçтарса хуна çăхан çуначĕсем пек курăнса кайрĕç. Вĕшлеке вăрăм сăмси чисти çахавăн.. Çиçĕм пек йалкăшрĕ унăн пуçĕнчи пĕр шухăшĕ Шăтарас пек тепĕр хут тинкерсе пăхрĕ. Çăхан, виле кайăк çăханĕ есĕ, — тесе чуг-чутах Саљук кăшкăрса йараймарĕ.

Унтан арăмĕ ăна чăн-чăнах çăханăн курăнса кайрĕ. Саљук шахтор, хăй пурăнаç çул çинче мĕнле пысăк йанăш тунине туйса илчĕ, хурланчĕ... Çапла çав епĕр, çынсем, чăн малтан, хамăр умра хура çăкăр выртсан — кулаç патне хапсăнатпăр. Çирĕм тăват çула çитиччен тевче тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳресе, унăн канăçсăр чĕри Чăваш совпартшкулĕнчен аван вĕренсе тухма пулăшрĕ. Алли-ури, çан çурăм улăп пек; хĕвелпе пиçнĕ сăч-сăпат, хыçалала туранă вăрăм хăмăр çӳç кама ан савăнтартăр. Сайра шăлсем кăшт кулсан алмас пек йалтăртатаççĕ. Кулат вăл йăвашшăн. Калаçат хуллен, васкамасăр, такама та чăтма пултарат. Шаркуй пушă лаша пек шарах сикмест, анчах пĕр тавăлсан вара, сыхлан.. Çынни хăй çук чух çиме йуратмаст. Мĕн шухăш пур ун пуçĕнче, ăна вăл çине-тăрса, çĕр çывăрмасăр пурнăçа кĕртме тăрăшат. Пур çынна та пустуй сăмах парса шантармаст. Малтан пуç тавра шутласа виçсе пăхмасăр вимĕнле вăхăт та уйăрмаст. Çынна йурасшăн йе ыр курасшăн хăй пит-сăпатве çухатса никама та йăпалтатмаст. Хăй вăйхалне шанса, вĕренсе, çав хушăрах выçă йыт çури пек çын куçенчен пăхмасăр, пĕр татăк çăкăршăн йе ăшă йăвашăн вĕслетнипе, ăна кăна санамасăр, пуç тавра çавăрса шутламасăр, — трукăх хар! никама та çыпаçас çук вăл. Арăмĕ çаплах тăкăлтатат.

— Колхозне çав, çăвине, таçтан хăйамат шăтăкĕнчен туртса кăларна. Вилсен те ман пуçăм ăна ан куртăр... Сурăхсене, ĕнесене тыт тăп та пусса çиетĕп. Есĕ, Минкрев, пăхран, шăкран, пыйтаран хăтарнине мантан кур н. Хăйамата кайса çухал. Маншăн пулсан халех шыва кайса сик!

Саљук хăлхине арăмĕн йулашки сăмахсем пырса çапăнчĕç.

— Мĕн, мĕн калатăн есĕ, çăхан! — персе йачĕ вăл. — Ăçта хăйамата епĕ кайатăп, а есĕ ăçта? — Колхоза...

— Колхоза... Кӳр сан колхозу çине ларса варалам.

— Е-е, ларса варалас тетĕн иккен. Апла пулсан йулатăн кăна. Есĕ пĕтнĕ. Нимĕн тавлашмали те çук. Елле арăм тупаймăп тесе шутлатăнам? Сан пек хура çăхансене епĕр тахçанах курнă тољккă çакна вара вихçан та ан ман. — Саљук васкамасăр самахсене вăрăммăн тăстарчĕ. Йељук тĕпĕртетсе кайрĕ.

— Хура çăхан теме-е...

— Урăх сăмах тупаймастăп сан вађђи!

— Есĕ кам? . выçă, пытлă антихрис!..

— Ну, ну, çапла пултăр...

— Вĕлерсен те епĕ унта кĕрес çук. Ульккиу патне киле кĕр...

— Мĕншĕн сана велерес, ирĕксĕр сана никам та кĕртес çук. А-а, Ульки çинчен инçе-ха сана калаçма. Кам чарать сана та ун пек пулма

— Санăн çуртра нимĕн те çук... Çаплипех тухта кай, чармастăп Хуть те ăçта кайса çухал... Тĕп тăватăн есĕ мана...

— Çаплипех кайатăн...

— Çаплипех! Çаплипех пайанах тухса кай!

— Есĕ мана кайала нийепле те сĕтĕрсе кайас çук. Епĕ сан хыçăн пырас çук Есĕ йăнăш çул çинче тапăçатан,—терĕ Саньук хуллен, тикĕссĕн калаçасшăн пулса

Иельук, нимĕн тума аптранипе, çиллине ниçта чикеймесĕр такмаклаca йĕме пуçларĕ.

Саньукăн хыт чĕри кăшт çемçелнĕ пек пулчĕ. Тен, ытла калаcа тăкрăм пулĕ. Кăшт ытлашши те пулчĕ те..

„Ех, ку арăмсемпе, пĕр арăма çавăрма çук та вара. Пĕтĕм пухха пыр та ўкĕтле ĕнтĕ. Унга пуçна çухатăн. Мĕн чухлĕ ĕçлемеле-ха çак хĕрарăмсем хушшинче, мĕн чухлĕ ĕç..“

— Йе, ан йĕр ĕнте, çăвар выльатса калание тем пулмĕ,—терĕ йăвашшăн Саньук ĕсĕклекен арăмне.

Иельук упашки укĕтленине сиссе, каллех тĕпĕртетрĕ...

— Аха. пыйтлă, мансăр пуçне ăçта кайатăн есĕ?..

* * *

Упăшки ўкĕтленĕ хушăра ашăклана атăк йар уçăлса кайрĕ. Пўрте сар кĕрĕк пиншак тăхăнн Кĕркуç килсе кĕчĕ Качкă çăмĕнчен сыхгарна шăрăхпа çĕлĕкне ăша камака çине хурса сĕтел çывăхне пырса ларчĕ.

— Саньук, пулат вĕт, лешне тăватпăрах, прăтакулне аванрах çырас пулат, кайран пăрăнкаламала ан пултăр,—терĕ Кĕркуç, турăш айĕнче ларакан шахтор çине пăхса.

— Тăвас пулат çав,—терĕ Саньук.

Çын килнипе ĕсĕклеме чарăнна Иельукăн пит-куçĕсем хĕрелнĕ Пысăк сенкер куçĕсем шывланнă, йĕпи паллах.

Кĕркуç Саньукпа арăмĕ çине àраснах пăхса илчĕ. Керкуç вăрçă пулса иртнине сисрĕ. Ырхан питçăмартине пĕркелентерсе, çăварне чалăштарса кăшт кулам пек турĕ:

— Е-е! пĕлтĕм, пĕлтĕм ĕнтĕ, граждан вăрçи пырать иккен кунта сирĕн, вăл што-о... Кирлĕ, кирлĕ,—терĕ Кĕркуç, кĕтесри турăшсем çине пăхса Çавăнтах хай килĕнчи турăшне хуран айне пăрахса çунтарнине астурĕ.

Саньук арăмĕ малтан вăтаннă пек пулса хĕрелсе кайрĕ, кайран Керкуç çине чакăр куçпе ывăтрĕ.

— Ирĕн палтан есĕр кăна вĕт ик пайан, килти ĕçсенчен тарса, нечĕк ачасемпе пĕрле урам тарăх йанккаса чупатăр. Ик ухмах, икĕ пайумшчик... Каллех чĕвме килтĕн пуль-ха... Çитĕ, урăх машкăлаттармастăп. Пайан ун ĕне карти тасатмала. Сурăхсене вальли арпа илсе килмеле, вуна лав пулĕ навус йатанса выртать. Ку хĕлте пĕр лав вут-шанкă карташве кĕмен вĕт. Килкарти ĕçрен тухрĕ, епĕ тарçа мар вĕт, йе стрепкĕ вырăнне вĕл

мана хурат-и? Шывне кӳр, кӗпи-йӗмне ҫу, мунчине хут, пӳртне ӑшат, апат-ҫимӗҫ хатӗрле, выљӑх-чӗрлӗхне пӑх, картине тасат, йурне хыр Мӗн ку?.. Капла пуранма нивусмушнӑ. Ҫийӗнчи йӗмӗ ав ҫӗтӗлнӗ, чӗркуҫҫисем шуралма пуҫланӑ, ӑна саплаттармалӑх хут пӗр пус укса кӳни-ха вӑл ҫурта?—Ҫук! Укҫи те ҫук, ӗҫӗ те ҫук! —Йељук татах уласа йӗме тапратрӗ...

— Вӑт, пӑх ӗнтӗ, мӗнле вӑл сана протокол ҫыртарат. Чисти аптраса ҫитрӗм.

Саљук аллине сулса апатне ҫирӗ.

— Ниччево, ҫуртра пулатех ӗнтӗ вӑл. мӗнле апла, унсӑр. Манӑн хам арӑм та ҫаплах йатлаҫат Конечнӑ, пӑртакҫӑ иртерех авлантӑмӑр, вӑл пур. Авланнӑ тесе, ӗҫсем ҫапла хӗрсе пынӑ вӑхӑтра кил хуҫшинче чакалаҫаймастӑн ӗнтӗ...

— Вал комунис пулни пӗр пуслӑх усӑ памаст. Саймопомощра ӗҫлет, чухӑнсене пулӑшат иккен, суртра пӗр пуслӑх усӑ пур-и. Калӑр-ха...—тата тепӗр хут ҫатӑртатса илчӗ Йељук.

— Ак колхоз тӑватпӑр. вара уссине хӑвах курӑн, — терӗ Кӗркуҫ Сан упӑшку халӗ калама та ҫук пысӑк ӗҫ тӑват... Ҫавна курмастӑн. Миҫе чухӑн ҫынсене вӑл пулӑшат. Кивӗ пурнӑҫа ҫӗнегсен, ҫак йал вырӑнне колхоз хули ӳссе ларсан, кам ку ӗҫе тапратса йанӑ тесе ыйтсан, — „Саљук“, — тийӗҫӗ, вӑт вара-а-а.

Кӗркуҫ сӑмахне каласа пӗтеречченех Саљука тумланма куҫ хӗсрӗ.

— Кам лашипе кайӑпӑр,—терӗ Кӗркуҫ.

— Ӑҫта?—терӗ Йељук.

— Колхоз сйезне..

— Вӗлерсен те лаша памастӑп... татах ҫатӑртатрӗ Йељук.

— Кирлӗ мар, —терӗ Саљук.—Йурӗ санӑн лашупа кайӑпӑр эппин,— терӗ Кӗркуҫа.

— Хут те мӗнле кайӑр, хут те ӑҫта кайӑр. Анчах епӗ хам лашана ӑна парас ҫук...

— Выљӑхсене апат-ҫимӗҫ парса хӑваратӑп, ҫав витрене пар-ха, ҫул май тенӗ пек, лашана та шӑварам.

Саљук тумланса, аллине витре тытрӗ те, Кӗркуҫпа пӗрле килкартине тухрӗҫ. Йељук тутине тӑсса пӳртре йатлаҫса йулчӗ...

* * *

— Аптӑрамала уппа, — терӗ Саљук, шахтӑра илнӗ лапсӑрка малахайне пусарах лартса.

— Ан кала та ӗнтӗ, Саљук, епӗ те хамӑнне ҫавӑра-ҫавӑра халтан кайрӑм. Ман хут, чухӑн ҫын хӗрӗ пулнӑскер, чӗлхи-ҫӑварӗсем санӑнни пек вичкӗн мар. Санӑн вӗт ку, хурчӑка пек касат, чӗрӗлех ҫисе йама хатӗр, бачушки...

Хӗвел ҫутипе ҫуталнӑ лӑпкӑ карташ варринче икӗ йулташ выљӑхсем ваљљи апат антарчӗҫ те, лашана шӑварса сӗлӗ-улӑмӗ хучӗҫ...

Нумайранпа тасатмасӑр кӗртленсе кайнӑ йур купи урлӑ каҫса урам варринчи ҫул ҫине тухрӗҫ.

— Ну, ӗҫ... Каҫалхи хӗл пек ниҫӑҫан та пулман. Пуху тӑватӑва халаха чисти йӑлӑхтарса пӗтертӗмӗр ӗнтӗ, —терӗ Кӗркуҫ.

— Килте лăпкă пурăнăç сукки пĕтерет. Ку шуйттанран хăракан пултăм ĕнтĕ. Çыврăвă чух пусран пуртăпа ан ларттăр, питĕ чăрсăр хăтлават. — Саҥук, вăрăман сывласа, çул çинче выртакан шăннă пăх муклашкине тапса сирпĕтрĕ

— Ничево! Тăрсан-тăрсан хăйсемех кÿнеççĕ вĕсем.

— Çаплине çапла та, тепле... кунĕн-çĕрĕн минкретет вĕт, çавă пĕтерет.

Кĕркуç çул çине лач сурчĕ

— Е-е-е, Саҥук. Сĕве патĕнче шуррисемпе çапăçнă чух кун пек кăва-и минкретрĕç. Итту чăтнă... Çаврăнмасан унта, куç курĕ, çĕлесе хуман вĕт..

— А, ачусем, виççĕн вĕт! — пÿлчĕ Саҥук Кĕркуçа. Ачисем çинчен асăнтарнăшăн Кĕркуç силенсе кайрĕ. Вăл пĕччен чухне те ун çинчен нумай шухăшлнă. „Чанах ачамсемпе мĕнле? Ăçта вĕсене хумала, амĕш патне хăвармали çук, вара тĕрĕс пăхса ÿстерессн пĕтет Хам пата колхоза илсен, амеш хирĕçĕ“, тесе шухăшларĕ Кĕркуç

— Аптрамала-ха вĕсемпе. Ну, капла пулсан пурпĕрех уйăрлатăп. Кайран, колхозра аваннине курсан, хăйсемех пырĕç-ха. Ара, ăçта кайаççĕ-ха вĕсем, — тесен, Кĕркуç хĕпĕртенĕ пек пулчĕ.

— Сан çапла...— терĕ Саҥук,— сан вăл чухăн çын хĕрĕ пулса ÿснĕскер Ăна мĕн пур те тĕттĕмлĕх çеç хупарласа тăрат. Вăт манан кулак хĕрĕпе мĕн тумала-ха. Унăн шукăшĕ те çав кулак майах туртăват. Вăл пирĕн май пулса колхоза кайас çук.

— Çаврăнмаст-тĕк, ан çаврăнтăр Кулак хĕресĕр пусне урăх çын тупаймăпăр-ши? Ав Уҥки, мĕнтен вăл кайа, а? Ача-пăча çук, епĕ сан пек пулсан тахçанах ун пек арăма аркатса йамала. Мĕн ăна ачашлмала...— Кĕркуç Саҥука тĕрткелесе кулса йачĕ.

— Уҥки ментен начар, а!

— Ун çинчен мĕн каласма-а...

— Ну, вот, ĕçĕ те пĕтнĕ.

— Çук, апла ĕç шала кайма пултарат.

— Мĕнле?

— Аван мар...

— Аван мар, кунта айăп санра мар.

Саҥук Уҥки çинчен шутла а хăй куç умне çĕнĕ сăнсем илсе килсе тăратрĕ. Уҥки çинчен тахçанах вăл хăй ăшĕнче вăрттăн виççе пăхнă, анчах викама та каламан

— А-а-а, Уҥки аван.. Мĕнле вăл патмар, пĕрре кулни мĕн тăрат, тата сасси, — терĕ Кĕркуç, кулкаласа.

— Да-а, вăл хамăр çын... Анчах...

— Çук, ман шутпа куна ачашласа, аппаланмалли те çук, — терĕ Кĕркуç.

— Ачашланăран мар-ха, çынсем мĕн калĕç, урама тухма намăс пулĕ.

— Намăс... Арăм пур çинче ытти арăмсемпе çÿресен намăс тесен пырат. Ку уш аван мар, йурăхсăр йапала. Пĕрвинчен уйрă са тепĕр çынпа пурăвпинче нимĕн ирсĕр йапала те çук, Раз, çулсем пĕрлешмеççĕ те, уйарăласах пулат... разговор кончен ..

Арăмсем çинчен пакăлтатсах икĕ йĕкĕт Кĕркуç суртне кĕчĕç.

* * *

Икĕ ерне ытла ĕнтĕ Саҫук Кĕркуҫ пӳртĕнче пулманни. Саҫук салтăнма чĕнессе кĕтмесĕрех ҫийĕнчи сăхман пиншакне хывса тĕпеле иртрĕ.

Сĕтел умĕнче Кĕркуҫăн икĕ ачи вырнаҫнă. Ҫара уран, ҫийĕсене пир кĕпе тăхăннă, анчах хуралнă. Сĕтел ҫинчен чăмăрла шуратмасăр пĕҫернĕ паранкăсене тăварланă хăйар шывпе ҫисе ларассĕ. Тепри сăпка ҫинче Ҫăвар урлă йухса аннă манкисемпе ҫуталса, макăрса ларат. Кĕркуҫ арăмĕ ачи макăрнине пăхмасăр хыпаланса ҫăкăр унат...

Саҫук, Кĕркуҫ нимĕн чĕнмесĕр тапак чĕркенĕ хушăра, алăк патĕнчи пуҫтарăнман вырăнпа сарăлнă кутник ҫине, унтан кăмака ҫумĕнчи лахан хыҫĕнчи пĕчĕкҫĕ чĕрĕс тавра сăрăнса утă ҫийекен путексем ҫине пăхса тăчĕ. „Таса мар пурăнаҫҫĕ“, тесе шутларĕ Саҫук. Ҫавăнтах Кĕркуҫ арăмпе Йеҫука танлаштарчĕ...

Кĕркуҫ тутине тăснă, нимĕн чĕнмесĕр ĕҫлекен арăмĕ урлă кармашса хуран айĕнче кăвар илсе чĕлĕм чĕртрĕ.

— Чĕлĕм сан хаклă. Хут пĕр витре шыв ăсса кит-ха,— терĕ арăмĕ.

— Пушă пек чух пулăшас,— терĕ те Кĕркуҫ, тумланса шыв ăсма тухса кайрĕ.

Саҫук Кĕркуҫăн ик ачи паранкăшăн ҫапăҫса кайнине курчĕ. Асли „ку сайăн“ тесе ватамминчен чăмăрла паранка туртса илсе ҫара чĕркуҫисене витне арки ҫине хучĕ. Вăтамми аслин ҫӳҫĕнчен лăскама пуҫларĕ. Асли чыпса йарсан, вăтамми макăрма пуҫларĕ. Амăшĕ чусталлă аллипе аслин пуҫĕнчен, вăтамммин купарчинчен ҫатлаттарса илчĕ.

— Есĕр пурри мана пĕтерет... Вилместĕр те хут,— терĕ амăшĕ ачисене. Хуралса ларнă кĕпине турткаларĕ. Ырхан кăкăр шамми курнакан кăкăрне витсе, пĕрре Саҫук ҫине, тепре ачисем ҫине пăхса тăчĕ те, тепеле кайса ҫăкăрне унама тытăнчĕ.

— Сире, вăт, ҫак ĕҫе парасчĕ. Есĕр хĕрарăм ĕҫне ним вырăнне хумастăр. Пĕр кун хушши ҫапла ҫавăрасчĕ сирĕн пуҫăра. Вăт вара хĕрарăма шеллетĕрччĕ,— тесе хайне-хăй калаҫнă пек мăкартатрĕ арăм. Ҫавантах йĕме чарăнман ачисене чусталаннă аллипе тепĕр хут йунарĕ. Ачисем чĕтресе кĕтессе тĕршĕнсе ларчĕҫ.

Турăш пулнă вырăнта нимĕн те ҫуккине курсан, Саҫук, хăйĕнчен-хăй вăтанна пек пулчĕ. „Вăт, Кĕркуҫ, турăшне кăларса пене пулас,— тесе шутласа илсен, самах хушрĕ:

— Сирен иккон ăҫта?

— Атте, ҫунтарчĕ,— тесе ăна хирĕҫ тавăрчĕ Кĕркуҫăн аслă ачи.

— Ҫапла вăл пирĕн. Пуҫне мĕн кĕрет, ҫавна тăват...

— Есĕ мĕнле пăхатăн?..

— Мĕнле, мĕн тăвас тетĕн-ха сирĕнпе. Ухмах вăл пирĕн, ăна нийепле те ӳкĕте кĕртес ҫук,— терĕ Кĕркуҫ арăмĕ.

Кĕркуç шыв ăсса кĕрсен сăмах татăлчĕ. Мĕн тĕрлĕ калаçас тесен те, хăй килĕнче иккон пуррипе Кĕркуçран вăтанчĕ Сађук. „Хут те мĕн тутăр, çунтарас пулат, ăна пула намăс курас мар, — тесе шухăшларĕ вăл.

Кĕркуç витрине тĕпеле лартса:

— Ват пăх ĕнтĕ.. Çакна пурăнăç тетпĕр вĕт. Мĕн çук кунта... Кĕркуç аллисене сарса пăрахса тавран çавăрăнчĕ — Хамăчĕ, путекки, лаханĕ, вырăнĕ, веçех çакăнта вĕт.. Ачисем çине кăтартса: — Вĕсем тата мĕнле... Ачасен йаçли, ачасен çурчĕ тунă пулсан, мĕнле пулĕччĕ. Çапла асапланмала-и вăл? — терĕ те арăмне: — А а, есĕ колхозран харатăн, — терĕ.

— Халĕĕ! Хăçан пулат вăл!

— Кăçал пулмасан та, тепĕр çул тăватпăрах, — терĕ Кĕркуç.

— Спрĕн ĕç хутра. Сăмах та çакăн çинче çеç апла сирĕн...— Хĕпĕртесе кайрĕ Сађук. Çавăнтах вăл, пӳрт ăшчикки тасамарри çинчен манса кайса, çĕнĕ ачасем валђи пӳртсем, йаçлĕсем тăвасси çинчен каласса кĕрсе кайрĕ.

— Мĕн ку, пурăнăç и.. Ĕçе айатăн, кĕперен çакăнаççĕ. Йĕреççĕ. Тасá мар. Тата вут-кавартан хăрушă. Авлансан пĕр-ик çултанах пирĕн чăваш арăмĕсем ĕçрен тухаççĕ. Мĕншĕн? — Çав хамăр пурнăçа çĕветме пĕлменнинчен. Çĕнĕ, ăслăлăх хушнипе пурăнма пĕлменни пире пĕтерет.

Кĕркуç куç хĕссе: „Аван, тата хытарах, чĕрине витерес пулат“, терĕ Сађук, хĕрарăмăн пурнăçне йусама, ăна ирĕклĕх пĕр Совет влаçĕ çеç пама пултарни çинчен каласан, кивĕ йĕрке хĕрарăм çине мĕнле куçпа пахни çинчен каласа пачĕ.

Кĕркуç арăмĕ Сађук сăмахне итленĕ хушара çăкăр хыврĕ. Чĕресне çĕçĕпе хырса витсе лартрĕ. Урайне шăлса пĕтерсен, сивĕнсе кайнă паранка çиме ларчĕ.

— Ак çакăнтан, уйрам хуçалăхпа епĕр мала кайас çук, — терĕ арăмне, çийеке́н паранка тĕллесе кăтартрĕ: — Çавăнтах вилесшĕн... Çапах хаман пултăр, теççĕ. Вăт мĕн вăл тĕттĕмлĕх...

Кĕркуç арăмĕ уйартнă пек пулат. Кулса та илет, к ллех сивĕнсе ларат.

— Чĕлхепе темĕн те тума пулат. Пĕр кăмака кутĕнче нийепле те ик хĕрарăм килĕштерес çук. Ăна есĕр мана ан та калăр ĕнтĕ...

— Çук, арçынпа хĕрарăм пĕр тан...

— Куранат... Ак ман пек пуçа çавăр-ха çавсемпе...

— Мĕнген килет вăл, — çака епĕр Совет влаçĕ кăтартса панă çулйĕрпе йерменнинчен килет.

— Правиђна! — терĕ Кĕркуç, — кам сана пухăва кайма чарнă. — Çук. Ачасене пăхасси пирки нимĕн те калама пултараймастăп. Тем пек хам пăхăттăм. Вара? Есĕ апат-çимĕç пĕçерсен, епĕ ачасем пăхса ларсан, кам пире çимели, çав пĕçермелине тупĕ...

Кĕркуç арăмĕ, нимĕн калама аптраса, вăрăмăн сывласа сывлăш çавăрчĕ.

— Епĕ санран йулас çук, ăçта-ха кайма пултаратăп епĕ вĕсемпе...

— Ăнланас пулат, — терĕ Саҫук.
— Ҫавă пире пĕтерет те.
— Вăт ҫапла. Аван.. Пĕрле ĕҫлес пулат. Пĕрле кĕрешес пулат. Вара пурăнма та илемлĕ, — терĕ Кĕркуҫ — Ҫуртра, ҫемйе хушшинче хирĕҫӳ хускалсан пурăнăҫ малла каймаст вара... Есĕ, карчăк, ан хăра. Сана епĕ усал тăвасшăн мар. Епĕ те санпа пĕрлех пулатăп вĕт. Камсемшĕн пурăнатпăр епĕр, ав ҫавсемшĕн мар-и? Мĕнле вĕсем кулса ларассĕ!
Саҫук, Кĕркуҫпа унăн арăмĕ, тур кĕтесси пулнă вырăнта йăваланса выҫаса выртакан ачисем ҫине йуратса пăхса тăчĕҫ.
— Да. Вĕсемшĕн, — терĕ Кĕркуҫ.
— Анчах вĕсене урăх условипе ӳстерес пулат. Вĕсем ҫĕнĕ ҫынсем пулччĕр Таса, патмар ӳсчĕр, — терĕ Саҫук.
Кĕркуҫ арăмĕ йуратакан ачисене пĕррен пĕррĕн тытса ҫурăмĕсенчен ачашласа саврĕ:
— Усчĕрччĕ ҫав... „Упта курăпăр хамăрах мĕнле тумалине, тейĕр", — терĕ Кĕркуҫ арăмĕ.

19. Кĕтмен ҫĕртен.

Шкул тавра ачасем пĕр-пĕрне йурпа персе выҫаҫҫĕ, ҫавăнтах хăш пĕрисем кĕреҫесемпе окопсем алтаҫҫĕ. Тата тепĕр кĕтесре, Ҫеркунипе халĕ кăна общчĕствоведĕни вĕренсе тухнисем хăруша газран хăтăлмали нӳхреп тăвасшăн кĕрт ҫине чупса улăхакансене кăшкăрашаҫҫĕ.
— Ан таптă-ар!
— Асту, ишĕлет!
— Ей, унтан йурамаст..
— Акă кунтан алтса кĕрес пулат.
— План тăрăх. Планпа! — тет Ҫеркуни йĕр хывса.
— Шахтăри пекех пулат ку..
Ачасем кĕрлеҫҫĕ, сикеҫҫĕ... Ĕҫ хĕрсе пырат. План тăрăх газран хăтăлмали сурт тăваҫҫĕ. Ҫеркуни ку ĕҫе обшчествоведĕнипе ҫыхăнтарат. Тĕрĕс и, тĕрĕс мар-и, ун ҫинчен никампа та калаҫса пăхман-ха вăл. Пройектлă меслет ҫинчен нумай калаҫаҫҫĕ. Ун ҫинчен ҫырасса та нумай ҫырма пултараҫҫĕ. Ăна Ҫеркуни тавҫăрса илеймест. Нумай пулмаст подрайонти учитĕлсен пуххинче ҫак пройектлă метăд ҫинчен нумай калаҫрĕҫĕ, анчах ун пирки инспектăр резинлă тăсăлакан сăмахсемпе ҫеҫ хăй сăмахне ирттерсе йачĕ.
„Вопчĕм целăм. вăл метăд питĕ кирлĕ, анчах ăна политтехнисăмпа ҫыхăнтарас пулат, условисем пур, ҫакăн тавра социалисăмлă ăмăрту тăвас пулат. Ҫĕнĕ ҫынсене епĕр практикăпа ҫыхăнтарса ӳстермеле". Ҫеркуни пуҫĕнче инспектăр докладĕнчен ҫак сăмахсем ҫеҫ тăрса йулнă. Инспектăр тарласа, мĕкĕрленсе калаҫса пĕтерсен, председатĕл вырăнĕнче ларакани: ыйту кам парат? тесе ыйтсан, — пĕри пĕр сăмах шарламарĕҫ.
Ҫеркуни хăй пуҫĕнче шухăшларĕ: пурте ăнланчĕҫĕ, пĕри пĕр ыйту та памарĕҫ вĕт, терĕ. Хăй вимĕн те ăнланманнипе пулас, ывăннипе пулчĕ пулҫ ку, тесе Софйе Павлăвнă ҫинчен шухăшларĕ.

Вăл хытă тăвласа ларчĕ, кайран унтан ыйтса пĕлĕп, тесе шухăшласа, хăйне-хăй лăплантарчĕ. Вăл каласа парĕ тесе, пуçне килнĕ ыйтусеве, хăйĕн пĕлменлĕхне кăтартасшăн мар пулса, лăплэнчĕ. Ыйтусем те пэмарĕç, тухса та калаçмарĕç. Инспектăр йулашки сăмахĕнче çапла каларĕ: чăвах, енĕр ку ыйтупа чи кайа йултăмăр, çитменнине, пухура та йулашкинчен тĕплесе тухатпăр. Пайан нумай калаçрăмăр. Çавăнпа та пулас пройектлă метăд çинчен сўтсе-йавнисем сахал пулчĕç, ыйтусем те памарĕç. Шухăшпа, ку пирĕн учителсем ўснине кăтартат. Ыйтăва пĕрре каланипех ăнланса илни хаљхи пирĕн хăватлă темплă пурнăçра питĕ кирлĕ, терĕ те, инспектăр хăйĕн сăмахне: Сывă пултăр революци! Сывă пултăр шкулти политтехнисăм! — тесе пĕтерчĕ.

— Кун çинчен нумайтарах вулас пулат, — терĕ пĕри çавăнтах·

— Хатĕрленсе килмеле пулнă, — терĕ тепри.

Докладчик кăшт та хĕрелмерĕ.

— Тĕрĕс, вулас пулат. Вулас, вулас, вулас, — тесе инспектăр выранне ларчĕ.

Çеркуни подрайонри конференцинчен киле таврăнна чух, пройектлă метăд çинчен Софйе Павлăвнăран тишкерчĕ. Софйе Павлăвнă хĕрелсе кайса, тĕплĕн ăнланса илейменни çинчен уçăнах каларĕ.

Çутă пуçлă Самсон, Çергей Павăлчă, шкул пуçлăхĕ, чўрече витĕр ачасем выљанине пăхса тăнă хушăра, хăй ача чухнехи пурнăçне аса илчĕ.

Астăват вăл чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçне. Лăпкă йал... Хутран-ситрен пуштар йе уредник тусан çĕклесе иртет, çынсем пуç тайса йулаççĕ. Каллех йал лăпланат. Чиркў чан çапат... Иртен пуçласа каçчен ĕçре. Уйав, ĕçкĕ. Каллех ĕçре...

Самсон Хусанта пурăннă чух хăй чăваш иккенне никама та пĕлтермен. Революци пулнă вăхăтра та Хусантах пурăнат. Националисăмлă ушкăнсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Пупсем чăвашран архерей суйлама тытăннисем... Çак вăхăтра Самсон Учредителĕ пуху май пулса ĕçлет. Çавăнпа та вăл халĕ ун чухнехи вăхăтсене ăшшăн асăнат. Хусан округĕнчи çарти чăвашсен сйезĕнче пулни, унти Аљунăв ессер тухса калаçнисем.. Большевиксем вĕсене контрреволюцилĕ ĕçе тума чарнисем. Учредителĕ пухăва салатни... Çаксем пурте ун куç умне пĕр самантрах килсе купаланчĕçĕ...

Самсон класран-класа калла-малла уткаласа тухрĕ. Акă татах ĕнер каçхи иртнĕ пуху ун пуçĕнче сăрлатрĕ, унтан шкулта вĕрентес ĕç, методика: пройектлă метăд, политтехнисăм... Самсонăн пуçĕ çаврăнса кайрĕ.

Самсон ватă, кивелнĕ учител. Çĕнĕ кĕнекесемпе хаçатсем сахал вулат. Пурнăç кĕрлесе йухса кунран-кун улшăнса пынине курмаст. Ăна вăл курасшăн та мар. Курсан та хăраса ўкет.

Каллех чўрече умне пырса тăрса, вăл хăйпе хăй мăкăртатрĕ.

— Наци пĕтрĕ, малашне чăвашсем çук. Чăваш йали, йурри, çимĕк, уйав... Ăçта карĕçĕ вĕсем. Ĕлĕкхи вăтану, итлў, туй...

Ҫапла сӳтӗлсе таракан Самсон урамри перкелешсе выљакан ачасем умне пӗр лаша килсе чараннине курчӗ.

— Кам ку? — тӗпчесе ыйтрӗ хӑйӗнчен хӑй.

— Каллех ҫав колхоз ыйтупе пулас, — тесе, чӳрече витӗр пӑхса тӑчӗ.

Ачасем вӑййине пӑрахса, ҫӗнӗ ҫынна сӑрса илчӗҫ. Ҫерку випе тахшин алӑ парса паллашрӗҫ. Самсон, пур районран килекен ҫынсем те чӑн малтан унпа курӑшса унпалан каласнӑ пӑн сахал мар кӗвӗҫсе кӳреннӗскер, халъ татах хӑйне хӑй тулашра илчӗ. „Ҫынлӑхран тухнӑ вӗсем. Йапӑлтатса йурасшан, ват мӗнле вӗсем!" — терӗ те, чӳрече умӗнчен пӑрахса, Софйе Павлӑвнӑ вӗрентекен пӳлӗм урлӑ учителскине тухрӗ.

Софйе Павлӑвна Левин ҫырнӑ кӗнекене вуласа ларнине курсан, Самсон ун патнерех пырса пит-куҫне пӗрӗнтерчӗ. Нимен чӗнмесӗр Софйе Павлӑвна пуҫ урла, сасӑсӑр, Софйе Павлӑвнӑ вулакан сӑмахсене вуласа тухрӗ.

Халъхи шкулӑн задачисем.

> „Пирӗн шкулӑн ҫамрӑксене пӗлӳ никессене парас пулат, ҫамрӑксем хӑйсемех пурӑнӑҫ ҫине комунистла пӑхма веренессине патӑр вӑл „шкул", вӗсенчен нумай вӗренне ҫынсем тутӑр. Ҫынсем унта вӗреннӗ чухне, унӑн ҫав вӑхӑтра вӗсенчен пусмӑрлӑхра тытакансенчен хӑтӑлма кӗрешекенсем туса кӑлармала".
>
> (Ленин, XVII-мӗш том, 325-мӗш стр., 1920 ҫул).

— Вулатӑн? — терӗ Самсон, кӗнекесен шкафӗ умнеле утса.

— Вулатӑп, — терӗ Софйе Павлӑвнӑ.

— Кайа йулнӑ. Пустуй тапаланатӑн...

— Мӗнле пулат, — терӗ ҫиленсе кайса Софйе Павлӑвнӑ.

— Хӑҫан ҫак есӗ ҫиленме пӑрахатӑн. Кала-ха, Софйе Павлӑвнӑ?

— Манран килмест вӑл.

— Вӑн ав, санӑн ҫывӑх тусу патне каллех хӑна килчӗ.

— Питӗ аван, килмесен начар, килни вӑл пире пулӑшни пулат.

— Д-а-а. Хытӑ пулӑшаҫҫӗ. Налог, страховка, зайом, вклад... — Самсон алӑка уҫса пӑхрӗ те Софйе Павлӑвнӑ ҫывӑхне пырса пӑшалтатрӗ: — Пустуй есӗ хӑна ху ҫӗмрӗлетсн. Акӑ куран-ха, кайран ӳкӗнмеле ан пултӑр. Хуна шеллесе калатап...

Софйе Павлавнӑн вут пек ҫуталса кайнӑ куҫӗсем Самсон ҫине шӑтарас пек сиввӗн пӑхса илчӗҫ. Чӗри хӗссе килчӗ, ҫамки тӑнлавӗсем хыттӑн тапма пуҫларӗҫ. Пӗр самантрах ун пуҫӗнче темиҫе тӗрлӗ шухаш ҫиҫӗмӗн ҫиҫӗнчеҫ. „Ҫук, тӳрленмест вӑл. Пӗлтерех ман ун ҫинчен Районона пӗлтермеле пулна Малашне капла куҫ умӗнчех мӑшкӑлаттарас ҫук. Кам вырӑнне хурат вӑл мана? — Ҫук, капла йурамаст. Усал шухӑшла ҫынна ҫак шкулта выран пулмала мар", — тесе шухӑшласа, вӗренипе ҫилли ҫийӗлтен тӑкӑнмах пуҫларӗ.

— Ҫергей Павӑлчӑ, йепле сире ҫак намӑс мар: епӗр пӗчӗк ача мар вӗт. 10 ҫул хушши сойузра тӑратӑп. Тӳрех калатӑп, пайанран вара сиртен урӑх ҫакӑн пек самах илтнӗ ан пулам... Ҫитет, ахалъ те нумай чӑтрӑм.

— Илтсен? Донос.... шпионит тума...

— Хут те мĕн кала, епĕ куна чăтас çук. Есĕ манăн ĕненĕве варлатăн. Идейăна таптасшăн...

— Ĕненӳ-ӳ-ӳ! Комуниссен манашкине çырăнмарăн-а?

— Çергей Павăлчă, сиртен çĕрнĕ шăршă кĕрет. Есĕр чĕрĕле çĕрекен виле... Йепле есĕр çакна чухласа илейместĕр. Тĕлĕнетĕп...

— Хăçантанпа есĕ кун пек пултăн, а? — терĕ Самсон хуллен, учитĕлски алăкне уçса. Кулли тухмасăр шăлне йĕрекенскер, ĕлĕкхи йасар куçсене шывлантарчĕ. Кăсйинчен хуралса кайнă сăмса тутăрне кăларса пит-куçне шăлкаласа, Софйе Павлăвнă умне пырса мĕскĕнĕн йăлăнма пуçларĕ.

— Тархасшăн каçар. Есĕ те мана ăнланми пулатăн. Мĕн тăвас-ха манăн, мĕн тăвас... Ăçта...— Самсон йĕпеннĕ пит-куçне Софйе Павлавнă алли патне илсе пычĕ, анчах Софйе Павлăвнă аллине карт туртса айакала илчĕ. Софйе Павлăвнă çемçелнĕ пек пулчĕ, анчах пуçĕнчи шухăшсене улаштармарĕ.

— Çергей Павăлчă, сăмаха вырăнсăр перетĕр. Манран мар есĕр манашкă тесе култăр, хăвăртан. Ăна есĕр хăвăр çине илĕр, — терĕ те Софйе Павлăвнă, хăй вĕрентекен класне тухрĕ.

Самсон аллинче чиркулне çĕреле усса, хыттăн хупăннă алăк йенне вăрахчен пăхса тăрса йулчĕ.

* * *

Икĕ чӳречелĕ пӳрт çумне витсе тунă кивĕ хапха алăкĕнчен Кĕркуç кил-картине Карукпа Кĕçтук чупса килчĕç. Иккĕш те вĕсем умлă хыçлăн рабочи килни çинчен васкаса каласа пачĕçĕ.

— 25 пин шучĕпе! Колхоз ĕçне çирĕплетме! — терĕ Карук.

Кĕркуçпа Саҥук хĕпĕртесе пĕр-пĕрин çине пăхса илсен, Кĕркуç васкаса арăмне хапхана уçма хушрĕ.

Тăваттăн Кĕркуç лаши çине тийенсе шкула чуптарчĕç...

Шкулта, ачасене анчах вĕрентсе кăларнăран пулас, йăвăр сывлăш йăтăнса тăрат.

Софйе Павлăвнă, Çеркуни те хăйсене кĕтсе илнĕ пек, анчах килсе кĕнĕ йулташсене савăнăçлăн, хыттăн калаçса рабочи килни çинчен пĕлтерчĕç.

— Увăн хушамачĕ Александрăв, Иван Ваççилйевич, — терĕ Çеркуни, вăтам пӳллĕ, вăтам çуллă çын çине кăтартса.

Александрăв кĕрĕк-пиншак тăхăннă, çухисемпе çаннисем çуланнă пек. Çамки çинче пысăк çĕвĕ тăсăлна. Сухалне хырнă пулнă, анчах инçетри çулта пулнăран пулас, пĕтĕм питне сухал тапса тухнă.

Карукпа Кĕçтук рабочин çамки çинчи çĕвве сăнаса пăхса тăрсан, пĕр-пĕрине пăшăлтатса илчĕç:

— Вăрçăра пулнă пулас?

— Епĕ те çапла шутлатăп.

Рабочи васкамасăр пурин çине те пăхса, такçантанпа йалта пурăннă çын пек йутшăнмасăр, калаçма пуçларĕ.

— Йулташсем, мана сирĕн хушăрта ĕçлеме йăвăр пуласси паллах ĕнтĕ, чи йăвăрри çав сирĕн тăван чĕлхĕрпе калаçма пĕлменни, — терĕ.

— Уншăн аптăрас çук, — хушрĕ Кĕркуç.

Кĕркуç хыççăн ыттисем те ун пекех çирĕплетрĕç.

— Актив пулăшат, — терĕ Карук.

— Активпа партийцăсем, комсомолĕссемсĕр епĕр нимĕнле ĕçе те тăвас çук. Çак чăмăр пур ĕçре те малта йертсе пыракан отред пулмала. Райкомра пултăм. Унта мана сирĕн йал пирки чи кайра пыракан йал, терĕçĕ. Пуринчен ытла йалканашĕ начар ĕçлени çинчен каларĕç, — терĕ те, райком партйачейкă организацилеме сĕнни çинчен каласа пĕлтерчĕ.

— Сирĕн кунта парти сийĕ сахал, пĕлетĕп. Ку йапала парти ретне ўстерес ĕçпе тăрăшса ĕçлеменнинчен, йачейкă айакра пулнинчен те килет. Кунта чакаланса тăмали те çук. Вăл хут те хăш йенчен те аван курăнса тăрат. Батраксемпе чухăнсене, лайăх колхозниксенчен парти ретне йертме тăрăшас пулат. Ватăлма пуçланă комсомолĕссенчен йурăхлисене парти ретне куçарас пулат. Ку пирĕн ĕç. Çынсем комунис пулса çуралмаççĕ. Çав ĕçхалăх хушшинчен чи лайăххисене, чи пахисене кĕрешўри малти рете пĕрлештерес пулат.

Пур итлесе ларакансем те пĕр-пĕрин çине пăхса илсе, куçĕсемпе тĕпчеççĕ. Пурте вĕсем: Ăçтан пĕлет ку? Кам та пулсан унта тĕплĕн каласа панă пулас, — тесе шухăшларĕç.

Софйе Павлăвнă тăнланса итлесе ларнă хыççăн, савăтран килнĕ Александрăва рабочи мар пулĕ вăл, тесе шухăшларĕ. Вăрахчен пуç тавра шухăшласа ларсан, хăйса ыйтса тĕпчерĕ.

— Апла есĕр чăн-чăнах савăтра ĕçленĕ?

— Да, савăтра. Производствăра 12 çул хушши ĕçлесе пурăнтăм. Манăн пĕлў — токăр.

— Есĕр аслă шкул пĕтернĕ пулĕ тесе шухăшласа ларатăп,— терĕ Софйе Павлăвнă.

— Да-а, именвă аслă шкул пĕтермеле пулчĕ. Анчах университетра мар. Икĕ револуцире тата граждан вăрçинче... Вунвиçĕ çул хушши ĕнтĕ комуниссен парти ĕретĕнче. Вăт çакă ĕнтĕ манăн аслă шкул, — терĕ Александрăв.

Кĕркуç, Александрăв сăмахне каласа пĕтернĕ-пĕтерменех, хăй граждан вăрçинче пулнине пĕлтерсе, хăш вырăнта кĕрешни çинчен тĕпчерĕ. Александрăвĕ хăш вырăнта, миçемĕш çулта, миçе хут аманнисем çинчен кĕскен каласа пачĕ...

Софйе Павлăвнăн хĕпĕртенипе пуçĕ çаврăнчĕ.— Кун пек çынсем кирлĕ, лачакари пек шăршланса пурăнапăр вĕт, — терĕ те, çавантах ун ăшчикне йўçĕ ват пек Самсонпа хыттăн йатлаçни пăвăнса килчĕ. Малтан вăл кулса, Самсонăн йĕплĕ чышакан сăмахсене астуса илчĕ, унтан ланчашкаланса, мĕскĕнĕн макăрни, пĕрле вунвиçĕ çул ытла ĕçлени... Чи йулашкинчен, 1918-мĕш çулта учитĕлсен курсĕнче пулнă чухне иккĕш пĕрле ташлани, кайран хула тулашне тухса пĕрле ыраш пусси хушшинче çўренисем çинче чарăнса тăчĕ.—Çук, çамрăк пулнă çав, — терĕ те Софйе Павлăвнă, йăвăр шухăшсемпе хăй хваттерне карĕ.

Софйе Павлăвнă нимĕн чĕнмесĕр ларнă çĕртен труках тăрса тухса кайни — пуринщĕн те сасартăк кĕтмен йапала пулса тăчĕ. Шкулта ларса йулнисем нимĕн сăмах хушмасăр пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Ӳпкелемерĕ ши вăл, — терĕ Кĕçтук.

— Çук, ул-ку калаçмарăмăр пулĕ вĕт...

Пĕр самантлăха пурте мĕн пирки калаçни çинчен тишкерсе тухрĕç.

— Чунне парса ĕçлет, — терĕ Карук.

— Анчах, Çергей Павăлчăпа вĕсем килĕштерейместĕ, — терĕ Çеркуни

— Кам вăл? — терĕ Александрăв.

— Пĕтнĕ çын вăл, — терĕ Саҥук. Саҥук сăмахне Çеркуни тăсрĕ:

— Шкулăн пуçлăхĕ. Мĕнле калас, кивĕ шухăшсемпе пурнакан çын. Питĕ пысăк националист, хут те мĕнле çĕнĕ ĕçе те йуратсах каймаст. Обчăлă ĕçе хутшăнмаст. Чисти аптăрамала-ха унпа. Ун пирки пĕлтĕр çыркаласа та аппалантăмăр та, районоран хамăра „бузотор“ тесе айăплама пахрĕçĕ...

— Мĕнле дисциплинăна вĕрентет? — тĕпчерĕ Александрăв.

— Физика тата математика вĕрентет. Хăй ĕçне вăл пултарат, анчах, вăт, çав обчă ĕçне хутшăнмаст. Кивĕ меслетпе вĕрентет, — терĕ Çеркуни.

Александрăв пуçне хыçса пурин çине те пăхса илчĕ. „Сиртен килет вăл“ тесшĕнччĕ, чарăнса тăчĕ те:

— Кун çинчен шухăшлас пулат, ăна çĕнĕ йĕр çине кĕртме тăрăшас пулат, — тесен, — Александрăв Саҥукран йалти пур комуниссемпе комсомолĕссем мĕнле-мĕнле ĕçсем туса пыни çинчен тĕпчеме пуçларĕ:

— Пурĕ миçе комсомолĕс?

— Вунултта, — терĕ Саҥук.

— Пурте йалта-и?

— Çук. Йалта тăххăрăн çеç йулнă. Пĕри, Малттин, Мускавра вĕренет. Виççĕн йалхуçалăх техникумĕнче вĕренеççĕ. Пĕри, Çпритун Мирунчăн аслă ачи, Хĕрлĕ çарта. Тата иккĕшĕ кăçал тракторисен курсне кайрĕç...

— Нумайăн саланнă, — терĕ Александрăв.

— Комуниссем миçе?

— А-а, парти членĕсемпе кăндидачĕсем халĕ пирĕн йалта çирĕме йахăнах пулас та, анчах вĕсем, епĕ те, Кĕркуç, тата Улҥкирен пуçне, йалта пурăнмаççĕ.

— Ăçта вĕсем?

— Тĕрлĕ тĕлте. Хĕрлĕ çарта полк комиссарĕ пулса пурнаканĕ те, хăшĕ-пĕри флотра, Каçпи тинĕс çинче командир помошникĕнче ĕçлет. Пĕри ГПУ-ра. Ыттисем Донбаса ĕçлеме кайнă, пролетари пулнă. Выçлăх çул тухса кайнă. Çавăнтанпа йала таврăнса ĕçлемен...

— Кунта вĕсем килме те пултарайман. Раз, вĕсен хăйсене хушса панă ĕç пур, — тесе хушрĕ Кĕркуç.

Александрăв, кашнин çинчен характеристика çырнă пек, тĕпчесе ыйтса, хăйĕн пĕчĕкçĕ хура хупăлă кĕнеки çине çырчĕ.

20. Ирсӗр ӗҫсем.

Йалта нихҫан пулман хӑвӑртлӑхпа ӗҫ пуҫланат. Парти Обкомӗ йышӑвнӑ тӑрӑх, пилӗкҫуллӑх планпа пур вӑтампа чухӑн уйрӑм хуҫалӑхран 13,5% пӗрлешӳлӗ хуҫалӑха йертмеле пулнӑ. План тулса иртет... Анчах хӑшпӗр вырӑнта ӗҫсем ҫыхӑнман, кӑшӑлланса ҫитеймен.

Йалхуҫалӑх пӗрлешӳлӗ ертелӗн уставӗ Кипек-Кассине ҫитмен. Пӗрисем — чӑххи-чӗппи, мӗь-пур пӳртри шӑкӑр-макӑр пӗрлешӗнет, тесе калаҫаҫҫӗ.

Ҫӗр тӗрлӗ халлап...

Уйавран уйава ҫеҫ какай ҫийекенсем те кашни кун какай ҫиме пуҫланӑ.

Кулаксем хӗрӗсене чухӑнсене, батраксене качча парса, йе колхоза кӗрсе, пытанса йуласшӑн. Ҫавӑнтах пӗр хуран ҫинчен, ҫитмӗл метрлӑ вырӑн витти, хӗрарӑмсем пӗрлешӗнесси ҫинчен ирсӗр халлапсем туртса кӑлараҫҫӗ.

Кашни йалта ҫапла...

Пысӑк ҫитӗнӳсем. Ҫавӑнтах пысӑк ҫитменлӗхсем те сураласҫӗ... Карукпа Кӗҫтук, калӑн, вӗсем йӗкӗреш, каллех пӗрле шкула угрӗҫ.

Йӑмрасен айне ҫитсен, Ухӑҫван кӳллинчен йухса тухакан шыв кутӗнчи вак ҫинчи хӗрарӑмсем кӑшкӑрашса калаҫнине илтрӗҫ:

Кӗҫтук Карука туртса чарса:

— Итле, — терӗ.

— Саҫук арӑмӗ Вирук та авӑ ӗнер каҫ ӗнине пустарнӑ, теҫҫӗ.

— Пустарнӑ. Кӗски пусса панӑ, — терӗ пӗри. — Упӑшки кайсан пустарнӑ..

— Вал мӗн, мӗскӗн Сахиме инкене пӑх-ха есӗ, вӑл та пулин йулашки икӗ чӑххине пуснӑ, тет.

— Кӑҫалхи ҫӑварни вӑйлӑ иртет ӗнтӗ! — терӗ тепри.

— Йӑваначчен ӗҫер-ха пӗрре. Малашне ӗҫкӗ пулмаст теҫҫӗ ӗнтӗ.

Кӗҫтукпа Карук пӗчӗкҫӗ кӗпер ҫине кӗрсен хӗрарӑмсем хушшинче Тиҫук Йакур арӑмне палларӗҫ.

— Арӑмӗсем те ӗҫлеме пуҫларӗҫ те, — терӗ Карук.

— Йалтан кӑларса йарас пулат вӗсене. Унсӑрӑн пӗрмайах вӗсем чӑрмантарасси паллах, — хушрӗ Кӗҫтук.

Кӗҫтукпа Карук шкул умне ҫитнӗ ҫӗре хӗрарӑмсем ҫӗр ҫын ытла кӗпӗртетсе чиркӳрен йарӑнса тухрӗҫ.

— Пӑх-ха, пӑх, ӳсӗр вӗт! — тесе тӗллесе кӑтартрӗ Кӗҫтук Карука, чӗкӗнтӗр пек хӗрелсе кайнӑ хӗрарӑма курсан. Ҫуппер арӑм чирку картишӗнчен тайкаланса тухрӗ те, ҫемҫелсе лӗнчӗртетнӗ пилӗкӗсене тӳррӗн тытса утасшӑн пулчӗ пулас, каҫӑрлса чарӑнса тӑрсан, каллех тайкаланса утма пуҫларӗ.

Карукпа Кӗҫтук чарӑнмасӑр кулса йачӗҫ.

— Пуп ӗҫтернӗ пулас ӗнтӗ куна, — терӗ Карук. Усӗр хӗрарӑм вӗсен куллине илтрӗ.

— Пупăн ĕçме мар, çиме те çук, ун вырăнне есĕр ĕçĕр, — терĕ чĕкĕнтĕр пек хĕрелнĕ хĕрарăм.

Ытти хĕрарăмсем шарлатса кулчĕç. Хĕрсем çăрхаласса чарăнмасăр ирте-ирте кайрĕç.

Карук капла каласса кĕтменскер, ытти хĕрарăмсем те пусăрланса тăнине курсан, аллине сулчĕ те:

— Айта, мĕн вĕсемпе вăхăт çухатас, — терĕ.

Карукпа Кĕçтук шкул крыльци çине хăпарсан та çавах хĕрарăмсем сарлатнă сасă илтĕнчĕ.

* * *

Чиркӳ умĕнче лĕкĕленсе йулнă хĕрарăмсем пуп тухасса кĕтрĕç. Саланмасăр чиркӳ хурал пӳрчĕ умĕнче чӳхенсе тăчĕç.

— Чиркĕве хупасшăн, тет, — терĕ пĕри, найăлтатса, трахомпа çĕрнĕ куçне шăлкаласа.

— Нурăсра та хупнă, тет, — çавăнта колхозсем ваљљи шчуттувут теççи çав, çавсем ваљљи курссă уçнă пулат, — тесе пăкăлтатса илчĕç.

— Тухат, — терĕ пĕри пăшăлтатса.

Пуппа пĕрле хура хăма пек типсе кайнăскер, тепĕр курпун пуп тухрĕ.

— Елхерей панчен килни, терĕç...

Аллисене хĕреслĕн хывса пиллĕх илчĕç.

Пуп благочинăйпа чиркӳ хуралне кĕнĕ чух чиркӳ совет председателне куç хĕссе хăварчĕ...

Ват карас, пилĕкĕн-улттăн йулнă хĕрарăмсене кăчăк туртса, пуп хваттерне кĕме чĕнчĕ. Хĕрарăмсем унăн-кунăн пăхкаласа унăн хваттерне кĕчĕç...

* * *

Александрăва йалта мĕнле халлапсем çӳрени çинчен, ун йачĕпе çĕнĕ йумах туртса кăларма ĕлкĕрни çинчен Карукпа Кĕçтук каласа парсан, вăл шанмарĕ.

— Çав-терийех тĕттĕм çынсем-ши вара, тепри начар пуçлă пулин те капла шухăшлама пултарас çук вĕт, — терĕ. Шанмасăр, пĕрре Кĕçтук, тепре Карук çине пăхса кулса тăчĕ.

— Апла мана Çĕпĕртен килнĕ, — теççĕ.

— Çапла. Çĕпĕртен, пур колхоза сырăннисен хĕрĕсене Çĕпĕрти тайгана улттăн çума илсе кайат, теççĕ. Пурте хăраса ӳкнĕ. Качча кайасшăн ăшаланса çӳреççĕ.

Александрăв кулмарĕ. Темскер шухăшласа тачĕ. Çав вăхăтра çамки çинчи çĕвви туртăнса илчĕ.

— Кам сарнă ку халлапа?..

— Никам та каламаст.

— Ман çинчен çапла шутлаççĕ. Апла... Вăт мĕн вăл тĕттĕмлĕх. Мĕн чухлĕ-ха пирĕн ĕçлемеле, кĕрешмеле...

— Çапла, — терĕç Кĕçтукпа Карук.

Александрăв ку кулаксен ĕçĕ иккенне пĕлет. Мĕн тумала? Пуху пухса ăнлантарсан мĕнле пулĕ? — Хут те мĕнле пулсан та, кун пек халлапа сарма чарас пулат. Пĕр кун та хаклă. Пĕр кун хушшинче çак пушă шухăш темиçе йала çитме

пултарат̌. Темиçе йалти анчах пӗрлешӗннӗ, кăшăлланса çитеймен колхозсем çӗнӗрен ишӗлме пултараççӗ.

Александрăв шанасшăн мар пулсa, шкулпа йунашар пурăнакан Ахваниç килне кайса калаçса ларма шут тытрӗ. Карукпа Кӗçтука каç пулнă çӗре комсомолӗссен хупă пуххине чӗнсе ăсатсан, тумланса урама тухрӗ.

Чиркӗве хирӗç пăхса ларакан шкул умне ачасем таптаса такăрлатнă. Александрăв аллисене кăсйене чиксе тавран сăнаса пăхрӗ.

Икӗ рет улăм тăрăлă пӗрер-икшер чӳречелӗ çуртсем йур ăшне путнă.

— Пăхаççӗ пулӗ ӗнтӗ. Тен, пӗр-ик кунтан çак пуп таврашсем антихрис ашшӗ, йе йыснăш тесе те калӗç, — тесе шутласа тăнă вăхăтра, шкул çумӗнчи Ахванцсӗн аслă хӗрӗ урама çăрхаланса тухсан, калла вăртлатса çавăрнса кӗнине курчӗ.

— Чăнах, ара ку манран хăрарӗ-ши? — тесе шухăшласа, вăл шкул çумӗнчи çурт патне васкаса утрӗ.

Александрăв калинкине уçма тăрсан, шалтан питӗрсе хунине курсан: — Шаккас? Çук, хăратас мар, — терӗ те, урам тăрăх уçăлмала утнă пек, васкамасăр утрӗ.

Пӗчӗкçӗ чӳречесенчен, пысăккисенчен, пуринчен ытла хӗрарăмсем вăрттăн пăхса тăнине курат̌ вăл. Çавăнтах вӗсене кăшт кулса йăпатат̌, вăл кулнине кура пулас, хăшпӗр хӗрарăмсем те сăн-питсене улăштараççӗ. Калла çавăрнса, хыçӗнче таракансемпе пулас, калаçса чӳхенсе илеççӗ...

Кипек-Касси хуларан утмăл, станцăран вăтăр çухрăмра ларат̌. Хӗрарăмсем вырăсла пӗлмеççӗ. Вӗсенчен станцăна кайса курнисем те вун-вуник çын çеç. Йала палламан çын килнӗ.— Мӗншӗн? кам вăл?.. — ыйтаççӗ пăшăлтатса, çавăнтах хăракапни те, хăраманни те пур.

Александрăв, шăнса, йурпа купаланнă йăмрасем айӗнчи пӗчӗкçӗ кӗпер урлă каçса, тăйлăк-тайлăк мунчасем çумӗпе Анат-каса тухрӗ.

Ун сăн-питне сиввӗн çапнăн туйăнчӗ. Михетерӗн „Çынпур“ йатлă йытти сиксе тухса, Александрăва Ухăљван крылци çине хăваласа улăхтарчӗ.

— Пшол!.. Пшол!. —кăшкăрчӗ вăл.

Çав хушăрах Михетерӗн хапхи çумӗпе урама тухнă лаççинчен тӗтӗм мăкăрланса тухнине курчӗ.

— Пожар!.. — шутларӗ вăл.

Михетерӗн пӗчӗк ачи „Çынпур“ йытти палламан çынна хăваласа крылца çине хăпартнинчен шăл йӗртсе пăхса тăнине курсан, тепӗр хут урама йанратса кăшкăрчӗ.

— Пожар! Пожар!— Анаткас пăлханса кайрӗ. Хӗрарăмсем, ват çынсем витресем йатса чупса çитрӗç. Сăра сӗрекен лаçран Михетер çара пуçăнах алтăрне çӗклесе (хăварма маннă пулас) урама чупса тухрӗ.

— Пожар! — тесе кăшкăрса килекен Александрăв лаç тăррине кăтартрӗ. Михетер лаç тăррине çавăрнса пăхсан, вăйлăн тӗтӗм йăтанса тухпинчен ахăлтатса кулса йачӗ. Ытти пуçтарăннă çынсем те кулчӗç.

— Чăнах та, пĕлмен сынна пушарах темелĕ çав, — терĕç хăшпĕрисем.

— Етă, у нас, пивă варим. Пивă, — терĕ Михетер.

Александрăв хĕрелсе, тепре кăвакарса кайрĕ. Хăй ăшĕнче „скандал“ — тесе шухăшларĕ.

Михетер упа пек йыттине киле хăваласа кўртрĕ.

— Приезжий што-ли. — тĕпчерĕ Михетер, йăвашшăн.

— Сирĕн йала ĕçлеме килтĕм.

— Аван, милости просим. Мы рады, — тесе вырăсла калаçрĕ Михетер. — Пожалстă на стакан теплого чувашского. У нас не как у вас. Все самодельный...

Александрăв пушара пуçтарăннă çынсем саланса пĕтнине курсан, шухăшласа тăчĕ: „Кĕрсен мĕн пулĕ? Кам-ши ку? — Кулак ан пултăр, вара ĕçлесси пĕтет...“

— Колхозник? — тесе ыйтрĕ Александрăв.

— Акакш, первый, активис. Мой сын çекретар комсомола.

— Çекретар комсомола — тĕпчерĕ Александрăв.

— Первăй активис, — терĕ Михетер.

Александрăв, нимĕн иккĕленмесĕрех, Михетерпе пĕрле крыльцаран пăлтăра кĕчĕ.

„Вăтам хресчен, вĕсемпе епĕр çыхăну тытмала“, тесе шухăшласа илчĕ Александрăв, пўрт алăкне уçсан.

Райком çекретарĕ.

Лаша такамĕ пек аванса ларнă симĕс тăрăлă çуртăн пĕр кĕтессине парти райкомĕпе райкомол кĕнчелерĕ вырнаçнă. Унпа йунашар пулĕмре РИК етурăшĕсем пурăнаççĕ.

Айакран килнĕ çын райком тĕлне часах шыраса та тупас çук. Тултан пăхсан пĕр шăтăк: пĕрерĕн-пĕрерĕн кĕреççĕ, пĕрерĕнех тухаççĕ. Анчах шалта вĕçĕмсĕр нумай çын сăрлат...

Тăп-тăваткăл пўлĕм, икĕ айккипе тенкелсем лартса тухнă, пĕр кĕтесре çырса ĕçлемели тăрăхла пысăк кивелнĕ сĕтел ларат. Сĕтел тĕлнерех, çтена çумĕнче мĕн кун кам мĕн тумали çинчен çырнă план çакăнса тăрат. Тăват йенчен те картинкăсем çапса тултарнă.

Ленин, Сталин, Ворошилăв, Калинин тата Чăваш республик çĕршывĕн планĕ.

Сĕтелĕ тĕлĕнче райком служăшчисем кам хăш кун канмалине кăтартса çырса çапнă таблица хăйаккăн çакăнса тăрат. Çекретар ăна кашни кунах курат. Хаш-пĕр чух халтан кайсан, çынсем тухса пĕтнĕ хушăра, йе ирпе иртерех килсен, çынсем кĕрсе тулаччен, хăй мен кун канмалине пахса илет.

— Ах, ман ĕнер канмали кун пулнă вĕт, — тенипе унăн канмали кунĕ иртсе те кайат. Çичĕ уйăх канман, çавăнпа та вăхăт çук, хăçан пĕрре канмали кун тупса мунча хутса лайăх килеиччен çавăнас.

Ĕç вăхăтĕнче çынсем нумай килнĕ пирки çекретар кунранкун килсе тăракан хутсене пурне те пăхса тухма ĕлкĕреймен.

Телеграмсене тата хăвăрт тумали хутсене çеç кунран-кун туса пынипе, унăн икĕ папкă тĕрлĕ вуламан хут капланса тулнă. Кашни ĕçе килмессеренех ăна вăл умĕнчи сĕтел çине кăларса хунă, анчах ĕç вăхăтĕнче пĕр хутне те ĕретлĕ вулайман. Хăшпĕр чух çуррине вуласа çитсен телефона чĕнсе йе трукках килсе кĕнĕ çынсемпе калаçма тытăннипе, хăш-таран мĕн çинчен вуланине те манса кайса, урăх çĕнĕ шухăшсем çине куçмала пулнă. Çавăнпа та вăл час-часах пулас. хула çыварнă вăхăтра, çынсем ан кансĕрлеччĕр тесе, РИКăн пушă çуртне ĕçлеме кайса ларнă...

Халĕ вăл пĕр-пĕччен. Хăй пÿлĕмĕнче ĕçлет... Çекретар пирусне тивертсе чарăнса итлерĕ. Нимĕн сас-чĕв те çук, йунашар пÿлĕмрен Иванов мăшлатса çыварнинчен пусне урăх нимĕнле сас-чĕв те илтĕнмерĕ.

Сехет улттă çурă çапрĕ, кăшт ĕçлесен стурăшсем пурăнакан пÿлĕмре темĕскер чăнкăр-чанкăр! туни, кĕленче çĕмĕрлнĕ сасă ун хăлхине килсе çапăнчĕ. Тата пĕр çынни ÿпки таврăнса тухас пек ĕхлетсе ÿсĕрчĕ. „Вăт мĕнле ÿсĕрет вăл. Çийĕнче тÿрленеймест, кайран вилетĕп тесе çÿрет. Пурте сав-çавах, чирчĕрне вăхăтĕнче пĕтерме пĕлместпĕр, кайран вара: Ах! ах! вилчĕ, тетпĕр.

Çăварĕнчи тапак тĕтĕмпе çăтмасăр сăмси витĕр кăларчĕ.

— Мĕн чухлĕ хут, пĕр çĕклем вĕт, вунсакăр йачейкă, кашни йачейкăран протокол. çырусем те сахал мар килсе тăраççĕ. Учрежденисенчен, Обкомран, ăçтан кăна çырмаççĕ, пурне те вуласа пăхас пулат, хирĕç çырса йарас пулат, сÿтсе йавас пулат, — тесе шухăшларĕ те тепĕр пысăк мăнтăрланса кайнă хут папкине илсе: кăна та çынсем килсе тулаччен пăхса тухас-ха, терĕ.

Йатарласа, аллине кранташ тытса, вулама пуçларĕ вăл. Малтан Обкомран килнĕ директивсене вуласа тухса кашнин çине ку хутсем тăрăх мĕн-мĕн тумали çинчен чĕтерекен аллисемпе çыра-çыра лартрĕ.

Халĕ ун нусĕнче канас шухăш çук. Ыратакан кăкăрĕ çинчен, йунпа суракан пырĕ çинчен те веçех манса кайнă. Ун çинчен вăл ирпе çеç астăват.

Пилĕк сехет çеç çыварса вырăн çинчен тăрсан ун пуç ыратат, çавăнтах каçса кайса хыгă ÿсĕрме тапратат.

Сăмса тутăрĕ çине сурнă сурчăкра хĕп-хĕрлĕ кĕвелнĕ йун тумлаксене курсан çеç тÿрленесси çинчен кÿренсе шухăшлама тытăнат. Анчах ĕçĕн вĕрекеш хуранне кĕрсен каллех ун çинчен веçех манса кайат. Канмалах ун, тен, пĕр-пер çĕре тÿрленме те кайасах пулат, анчах ĕçсем çакăн пек хĕрсе пынă чух никам та кану çинчен шухăшлама пултараймаст.

Çекретарăн ĕçĕ пушшех те тата çавăнпа йăвăрланнă: ун заместителне вăхăтлăха урăх районсенче ĕçлеме йанă. Районĕ пĕчĕкçĕ мар, сĕр шучĕпе те. çын хисепĕ тăрăх та республикре пысăк вырăн йышăнса тăрат. Ку районра тата калама та çук пысăк, чаплă ĕçсем хăпарса пыраççĕ. Чăваш ĕççынни ĕлĕк ăна курман, илтмен те. Темиçе пин, темиçе мĕлйун çул та пулĕ çĕр айĕнче (ку вырăнта ĕлĕк тинĕс пулнă), типсе ларнă тинĕс

куракĕпе чĕрчунсенчен çунакан тăпра — сланцă пулса йулнă. Унпа пĕрлех тепĕр сийленсе фосфорит чулĕ хытса ларнă.

Шахтă, савăт, чугунçул, вăрман ĕçĕ, пур ĕçре те тĕрĕс партин тĕп çулĕпе йертсе пымала. Йалсенче хаљ мĕнле чаплă ĕç кĕрлет? Пысăк ĕç... Райкомра вĕсем пурĕ виççĕн ĕçлеççĕ. Хĕрарăм пайĕн пуçлăхĕ йалан йалсем тăрăх çӳрет. Унăн та ĕç сахал мар: делегаткăсем, курссем, ача-пăчасен сырăшĕ, çураки кампани — пĕр канмасăр ĕçлет. Ернере пĕрре йе иккĕ, ăнсăртран çеç тене пек, килсе çапăнат.

Иванов, управдел. Райкомри хут тинĕсĕнче ишекенскер, тăман. Вăл ишет... Кĕнчелертех сывăрат, çав хушарах йала та чупса кайса килет. Колхоз ĕçĕпе çыхăннă, çитменнине ăна тата хăй йалĕнчи колхозăн председателне суйланă. Ăна йалтисем час-часах хăйсем патне сĕтĕрме тăрăшаççĕ...

Çекретар патне вăл вăрман комбинат савăтне хăпартасси çинчен Обком йышăннă резољуцине вуласа ларна çĕре, кăштах пĕр ватă хĕрарăм килсе кĕчĕ.

— Инке, мĕн ĕçпе?

— Çакăнта Микулай пурăнат, терĕç те. Йанăшрăм пулас...

— Кам вăл, ăçта ĕçлет?..

— Çакăнта пурăнат, терĕçĕ. Çапла, терĕçĕ, комуниссен аслин патĕнче, терĕçĕ.

— Мĕнле учреждениинче?..

— Кумунис, теççĕ çав? Ее! Кумуниссен суртĕнче, терĕçĕ.

Çекретар Иванавăн йатне астуса илчĕ. Иванова шырат ку ватă карчăк,— терĕ хăй ăшĕнче. Çапах та çекретар тепĕр хут тĕпчеме пуçларĕ:

— Унăн хушамачĕ мĕнле?

Ватă карчăк, нумай саплăклă хура йавлăкне хур туни пек кăвакарнă аллисемпе тӳрлеткелесе илчĕ.

— Йăванух, - теççĕ куран, çапла, ее, çапла терĕ.

Çекретар, райкомол пӳлĕмĕн алăкне тĕллесе кăтартрĕ.

— Вăл кунта, çыврат-ха. Акă çак пулĕмре.

— Ее, спаççипă, ачам, спаççипах.— Çĕтĕк ланчашка пек кипке тăхăннă хĕрарăмăн çĕтĕк чăлхи витĕр хăрах ури тупанĕ çекретар куçлăхĕ çинче палăрчĕ. „Пайан карлач уйăхĕ, çанталăк сивĕ тăрат. Йепле-ха вăл капла кунта çитнĕ?“

Çекретар ватă карчăка кăмака çумне ларса ăшăнма сĕнчĕ.

— Инке, ак çак кăмака çумне ларса ăшăн-ха пĕрре. Кунта ăшă, — терĕ те, карчăка тенкел лартса пачĕ.

— Ман унпа каласмалаччĕ.

— Ăшăн-ха, вара каласăн. Ак халех ăна чĕнме кайатăп.

Карчăк кавакарнă аллисемпе ăшă кăмакана хыпаласа пăхрĕ те, вăрăмăн ахлатса сывлăшне çавăрчĕ.

— Ларса ăшăн...

— Çук, капла та йурат, уншăн та рехмет.

Карчăк аллисемпе хыпаланкаласа тенкел çине ларчĕ.

— Инке, мĕн çăмăлпа есĕр ăна çак-тери сивĕ çанталăкра шыратăр?

— Ҫăмăлĕ-мĕнĕ, ҫав Йăванух пирĕн йалсем вăл. Ун ашшĕ-амăшсене те аван пĕлетĕп, ĕлĕк куҫ питти чух пĕр-пĕринпе пĕр май хутшăнна. Пĕр-пĕринпе нихҫан та йатлаҫса курман. Ҫакăн чухлĕ пулса та епĕ ҫынпа йатлаҫман та. Ара, ҫын хушшине тухман, куҫсем начар пирки. Ыран-пайан вилессе ҫеҫ кĕтсе пурăнатăп. Ҫиме те пĕтсе ҫитрĕ ĕнтĕ. Шăтăкра паранка пурччĕ те, вăл... ăна та тахшинсем хĕллех кăларса кайнă.

Карчăк сăмахне итлекен ҫекретар: ку карчăк мĕн ҫинчен каласшăн-ши ĕнтĕ, выҫă аптăранă пулĕ, халех ҫырса парас тесе, хут татки ҫурса илчĕ те, ҫырма хатĕрленчĕ.

Ҫекретар йалтан килекенсем хăйсен сăмахне труках татăклă калайманнинчен тĕлĕнмест. Нимĕн тĕлĕнмели те ҫук, килекенсем вĕсем нумайăшĕ ҫапла. Кашнинех ҫапла пĕлес пулат...

— Инке, сире ҫимели тырă кирлĕ пулĕ?

— Ҫу-ук, ачам, вăл тарам-ха, вăлă та пĕтсе ҫитнĕпе пĕрех те, ҫав Микулай мана кулкуса ҫырнă, тет. Кулкус пулат тет ĕнтĕ, ватăлмалăх кунăмра мĕн курмали пулчĕ? Унта кĕнисене вилсен те чиркĕвпе пытармаҫҫĕ, тет. Хуратмĕ-ши тесе тархаслама хăй патне килес, терĕм. Ҫав ҫăмăлпа килсеттĕм, ҫав...

— Аха!

— Ҫапла ҫав... Ҫав ҫăмăлпа килсеттĕм.

— Кам ăна капла калат? — тĕпчерĕ ҫекретар.

— Ҫапла тет ҫав, халăх хушшинче ҫапла калаҫаҫҫĕ.

Ватă карчăк ҫекретар йенне пĕрре те ҫаврăнса пăхмарĕ. Унăн тăхлапа витĕннĕ куҫĕсем урай ҫурăкне пăхаҫҫĕ темеле. Калăн, ăна пурнăҫ пĕтĕмпех йăлăхтарнă, вăл ҫав ҫурăкран халех ҫĕр айне анса кайасшăн...

— Инке, есĕ, колхозран пĕртте хăрамала мар. Сан пек чухăнсемшĕн тăваҫҫĕ-ҫке вал колхоза, унтан аванни ниҫта та пулас ҫук. Чухăнсен пурнăҫне ура ҫине таратасшăн, малашне вĕсем ҫын йеверлĕ пурăнччĕр тесе ĕнтĕ ҫав пĕрлешсе ĕҫлес ĕҫе тапратса йанă. Сана унта турра ĕненме никам та чарас ҫук, есĕ хут те кама ĕнен. Ҫапла каласа паракансем вĕсем сана ырă сунакансем мар. Санăн тăшманусен, пирĕн тăшмансен халлапĕ вал. Пирĕн ун пек халлапсене итлемеле мар. Илтсен те, ун пек ҫынсемпе кĕрешес пулат... — Пуринчен малтан килсе, хутсене ҫынсем шавламан хушăра пăхса тухассине пĕтĕмпех манса кайса, ҫекретар ватă карчăка ӳкĕте кĕртме тытăнчĕ.

Ҫакăнса таракан сехет ҫиччĕ ҫапрĕ. Анчах ҫекретар ăна илтмерĕ. Калаҫсан-калаҫсан карчăк ӳкĕте кĕнĕ пек пулчĕ:

— Ара, хам суккăрпа пĕрех пирки, халăх хушшине тухса ҫӳрейместĕп ҫав. Есĕ калавă пек пулсан, пирĕншĕн тем пек аван та, вĕт, — терĕ.

Карчăк тата темскер каласшăн пулчĕ пулас, анчах ăна темскер кансĕрлерĕ. Пуҫĕнчи шухăшне веҫех каласа пĕтерейменрĕ вăл. Умра таракан карчăк ҫекретаршăн вăхăтсăр вилĕмпе вилнĕ тăван амăшĕ пекех туйăнчĕ.

— Инке, манран есĕ ху ăшăнти шухăшна ан пытар...

Кăмака ҫумĕнче ларакан карчăк пичĕ ҫине йухса аннă куҫҫулĕсене пуҫтутри вĕҫĕпе шăлнине ҫекретар курчĕ. Ун пуҫне

карчăка йăпатас шухăш килсе кĕчĕ, анчах мĕнле сăмахпа ăна йăпатмалине тупаймарĕ. Нимĕн калама аптăраса:

— Инке, есĕр пайан апатланнă-и?—терĕ.

— Çийес килмест ман.

— Мĕн пулчĕ тата?

— Çук...

Карчăкăн пĕчĕк ачанни пек çинçерех сасси аран-аран илтĕнчĕ.

— Кам сире çав-тери кӳрентерчĕ?

— Сан пекех, манăн маттур Симун пурччĕ, пуђаксене хирĕç кайсан йывăр аманса выртса йулчĕ, тет. Хамăр йал ачисемех те ăна курнă пулнă çав, хамăр йал ачисемех, хытă тарнă пирки, нийепле те илсе тухаймарăмăр, теççĕ. Симун аса килчĕ, çавăнпа кăшт хурлантăм,—терĕ карчăк вăрăмăн сывлакан сывлăшне çăтса.

— Мĕн тăвас тетĕн, ĕнтĕ çав-тери шел... Анчах епĕр ăна нийепле те калла таврайрас çук, буржуйсем вĕлерне ĕнтĕ ăна...

Çекретар сăмси çинчи куçлăхне тӳрлетсе лартса шеллекен куççемпе карчăк çине сăнаса пăхрĕ.

— Çавсемех пулĕ çав, çавăнпа выртса йулчĕ, тет çав.

— Иванов!

— Тăтăн-а есĕ?

Кăшкăрнă сасă илтĕнчĕ тепĕр пӳлĕмрен:

— Çиччас.

— Сирĕн йалсем килнĕ!

Тăваткăл питлĕ-куçлă, хурарах сăнлă, 23 çулхи каччă, комсомолĕссен кĕнчелерĕнчи сетел çинче сывăрнаскер, васкаса тухрĕ.

— Сан патна хăна килнĕ.

— Аа-а, кулаксем хăратнă пулĕ-ха?

— Иванов пилĕкĕнчи пиçиххине хытарса:—Мĕн пулчĕ тата, мăнакай?—терĕ.

— Ак ку кам-тăр, пĕлместĕп, ăна веçех каларăм.

— Сан пата колхозран хураттарма килнĕ, халĕ тухмастăп тет ĕнтĕ вăл, ăнланчĕ, епĕр унпа пайтах калаçса лартăмăр.

— Чухăн çын вăл. Ун пĕртен-пĕр ывăлĕ Хĕрлĕ çарта кĕрешсе вилнĕ. Çитменнине тата кăçал ăна çаратса кайнă. Епĕр ăна ватăлнă çынсене пăхакан çурта йарас тесе те шутланăччĕ, вĕлерсен те каймастăп, тет. Питĕ нушаланса пурăнат хăй, ватăлмалăх кунĕнче хут савăнса пурăнтăр тесе, епĕр ăна колхоза илтĕмĕр.

Микулай, калаçма чарăнса, çекреттаре хирĕç пăхрĕ. Ватăлнă карчăк, калăн, вăл нумай пулмаст çекретарпа калаçнине веçех манса кайрĕ. Ларнă çĕртен ура çине тăрса сассине чĕтретрĕ.

— Мĕн ĕçлĕп-ха епĕ унта ачасем, ватăлнă вĕт...

— Мăнакай, есĕ уншăн ан та калаç...

— Епĕр ватăлмастпăр-и? Пурсăмăр та çавăнталах утатпăр вĕт, пурте çамрăкла вилсен мĕнле вăл? Ун çинчен калаçмали те çук, ватăлнă йе совçем ĕçлеме пултарайман çынсем вађђи кашни колхозрах расна суммă пулмала. Сăмахран, пайан кунах колхоз пулăшаймаст пулсан, уншăн хăраса ӳкмели çук. Колхоз пулăшма пултараччен взаимопомощран пулăшса тăрăпăр.

Ватăлнă çынсене государствă пăрахмаст, ĕлĕкхи, кивĕ йĕрке ун çине пăхман. Халĕ ĕçхалăх правитĕлстви мен вăй çитнĕ таран пурне те пулăшат... Сана пенççи параççĕ? — тĕпчерĕ йулашкинчен çекретар.

Лăплавса итлесе ларакан карчăк, темĕскер васкаса шыранă пек аллисемпе хăй ларакан тенкел урине хыпаласа пăхрĕ. Пĕрре çекретар çине, тепре Иванов çине саплăклă йавлăк айĕнчен пăхса илчĕ.

— Мĕн вăл? — чухлаймастăп-çке епĕ ăна, — терĕ, Иванов çине пăхса.

— Укçан пулăшу пани пулат вăл!.. Çук, илмест, — терĕ Иванов çекретаре.

— Ее, пулăшу тавраш илсен, мĕн пĕлетпĕр епĕр, есĕр пулăшсан çеç, — терĕ карчăк.

— Иванов йулташ! Çырса пар есĕ ăна зайавлени, страхкассăра оформит тутар. Мĕнле ку сирĕн йалканашĕ начар ĕçлет? Пулăш есĕ ăна ĕçĕн вĕçне тухачченех.

— Айта, çав пӳлĕмре çырăпăр

— Ай, ачам, çав-тери сана пысăк спаççипă ăшă сăмаххушĕн, ĕмĕру вăрăм пултăр, турă сывлăхна сыхлатăр. Сыв пул, ачам, сыв пул.

— Чипер кай, май пулсан тата кĕрсе тух, мĕн вăй çитнĕ таран пулăшăпăр.

Карчăкпа Иванов комсомолĕссен пӳлĕмне тухрĕç.

Çекретар сăн-пичĕ чалăшнă пек пулчĕ. Калăн, вăл куласшăн, анчах темĕншĕн унăн кулли тухмаст.

— Нумай, нумай-ха ĕçлемеле йалта! — терĕ те, колхозсенче мĕнле-мĕнле ĕçлемели çинчен çырса хатĕрленĕ хучĕсем çине тăрăнчĕ.

Пуç çаврăнат.

„Мĕн чухлĕ ĕçлемеле-ха йалта? Мĕн чухлĕ актив кирлĕ, мĕскĕн, ăнланман вĕт çав, ĕнтĕркесе кунта çитнĕ..." Çекретар Обком йышăнвă хута вуласа тухрĕ. Обком производствă, хапрăк-савăт, шахтă ĕçе çине çирĕп куçпа пăхма хушат, тĕрлĕ çитменлĕхсене кăтартса, ударлă бригадăсене вăйлăлатса йама калат. Социалисăмла ăмăрту ĕçĕ начар пынă, производствăра ĕçлекенсен пухxи вăхатра пулса пымаст, çак çитменлĕхсене хăвăртрах, кĕ ке вăхăтра пĕтерсе, çĕнĕрен ӳсекен чăваш пролетарисене тĕрĕс çул-йĕр çине тăратас пулат. Райком, парти йачейкисем çак ĕçре малта йертсе пыракан отредсем пулса тăмала...

Çекретар Викав вуласа пĕтермесĕрех шухăшпа пусрăнчĕ.

„Правĕљнă! Ну, кама? Кама унта ĕçлеме йарас? Леш савăтĕнче хаљхи йачейкă çекретарĕ те начар ĕçлет. Ĕçлемен те пулĕ вал, сахал пиçĕхнĕ çын..." Райком çекретарĕ, аптăранипе, лапсăркка пуçне хыçса илчĕ. — Тупас пулат. Хамăннах унта çитсе йĕркелес пулат.

Çавăнтах вăл производствăлă йачейкăсем çинчен колхоз ыйтăвĕ çине куçрĕ. Унăн пăтранакан ăшчикки нимĕн çинче те тĕплĕн чарăнса тăма пĕлмерĕ.

Акă вăл Обкомра, пленумра пулнине астурĕ. Хĕрӳлĕ сăмахсем...

Вăл хăй те чĕререн вĕрин тухса каласрĕ. Вăл васкавăрăн пухнă чихвăрсене пурин умĕнче те: ак пахăр, пирĕн мĕнрен кайа, 60⁰/₀-ран иртнĕ вĕт, — тесе каласшăн тапакан шухăшсене аран лăплантарса, районра мĕнле процессем пулса иртни çинчен çутатса пачĕ.

Кашни райкомран килнĕ кашни докладчик çĕнĕ, чăваш историнче пулман йапаласем туртса кăлараççĕ.

Патĕрйал районĕ пуринчен малта. Пĕтĕм районĕпе пĕр колхоз! Пĕр правлени, пĕтĕм район екномиссене уйрăлнă.

Калăн, пурин те пуçĕсем çаврăнса кайнă. Пур районран килнисем те Обкомăн пилĕкçуллăх план тарах, пур вăтампа чухăн хуçалăхсенчен 13,6⁰/₀ пĕрлешӳлĕ хуçалăха куçармала пулнă йышăнăвне нумай кайа хăварни çинчен ăмăртса калаççĕ.

Тăрăхла вăрăм сĕтел пуçĕнче Обкомăн хура çӳçлĕ, пĕрре сăнаса пăхнипе витĕр вулакан, ответлă çекретарĕ кашни докладчикăн сăмахĕнчен те вырăнта ĕçсем мĕнле пынине тĕпчесе тавçăрса илесшĕн. Çырат вăл, çавăнтах калаçакансен шухăшĕсем кăшт çеç пăтранма пуçласанах, ăнланмала´калама ыйтат...

Викăв Чăваш организацинче сахал мар ĕçленĕ... Республикри актива та хăйне пĕлнĕ пекех пĕлет. Анчах, иртнисене астуса илсессĕн хĕпĕртемест вăл.

Райком çекретарĕ Обком хăй умĕнче производствăлă директивне васкамасăр тепĕр хут куçĕсемпе хыпаласа тухрĕ.

С. Петров, тесе алă пуснă вырăн каллех Обкомăн пленумне, Чăваш парторганизаци историне астутарчĕ. Викăвăн çурхи шыв пек кĕрлесе йавăнса йухакан шухăшĕсем хăватлăн çĕкленсе кайаççĕ. Чул çырансем çине хӳмен-хӳмен пăсланса, айĕн-çийĕн çаврăнса пĕрин хыççăн тепри килсе çапăнакан тинĕс хумĕсем пек вĕреме пуçларĕç ун пуçĕнчи шухăшĕсем.

Нихăшин çине те вăл тĕплĕн чарăнса тăма пĕлмест. Истори пĕчĕкçĕ мар. Анчах питех савăнтармаст. Мĕн чухлĕ пустуй вăй-хал салатнă! Мĕн чухлĕ кĕрешнĕ!? — Мĕншĕн!? Миçе тĕллев? Ăçтала туртăннă вĕсем?..

Викăв çак ыйтăва таврса парасшăн пулчĕ. Кун çинчен вăл Мускавра вĕреннĕ чухнех кĕнеке те çырасшăн пулнă. Вăхат çитереймерĕ.

Викăв пирус тивертсе калла-малла уткаласа çӳрерĕ.

Вăхăт пĕр вырăнта тăмаст. Хĕвелтухăçĕ йенчи алăк пек пысăк икĕ чӳречерен хĕрлĕ хĕвел çути ӳкрĕ. Икĕ чӳрече хушшинче çакăнса таракан сехет тăххăр çапрĕ.

„Капла ĕçлесен, ларнă çĕртех вилетĕп. Тепри пур: мĕн вăл, ĕç-и? Сĕтел кутĕнче такам та çырса ларма пултарат, тет. Кил лар-ха, пожалстă, хам вырăна парам. Итлем, мĕнле есĕ йурлăн?“ — терĕ те такам çине çиленнĕ пек тăвăлланнă Викăв, халтан кайса, ик чавсине сĕтел çине тĕрентерсе вăрăм çӳçлĕ пуçне хĕссе, тĕлĕрсе, каллех иртнĕ çулсенчи истори çинчен шухăшларĕ...

* * *

— Кĕме йурат-и!? — илтĕнчĕ сасă.

— Пожалстă!..

Кăшт уçнă алăка йарр! уçса йарса тăватă çын килсе кĕчĕç.

— Можнă!?

— Пожалстă!

— Здравствуйте?

— Здравствуйте!..

— Ларăр, — терĕ çекретар, умĕнчи хутсене пĕр çĕре пухса.

Тата виççĕн сивĕ сывлăш йертсе килсе кĕчĕç. Вĕсем те çтена çумĕпе ретĕн лартса тухнă тенкелсем çине вырнаçрĕç.

— Есĕр ăçтан, йулташсем?

Малтан килнисенчен пĕри, ларнă çĕртен ура çине тăрса, сĕтел патнерех пычĕ, калаçма пуçларĕ.

— Епĕр, — Уравăшри шахтăри рабочисем. Шахтăри тĕрлĕ киревсĕр ĕçсем çинчен каласа кăтартма райкома килес терĕмĕр.

— Ата, кала. Итлетĕп. Ку питĕ аван. Мĕн пирки?

— Çав профсойуз пирки. Уравăш шахтинче епĕр ĕнтĕ, анчах çапах та çав членствăна халиччен оформит тумаççĕ.

Ку сăмахне каласа та пĕтереймерĕ, ларнă çĕртен сиксе тăрса тепри ун çумне пырса тăчĕ. Васкаса калаçма пуçларĕ.

— Главни, тата епĕр çавăнпа давуљни мар! Ĕçĕн нурми пысăк. Вĕсем пирĕн чăвашран кулма пăхаççĕ, куран, çав нурмăна рабочисем чакарттарасшăн. Апла пулсан епĕр ĕçлеме пултараймастпăр. Нивозможнă йывăр...

Тата тепри тытăннă сасăлăскер ларна çĕртенех:

— Тата çав хваттерсем пирки те питĕ начар, — терĕ.

— О-о-о! Хваттер пирки...

— Апат-çимĕçне те вăхăтра тăратмаççĕ.

— Пĕр-пĕрин хыçĕнчен ăмăртса калаçнă пек тăваттăшĕ те хăйсен сăмахĕсене пере-пере йачĕçĕ.

— Крамăвĕ питĕ усал!

— Техникĕ-и!

— Тата мĕн пур?

Малтан калаçма пуçлани:

— Кусене тусан та çитет, — терĕ те, çекретар ларакан сĕтел патне пырса, пысăк çуркаланнă аллине кăтартрĕ:

— Ак ку мĕн, куратна? Çапла ĕçлеме йурат-и?

Çекретар рабочин çуркаланса тăртантнă аллине курчĕ.

— Да-а! Çук, йурамаст.

— Туттă-а!? Хăнча пулат, пĕрмайах вĕсен çуккă?

— Колдоговорпа мĕнле-ха? — тĕпчерĕ çекретар.

— Алă пуснă, йанă, — терĕ лешĕ, уркенсе калаçнă пек.

Çекретарĕ рабочисем райкома килсе каланăшăн тав турĕ. Телефонпа звонок пама тытăнчĕ. Çавăнтах халĕ кăна туса пĕтернĕ савăта телефон лартманнине аса илсен, — „чорт побери, хăçантапа вĕсене телефон лартма каланă, халĕ те лартман пулĕ-ха? — тесе мăкăртатрĕ. Может пайан лартнă? — Сĕтел çинчен телефонне шăнкăртаттарчĕ.

— Алљо! — Дайте завод!

— Çук, лартман. — Телефонăн калаçакан трубкине вырăнне хурсан, тепĕр хут шăнкăртаттарчĕ:

— Чентраљни?!

— Чентраљни итлет?

— Мĕншĕн çав савăта телефон лартса памастăр?

— Лартма пуçланă, аппарачĕ те пур, йуписене лартса çитереймен-ха. Ыран савăта хута йанă çĕре лартса паратпăр ĕнтĕ.

— Йурат еппин, темп ÿстерес пулат!.

— Тăватпăр, тăватпăр!..

Çекретар трубкине хучĕ, умĕнче выртакан шурă хут çине çырма пуçларĕ.

— Йулташсем! Ак çак хута савăт директăрне парăр. Ÿнта епĕ мĕн-мĕн тумали çинчен кăтартрăм, — терĕ те, хута малтан сăмах пуçланă рабочийе тыттарчĕ. Лешсем тухса кайма пуçларĕç.

— Йулташсем, пăртакçă тăхтăр-ха, хваттер, ĕç тумтирĕ, çурт тăвасси, профсойуз, колдоговор ыйтăвĕсем пирки райком хăйĕн татăклă сăмахне калаĕă. Ана епĕр час-часах тишкĕрсе паратпăр, райкомăн çитес ернере пулас ларăвĕнче директăрăн парти райкомĕ хушнисене пурнăçа кĕртнипе кĕртменни çинчен тишкĕрÿлĕ доклад тăмала. Йулташсем, кунта епĕ директăрсене хÿтĕлесе мар, анчах çакна каласа хăварасшăн. Хăвăрах пĕлетĕр, шахтă, савăт тума пуçлани вăл пирĕн районшăн кăна мар, пĕтĕм Чăваш республикĕшĕн çĕнĕ ĕç пулса тăрат. Çитменнине, ĕçлеме пуçăначчен хатĕрсене çителĕклĕ илсе хуманни те аван курăнчĕ. Савăтне кăçалхи çураки тĕлне туса пĕтермеле, савăт çуртне, рабочисем ваљљи çурт-йĕрне те, пурне пĕр вăхăтрах туса хатĕрлемеле пулчĕ. Пур пысăк çитменлĕхсем те çакăнтан килеççĕ. Епĕ каламастăп — бÿрократисăм тавраш̆ĕ кунта пулма пултараймаст тесе, вăл пурах аппаратра, унсăрăн пулмастех... Хамăр çынран тухнă спецсем сахалрах-ха пирĕн. Çавăнпа та ĕлĕкхи спецсемпе усă куратпăр. Елĕк капиталис йе помешчик майлă пулнă çынсен ĕçне пĕтĕм массăпа тишкĕрсе, вĕсен пĕлÿлĕхне, ăсхакăлне сăрăхтарма тăрăшатпăр. Рабочи контрољ вăйлатмала...

Çекретар калаçнă хушăра тата ик-виçĕ çып килсе кĕчĕç. Çекретар вĕсене ларма сĕнчĕ. Унтан, хăй хытă кăшкăрса калаçнине сисрĕ куран, хуллен, лăпкă калаçма пуçларĕ.

— Йулташсем! кун пирки партипе правитĕлствă çирĕп кăтартусем панă, — терĕ те, Обкомран килнĕ хута силлесе кăтартса: çакна пирĕн бољшевикла хастарлăхпа пурнăçа кĕртес пулат, — тесе, сăмахне пĕтерчĕ.

Шахторсем тухса кайрĕç, çĕнĕрен килнисем сĕтел патнерех шуçса ларчĕç.

— Сирĕн мĕнле ыйту? — вĕриленнĕ çекретар лăпланса ларасшăн пулчĕ пулас, тарланă çамкине шăлса типĕтрĕ.

— Пирĕн чиркÿ хупас ыйту, — терĕç лешсем. Викăв колхоз ыйтăвĕ мĕнле тăни çинчен тĕпчерĕ. Вĕсенчен пĕри йалĕпех колхоза куçнипе пĕрлештермели выљăхсем ваљљи вите тума пуçлани çинчен каласа пачĕ.

— Чиркĕве хупма никам та чарас çук. Анчах кунта закон тăрăх ĕçлес пулат. Кашни йалта çав тĕне ĕненнĕ çынсем хăйсен пуххинче сўтсе-йавса йышăнас пулат. Унсăрăн çирĕплегместпĕр, Тĕпĕçтавком çирĕплетес çук, — терĕ Викăв.

— Пирĕн чиркў обчинче тăхăр йал тăрат. Кашни йалтах епĕр пуху туса тăнлантартăмăр. Протоколсем те пур.

— Çителĕклĕ мар, — терĕ Викăв.

— Тата мĕн кирлĕ? Епĕр ытла та тĕплĕ тесе тăратпăр. Пире клуб кирлĕ. Ваттисем мĕн весем...

— Алă пустарас пулат... Çук, йулташсем, ваттисем мĕн? тесе тăма пултараймастпăр епĕр.

— Ана тума пулат, — терĕ пĕри.

— Астăвăр, йулташсем, перегиб ан тăвăр, — терĕ те çекретар, камсем, хăш йалсем пулни çинчен ыйтса тĕпчерĕ.

Пурте тухса кайсан Викăв хăй умĕнчи хаљ кáна килнĕ хаçатсене çавăркаласа пăхрĕ. Çавăнтах вăл хапрăк-савăт, шахтă колхоз ыйтавĕсем çинчен шухашлама пуçларĕ.

— Актив сахал. Виççĕн çеç райкомра. Сахал. Райком штатне ўстерессн çинчен бўрора лартса, Обкомран ыйтас. Умри телефон чăнкăртатрĕ.

— Алљљо!..

— Алљљо!..

— Елĕк, ан кансĕрлĕр-ха!

— Чутай!?

— Чутай!

— Ну, мĕнле?

— Пĕр май 70% таран çитрĕ. Сирĕн мĕнле?

— 91%.

— А-а! малта!? Гигант таврашсем тумастăра-ха?

— Пирĕн кустсем. Район тăхăр кустăна уйрăлса тăрат!

— Пирĕн те çакăн йеверлĕ.

— Хăвăртрах пĕтерĕр. Шупашкартан Канаша ыйтаççĕ, — терĕ пĕр телефонисĕ.

Кăшт калаçсан çекретар сăмахне пĕтерчĕ.

Каллех вăл хаçатсем çине тăрăнчĕ.

Малали „Трактăрăн“ 8-мĕш №-че пулат.

УЙĂП МИШШИ.

ТИНĔС СĂВВИСЕНЧЕН.

1911 çулта çуралнă призывник-тантăшсене.

* * *

Тинĕс тўлеккĕн тĕлĕрет.
Ун кĕленче пек питĕнче,
Пăхсассăн инçете, лере,—
Çиççе выљат каçхи тĕнче.
Тинĕс тўлеккĕн тĕлĕрет...

Тинĕс тĕнчи ытла хўхĕм,
Ав, çăлтăрсем хăйусăр пек
Çўлтен тăкаççĕ йĕпхў хĕм,
Вайă выљаççĕ çĕрĕпе...
Тинĕс тĕнчи ытла хўхĕм.

Уйăх çĕкленчĕ тинĕсрен
Пит пысăк, пысăк пуçĕпе.
Ун ылттăн сăнĕ пин тĕсрен
Сарăлса выртрĕ шыв çийĕпе.
Уйăх çĕкленчĕ тинĕсрен.

Те тинĕс пит те тўлекрен,
Măн уйăх пурçăн пиççиле
Тинĕс çыхрĕ пилĕкрен.
Çĕкленчĕ вут йупи çўле...
Те тинĕс пит те тўлекрен?

Тинĕс тўлеккĕн тĕлĕрет.
Çăлтăр выљат инçе, инçе...
Çук çăлтăр мар, унта лере
Пĕр çутă йалкăшса сўнчĕ.
Тинĕс тўлеккĕн тĕлĕрет...

Анчах асрах ес тыт ăна:
Вĕççĕр тинĕс тўлеккинче
Хăрушă тăвăл пытанат.
Хăрушă тăвăллă тĕнче.
Йалан асрах ес тыт ăна.

Тен, кам пĕлет: ак, пайанах,
Çак вăхăтрах, тен кĕçĕрех
Çиçĕç урса йан та йанах,
Кисретĕç тупăсем çĕре...
Тен, кам пĕлет, ак пайанах..

Пире хăнăх тунă кĕвви
Пелетпĕр: тухĕ унчухне
Пусмăр тĕнчи, мĕн пур кивви
Пўлме истори йуххине...
Çук, пире хăвăх ун кĕвви.

Етемлĕх тинĕсĕ хайар.
Хăрушă тăвăл пĕр тухсан,
Хăт вăрçса ўк, хăт сăхха йар,—
Тăшман, çĕнме шанчăк çук сан.
Етемлĕх тинĕсĕ хайар.

Ўсет, çĕнет çамрăк çĕршыв.
Хатĕр ун ирĕк ывăлĕсем.
Тăшманшăн тутлă йун шăрши.
Хатĕр хăйраннă шăлĕсем...
Çук, шикленмест çамрак çĕршыв.

Ўсет ударлă стройкăра.
Хĕрет тырпулăла хирте.
Електропровăдсем карат.
Вăл вĕренет, чупса иртет,
Ўсет ударлă стройкара.

Алра ман çивĕчĕ приказ:
Алла винтовка тытмала:
Тăшман урса тăрсан: пер, кас,
Çĕнтерўлĕн пăх малала.
Алра ман çивĕчĕ приказ.

Тăвăл тухсан çĕнетпĕрех,
Шывра, çĕрте те сывлăшра!
Çĕвме пĕр тĕл чĕнет пире,
Çĕнме ĕç йувĕ чупат ăшра.
Тăвăл тухсан çĕнетпĕрех!

...Тинĕс тўлеккĕн тĕлĕрет...
Анчах тинĕс тўлекинче
Тĕлĕрет тăвăл.. Авă, лере
Пирĕн хурал. Инçе, инçе...
Тинĕс тўлеккĕн тĕлĕрет...

Крым, Коктебел — Сенкер сăртсен карти, август, 1933 ç.

* * *

Тинĕсрен илемлĕн
Улăхат хĕвел.
Ирĕксĕрех çемĕлĕн
Хăв шухă кĕвве.
Вĕçсĕр-чиксĕр тинĕсĕн
Кăн-кăвак тĕсне
Курнă чухне тин сисен —
Сан куçу хĕснет...
Ăçтан кӳлленнĕ тинĕсĕ?
Ăçти авăртан?
Тинĕс, тинĕс, тин есĕ
Ман умра выртан!
Еп саватăп Атăлăн
Кĕмĕл хумĕсене.
Чиксĕр хаваспа тулăн
Пахсан ун çине.
Сарăлса выртат те вăл
Пит тӳлек, тӳлек.
Йе кĕç варатат тăвăл
Хум сикет çӳле.
Анат-и йухса сулă,
Кимĕсем ишеç.
Çук кунта салхулăх —
Ку — ĕç йышĕ çеç.
Ĕç йышĕ хĕпĕртет ĕçре,
Хавас çĕнӳлĕ ĕç.
Вĕсем çĕнетеç çĕре,
Хăйсем те çĕнелеç.
Йанратаç инçе купăса,
Йавратаç йурра.
Пăрахут иртет чупса,
Хум йăванат кайра.
Вĕçсĕр савăначчĕ чун —
Акăш картилле
Хумĕсем тухаччĕç ун
Шупашкар тĕлне...
Еп пĕлеп тырпулăсен
Ылттăн тинĕсне.
Еп пĕлетĕп улăхсен
Пурçăн симĕсне.
Еп пĕлеп пучахсене
Мĕнле çил авсат.
Еп йурлаттăм çаксене
Чĕререн савса...
Анчах халь... куç умĕнче
Çĕн тĕссем çиçеç:
Чăсăлат инçе, инçе
Кĕмĕл шыв çийĕ çеç...
Сĕм вăрмансен шавĕнче
Халь тăмастăн ес.
Кур ав, пăхса савăнчĕ
Мĕнле ĕрлет тинĕс.
Курсан мĕнле сиксе ĕрлеç
Арăслан сиккиле,
Çав хумсемпе чупса пĕрле
Пурăнас, савас килет.
Мĕн пур вăйпа ĕçе пилсе
Кĕреш, ĕçле те сав.
Пурăнас килет хисеплĕ
Çак чаплă пурнăçа.
...Тинĕсрен илемлĕн
Улăхат хĕвел...
Ирĕксĕрех çемĕлĕн
Хăв шухă кĕвье.
Вĕçсĕр-чиксĕр тинĕсĕн
Кăн-кăвак тĕсне
Курнă чухне тин сисен —
Сан куçу хĕснет...

Каçпи каçĕ.

Кунта илемлĕ-çке каç пит...
Каç питĕ ăшă та çемçе.
Сана савап, каçхи Каçпи!
Савпа ман çут шухăшсем çеç...
Кунта илемлĕ-çке каç пит.
Каç питĕ ăшă та çемçе,
Кăнтăр ачашлăхĕ унта.
Тинĕс шывне ман куçăм ĕçет,
Ун çинче куçăм тыткăнра...
Каç питĕ ăшă та çемçе.
Сана савап, каçхи Каçпи!
Ес каçхине ытла тӳлек.
Куçпа сăн урлă каçăнни —
Уйăхĕ чупĕ шав çӳлех...
Сана савап, каçхи Каçпи!
Кунта илемлĕ-çке каç пит.
Каç питĕ ăшă та çемçе...
Сана савап, каçхи Каçпи.
Савпа ман çут шухăшсем çеç.
Кунта илемлĕ-çке каç пит.

ПАВ. ЙЕРМОЛАЙЁВ (ИЛЕНГЕЙ).

ШУРРИСЕМ ТĔРЛЕМЕСРЕ[1].

Вырăнти асаилусемпе материалсем тăрăх.

1918-мĕш çулта, ийуљ уйăхĕнче, шургвардейцăсем Сызрăљ, Самар, Чĕмпĕр (Уљйанавск) хулисене илсен, татах малала, пирĕн автономи тăвачченхи кĕпĕрнен тĕп хули — Хусан патнелле шавăннă.

Тăшмансем Атăл тăрăх тăвала шума пуçланине кура, Хусан кĕпĕрнин ĕçтăвкомĕ хайăн членĕсене пухса, кан шлу туса иртерет. Унта вал васкавлă мобилизаци тăвасси çинчен йышăну лартат. Канашлура кĕпĕрне ĕçтавком членĕсем, партийцăсем (бољшевиксем) 40 — 50 çынна йахăн пухăннă. Чăвашсем те пĕр вуншилĕк çын пухăнççĕ: Йăнейĕв Й., Алексейĕв В. А. Захарăв А. С. (Катаркассисем), Матвейĕв Е. М. (Куснарсем), Корнейĕв, Ковалевски (Иккасси), Алексейĕв Т. Д. (халĕ Чăвашпредставителствăра ĕçлет), Çпиридонăв — Чĕмпĕртен (вак халахсен комиссариачĕн чăваш пайĕнчен суйлан скер пулнă), Герасимăв Г. В. (Пилешкасси), Павлăв С. П. (Тукай), Разумăв В. (Шыхаљ), Çтепанăв (Шăпăлка) тата ыттисем те.

Канашлура ĕçтăвком членĕсемпе кĕпĕрне уйезĕсене кайса халах хушшинче васкавлă мобилизацисем туса иртерме, листовкăсемпе возванисем салатма, красногвардейцăсен ĕрегне хăй ирĕкĕпе кайакансене пухма, Атăл тăрăх хапаракан чехословаксен армине хирĕç вăй пухма хушнă.

Çак ĕçсене тума Хусантан Чăваш уйезĕсене те ĕçтăвком членĕсем чылайăн килеççĕ. Шупашкар уйез ĕçтавкомне Захарăв А. С. тата Ковалевски К. йулташсем килеççĕ те, васкавлă мобилизаци туса ирттерме ыйту лартаççĕ, çав вăхатрах халах хушшинче, чехословаксен бандине çапса са атма чĕнекен революцилĕ листовкăсемпе возванисем салатаççĕ.

Захарăв йулташ, йатарласа Хусантан килнĕскер: — Хусан кĕпĕрнинчи ĕçтăвком членĕсен совешчанийĕ хушса йанисене пурнăçа кĕртмешкен чехословаксене хирĕç Шупашкар уйезĕнче халех васкавлă мобилизаци туса иртермеле, — тет уĕçтăвком председателне, Бондарĕв йулташа[2].

— Халĕ кун пек мобилизаци тума питĕ хĕн, нийепле шанчăк та çук, темеле, — тенĕ Бондарĕв, Захарăва хирĕç.

Вара кĕпĕрне ĕçтăвком членĕсем хăйсем тухса çўресе Йăлăмкасси, Карач т. ыт. вулăссенче чехословаксене хирĕç арми

---

[1] Чăваш совет писателĕсем граждан вăрçи историне çырма хутшăнса пухнă материалсенчен.

[2] Бондарев Петр Павлăч — Сентĕрвăрриоэм.

пуҫтарас пирки вулӑс пухӑвӗсенчеваскавлӑ ӗҫленӗ, возванисем, листовкӑсем салатнӑ. Унтан уйездсенчен Хусана таврӑнса, хӑйсен вырӑнӗсенче туса иртернӗ ӗҫсем ҫинчен докладсем туса параҫҫӗ.

Августӑн пуҫламӗшӗнче Хусанта кӗпӗрнери хресченсен сйезӗ пухӑнат. Сйеза вырӑнсенчен, контрреволюцилӗ организацисем ҫывӑрмасӑр ӗҫленипе, чухӑн пек пулса кулаксем пырса тулнӑ, вӗсем шургвардейцӑсем килессе анчах кӗтнӗ. Сйеза йертсе пыракансем ӑна малтанах пӗлмен.

Сйезӑн кун йӗрки тӑрӑх, кӗпӗрне ӗҫтӑвком председателӗ Шнуровски йулташ (поляк), кӗпӗрне ӗҫтӑвкомӗн ӗҫӗ ҫинчен отчот туса парат. Ҫав сйезрах вӑрҫӑпа ҫар ӗҫӗ мӗнле вырӑнта тӑни ҫинчен Хусан кӗпӗрнинчи ҫар комиссарӗ Межлаук йулташ доклад тунӑ. Вӑл каланине пурте тӗплӗн, хавассӑн итленӗ.

Сйезра хресченсем хушшинчен пынӑ чӑваш делегатсем те пулнӑ, сӑмахран: Ентрей-пасарсем—Йегорӑв И. Е., партире тӑмансен ҫекцийӗ тӑвас ӗҫе пуҫарса йараканскер. Кайран ун ӗҫӗсене пӗтерсе лартнӑ. Кунсӑр пусне сйезра, паллах, кӗпӗрне ӗҫтӑвком членӗсем те пулнӑ: Захарӑв А. т. ыт. те.

Сйезра пуринчен ытларах Самарпа Чӗмпӗртен тарса куҫнӑ рабочисем каланӑ: „Самара, Чӗмпӗре т. ыт. хуласене те тӑшман аллине памала марччӗ, часрах калла тытса илес“, тенӗ вӗсем.

Ҫав вӑхӑтрах сулахай есерсемпе мешевиксен хушшинче икӗ йухӑмлӑ кӗрешӳ пынӑ. Сулахай есерсем хушшинче чӑвашсем те нумай пулнӑ, вӗсем хресченсен депутачӗсене йертсе пырса, сйеза сулахай есерсен парти Тӗпкомӗн решенийӗ йенеле илсе пырасшӑн пулнӑ.

Хресченсен депутачӗсем сйезра пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех сылтӑм йухӑмшӑн пулнӑ. Вара, ҫав ҫитменлӗхсене кура, Хӗвелтухӑҫ фрончӗн революцилӗ штабӗ, ку сйеза ӗҫне пӗтермесӗрех салатмала тунӑ. Сйез салавнӑ (августӑн пуҫламӗшӗнче).

Тепӗр кунне шургвардейцӑсем Атӑл тӑрӑх хӑпарса Хусан патне ҫитрӗҫ. Пӗкӗлме трактипе пере-пере килсе, вӗсем Хусана илчӗҫ. Хусанта тӑнӑ Хӗвелтухӑҫ фрончӗн революцилӗ штабӗ—Хусан ҫывӑхне куҫса тухнӑ. Шургвардейцӑсем Хусан урамӗсене кӗнӗ чухне, Хусан улпучӗсемпе хуҫасем (аристократи) шуррисене ыр сунса, хирӗҫ илме тухнӑ. Вӗсем кашни шургвардейцӑна тенӗ пек ҫитерсе-ӗҫтерсе пӑхасшӑн пулнӑ. Вӗсем кӗмӗл турелкепе подноссем ҫине котлетсем шӑратса, вӑрӑм черкесемпе хӗрлӗ тутлӑ ерехсем тултарса тухса, шургвардейцӑсене ҫиме, ӗҫме чӗннӗ. Хӑшӗсем иконсемпе хирӗҫ тухнӑ. Ик-виҫ хутлӑ ҫуртсен балконӗсем ҫинчен майрисем шурӑ тутӑрсем вӗҫтерсе ырӑ суннӑ, тӗрлӗрен чечексемпе букетсем парахнӑ.

Шургвардейцӑсем Хусанта пурӑннӑ вӑхӑтра тӑтӑшах урам тӑрӑх пулеметсенчен персе тӑнӑ. Ҫӳрекен ҫынсене, совет ӗҫӗнче ӗҫлекенни пек туйӑнсанах, пере-пере вӗлернӗ. Чӑвашсене те: Захарӑв, Разумӑв, Никӑпӑв тата ыттисене те нумайӗшне арӗслесе тӗпчесе тарӑхтарнӑ. Офицерсем Хусанта плена лекнӗ ӗҫлекенсемпе комуниссен тата матруссен пуҫӗсене тимӗр пӑтасем ҫапса кӗртсе лартнисем, намӑс вырӑнӗсене, хӑлхасене касса

илнисем те нумай пулнă. Шуррисем пĕчĕк ачасене те уйăса тăман Пĕчĕк ачасене те шуррисем: „Аçусем пире хирĕç вăрçаççĕ" тесе, пĕлемесĕр касса такнисем пулнă.

Шургвардейцăсем Хусантан чугунçул тăрăх Атăл хĕррипе улăхса, вунă çухрăмра ларакан Красная Горка станцине çитеçççĕ те, фронт тăваççĕ. Çак шургвардейцăсен Хусан çĕршывне сырса илнĕ фронтне социал-революционер писатĕл Борис Савинков-Рощчин, Францн службин офицерĕ Лебедĕвпа Степанăв тата Раççейри учредитĕлнăй собранийĕн членĕ Фортунатăв йертсе пынă.

Çав вăхăтрах меншевиксем хаçат çине (Рабочее дело) „большевиксем Хусана илсен пĕтĕмпе касса ватса тăкаççĕ, хĕрарăмсене пусмăрласа намăс ĕç туса тухаççĕ", тесе суйса çыра пуçланă. „Троцки матруссене:—Илĕр Хусана, вара унта кирек те мĕн тавăр", тесе калана, тесе те суйнă. Çав суйа сăмахла пĕлтерӳсене Хусан хулинчи рабочисем ĕненмен. Вĕсем „учредиловка" влаçне тӳсеймен пирки, шургвардейцăсене хирĕç восстани тусан, шургвардейцăсен штабĕ хайсем „вĕçне çитнине" сиснĕ. Вара шуррисен мĕнле те пулин тепĕр майлă ĕç шухăшласа кăлармала пулнă. Акă чăнах та, вĕсем усал ĕç шухăшласа кăларнă.

Шургвардейцăсен Хусанти штабĕнче (1918-мĕш çулта, август уйăхĕнче) Раççейри революцилĕ пролетариатăн çулпуçĕсене вĕлермели план тунă. Вăл ĕçе Раççейăн контрреволюцилĕ буржуазийĕ çеç мар, унта капиталпа союзник дипломатисем, тата монархиссемпе учредиловкăн шургвардейцăсен штабĕнчи представитĕлĕ—Фортунатăв та йавăçнă. Шухăшласа кăларнă планĕ пит те пысăк пулнă.

Çав вăхăтрах Мускавра дипломати представитĕлĕсем союзниксен „Локкарт" компанисемпе йертсе пыракан организаци ĕçленĕ. Вĕсен Хусанти шургвардейцăсен штабĕпе хытă çыхăну пулнă. Хусанта та, Мускавра та çав пĕр плана сӳтсе-йавнă. Союзниксен дипломати представитĕлĕсем Владимир Илйич Ульйанăв— Ленина тата Троцкийе чĕрĕле тытас та, вĕсене Английе илсе кайса, халăх умĕнче, „чтобы не смели делать революцию", тесе асаплантарса вĕлермеле пулнă.

Хăш-пĕрисем килĕшмен:

— Ленин, большевиксен тата ытти пуçлăхĕсем те рабочисемпе салтаксем хушшинче мĕнле выран йышăнса тăнине есĕр пĕлместĕр. Вĕсем çул çинчех конвойсене хăйсем майлă çавăрса, конвойсемпе пĕрле тарма пултараççĕ, тенĕ.

Капла та килĕшмен. Килĕшнĕ урăхла: вĕлерес те, влаçа хамăр алла илес. Ку плана пурнăçлас тĕлĕшпе çапла тунă:—Ленина есеркă Каплан вĕлертĕр, Троцкине Сĕве (Свияжск) станцинче тăракан Реввоенсовет пойĕсĕпе пĕрле чĕрĕле тытас,—тенĕ.

Çак йулашки ĕçе тума Хусан çывăхĕнче çĕмĕртерекен тăшман пуçлăхĕсем—сылтăм социалис Борис Савинков тата учредиловĕç Фортунатăв хăйсем çине илнĕ. План питĕ пысăк. Савинкăв, Лебĕдĕв тата Фортунатăв хĕрлисен штабĕн пойĕсĕ ăçта тата йепле тăмали плана тепĕр хут пăхнă та:

— Акă, пирĕн çак план тăрăх Тĕрлемес станцине (халĕ Куславка районĕ) çитсе çĕмĕрмеле, тата Атăлпа хăпарса Куславкаран çула татса, Хурамал кĕперве ватса. Реввоенсовет пойĕсне çавăрса илсе, пуçлăхĕсене тытмала, — терĕ.

Хăйсен отречĕсемпе (500-шер çынлă йулан отретсем, чехословаксем) вĕсем Хусантан Науçа[1] пырса, Атăл çинче 19 прахута йышăнчĕç. Кашни прахут çине сăмсана, хÿрене пĕрер тупă тата пулеметсем лартса тăвала шурĕç.

Вĕсем умĕн кăна Хусанта пурăнакан ĕçхалăх 29 прахут çине ларса, тăвала тухма ĕлкĕрнĕ. Вĕсем шуррисенчен тăвала 29 прахутпа тарнă. Прахутсем хăшĕ Сĕнтĕрвăррине, хăшĕ Куславкана çитсе тăнă. Прахутсем пит те хытă кайнă. Пысăк прахутсем иртсе кайнă чух пĕчĕк прахутсем чÿкенсе çеç йулаççĕ. Пысăк хумсем пĕчĕк прахут патне йавăнса пынă май пĕчĕк прахутăн урапisем: — тăппăл, таппăл-тăппăл, тăппăл-тăппăл, туса йе сывлăшра, йе хум ăшĕнче ç вăрăнса пыраççĕ. Пĕр вăхăтрах кулăшла та, хăрамала та.

Хусантан тарса пынă прахут „Нижний Услон“ пристăнĕ çумĕнче ларнă чухне пĕр снарйад пырса ÿксе çурăлчĕ те, пристаҥ çумĕнче ларакан прахут чалкисене пуртăпа касса татса тарчĕ, тет Палан-кассинчи (Куславка районе) Горшков Йакурĕ. Епĕр „Свияжск“ йатлă прахутпа Хусантан 12 çухрăм улăхсан, шуррисем хыçалтан снарйадпа пеме пуçларĕç. Пĕр снарйачĕ прахут урапи çумĕнче çурăлчĕ, прахут çинчи çынсем йăванса кайрĕç. Прахут çырма хĕрне тухса чарăнчĕ. Шуррисем „Милютин“ прахутпа хуса çитрĕç Вĕсем прахут çине хĕрлĕ йылав çакнăшăн вăрçаççĕ, — тет Йакур.

Шургвардейцăсен прахучĕсем чугунçул кĕперри умне çур çухрăм кăна çитеймен, кайала çавăрăнса кайрĕç.

Ытти отречĕсем Услон патне те куçса пыраççĕ. Хусан тĕлĕпчен Атăл урлă каçса 80 километр кайма, халĕхи Чăваш çĕршыв чиккине — Тĕрлемесе çул тытаççĕ (1918-мĕш çулта, августан 27 (14) числинче, каçхине).

Виçĕ отречĕ те Тĕрлемеспе Сĕве станцисем патне шăваççĕ. Куславкана çитсе çула пÿлсе сăтăр туса çÿреме шухăшлаççĕ.

Хусантан чугунçул тăрăх Тĕрлемес хушшинче — 60 километр, Сĕве станцине — 30, „Красная горка“ — 10, Куславкана Атăл тăрах — 60 километр пулет. Тĕрлемес станцинчен — 12 километрта Кочакова йатлă йал (тутар йалĕ), 7 километрта — „Воробьевка“ йалĕ лараççĕ. Куславкапа Тĕрлемес станци хушши — 10 километр шутланат. Хусантан анаталах Атăлăн пирĕн йенче „Шеланга“ йатлă йал пур. Унран Тĕрлемес станцине лаппала тата урран çÿремели çул кĕвевте пек аванса выртат. Çав Шелангаран Кочакова урла Тĕрлемесе çÿрекен çулан таршшĕ 100 километр.

Тупă сасси сайра-хутра илтĕнет. Шургвардецăсен Савинкăв отречĕ Атăл йе чугунçул тăрăх мар, Шелангаран килекен çулпа та мар, вăл хăйĕн отредне Хусантан Атăл урла каçарса, чугун

[1] Хусан пристăне, Казанкă Атăла йухса кĕрекен вырăн (устье).

ҫулпа Шелангаран пыракан ҫул хушшинчен, пӗр ҫулсӑр, вӑрман витӗр, лакӑм-тӗкӗм хушшипе тӳрех Тӗрлемес станцине йертсе килет. Тӗрлемесе кӗрес умӗн отред Кочаковӑра ҫур кува йахӑн чарӑнса тӑрат.

Тӗрлемеспе Сӗве станци хушшинче Реввоенсоветӑн бронҍӑлӑ пойӗсӗ ҫӳренӗ. Бронҍӑлӑ пойӑс ҫинче морйаксен отречӗ ӗҫленӗ. Вӑл отреда йертсе пыраканӗ Вацетис йулташ пулнӑ. Унтах вӑл вӑхӑтра Троцки те пулнӑ.

Отрйад команди шуррисен вӑйне ҫӳлтен пӑхса тӗрӗслеме Тӗрлемесри почта кӗрет те, Мускавран телеграфпа йумахласа, йероплан чӗнсе илет.

Атӑл ҫинче Куславка патӗнче Ф. Расколҍникӑвӑн флотилийӗ ӗҫленӗ. Вӗсене те Тӗрлемесри пуштӑ кантурӗнчен Мускавпа ҫыхӑну тытса чӗнсе илнӗ.

Хусана шургвардейцӑсем йышӑнас умӗн, Хӗвелтухӑҫ фрончӗн револҍуцилӗ штабӗ Хусантан чакса тухса, Хусан ҫывӑхӗнчех вӑрман ӑшне вырнаҫса ӗҫлеме пуҫланӑ. Вӗсемпе пӗрлех пирӗн ҫӗнӗрен организациленӗ иккӗмӗш ҫар тӑнӑ. Унӑн командирӗ Азин йулташ пулнӑ.

Чӑваш халӑхӗ ку вӑхӑтра ҫуртырри хӗрсе вырат. Вӗсен хӑлхисене час-часах, таҫтан айакран, Тӗрлемес урлӑ, Атӑл хӗрӗнчен тупӑ сассисем илтӗнеҫҫӗ. Йал ҫывнисем ахалҍ те лӑпка мар. Шургвардейцӑсем Хусана ҫапӑҫса пырса кӗнӗ чух, Хусанти пӑшалпа тар савӑтне ҫунтарнине чӑваш ӗҫхалӑхӗ лайӑх пӗлсе тӑрат. Мӗншӗн тесен, ҫӗрӗн-кунӗн, ерни-ернипе ҫунса мӑкӑрланакан хура ҫара тӗтӗм йавӑнса пӗлӗтеле сывлӑшпа хӑпарни, йе вара вӑл пӗлӗтпе хутшӑнса кайса пыни, пит инҫетрен курӑнаҫҫӗ. Хусантан 60 километрта ларакан пирӗн Паланкасси йалӗнчен (Куславка р.) курӑннине епӗ хам та, ун чухне 13 ҫулта ҫеҫ пулнӑ пулсан та, питӗ лайӑх аставатӑп.

Тӗрлемес ҫывӑхнерех йалсевчи уйра ӗҫлекен хресченсем ӑшӗнче хӑранӑ пулсан та, пӗр-пӗрипе: „пирӗн патах, кунтах ҫитмӗҫ-ха, мӗн тӑваҫҫӗ вӗсем пирӗнпе“, тесе йапаннӑ. Пӗчӗк ача-пӑчасем тата тӗплӗрех пӗлесшӗн интересленеҫҫӗ. Акӑ 6 ҫулхи пӗр Ухвин тупӑ пенине илтсен:—„Атте-е... камсем переҫҫӗ-ха, ма переҫҫӗ вӗсем-м!“ тесе, ашшӗ умне пырса тӑрса пуҫне ҫӳлеле каҫӑртса, куҫран пӑхса хурлӑхлӑн ыйтат. Ашшӗ ӑна хирӗҫ:

— Ҫук, пире тивмеҫҫӗ вӗсем, айак‿а вӗсем—кунта килмеҫҫӗ, тесе йапатнӑ. Ухвин лӑпланса тӗм хӳттине кайса ларат. Айакра Хусан тӗлӗнче хура тӗтӗм мӑкӑрланни Тӗрлемес урлӑ курӑнат. Сайра-хутра инҫетрен Чӑваш йалӗсене тупӑ пенӗ сасӑ пырса ҫапӑнат.

— Вӑр-р! вӑр-р! вӑр-р! кӗрлет ҫӳлте. Сасси пуҫ тӳпинче пекех илтӗнет, анчах хӑй ҫӳлтен вӗҫет. Ку ӗнтӗ Хусантан чугунҫул тӑрӑх килекен йероплан Тӗрлемес урлӑ Вӑрмар станци йенеле вӗҫсе кайрӗ. Ҫанталӑк уйар тӑнипе, хӗвел ҫутти йероплавӑн ҫут тимӗрӗ ҫинче ҫиҫсе вылҍани, йероплан инҫете вӗҫсе кайса ҫухалаччен курӑнса тӑчӗ. Патша вӑхӑтӗнче йероплан курман, унӑн сассине илтмен йал ҫыннисем тӗлӗнсе, хӗвелтен алӑпа хӳтӗлесе пӑхса тӑрса ӑсатса йачӗҫ. Тырӑ выракансем вырма

пăрахсах пĕр-пĕрин патне пуçтарăнса, чĕлĕм туртса чылайччен „йероплан... самана... Хусан“ çинчен сăмахласа ларчĕç те, кил-лех вырма пуçларĕç. Кĕркури йатлăскераслă çулпа иртсе кайа-каввинчен пĕрре тапак авăрмалăх хут ыйтрĕ. Лешĕ ăна кăсйин-чен „Рабочее дело“ хаçат кăларчĕ те, çурса пачĕ. Кĕркури „Йероплан... самана“ çинчен шухăша кайса çак пирус чĕркеме панă хут татăкне вулакаласа, арăмупилĕ йăран тăрăх утрĕ. Пăхсан-пăхсан—темĕскер тăна кĕнĕ пек пулчĕ те, вырнă ана ва-ринчи çĕмел еулхăнне пырса ларса вуларĕ:

По Комиссариатской ули . . . .
бежала одна с красной п . . . .
вязкой на руке женщина . . . .
к Лядскому саду, за кото . . . .
гналась конница белых ст . . . .
ляя и крича: стой, остано . . . .
. . . она все же бежала с . . .
. . . и знаменем в руках. Догнав ее .
. дин из них снес саблей череп . .
она упала. Бежавшие покрыли знамя .

Урăх вим çырни те паллă мар. Çак хут таткине вуласа тухсан, Кĕркури çĕмел хÿттинче ларакан витрери шыва ĕçрĕ. Сасартăк, темĕн кĕрлет, кĕрлет каллех. Каллех тепĕр йероплан улаттасра сывлăша çурса вĕçсе чугунçул тăрăх кайрĕ. Паçăр-хипе çак хаљ иртсе кайнă йеропланесене хĕрлисемпе уйри чă-вашсем çеç мар, вĕсене Тĕрлемес çывăхĕнчи шургвардейцăсем те курнă. Анчах вĕсем йероплана пеме хăранă. Йероплан çине персен вĕсен Тĕрлемесе çитес планĕ вавма пултарнă. Айакра тупă пенĕ сас илтенет.

Тĕрлемес станцинче вăл вăхăтра 50 вакун йахăн ларнă. Вăл вакунсем хушшинче снарйадла вакунсем 10[1], перекçелинлă вакун — 1 пулнă Вăл вакунсене сыхлакан командă 28 çын шутланнă. Вĕсем: 24 латыш, 3 вырăс тата пĕр чăваш пулнă. Вĕсен йачĕсене Тĕрлемес йалĕвчи астăвакан çук.

Çак снарйадлă вакунсем маттан Сĕве станцинче ларнă. Вара ку станцă патĕнче „Русские Ширданы“ йалăн пĕр пахчине ту-тар улпучĕсем пуçтарăнса ултă пулемстпа персе выртнă. Вĕ-сем пени нумай йал çыннисене тата выљăх-чĕрлĕхĕсене вĕ-лерсе сăтăр тунă. Çынсем пуљăсевчен хăраса, Атăл хĕрĕнчи çÿлĕ çырансенчен сиксе тарнă та, Сĕвере таракан револљуциле штаба пырса, асаплăхран хăтарма ыйтнă.

Çав вăхăтра Хĕрлĕ çар хайĕн вăйне пуçтарса Сĕве хули патне пынă. Сĕве патĕнче тутар улпучĕсене хирĕç вăрçă вăй-ланса кайсан, станцăра ларакан снарйадлă вакунсене командă-па пĕрле Тĕрлемесе куçарнă.

... Кочаковăри шургвардейцăсем çывăрмаççĕ. Вĕсем пĕр май тупрĕç: Кочакова йалĕнчи пуштă кантурĕнче ĕçлекен выраса, Иван йатлăскерне, хайсем майлă çавăраççĕ. (Ивана таврари çын-сем пурте паллаççĕ. Тĕрлемес станцинчи тата Тĕрлемес йалĕн-чи çынсем те пĕлеççĕ ăна).

1 Хăшĕ-пĕрн — 16 вакун тееçĕ.

Августӑн 15-мӗшӗнче ирхине ирех шургвардейцӑсен пуҫлӑхӗсенчен пӗри:

— Иван, — сана мӗн кирлӗ — ҫавна паратпӑр, хамӑрпа пӗрле килсе кайатпӑр. . есӗ пире Тӗрлемес хуҫишине утӑмласа виҫсе килсе пар, тата хыпар ҫене пӗлтер, — тет аллипе тӗллесе кӑтартса. Ал пӳрнисенче ылтӑн ҫӗрӗсем ҫиҫеҫҫӗ. Иван, кӑшт тӑрсан, малтан Тӗрлемес станци йенне, унтан отред пуҫлӑхӗ ҫине пӑхрӗ те:

— Йурат, халех кайса утӑмласа виҫсе, тата Тӗрлемес станцинче мӗн пурри-ҫуккине пӗлсе килетӗп, — терӗ.

Шургвардейцӑсем хӗпӗртерӗҫ. Вӗсем Ивана ҫул ҫине револьвер, тата патронсем пачӗҫ.

Сайра-хутра Атӑл хӗрӗнчен, Сӗве йенчен тупӑ сассисем илтӗнеҫҫӗ. Вӗсен сассисем Хусан кӗпӗрни уйхирӗ урлӑ сывлӑша ҫурса йантраса кайаҫҫӗ те, лӑпланаҫҫӗ. Иван, ан паллачӗр тесе, ҫӗтӗк-ҫурӑк тумтир тӑхӑнса ҫӑпата сырат те, тӳрех ҫулпа утӑмласа виҫсе, Тӗрлемес станцинеле утат. Шуррисем апатланса ларчӗҫ. Иван утӑм шутне манас мар тесе, кашни ҫӗр утӑм утсан кӑсйерен блок-нот кӑларса пӗр патак лартат. Тӗрлемес станцине ҫитсен Иван ҫаврӑнса пӑхса ҫӳрет. Ҫынсенчен ыйтса тӗпчет, станцӑра мӗн пур-ҫука сӑнат. Станцӑ айаккинче сӳрекелесе станцӑра тӑракан пуйӑс составӗсене пӑхат, вакунсене шутлат, 50 вакун тухат, вакунсем ҫине — „огнеопасно" тесе ҫырнисене вулат.

Калла ҫитсен Иван шуррисем умне пырат те, блок-нота отред пуҫлӑхӗ аллине парат. Шуррисем патаксене шутласа пӑхрӗҫ те, 180 патак тухрӗ, 18 пин утӑм. Ҫухрӑм ҫине куҫарчӗҫ.

Ҫухрӑм ҫине куҫарсан, 12 ҫухрӑм шутланчӗ, вара айакра тесе 7 — 8 ҫухрӑм кайрӗҫ те, „Васюковское поле" птне ҫитсе выртаҫрӗҫ. Кунтан ӗнтӗ Тӗрлемесе 3 — 4 ҫухрӑм анчах йулчӗ. Шуррисем Иванран мӗн курни-илтнине ыйтса тӗпчерӗҫ. Вакунсем ҫине „огнеопасно" тесе ҫырнине пӗлсен, шуррисем туппа (трехдӳймовкӑ пулнӑ теҫҫӗ) авӑрларӗҫ. Вара 3 — 4 ҫухрӑм урлӑшӗнчен Тӗрлемес станцине мушкӑ ҫине тӗл туса лартрӗҫ. „Взорвать огнеопасные вагоны!"

Сасартӑк: — кӗрс-бух!.. тесе ҫурӑлса Тӗрлемес тӑрӑнче осколкӑсем чӗвшшин... пӗр тапхӑр уларӗҫ. Сывлӑш чӗтреннипе ҫӗр те чӗтренсе кайрӗ пек туйӑнчӗ. Тупӑран пӗр хут пеин икӗ саслӑ илтӗнет: пӗр сасӗ персе кӑларса йанӑ чух, тепри: килсе ӳксен ҫурӑлса кайнӑ чух, татах переҫҫӗ, снарйад Тӗрлемес станцинчи шыв тытакан резервуар викесне пырса лексе кирпӗчсене катса кӑларат. Станцӑра хӑшпӗр ҫынсем осколкӑсем лекнипе аманаҫҫӗ. Тӗрлемес станцинчи тата Кив-Тӗрлемеспе Ҫӗн-Тӗрлемес ҫыннисем сасартӑк хусканчӗҫ. Кам перет? — мӗншӗн переҫҫӗ-ши...

Пӗтӗм тавраи тыр выракансем те илтрӗҫ ҫак сасса. Вӑл сас уйхирте хӗрсе ӗҫлекен халӑх урлӑ, йалсем урлӑ, уйхир талкашӗпе йанӑраса айакала кайрӗ. Кунтах переҫҫӗҫке... ҫывӑхрах. Шургвардейцӑсем трехдӳймовкӑпа персе йарсан, пӗр кӑна пӑхса тӑчӗҫ. Нимӗн паллӑ те курӑнмаст. Вӗсем хӑйхи

„огнеопасно“ вакунсемпе ҫуртсем чӗрӗлсе тӗтӗмпе мӑкӑрланасса кӗтеҫҫӗ. Анчах пӗрре пенипе шуррисем умне Тӗрлемес тӑрӗнче тӗтӗм курӑнмарӗ.

— „...Дать еще выстрел!..“

Каллех кӗрӗслеттерчӗҫ. Ӗнтӗ—ку Тӗрлемес станцинчи „казенный дом“ ҫине лекнӗ Ҫурт ҫунса мӑкӑрланма пуҫларӗ. Обйезчиксем пӳртрен тухса тарчӗҫ.

— Ага,—теҫҫӗ шуррисем, Тӗрлемес тӑрӗнчи тӗтӗме курса.— Дать третий выстрел...—Виҫҫӗмӗш хут пени снарйадлӑ вакунсене лекрӗ. Снарйадсем ҫурӑлнипе мӗн пур станцӑри вакунсем вавса ҫӳлеле ҫӗкленсе таткӑн-таткӑн сирпӗнчӗҫ.



Вакун ураписем ывтӑнса, ӑрман урлӑ виҫ тӑватӑ ҫухрӑма кайса ӳкеҫҫӗ. Снарйадсем айакка кайса ӳксе ҫурӑлаҫҫӗ,. вара пӑрлӑ ҫӑмӑр пек пӗр тапхӑр роскольсем, капсӑлсем, шинвшик... тесе вӗҫеҫҫӗ. Аслӑ Тӗрлемес йалӗн вӗҫӗнчи сырма тӑрӑшпе ларакан ватӑ ҫӳлӗ йӑмрасем ӑшӗнчи хура кураксем:—пӗррр... лӑппӑл-лӑппӑл... вӗҫсе тухса, ҫырма тӑрӑх Куславка патнеле кайрӗҫ. Станци ҫине виҫҫӗмӗш хут персен снарйадлӑ вакунсемпе пӗрлех Забродин хуҫан ҫӑмарта складне лекнӗ. Снарйад ҫурӑлса кайнипе, тата Тӗрлемесри вокзал ҫурчӗ, вокзал ҫывӑхӗнчи пуштӑ кантури, Красновӑн, Ильйа Григорчӑн т. ыт. пӳрчӗсем ҫунаҫҫӗ. Снарйадлӑ вакунсем ларнӑ вырӑнти ҫӗре чавса лупакалса пӗтернӗ. Рельсӑсем снарйадсем ҫурӑлса лекнипе, пӗр вырӑнта татӑлса сирпӗнсе, тепӗр вырӑнта кӗвенте пек авӑна-авӑна кайнӑ

Тĕрлемес станци çунат, мăкăрланат. Хура çăра тĕтĕм винта пек пĕтĕрĕнсе çӳлелле хăпарса кайни 40—50 километртан курăнат. Снарйадсем çурăлаççĕ. Чăвашсем ăна таçтан инçетрен кураççĕ, сисеççĕ вĕсем, чунĕсем пăвăнса килнипе, шăлĕсене çыртаççĕ. Чехсем Тĕрлемес çине тапăннине вĕсем пĕлеççĕ. Акă пĕр хресчен уйра анине сухапуçпе чĕрсе анарки çине уйăрнă чух, сухапуçĕ ана çине варăнса ларнă пысăк чула лекрĕ. Пуçне усса ӳпĕнсе выртса сухапуçне сĕтĕрекен лаши сухапуçĕ чула лексен чарăнчĕ. Хресчен суха купташкине питĕрленсе çĕклесе суха кассинчен кăларса лартат те, чĕркуçленсе ларса алăпа чакаласа чула йăвалантарат. Ывăннипе улача-кĕпе çухавин пыршиккине салтса кăкăрне уçса йарат те, Тĕрлемес станци çинеле аслăн сывласа пăхат... Самана.. Тĕрлемес... Тертлĕ пурнăç... ...Ывăннă лаша... Йăравлă йе чуллă анасем çинчен пĕр тапхăр пит те вăйлăн, хăвăрттăн шухăшласа илет,—хăçан сирĕлĕ-ши çак шуррисен мурĕ, пурăнма та памаççĕ-çке...—тет вăл.

Çав вăхăтрах:—шин-вшик! туса пĕр пуљă хресчен умне çĕр çине тăрăнчĕ. Типĕ ана çинче тусан: п-пăл! çĕкленсе çилпе вĕççе кайрĕ.

Станцă çунма, хускалма пуçланнăранпа тата снарйадсем çурăлса станцари вакунсене вакласа, таçта инçе унта-кунта ывăтса пĕтернĕренпе ик-виç сехет иртрĕ. Тĕрлемесри снарйадлă вакунсене сыхлакан латышсен команди вăрмава тарса пытаннă. Тĕрлемес йалĕсем хăшĕсем хăраса хаклă йапалисене нӳхрепсене тултарса тăпра витнĕ, хăш-пĕрисем урапа çине тийесе çыхса, лаша кӳлсе тăратса, тухса тарма хатĕрленнĕ. Хĕрлĕ çар вăл вăхăтра Атăл хĕрринче Услонпа Сĕве çывăхĕнче шургвардейцăсемпе хытă çапăçнă. Вăл йенчен тупă пенĕ сассем, пăшал сассисем илтĕнеççĕ. Анчах унта мĕн ĕçлени Тĕрлемесрен тата Тĕрлемес таврашĕнчи йалсенчен курăнмаст. Тен, унта револјуцишĕн çапăçса пушшех йун йухтараççĕ-и, тен.. Ак ку, Тĕрлемес ĕçĕ чăваш халăх куçĕ умĕнчех... Ава мăкăрланат, снарйадсем пĕр тапхăр аслати пек кисренсе çĕре чĕтретрĕç. Ак халĕ те çурăлмасăр айакка кусса ывтăнса кайнă хаш-пĕр снарйадсен çурăлнă сасси сайра-хутра илтĕнкелет.

Сасартăк Кочаковă йенчен шургвардейцăсен офицерĕсем 16-тăн лашисене сиктерсе Тĕрлемес вăрманне кĕчĕç. Вĕсенчен 3—4 çухрăм хыçаларах çураннисем 62 çын уйра пĕр лапана вырнаçрĕç. „Васюковское поле“ патĕнчи оруди патĕнче те чылайăн вĕсем. Вĕсем ĕнтĕ патнех çитнĕ. Йулавутлисем вăрмана кĕрсе хĕрлисене шырама пуçларĕç. Вăрмана кĕрсе пытаннă латышсем, хыçалтан шуррисем пысăк вăйпа килнине курса, икĕ çухрăма ларакан Тĕрлемес йалĕ патнеле—хăшĕсем çырма тăрăх, теприсем—аслă çул тăрăх, йе çуртырри анисем урлах тарма пуçларĕç. Вăхăчĕпе вăрмантан тухса тарайман латышсене, шуррисем ăçта тĕл пулна, çавăнтах касса пăрахнă. Тухса тарнисене лашапа хăваласа çырма тăрăх, анасем урлă çӳренĕ.

Акă шуррисен офицерĕсем улттан виçĕ хĕрлĕгвардейцăна çул тăрăх хăваласа Тĕрлемес йалĕ çумĕнчи кантăр ани пуçĕнче хуса çитрĕç. Хĕрлĕ гвардейцăсем ним тума аптраса çул

хĕрĕнчи кантăр ани ăшне кĕрсе хăтăлма шут тытнă. Шур офицерсем кантăр ани ăшне кĕрсе вĕсене хупăрларĕç. Саблисем хĕвел çутине йăлтăртатса çиçсе çутиçе айакка ывăтаççĕ. Икĕ офицер пĕр латыша хушша хупăрласа пуçне касса антарчĕç. Латыш пуçĕнчен ик чĕт касăлса, пĕри лаша урисем айне вăранчĕ, тепри кантăр ăшне сирпĕнчĕ Латыш кÿлепи кĕлте пек йăванчĕ те, сиккелемерĕ. Тепĕр латышне пуçĕнчен çурмаран касса пуçне чĕлсе антарнă Латыш йăванса кайсан та, вилеймесĕр тапаланса выртат. Шурă офицер шăлне çыртса, лашине: — поддай! тесе командă парсан, офицер лаши йун йухтасра выртакан латыш умне чĕркуçленсе ларат те, шурă офицер тепĕр хут латыша кăкăрĕнчен чикет. Лаши чĕркуççи çинчен ура çине тăрат. Офицерĕ лашана тепĕр хут чĕркуçлентерет те, йунлă хĕçне латыш гиманçторкипе шăлса типĕтет. Пĕр офицерĕ кантăр анинчен айакра мар пăхса тăрат. Лаши йап-йакаскер, йăл-йăл çиçсе тĕпĕртетсе çеç тăрат. Тепри çав аслă çул хĕрĕнчи кантăр ани пуçĕнчех пĕр латыша хупăрланă та: — кругом! — тесе командă парат Хĕрлĕармейцă вилĕмрен хăтăлма çуккине кура, кайала çавăрăнса тăрат. Офицерĕ лашине майлăрах тăратрĕ те, хĕрлĕармейцă мăйне касса татрĕ. Хĕрлĕармейцă пуçĕ хулпуççи çинчен çĕре ÿксе йăваланса кайса, кантăр ани йăранĕ хĕрĕнчи лакăмра чарăнчĕ. Суха касси лакăмĕсем хура çăра йун йухса вÿрлевчĕç. Пăчăрланса йухакан çăра йун, хĕвелпе типсе кайнă çĕр ăшне ала витĕр йухнă пек сăрхăнат.

Офицерсем Тĕрлемес вăрманĕ йенеле чуптарчĕç. Авалхи аслă çул пулнă çĕрсем çинче чупакан лашасен ури сасси çеç:- шап-шап-шап-шап! туса, илтĕнсе йулчĕ, тесе асăнат Тĕрлемес арăмĕ Улитта.

Вăрман патĕнче татах йуланутлă офицерсем пăлхатаççĕ. Кив-Тĕрлемеспе Çĕн-Тĕрлемес çыннисем курсах тăраççĕ. Анчах вĕсен хĕрлисен хутне кĕме вăй çитмест, мĕншĕн тесен трехдÿймовкăран йалсем çине пеме пултарасса пĕлеççĕ. Шуррисем Хĕрлĕ çар çыннисене тĕппипех пĕтересшĕн хускаланаççĕ, çавăнпа та Тĕрлемес çывăхĕнче вĕсем шыраса хускатман выран хăвармаççĕ. Акă пĕр офицерĕ Тĕрлемес анкарти хыçĕнчен латыша хăваласа пырат. Пракалта (тăкăрлăкра) хăваласа çитрĕ те, касма тăчĕ. Хĕрлĕармейцă лаша пуçĕнчи чĕлпĕрĕнчен икĕ алăпа тытса, лаша пуç хÿттине тăрат те, хăйĕн çине уласа пыракан сабљăран хăталат. Офицер нихăш йенчен касма та аптăрарĕ, мĕншĕн тесен, офицер сылтăм йенчен касма тăрсан, лешĕ лаша пуçĕн сулахай йенне пăрăнат. Куна кура, офицерĕ хăйĕн лаши çинчен анса касма шут тытрĕ. Тарс... сиксе анчĕ те, лаша пуç патне сабљăпа çĕклесе пычĕ. Офицер лаша çинчен аннă вăхăтра, латыш пракалтан пахча карти урлă сиксе каçса, пахчасем ăшнеле тарат. Офицерĕ, лашине пракал варне тăратса хăварса, хăй пахча карти çине хăпарса тăрат те, кăсйерен „маузĕр" кăларса перет. Çурăмĕнчен лектерет. Йăвăр амантат. Маузĕрпа пенĕ выран чăтмала мар ыратнипе, пуљă шăтăкне алăпа хупласа чупат. Çапах кĕпи хĕп-хĕрлĕ йуна ÿкет Вара кĕпине хыват те, Тĕрлемес урамне тарса, объезчик Михаил Матвейĕч

килне кӗрсе кайат. Михаил Матвейӗч арӑмӗ, Марийа Иванӑвнӑ, ун чухне 52 ҫула ҫитнӗскер, ӑна хирӗҫ килкартине тухат. Лешӗ Марийа Иванӑвнӑ тухнине курсан: — Спаси, дорогая, спаси!.. Принеси полведра воды с полотенцем... скорее..." тенӗ.

Марийа Иванӑвнӑ шуррисем хӗрлисене тураса ҫӳренине лайӑх пӗлет. Тӗрлемес станци ҫунса мӑкӑрланни те ӑна алкум вӗҫӗнченех сарай урлӑ курӑнат. Вӑл халӗ килкартине шуррисем кӗрсе ӑна та, хӑйне те касса вӗлересрен хӑрат, анчах ыйтаканӗ йун йухса асапланнине пӑхса, вӑл пит хӗрхенчӗ. Часрах алкумӗнчен витрепе шыв тултарса тата алшӑли илсе тухат те, шыв йарса парса, ҫурӑмӗсене, мӑйне ҫуса, алшӑлипе шӑлса тасатса йарат. Пуљӑ лекнӗ шӑтӑкран ҫапах йун пӑчӑрланса ҫурӑм тӑрӑх йухат, чарӑнмаст. Латыш: — Спасибо... тесе тав тӑват те, питӗ васкаса ӑҫта та пулин нӳхрепе, йе амбар айне пытарма ыйтат. Марйе Иванӑвнӑ пытарас тесе нӳхреп тата амбарай кӑтартат. Анчах — „не годится“ тесе, алшӑлипе витрене ҫӗклесе хапхаран тухат те, урам урлӑ каҫса, пракал тӑрӑх анкарти хыҫӗнчи ҫырманала кайат. Марийа Иванӑвнӑ хӗрхенсе пӑхса тӑрса йулчӗ.

Анкарти хыҫӗпе пӗр латышӗ шуррисенчен тарса пынӑ чух Тӗрлемес йалӗнчи Клавйе йытлӑ 5 — 6 ҫулхи хӗрачана курат те: — Доченька! на тебе, всеровно меня убьют“, — тесе сахӑр тата укҫа кушелкки парса хӑварат. Клавйе хӗрлӗ салтака хӗвеле хирӗҫ тарнине пӗчӗк аллипе хӗвелтен хӳтлесе ним пӗлмесӗр пӑхса тӑрса йулат.

Шургвардейцӑсен офицерӗсем красногвардейцӑсене мӗн курнӑ пеккиве вӗлерсе пӗтерсен, хаљхи „Братская могила“ вырӑнӗ тӗлӗнче пӗрле пуҫтарӑннӑ. Вара вӗсем Йӑлӑмкас анкарти хыҫӗнчен ҫырма хӗррипе анса, кӗпер урлӑ каҫса. Тӗрлемесӗн аслӑ урамне кӗнӗ. Лашасене пӗр ӗрете йунашар тӑратса, Тӗрлемесӗн аслӑ урамӗпе хурал пӳрчӗ патне ҫитнӗ. Хурал пӳрчӗ ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ револҗуцилӗ плакатсене, пӗлтерӳсене тата ытти хутсене те ҫурса илсе ватса пӗтернӗ. Урама тӑрӑх ҫӳлеле хӑпарнӑ чухне хапха умӗнче кӑвак шинеллӗ хӗрлӗ салтак тумӗ тӑхӑннӑ ҫынна курсан сабљӑпа касма тӑнӑ. Вӑл Тӗрлемесри пуп ывӑлӗ пулнӑ.

— Епӗ — пачӑшкӑ ывӑлӗ. Хӗрлӗ ҫартан кайала тарса таврӑннӑ, — тесен, шурӑ офицерсем ӑна тивмен. Пуп ывӑлӗ: авӑ ҫав сулахай йенчи хӗрлӗ пӳртрен пӗр красни тухса кайрӗ, — тенӗ, Михаил Матвейӗч пӳрчӗ ҫине кӑтартса.

Сасартӑк халӗ шурӑ офицерсем Михаил Матвейӗч патне пырса ҫитрӗҫ. — „Ну, тетка, красные есть у тебя, куда ты их спрятала? — тесе ыйтаҫҫӗ. Марийа Иванӑвнӑ вырӑсла лайӑх тӑнланат те, анчах хирӗҫ лайӑх ответ пама пултараймаст. Ҫапах та вӑл:

— Нет у меня красных, ак пӑхӑр, нету, — тенӗ. Вара шуррисем:

— „Ну, а яблоки естъ?“, тесе ыйтнӑ.

— Есть ..— тенӗ Марийа Иванӑвнӑ, урам лаҫкӑпе пӗр ӗрете тӑратса тухнӑ шургварцейцӑсен офицерӗсем ҫине хӑраса пӑхса.

— „Вынеси нам ведрочко яблоков“, — тенӗ хытӑ саспа пӗри. Марийа Иванӑвнӑ пахчана кайрӗ те, ҫур витре улма (панулми) пуҫтарса тухса, хӗринчи йулаяне пачӗ. Лешӗ, витрене илчӗ те, урам лапкӑшпе тӑратса тухнӑ йуланутсене лаши ҫинчен анмасӑрах валеҫрӗ. Витрери улмасем тӑватшарӑн-пилӗкшерӗн офицер аллисене кӗрсе тухса, пӗр хӗрӗнчен тепӗр хӗрне ҫитеҫҫӗ. Витрери улмана кӑсйесене тултарчӗҫ те, офицерсем йалтан тухса вӗҫтерчӗҫ, — тесе каласа пӗлтерет Марийа Иванӑвнӑ.

Марийа Иванӑвнӑ, паҫӑрхи хӗрлӗгвардейцӑна аса илсе, хӑраса ӳкрӗ. Салтакӗ килкартинчен тухса ҫырманала кайман пулсан, тата офицерсем ӑна пирӗн патӑрта тупнӑ пулсан, мана чӗрӗле хӑварас ҫукчӗ вӗсем, тесе хӑрана Марийа Иванӑвнӑ. Унӑн старикки Михаил Матвейӗч ҫав вӑхӑтра килте пулман.

Марийа Иванӑвнӑ интересленет, паҫӑрхи хӗрлӗ салтака хӗрхенсе, унӑн сывлӑхне пӗлесшӗн пракалпа утат. Ҫул ҫинче ҫынсенчен ыйтса пӗлет... Вилет, тӑҫҫӗ. Чӗрӗлеймест мӗн, мӗскӗн. Вӑл пытана-пытана ҫӑвӑнма тесе чупат ҫырмана, анса ҫитсенех ӳкнӗ те, йун йухтарса выртнӑ. Урӑх ҫӗкленеймерӗ те вӑл.

Тӗрлемес ҫунса, тупӑ сассипе, пуљасем уланипе чӗтресе тӑнӑ вӑхӑтра, йе тата шургвардейцӑсем, Тӗрлемес вӑрманӗнчен тухса ҫынсене хӑвалама, вӗлерме тытӑнсассӑн, Тӗрлемессем нумайӑшӗ йапалисене пытарса, лашасем кӳлсе, аслӑ ҫул тӑрӑх тухса тарнӑ. Нумайӑшӗ вӗсем ҫӗрле ваљљи, татах килӗҫ тесе, ҫырмасем хӗрне окоп пеккисем, шӑтӑксем чавса хатӗрлеҫҫӗ. Ыгла сасартӑк хӑратса хӑварнипе йал ҫынӗсем часах лӑпланаймаҫҫӗ.

Шургвардейцӑсем Тӗрлемесрен пуҫтарӑнса тухса пӗр километр кайса рељсӑсене витаҫҫӗ. Вӑл вӑхӑтра хӗрлисем, сахаллӑн пирки, Воробйовкӑран чакса, кухњасемпех, Куславкана пыраҫҫӗ. Шуррисем вӑхӑтлӑха Воробйовкӑ йалне ҫитсе вырнаҫаҫҫӗ.

Тӗрлемес ҫыннисем шуррисенчен хӑраса тарнӑ хушӑра, урӑх шутпа ҫӳрекенсем те вӑранма ӗлкӗрнӗ — Урспуки йалӗнчен вӑрӑ ӗҫӗпе пурӑнакансем Тӗрлемесе пырса йапаласем хӗстерме те тытӑннӑ.

Воробйовкӑран Куславкана пынӑ хӗрлисем вӑхӑтлӑха Куславкара тӑракан револњуцилӗ штабран вӑй илсе, Тӗрлемесе пыраҫҫӗ. Вӗсем Тӗрлемес ҫине шуррисене тек йарас мар тесе, хӑйсен вӑйне Тӗрлемес йалне вырнаҫтараҫҫӗ. Тӗрлемесӗн йал вӗҫӗсене, тӑкӑрлӑксене пулеметсем лартаҫҫӗ, дозорсем тӑратаҫҫӗ.

Тӗрлемес вокзалӗ халӗ те ҫунса ҫӳнмен-ха. Вӑл кантӑрла иртсен ҫунма пуҫласа тепӗр ирхинеччен мӑкӑрланнӑ. Сайрахутра айакра тупӑ сасси илтӗнет. Каҫпа Хусан ҫинеле пӑхсан, снарйадсем ҫурӑлса ҫӳлеле вӗҫсе пӗлӗте тӑрӑннисем куранаҫҫӗ. Вӗсем йе тӳрӗ, йе чалӑшрах хӗрлӗ йупа тӑваҫҫӗ те, ҫӳнеҫҫӗ.

Темиҫе ӗмӗр иртсе те, Тӗрлемес йалӗ хӑйӗн историнче, 1918-мӗш ҫулхи августӑн 15-мӗшпе 16-мӗшӗ пек паллӑ кунсем курман. Ҫак кунсем вӗсем чӑнах та йунлӑ кунсем пулаҫҫӗ. Тӗрлемесри ӗҫ халӗ те историре пысӑк вырӑн йышӑнат, Тӗрлемес халӗ те револњуцилӗ хӗрлӗ Тӗрлемес шутланат.

Тĕрлемес шурă калтасенчен тасалнă. Урăх унта сабљăсем йăлтăртатмаççĕ, сынсен пĕвĕ çинчен пуçĕсем сирпĕнмеççĕ. Тупă сасси те йанрамаст, пуљăсем пуç тăрăнче уламаççĕ. Анчах...

Тĕрлемес çур кунта çаралчĕ. Çур кунта улшăнчĕ Тĕрлемес сăнсăпачĕ. Станцăра ларакан виçемкунхи 50 вагун урăписене таçта çите ывăтса пĕтернĕ, авă пĕри тăвата çухрăма — Елменкасси (Альменево) йалĕн сырмине килсе выртнă. Вокзал çурчĕ тата вокзал сывăхĕнчи çуртсем пайан çук. Станцăра пайан хура йупасемпе кăмака трупиcем — кăмрăкпа кĕл çеç... Ăçта кирлĕ унта виле выртат Йе пуçĕсĕр, йе çур пуçлă, йе алсăр-урасăр, йе шăтăк кăкăрлă... Миçе-ши вĕсем?.. Пуçтарасчĕ. Камсем пур-ши, камсем çук-ши? — çавна пĕлесчĕ.

Халăх хускалат. „Комитет бедноты" членĕсем ĕçлеççĕ. Акă Тĕрлемес йал комиссарĕн заместителĕ Питулкин Ваљкки йалти сынсене пухса, вилесене пуçтарма кайаççĕ. Тĕрлемес таврашĕнчи уйхирсенче, сырмасенче тата вăрманта шыраса çӳресе, вĕсем малтан 12 сын вилли пуçтарнă, кайран вăрмантан тата икĕ сын вилли тупнă. Виллисем станцăна сыхлакан отредри латышсем, вĕсем 13 сын тата пĕр кĕтӳç. Вунтăваттăн вĕсем ĕнер револ̆уцишĕн пуçне хунă, вунтăваттăн. Тупăнманнисем тата миçе сын-ши?

Питулкин Ваљкки пуçарса пынипе, вилесене пĕр шăтăка чикеççĕ, масар вырăнне Тĕрлемес вăрманĕ хĕрне чугунçултан 100 чалăш (пичатнăй) айаккарах чакалаççĕ.

Хĕрлĕ геройсене сăмахсем каласа, шăтăка йарса, масар тăприне тултарса çитерес умĕн, пĕр йероплан çӳлтен вĕçсе пырса масар шăтăкĕ тĕлĕнче çавăрăнса çӳреме пуçларĕ, тесе каласа кăтартаççĕ унта пулнисем халĕ. Масар шăтăкне тăпра тултаракан Тĕрлемес сынниcем, хăраса вăрмана кĕрсе, пĕр пысăк йăвăç айне тăраççĕ. Вара йероплан Тĕрлемес патĕнчи „Павăрне пуç" лаппи патне анса чупса кайат те, урăписем лакăма тăрăннă пирки пропеллĕрĕ çине тирĕнсе ӳксе ванат.

Çынсем ӳксе ваннă йероплан патне чупрĕç. Йероплан çинче икĕ сын. Вĕсем иккĕшĕ те сывах.

— Мĕн ĕçлетĕр, есĕр йулташсем?,— тесе ыйтнă вĕсем. Тĕрлемессем вĕсене каласа панă. Ун хыççăн йеропланпа килнисем ваннă йеропланне станца тийесе пырса пама ыйтнă. Вара ванчăк йероплана Çĕн-Тĕрлемес сыннисем лашипе станцăна тийесе пыраççĕ те, платформă çыне хурса Мускавала пойăспа йараççĕ. Çавăн хыççăн Тĕрлемессем каллех тăвансен масарĕ çине кайса тăпра тултарса пĕтерчĕç. Масар çине хĕрес лартрĕç. Çав вăхăтрах, станцăна сыхлакан отредĕн коменданчĕ—Богол̆убски йулташ хушнипе, масар йĕри-тавра хăмаран решоткă тытаççĕ. Карта хушшине пĕр йăвăç (ăвăс) лартаççĕ.

Çак масар халĕ те пур. Вăл авалхи хурăнлă аслă çулпа утса пынă чух, симĕс вăрман хĕрĕнче, Тĕрлемесренех курăнса ларат. Вăл масар патне пырсассăн пуçа пит тарăн шухăшсем килсе кĕреççĕ. 1918-мĕш çулти августăн 15—16-мĕш кунĕсем куç умне сиксе тухаççĕ.

Вунвиçĕ латышсăр тата кĕтӳççĕр пуçне, Тĕрлемесре тата тепĕр çын çукки палăрчĕ. Вăл — Тĕрлемесри пуштă начальникĕ

Прокофи Иванӑч Кобылёв. Ҫак Кобылёв, Иван йамшӑкпа пӗрлешсе, шургвардейцӑсемпе кайнӑ.

Шургвардейцӑсем Тӗрлемесрен тухса кайнӑ пулсан та, Тӗрлемесре вӗсен сӑтӑр ӗҫӗ тата та чылайччен аса илтеркеленӗ. Шуррисем салатса хӑварнӑ снарйадсем нумайӑшӗ ҫурӑлмасӑр тӗрлӗ ҫӗрте йулнӑ. Тӗрлемес станцинчи дежурнӑй Апполонӑвӑн 10 ҫулхи ачи выҫҫаса ҫӳренӗ чух снарйад татки тупат те, снарйачӗ ҫурӑлнипе вилсе кайат. Ҫавӑн пекех Йалӑмкас кӗтӳҫ ачи те кӗтӳре ҫӳренӗ чух вилнӗ. Кун пеккисем урӑх та пулнӑ. Тӗрлемес ҫинчен тата ҫакӑн пек хыпарсем пур.



Тӗрлемесри хӗрлӗармейцӑсен тӑванлӑ масарӗ.

Тӗрлемесре пуйан хуҫа Арзамасӑв Ҫергей Григорчӑ пурччӗ. Вӑл ҫамарта склачӗ тытнӑ. Укҫи ун пӳртре кӑмака умӗнчи чӑланта тимӗр арчара усраннӑ. Хуҫа хӑй сукӑр пирки, укҫине вӑрласран хӑраса, ниҫта тухмасӑр, ҫӗр сывӑрмасӑр ҫав укҫа арчи ҫинче ларнӑ Хӗрлӗ салтаксемпе йалти ӗҫлӗ ҫынсем унӑн укҫине чухансене, вушалӑ ҫемйесене парас тесе ҫак хуҫаран укҫа ыйтнӑ. Арзамасӑвӗ вӗсене цӗр пус та паман. Ҫавӑн пек вӗсем пуйансем, таврари пуйансем пурте шуррисем ҫӗнтерессе кӗтсе тӑнӑ ун чухне. Арзамасӑв хуҫана ҫавӑнтах тивӗҫлӗ ҫӗре ӑсатнӑ.

Ҫак вахӑтрах Тӗрлемесрен 7 ҫухрӑмри Воробйовкӑ йалӗнче хӗрлисем 15 ҫын тӑнӑ. Шуррисем пырса кӗре пуҫласан хӗрлисем 14-шӗ Воробйовкӑран Курӑчкинӑ йалне тарнӑ. Пӗри (вӑл питӗ йурлама йуратнӑ ҫын пулнӑ), вӑрмана урапапа кайнӑскер, таврӑнма ӗлкӗреймен те, — шуррисем Воробйовкӑ йалне персе ҫитнӗ. Йурлама йуратаканни каҫалапа вӑрмантан йурласа килет, тет. Йала кӗрсен йурласа пынӑ чух:

— Асту, ан йурла, шуррисем пур унта тар!.. — тесе систерейнӗ ана йал ҫыннисем. Вӑл тараймаст, шуррисем умне ҫитет те, шутлат: вунтӑваттӑн, офицерсем лашасемпе.

— Мӗн тума килнӗ есӗр кунта? — тесе кӑшкӑрса йарат вӑл. Шуррисем ним те чӗнмеҫҫӗ. Пӗр-пӗрин ҫине кӑнт-кӑнт пӑхкалаҫҫӗ.

Вӑл пурпӗрех ӗнтӗ вилмеле тесе, ҫавӑнтах наганне туртса кӑларат те, тӳрех шуррисем ҫине пеме пуҫлат. Шуррисем пӗрин хыҫҫӑн тепри, ун хыҫҫӑн виҫҫӗмӗшӗ, пурте тарма тытӑнаҫҫӗ. Нумайӑн килеҫҫӗ тесе хӑравӑ пулас шуррисем малтанах. Пӗри ҫеҫ акӑ, лаши чӑхӑмҫипе, тараймасӑр аппаланат, ҫавӑнпа аяса лашине ҫавӑтат, акӑ вӑл утланасшӑн лаши ҫине...

— Ан макӑр, ҫапах переп вӗт,—тесе лешӗ шурӑ офицере перет те, лаша ҫине тин сиксе утланса ларма ӗлкӗрейнӗ офицере хулпуҫҫинчен лектерет. Офицерӗ ҫаплипех тарчӗ, тесе каласа кӑтартаҫҫӗ йалта

Ҫав кунсенче пит те паттӑр кӗрешрӗҫ Хӗрлӗ ҫар сыннисем. Пысӑк героисӑмлӑ кунсемччӗ ун чухне. Шуррисем унтан та кунтан хӗстерсе килe пуҫланиве кура, хӗрлисенчен (мобилизацие пуҫтарӑннисенчен) хӑшпӗрисем, хӑйсем ҫине шанманнисем, тӑшман агитацийӗ хыҫҫӑн кайнисем те пулӑрнӑ. Акӑ мӗн калаҫҫӗ ун пирки Тӗрлемессем тата вӑл вӑхӑтра Атӑл ҫинче ӗҫленӗ Тӗрлемес таврашӗнчи йал сыннисем

Хурамалти чугунҫул кӗперӗ патенче мобилизацие пуҫтарӑннисенчен пӗр 400 сынна йахӑн „Иван" йатлӑ прахут ҫине кӗрсе ларса, Чулхулана тарма шут тытнӑ. Троцкипе Вацетис отречӗ ун ҫинчен пӗлнӗ те, тарма тытӑннисене прахут ҫинчен хӑваласа кӑларса, ретпе тӑратса тухса йатланӑ. Йатлассипе ҫеҫ те иртмен — хӑш-пӗрисене персе пӑрахма та лекнӗ. Ҫавӑн пек хирӗҫӳ вӑхӑт, ответлӑ вӑхӑт пулнӑ ун чухне Революцилӗ ҫирӗплӗх, пролетарилӗ дисциплинӑ кирлӗ пулнӑ — хупӗрлесе килнӗ тӑшмансемпе ҫапӑҫса вӗсене ҫӗнтерме.

Тепӗр кун шурсвардейцӑсемпе Хӗрлӗ ҫар отречӗсем Воробйовкӑ йалӗ патӗнче хирӗҫ пулаҫҫӗ. Шуррисен таҫтан артилерийӗ килсе тухнӑ. Вӗсен вӑй пысӑк. Анчах пирӗн броњӑлӑ пуйӑссем икӗ пуйӑс пур. Пирӗн тата политик комиссарӗсем, ӗҫре писнӗ болъшевик-рабочисем пур. Вӗсем чакма кирлӗ мар чухне чакасскерсем мар. Шуррисем цепь"пе лакӑмран упаленсе улӑхма пуҫларӗҫ. Вӗҫӗ-хӗррисӗр переҫҫӗ. Пирӗн броњӑлӑ пуйӑссем ҫинчи пулеметсем шуррисене утӑ ҫулнӑ пек ҫулаҫҫӗ. Пилӗк йе вунӑ минут хушшинче темиҫе ҫӗр сын вилчӗҫ. Ҫапах та шуррисем пырса тӑрӑнаҫҫӗ, вилнӗ сынсем чӗрӗлсе тӑнӑ пек, выртнӑ ҫӗртен тӑрса малала упаленсе чупаҫҫӗ те, лакӑм-тӗкӗм хӳттине выртса переҫҫӗ. Кӑшт тӑрсан,— хӑраса парӑннӑ пек:

— Товарищи... сдаюсь... тесе винтовкисене ҫӗклесе хӗрлисем патне плена пыма пуҫларӗҫ.

Ҫирӗм-вӑтӑр утӑм хушшинче чарӑнчӗҫ те, сасартӑк, пӗр сын пек шуррисем пурте пӗр харӑс ҫӗр ҫине выртрӗҫ Пӗрре куҫа хупса илеччен вӗсем винтовкӑсенчен персе ҫатӑртаттарма пуҫларӗҫ. Суйрӗҫ вӗсем. Пирӗнпе хире-хирӗҫ тӑрсах печӗҫ.

Хӗрлӗ ҫар отречӗсем ҫиленсе ҫитсе, хастарлӑхне хушрӗҫ. Пуҫларӗҫ ҫапӑҫма. Шуррисем татах: „Товарищи, сдаюсь!" тесе сухӑраҫҫӗ, пӑшалӗсене пӑрахса, аллисене ҫӗклесе плена пыраҫҫӗ. Анчах, пирӗн вӗсене текех ӗненмеҫҫӗ.

Çапăçу чарăнмасăр 8 сехете пычӗ. Вӗсен те, пирӗн те нумай пӗтрӗç. Йулашкинчен хӗрлисем темиçе хутчен шуррисем çине штыксемпе атаккăна кӗрсе кайрӗç. Кăшт тăрсан шуррисем те, хӗрлисем те кунтан тасалчӗç.

Тӗрлемес патӗнче çапăçни вăл граждăн вăрçи историнче пит пысăк çапăçу шутлачат. Вăл хӗрлисен çапăçу çӗнтерӗвӗ пулса тăрат. Мӗншӗн тесен, хӗрлисем кунта шуррисен чи пысăк вăйӗпе çапăçрӗç. Тӗрлемес айӗнчи çапăçу пӗтӗм тӗнчери рабочисен ӗçне хăтарчӗ, вăл революци чысне тытса тăчӗ.

Тӗрлемес тата Сӗве çывăхӗнче Хӗрлӗ çар шуррисене çӗнтерсен, Çар ӗç халăх комиссариачӗ акă çапла приказ кăларат:

ПРИКАЗ

(Прочесть во всех ротах, батареях, эскадронах 5-й армии и на всех судах Волжской Флотилии).

СОЛДАТЫ 5-Й АРМИИ! МОРЯКИ ВОЛЖСКОЙ ФЛОТИЛИИ!.

Мы получили радостную весть. С северо-востока вплотную к Казани подошли солдаты 2-й Советской Армии. Казанские чехо-белогвардейцы попытались дать им бой. Но Советские войска отбили аттаку, перешли в наступление, захватили два броневика и пулемет, подбили два орудия, обратили неприятеля в бегство и завладели деревнями Киндеры и Кочакова. Таким образом Героические войска 2-й армии находятся в 12 верстах от Казани.

Теперь дело за Вами, солдаты 5-й армии. Вы должны двинуться навстречу 2-й армии и вместе с нею задушить Казанскую контрреволюцию в стальных тисках.

Солдаты 5-й армии! Моряки Волжской Флотилии!

Взятие Казани означает освобождение Казанских рабочих и крестьян.

Взятие Казани означает начало гибели буржуазной сволочи на Волге, Урале и Сибири.

Взятие Казани означает беспощадную расправу над врагами революции.

Взятие Казани для Вас заслуженный отдых и награда для всех мужественных и твердых борцов революции.

Враг уже чувствует свою гибель.

Готовьтесь! Наступил час решительного натиска. По первому слову Нашего командующего товарища Славина, вы как один человек, двинетесь вперед и нанесете обезсиленному врагу смертельный удар.

Командиры! Комиссары! Солдаты! Матросы!

Все на места!

Народный Комиссар по военным делам (Алă пусиă).

24 августа 1918 г.

Тепӗр 5—6 кунтан Тӗрлемес патӗнчи Троцкипе Вацетис отречӗ, Куславка патӗнчи Раскольниковăн Флочӗ тата Хусан хыçӗнчи вăрманти 2-мӗш арми (Азин командирпе) пурте вӗсем пӗр харăс Хусан çине пырса кӗнӗ. Шурвардейцăсене Хусантан хăваласа кăларса йарса, Хусана Хӗрлӗ çăр хăй аллине илчӗ.

Тӗрлемес çывăхӗнчи Воробйовкă йалӗ патӗнчи çапăçу, шуррисемшӗн усăлă пулсан, шуррисен вăйӗ хутшăначчӗ, вăл Раççейри контрреволюцилӗ шухăша хытах çунатлама вăй кӳретчӗ. Тӗрлемес çывăхӗнчи çапăçура хӗрлисем, çӗнтереймен пулсан, шурвардейцăсем Хусана тытса тăратчӗç, памастчӗç. Вăл тӗлӗшпе:

„Успех под Тюрлемой удесятерил бы силы наших противников, окрылил бы надеждой не только русскую контрреволюцию... Они удержали бы Казань. От Казани они прошли бы

дальше, захватили бы целый ряд городов вверх по Волге, организовали бы мятеж в Петрограде и в Москве. Но этого не случилось. Под Тюрлемой мы потеряли многое белогвардейцы там потеряли почти все“, тесе çырнă Г. Устинăв 1920-мĕш çулта тухнă кĕнекинче.

Чăнах та çаплах. Тĕрлемесри çапăçăва хамăр республик çеç мар, вăл историлĕ çапăçава пĕтĕм Совет сойузĕ пĕлет. Тĕрлемесри вăйлă çапăçу çинчен Мускавра тухакан граждăн вăрçи историйĕн кĕнеки çинче те асăнмасăр хăвармаççĕ. Тĕрлемес граждăн вăрçи историнче пирĕн республикшĕн пысăк вырăн йышăнса тăрат. Тĕрлемес вăл — Хĕрлĕ Тĕрлемес. Унта халĕ шурă кэлта кĕрлемест. Унта халĕ колхоз ӳсет, 240 килтен 114-шĕ колхозра. Тĕрлемес çĕнелсе, çуталса, тасалса вăйланса пынă хушăра та хĕрлĕ герой — л а т ы ш с е н е манмаст. Кашни революцилĕ уйав чух Тĕрлемес йалĕ вăрман хĕренчи тăвансен масарĕ çинче кайса митинг тăват, çитĕнӳсене тĕрĕслет.

...Тĕрлемес — тĕтĕмленмест...

Автăртан:

Çак Тĕрлемес историйĕ тăрăх сведени панă çынсене: Тĕрлемесри йалĕçтăвком председателне Павлăва, Тĕрлемесри учителĕ Сафрон Иванча, Михал Матвейчăпа унăн арăмне — Марийă Иванăвнăна, Палан-Кастиччи Горшков Йакурне, Шупашкарти хула копператив кантурĕнче ĕçлекен Алекçей Захарăва, Куславкари комбинатри ĕçлекене („Беловолжск“ йалĕнчен), парти членне — Никăнăв Александр Петровчăна, Тĕрлемес станцинче çырла сутса ларакан çамрăк хĕрсемпе хĕрарăмсене, Тĕрлемесри пуштă кантурĕн пуçлăхне — Павăл Тихăвча, Иван Ларионча пысăк тав.

15 август, 1932 ç.,
Шупашкар хули.

П. ХУСАНКАЙ.

УЛМУҪҪИЛӖ ТӖРЛЕМЕС.

Поемӑ.

1.

Манпа архивҫӑ Йермолайӗв,
Вӑлах—сӑвӑҫӑ Иленгей.
Ҫурхи ҫулпа йурттарма лайӑх:
„Ата, хушкапуҫ силленкке!

Колхоз кулли пулса ан пырччӗ,
Лӑнчӑр-лӑнчӑр... ак йанавар!
Сахал тӑкса-им сана пӗрчӗ?
Йе сан витеҫӗ урӑх мар?

Ата! Шатил сӗллине ҫийӗн.
Пайтах аксаттӑмӑр. Пур-ха.
Хӑмӑлӗ хӑмӑш пек, пӗрчийӗ
Пӑрҫах пулмасан та — урпа.

Пуҫ ух, ҫилхесӗр урхамахӑм,
Ес тӗлсӗр пӑссажир лартман:
Ку хамӑр ҫын, ку хай такмакҫӑ,
Ку Хусанкай тет, ҫӗрҫӑтман!

Йе, йе! Мухтавлӑ ҫынна санӑн
Хӳрӳсене пӑхса пыма
Аван тетним вара, айванӑм?—
Часрах пуҫтарччӗ саррӑна.

Ата! Ҫитетпӗр. Ҫурмаланчӗ.
Ырҫын ҫур литӑрлӑх хушат.
Тахҫанах килсе курмалаччӗ
Есир, йулташӑм, ҫак хуша.

Сире хура пӗркенчӗксем ҫав...
Ҫӑмӑр ҫӑвас тет, ме аҫам.
. . . .
Лаши колхозӑн та, хистенӗшӗн
Хушатӑн пулӗ, сӑвӑҫӑм?"

Ҫапла «ҫурма тукташларах»
Выртса хӑйаккӑн, месерле,
Нумай пулмаст Куславккаран
Еп пытӑм Тӗрлемеселе.

Манпа архивҫӑ Йермолайӗв,
Вӑлах — сӑвӑҫӑ Иленгей.
Хут хушшинче ун лармала-и,
Йурламала и киленсе?

Йурламала та, лармала та,
Ҫак пӗрлехи сӑнавлӑ ӗҫ,
Ан тив, сана хавхалантартӑр,
Никэм пӗлмен лӑпкӑ сӑвӑҫ!

2. „Салтак масарӗ".

Кунта хаҔ тупӑ сасси кӗрлемест.
Ҫанталӑк пӗр тӗрлӗ уйар.
Анчах мӗн кӑна астумаст Тӗрлемес!
Мӗскер хупламан ҫак уйа!

Хуҫа пек кӗрет пӑравус станца.
Канашлӑн кашлат вӑрман.
Миҫе ҫак станца ҫӗнетмен салатса!
Кама ҫак вӑрман пытарман!

Сӑмах хӑйсене, Тӗрлемес халӑхне.
Кам курнӑ хӑйӗн куҫпе,
Кам ҫав ӗҫсене халлап пек хӑнӑхнӑ,
Ҫавсем ҫине хаҔ куҫӑп еп.

* * *

Мана каласа пачӗ
    Крыловӑн тӑлмачӗ
Каринке Елексей Кавӗрли:
„Сӑпас праҫникӗ
    вӑл ҫул
        пит улмаллӑччӗ.
Астӑватӑп —
    тухса кӑнтӑрла кӗлли...
Чей ӗҫсе ларатӑп килйышӑмпала
Кӗр-рӗс!
    кӗрӗслетрӗ
        вакзал йенче.
Мӗскерле позици
    йышӑнмала?

Сасартӑк
шӑнса пӑрланат
сыпнӑ чей.
Ман
Кӑпӑр-капӑр литератур:
Ленин,
Троцки,
Зиновйӗв ун чух,
Часрах
хӑпӑл-хапӑл
пуçтар та, еп хур
Кӑмакана.
Çунмаст тата мур!
Тӗрӗслӗх çав:
ӑна нимле вут хыпас çук.
Сапатӑп краççын.
Сыв пулсан туйанӑп,
Халђ
вӗсемсӗр те тӑвӑр пит,
теп.
Хама,
халлапри хай хӑравçӑ
куйанӑн,
Каçарӑр —
силлет чӑн-чӑнлах
варвитти.
Минутсеренех
тулӑн-шалӑн чупап...
Унтан,
килйыша ӑсатса анкартне,
Хыçал йенӗпе
— вӑрттӑн-карттӑн çулпа —
Шӑвап
Мускава,
пиччесем патне.
И-и, уйра халӑх!
Тӳшекӗ-минтерӗ,
Чашки çӑпали,
ыљђӑх-чӗрлӗхӗ —
веç!
Хӑшӗ
çирӗмшер çухрӑма çитнӗ,
терӗ,
Йалта тӑрса йулнӑ
ватти-вӗтти çеç.
Вы-ыљђђђ! --
снаретсем.
Айакра та мар.
Калпак пек-калпак пек
тӗтӗм çӗкленет.

Çитермери ачасем
чӑл та пар!
Утланса хӳтерчӗç утсене.
Унччен те пулмаст,
тӗнче пӗтнӗ пек,
Вунпӗр вагунлӑ шалун —
сывлӑшра.
Турпас тупас çук! —
Тӗпренет пӗтӗмпех, —
Пӗринче перкçелин пулнӑ, —
терӗç вара
Çирӗм сакӑр çын
йулнӑ иккен пуйӑсран,
Вӗсене
ӑçта курнӑ унта
— мӗн пурри —
Хӑшне йуланутлӑн,
хӑшне çуран
Çитсе каснӑ,
туранӑ шурри.
Кайран
лӑплансассӑн
çӳретпӗр пухса;
Пӗрин аллисем çук,
теприн çук ури,
Хӑшне
чӗллӗн-чӗллӗн вакланӑ
йури;
Пӗрер пӳрнен хуçнӑ,
çӑлтӑр туса
Касса сӳсе илнӗ
хӑшин çамкине.
Хӑйсем,
мӗскӗнсем,
— тавӑрма чӗннӗнех —
Куçӗсене
пурте
выртаççӗ пӑхса.
Халђ
ав унта
Салтак Масарӗ.
Октабӗрпе Май кунӗсем
çулленех,
Йе ак
Автономи уйавӗ сывхарӗ —
Тухса асӑнатпӑр епӗр вӗсене.

* * *

Çирӗм улттӑ çинчен йурӑ пур ман,
Каçпи хумӗ çинчен йурӑ пур.

Ах, çĕршывăм! Ăçта çитсе курмăн,
Пур тĕлте те пĕр сан урапу.
Пур сукмак çинче йун йĕрĕ
пур мĕн,
Пур вĕтлĕх те калат: йурă хур...

Çирĕм улттă Баку комиссарĕ
Аса килчĕ мана ахаљ мар:
Ман умра Çирĕм Саккăр масарĕ,
Çук хускавсăр иртме халăм ман.
Тĕрлемес епопейĕ! Кам сарĕ,
Кам кăгартĕ сан паттăрлăхна?

Ес Муçкав аслă çулĕ çинче вĕт,
Ес пулса икĕ стан хушшинче.
Хăш йенне шансарах йатăн йевĕч?
Хăш тĕсе сан куçу йышăнчĕ?
Йепле, ес пулмасан, пĕр пĕр
Лебĕд[1]
Йаранатчĕ пуљ Кремĕл çинче!

Ват йуманлăхра халь Çирĕм
Саккăр,
Вĕсен çийĕ хăйах та ыхра.
А мĕнчул кун пекки тĕлсĕр-йатсăр
Пĕр никам палламан шăтăкра!..
Ĕмĕрех хавхалаттăр асапăр
Вăрçăра, ĕçхĕлти паттăра!

Çирĕм Саккăр, сире манăн йуррăм!
Сире манăç хăйахĕ вигме
Нихăçан та хăйаймĕ, еп туйрăм,
Сирĕн пек йатсăрсен сăнпитне—
Пĕрлешӳлĕ сăпатлăн та уйрăм—
Йăх çитерĕ малашлăх патне.

3. Майрапи нинемей калаçат.

Шухăш çук илемпе килленме,—
Чăнлăхшăн çак пайа сăвăларăм еп.
Калаçат Майрапи кинемей —
Утмăл виçĕ çулхи ĕçхĕрарăмĕ.

* * *

Ара чим-ха... Шăрăх.
Халăхсем мăйăрта.
Тарни — тарнă.
Еп йулнă пĕчченех киле.
Кĕрĕс те кĕрĕс ку хай...
Пăхăсăн —
ман пата,
Пахчана,
çатан урлă
салтак килет.
„Хăтарччĕ, мамаш,— тет,—
тархасшăн хăтар!“ тет:
Вырăс пек пуплемест хăй,
çалах чухлатăп.
Унтан
аллипе,
урипе кăтартрĕ:
— Хăвалаççĕ,
пӳлеççĕ çула,—тет.
Çарамас апăрша.
Хăйĕн çурăмĕнчен
Кăпă...анса йун кĕрлетĕ.
Ман ...ĕлхене
çыхса лартнă-и тен —
Пĕр сăмах чĕнейместĕп,
пĕрре те.
Чĕтретĕп кăна.
Ай, мăнтарăн!
Ман ывлăм
Çаплах тен йунларĕ пуљ
йут пахчана...
Часрах
пусăра йĕпетсе
сивĕ шывлăн
Сурпан шурлипе
çыхса йатăм çакна.
„Нӳхреп çук и?“ терĕ.
Пур, тетĕп.
Анчах
Каларăм кăна —
килкарти умне
Тĕпĕр-тепĕр çитсе чарăнчĕç.
Ман ача
Хăмла ăшне чăмрĕ те —
кантăр уйне.
Лешсем
çĕмĕрмес хапхана.
„Ей, хуçа!
Хуçа килте пур-и?“ теç,
Мирлĕн çеç.
Пырап тĕлĕнсе,
шикленсе уçап.

[1] Лебедев — Савинковсемпе перле ĕçленĕ шурă офицер. Весен Хусантан Тĕрлемеспе Сĕвене татса Мускава çитмели план пулнă.

Пӗр вукӑ йулан.
„Ан хӑра, карчӑк" теç.
„Кала ес пире:
Хӗрлисем сирӗн пур-и?
Кам çуртӗнче
курнӑ ес вӗсене?"
Ара еп пӗлместӗп:
те хӗрлӗ,
те шурӑ...
— Курман,
ачамсем, тетӗп,
еп пӗчченех.
„Сад пур пуљ сан, карчӑк,
улма татса тух-ха"
Терӗ пӗр çут хулпуççилӗ
йапала.
Витре улмана
ут çинченех, туххӑм
Валеçрӗç те
кайрӗç çаксем
йалпала.
Леш, суранли,
çакланнах мӗн кайран:
Кантӑр ани ӑшнеле кӗнине
Пӗри сӑнаса
çитсе каснӑ мӑйран.
Латыш пулнӑ,
терӗç вара мӗскӗне.
Такам
курнӑ имӗш ӑна
тарнӑ халлӗн.
Пӗр хӗр пуракне
çырларан таврӑнуçӑн,
Вӑл сахӑр пӑрахнӑ пулат.
Ав вӑл халӗ —
Малти паккусра.
Укахви,
бригад пуçӗ.

* * *

Сӗткенлӗ утӑлӑ çаран,
Пӗрлешӗве хирӗçлеймесӗр,
Часах çаралчӗ çурмаран
Çӗпӗр ристанӗн пуçӗ йевӗр.

Шыв сулхӑнӗ. Сывлак чечек.
Çулса пӑрахнипе пушшех мӗн.
Мана, Укахвийе — веçех —
Вӑл ӳсӗртет каç карнӑ шеппӗн.

Вӑл Майрапи кинемейе
Тӑват халљ çамрӑк сӑнсӑпатлӑ:
— Йепле хӑйан, тет, вилме йе?
Йепле çакна туйсассӑн ватлӑн?!

Ларат ман карчӑк, вутпуççи
Çунса кӗлленнине пӑхмасӑр,
Çамки çине вак хурткуççи
Пулса тухан тарне шӑлм‥ӑр.

Кукленнӗ статуй йевӗрлӗ:
Чӑтӑм вӑл, çитнӗ ӗмӗт, канлӗх.
Ак час: „Пӑрахӑр. Ӗлкӗрнӗ" —
Хӗвел çине пӑхса вӑл калӗ.

Чей ӗлкӗрет. Çулавçӑсен
Питкуçӗсем хӗрелнӗ çемӗн
Вунсаккӑрмӗш çула вӗçен,
Унпа пайанхине пӗлмешкӗн.

Вунпилӗк çул. Укахвисем
Унчух улт-çиччӗре пулсассӑн —
Пайан вӗсем тулса, пиçсе,
Гражданлӑха кӗреç тулсаслӑн.

„Салтакӑн" сахӑрӗпеле
Çырла пураккине еп, темшӗн,
Пайан çак сӑвӑпа пӗрле
Ним уйрӑлми çыхса тӗвлесшӗн.

4. Ырçын хӑнисем.

„Ухарь купец,
ухарь купец,
Ухарь купец —
удалой молодец!.."
Ватрӗç станца,
тартрӗç йала,
Тартрӗç,
çаратрӗç те —
марш кайала.
Ӗçнӗ те çинӗ
пуп патӗнче —
Виçӗ тӗслӗ
йалавсем карнӑччӗ.
Аснӑ,
алхаснӑ
пуйан килӗнче
Тушӑнӗпе
пушатса кӗленче.

Аслă Раççей!
Çутă Раççей!
Чăн тĕнлĕскершĕн
пăхăр-ха ĕçсе.
Тыт ха,
хуçа!
Руç ĕçтерет!
Туп-ха
пĕрер хура куç
кĕçĕре.
Пултăр чечен,
пултăр çинçе...
Хăвăн
ĕлкĕрнĕ пулсассăн
хĕрĕ —
пар ес,
хуçа,
ăна
офицере...
„Ухарь купец,
ухарь купец,
Ухарь купец —
удалой молодец..."
Ватрĕç станца,
тартрĕç йала,
тартрĕç,
çаратрĕç те —
марш кайала..

* * *

Кайран, шуррисене пўлсе
Сĕве панчен хўтерне май,
Ак çак пĕр ĕç Тĕрлемесе
Калаçтарат тата самай.

5. Унçа арчи çинчен баллада.

Пушкинăн хытă рыцăрĕ пек
Ларнă вăл хăй мул арчийĕ çинче.
Ларнă старик кунĕпе, çĕрĕпе:
„Ей, пирĕштийĕмçĕм! Тивмĕ-
çинччĕ...
Ей, ырăсем, Пихампар, Хĕртсурт!
Сирĕн хўтте пўрĕнет килçурт..."

Пулнă сĕм суккăр старик
Арзамас,
— Хăй карташие сыхлакан
анчăкне
Ывăç сăсăл ытлашши партармаст,
Тенĕ сăмах саралнă йал çине.
— Ун пўрнине кассан йун
тухас çук.
— Вăл — раштавра катăк пăр
парас çук.

Вăл çăмарта хуçипе хурăнташ.
„Пĕр çăмартапала виçĕ чĕлĕ
Сăкăр çиçе еп вара пуйрăм та,
Йепле сава, кĕлĕмçе, ман
шеллес?! —
Тенĕ старик пулăшу ыйтана, —
Ме! Вырса парăн кăçал ик ана..."

Пушкин путвалĕн рыцăрĕ пек
Ларнă вăл хăй вырăсла çуртĕнче.
Шăрчăк шăхравĕ те—куссăррипе
Ун хăлхине тупăлла çурĕччĕ.

Йунсăр алли ун, саван ачаннах,
Шав хыпаланă виç хут арчана.

Çичĕ йулан йарăнтарнă йалпа,
Çичĕ йулан ыйтнă унăн тĕлне.
Хирĕç пулан сапаланнă чăл-пар.
Çичĕ йулан ч-рнă учĕсене,
Кĕнĕ те кайнă — ыйгман,
шаккаман.
„Жулĕксем!" тенĕ старик.
„Кам кама!"

Илнĕ вăл хăйĕн çава çĕççине,
Тытăннă кайăкçă пек тăнлама.
Суккăр куççем курнăнах çиçĕннĕ,
Пуљ перĕнсе салатсан тăнлава...
Ей, ырăсем, пирĕшти, Пихампар!
Есĕр кăна ун хўгти—никам мар.

* * *

Чылай кайран, хĕрлĕ пуљсем
Çĕре вєсех пĕр сăн кўртсен,
Леш хай йурра тĕрлемессем
Çапла йурланă тет иккен:
— Суккăр купса,
суккăр купса,
суккăр купса
тарайман, хăтлайман.
Кирлĕ пулман
шур çар пухса
çăкăр-тăвар кăларса хăтланма!

6. Улмуççилĕ Тĕрлемес.

Тĕрлемес! Пахча, пахча, пахча...
Улмуççилĕ йем-йешĕл кассем.
Кил те тăс çу каçиччен „дача",
Кирлĕ мар ни ордĕр, ни кĕсйе.

Çăкăр писçиĕ, ĕнисем сĕтлĕ,
Пĕр кĕтÿ кĕшĕлтетет шăртан.
Пушмакку нумайлĕ çĕтĕлĕ
Трăтуар пулсассăн куракран?

Уралан хĕвелпеле пĕрле,
Мăшăр рифмă туп сăмаварччен.
Сăмаварĕ йевĕрлех вĕлле,
Йе чийе çырли какăриччен.

Чăххисем тăваççĕ çăмарта:
„Селиван хуçамăр, кăт-кăтик!"
Инкесем пуплеç пĕр çăвартан:
— Хаљ колхоз çутти — Мускав
çутти.

А хĕрипрэç пир çапнă чух
Вĕрене каска çинче тÿнккеç:
Пăтти-патти, пăтти-патти... Ух!
Селиван питшăлли пек пул! — теç.

Ăçта есĕр? Мĕн шутлатăр-ши?
Хÿтлеймери сире Лондăн та?
Соловки—салхуллăрах çĕршыв...
Кам сирĕн прикашчик хаљ унта?

Ăçта есĕр? Кам хавас сире?
Таврăнмашкăн турă çырнă тен?
Хăтăлчех çав (ма шанас сĕре?)
Пур пек Тĕрлемес те сирĕнтен.

Тĕрлемес тĕрленчĕ урăхла,
Чашлама та урăхла чашлат.
Хăт выç кашкăр пулса хурахлан —
Пĕрлехи калчамăр чăшăлах.

„Пăтти-патти, пăтти-патти... —
Ух! —
Бригадирĕм ваљљи çĕнĕ йĕм.
Линка-линка... Ата, Клавйе, тух:
Сан пайан ĕçтухăç çитмен-им!"

Авланаççĕ, ăсанаç качча
Улма йывăç айĕнче савса.
Тĕрлемес! Пахча, пахча, пахча...
Пархатарăсем пурах çав сан.

* * *

Кунта хаљ тупă сасси кĕрлемест.
Çанталăк пĕр тĕрлĕ уйар.
Анчах мĕн кăна астумаст
Тĕрлемес!
Мĕскер хупламан çак уйа!

Хуçа пек кĕрет пăравус станца.
Канашлăн кашлат вăрман.
Миçе çак станца çĕнетмен салатса!
Кама çак вăрман пытарман!

ИСАЙĔВ МĔТРИ ÇИНЧЕН.

ИСАЙĔВ МĔТРИПЕ

Мускаври ача çуртĕнче пĕрле ÿснĕ йулташран.

„Канаш" хаçатăн 77 (2569-мĕш) № рĕнчи хура рамă хушшинче Исайĕв Мĕтри тесе çырнине, тата кăшт айаларах хăйĕн сăнĕ хура мерчен куçĕпе йăвашшăн пăхса ларнине курсанах, Исайĕв Мĕтри çамрăк йулташ çутçантаЛăкран уйăрăлни палăрчĕ. Исайĕв Мĕтрипе пĕрле ĕçленĕ йулташсем: Г. Алендей, Г. Тигов, Н. Ваçанка, С. Елгер, И. Илларионăв, П. Данилăв, Ç. Шăпчăк, Н. Кириллăв хаçатра ун çинчен çырнисене вуласан çав-тери мана хуйхăлантарса, Мускавра ача çуртĕнче унпа пĕрле пурăннине аса илтерчĕ.

Мĕтри Мускавра ача çуртĕнче пурăннă чух, прийутра ачасем хушшинче çав-тери авторитетлă ачаччĕ. Пире, чăваш ачисене, ытти халăх (пуринчен ытла вырăс, йеврей) ачисемпе хутшăнтарса йанăччĕ. Вырăс ачисемпе йеврей ачисем хушшинче пирĕн чăваш ачисем час-часах тавлашăва кĕрсе кайаччĕç, çавăн пек чух вара — Мĕтри пĕр-пĕрин хушшинчи тавлашăва пĕтерме питĕ ăсталчĕ. Епĕр, чăваш ачисем, ытти ачасемпе тавлашма пуçласан, тавлашса тăракан ачасем хушшине кĕрсе тăраччĕ те, вăл тавлашни усси çукки çинчен, йе вырăсĕ, тутарĕ, йеврейĕ, чăвашĕ вĕсем пурте пĕрпек çынсемех, çавăнпа пирĕн хушăмăрта тавлашу кирлĕ марри, кăмăллă пурăнни чи кирли çинчен калама пуçласан, хайаррăн тавлашса тăракан ачасемех пĕр-пĕринпе çав-тери кăмăллăн шăкăлтатса выљама пуçлаччĕç. Ачасемпе выљамашкăн Мĕтри вăл хăй те питĕ йуратаччĕ.

Мускавран 12 çухрăмра, Вишљаковă станцăри дачăра пурăннă чух, çу вăхăтĕнче шыва питĕ кĕреттĕмĕр. Епĕр пурăннă вырăнтан инçе мар, Чулхуларан Мускава пыракан чугунçул çинчи Кусков станцăра пĕр питĕ пысăк кÿлĕ пур. Кÿллин тăршшĕ 1 çухрăмран кайа мар, урлăшĕ çур çухрăм ытлашши. Çав кÿлĕ урлă 13 — 14 çулхи ача Мĕтри ишсе каçаччĕ. Шыва кĕрес тесен вара ун пек ухата ача çук та темелеччĕ. Шыва кĕрсе тухсан кам та кам ытларах чупат тесе, пĕр-пĕринчен ăмăртмала чупма питĕ йуратаччĕ. Каç пулнă чух йаланах пÿскелле (мечкăла) выљама йуратаччĕ. Выљасса питĕ ловкă выљаччĕ, çавăнпа йаланах ăна атаман тăваччĕç. Нимрен ытла ушкăнпа пĕрле йурланă йурăсем ăна питĕ кăмăла кайаччĕ, вара кирек-ăçта каймала пулсан ăна камандуйушчи туса стройпа йурласа кайаттăмăр. Хăшпĕр чух тата чăвашла йурăсем йурлаттăмăр, пире чăвашла йурланине курмашкăн станцăра пурăнакан çынсемпе салтаксем пухăначчĕç.

Ҫапла вара Исайӗв Мӗтрипе пӗр-ик ҫул пурӑнсан епӗ киле килтӗм, вӑл унтах йулчӗ. Чӑвашсен илемлӗ литературипе ун чухнех вӑл питӗ интересленеччӗ. Иванов Кӗҫтенки поеми — „Нарспи"— унӑн кӗсйинчех ҫӳретчӗ. Хӑшпӗр чух вӑл хӑй те кӗске пӗчӗк сӑвӑсем ҫыраччӗ те, пире вуласа кӑтартаччӗ. Ҫырнӑ сӑввусене мӗншӗн пичете йамастӑн тесен, епӗ хаҕ калча ҫеҫ-ха, тетчӗ.

Епӗ Мускавран килсен пӗр ҫул килте пурӑнтӑм та, 1924-мӗш ҫулта Совпартшкола вӗренме кӗтӗм. Анчах Шупашкарта Совпартшколта вӗреннӗ чух та, мана Мускаври ача ҫуртӗнчи пурнӑҫ кунсеренех аса килет. Йе Исайӗв, йе стройпа ачасене йурлаттарса ҫӳрени, йе кӳлӗ хӗрӗнче шыва кӗни, йе Мускав кунӗн-ҫӗрӗн кӗрлени.

Хӗлле. Шартлама сивӗ. Шупашкарта Совпартшколта вӗреннӗ чух тем тума, астумастӑп, Атӑл хӗрнеле утса кайнӑ чух:

— Ну, ӑҫта кайан, Петӗр! — тенӗ сасӑ хӑлхана ҫакланчӗ. Пӑхатӑп, ман умра сӑран пиншак тӑхӑннӑ Мӗтри тӑрат.

— Мӗтри, есӗ ҫке, мӗнле Шупашкара килме ...ӗлтӗн? — терӗм епӗ. Вӑл мана хирӗҫ кулса:

— Хамӑр чӑваш ҫӗршывне килсе курмасӑр мӗнле чунӑм чӑттӑр, — ман алла чӑмӑртарӗ. Унтан иксӗмӗр те мӗнле пурӑнни ҫинчен пӗр-пӗринчен ыйтса, Атӑл хӗрнеле ҫул тытрӑмӑр. Атӑл хӗрне ҫитсен мана вӑл хӑй хваттерне илсе кӗчӗ. „Канаш" хаҫатра ӗҫленӗ чух кайарахпа час-часах тӗл пулаттӑмӑр. Пӗр-пӗрне тӗл пулсан Мускаври ача ҫуртӗнчи пурнӑҫа аса илмесӗр иртерместӗмӗр.

Йулашки ҫулсенче Мӗтри комуниссен парти ӗҫӗшӗн чӗререн ҫунса ӗҫлерӗ, сывлӑхӗ вӑйлӑран вӑйлӑ чакма пуҫларӗ. Ӗҫрен нихҫан та пӑрӑнса тӑрас темен вӑл, вӗҫне тухаччен ӗҫленӗ. Партин Кӗҫӗнйелчӗк райкомӗн агитпроп пайӗ пуҫлӑхӗ пулса ӗҫленӗ чух, тырпул хатӗрлес ӗҫре чи хастарлӑ ӗҫлесе, Кӗҫӗнйелчӗк районӗ малта пыни Обкомшӑн, Чӑваш правителствишӗн те, пӗтӗм чӑваш ӗҫхалӑхӗшӗн те паллӑ пулнӑ. Исайӗв М. хӑйӗн сывлӑхне ӗҫхалӑх интересне сыхлас, унӑн пурнӑҫне йусас ӗҫе, унӑн литературине паче, сывлӑхӗ начарланса ҫитнӗ хыҫҫӑн та тем ҫе илемлӗ произведени ҫырма ӗлкӗрчӗ.

Исайӗв ҫырнӑ калавсем, повӗҫсем ӗҫхалӑхне йуралӑ, килӗшӳлӗ. Мӗншӗн тесен, вӑл чечеклесе ҫырна калавсемпе повӗҫсенче сӗрӗм шухӑшсемпе шухӑшлаттаракан шухӑшсем ҫук.

Пирӗн ҫамрӑк писателсемпе поетсем ӗҫхалӑхне кирлӗ мар йӗрӗнчӗк произведенисемпе ҫырса вӑхӑта иртеркелерӗҫ. Ҫавӑн пек лӗпӗртетни, пӗр вырӑнта пӑгратни пире кирлӗ мар. Мӗтрин „Ҫулӑмри йал", „Рабфак хӗрӗ", „Лисук чӑптаҫӑ", „Отрет", „Грузчик" пек произведенийӗсем кирлӗ. Мӗтри произведенисене кӗнеке гуса ӗҫхалӑх хушшине сармала.

П. Комиссарӑв (Киремет Петти).

30/IX—30, Шемшер, — Шупашкар.

МЕТРИЙЕ АСӐНСА.

1930 ҫулта, апрелӗн 18-мӗшӗнче, Самарта, революцин ҫӗнӗ утӑмӗсемшӗн хӗрсе ӗҫленӗ ҫӗртех писатӗл-комунис Мӗтри Исайӗв вилсе кайрӗ.

Тӑван ҫырулӑха мӗнпур паттӑр хӗрӳлӗ чӗрипе парӑннӑ, ӑна тӑвакансенчен пӗри, ӑна малти вырӑна хунӑ ҫамрӑк писатӗл, журналис, критик, агитатӑр. Пире, ҫырулӑхра пирвайхи кун мар ӗҫлекенсене, вӗрентсе паракан тӑван Мӗтри партработник, сатур ҫамрӑк, пысӑк ӑста, йулашкинчен чӑвашран, тӗттӗм чӑваш пӳртӗнчен тухса, пурнӑҫра кӗрешсе, ҫӳле тухнӑ чӑваш ачи, революци ачийӗ...

Мӗтри Алендейпе пӗрле. Астӑватӑп: вӑл вӑхӑтра „Канашра" журналиссем ҫукпа пӗрехчӗ. Ҫӗнӗ ӗҫлекен килни редакцишӗн пысӑк событиччӗ.

1925-мӗш ҫул, кӗркунне пулас. Астӑватӑп: темле пӗр тӗттӗм кӗрхи каҫ епӗр журналиссем редакцине пухӑннӑ та, темле литератур каҫӗ туса ирттересси пирки канашлатпӑр. Пӳлӗмре туртса тултарнӑ. Тапак тӗтӗмӗ мӑкӑрланат ҫеҫ. Сар ҫутӑпа ҫунакан електрицӑ лампи аран-аран ҫутатат Иван Мучисене, Чӗкеҫсене, Елгерсене (ҫавсем пек астӑватӑп). Журналиссем хӑшӗ сӗтел хушшинче, хӑшӗ урай варрине тӑрса каласаҫҫӗ.

Хӗрсе каласса тӑнӑ ҫӗртех редакци пӳлӗмне Алендейпе пӗрле сӑран тум, пуҫа вӑрӑм хӑлхалӑ хӗрлӗ гир ҫӗлӗк тӑхӑннӑ йаштака кӑна илемлӗ ҫамрӑк кӗрсе тӑрат.

Алендей паллаштарат.

— Мӗтри! Редакцине ӗҫлеме килнӗ... Мускавран...

— Редакцине?! Дайош!

— Пирӗн ҫар та пысӑклана пуҫларӗ мӗн!

— Ата лар, лар малала...

— Ну, мӗн ҫинчен пуплетӗр-ха? — каласӑва хутшӑнат Мӗтри. Хутшӑнат те, каласӑва хӑй ҫине илсе ӗҫе сӳтсе-йавма пуҫлат.

Каласса кайагпӑр вечӗр ҫинчен тата хӗрӳрех. Мӗтри хӗрӳлентерет.

— Атӑр-ха, ачасем, Карманйолӑ йурласа пӑхар...

— Мӗнле йапала?!

— Сӑмахсене давай...

Мӗтри сӑмахсене калат, вӗрентет...

— Аха, Карманйолӑ ҫакӑн пеки-ха вӑл...

— Дайош...

Йурлатпӑр. Хӗрӳлӗ, революцилӗ сӑмахсем, Париж комунарӗсен йурри пире ҫӗклесех йарат. Ҫӗмӗрттеретпӗр ҫеҫ:

> ...На фонари всех буржуев,
> На фонари...
> Эй, живей, живей, живей!
> Хватило-б только фонарей...

Мӗтри йертсе пырат. Куҫӗсем унӑн йалтӑртатаҫҫӗ. Кӑмӑлӗ ҫӗкленнипе пичӗсем ҫине йун шевли ӳкнӗ. Епӗр пурте вырӑнсенчен тӑнӑ, хулсене сарнӑ, аласене чӑмӑртанӑ, йурлатпӑр:

...На фонари всех буржуев,
На фонари..
Эй, живей, живей, живей!
Хватило-б только фонарей...

Çакăн пек паллашрăмăр епĕр Мĕтрипе малтанхи хут.

Унтан Мĕтри хĕрӳлĕ статйисем, саттур заметкăсем, „подвалсем“ çыра пуçларĕ „Канаша“. Епĕр, „Канашра“ ĕçлекенсем, Мĕтри ĕçленинчен тĕлĕнсе кăна тăратпăр. Çав тĕрлĕ ăста, вата журналис пекех кăшлат тăшмана.

— Ну, ку лайăх пулчĕ-ха пире, атту пирĕн çыракан та çукчĕ,— пуплешетпĕр Хумма Çеменĕпе.

— Уху...— тетчĕ вара Хумма Çеменĕ, калаçма йуратманскер...

Мĕтрийĕн тата тепĕр хĕрӳлĕхне астăватăп.

Мĕтри Мускавран килнĕ çын-çке. Вăл пурне те хăй куçĕпе курнă çын. Нумай пĕлет. Çавăнпа епĕр ăна канăç памасăр Мускав çинчен ыйта ыйта пĕлетпĕр.

— А итле-ха, Мĕтри, Мускавра радио пур теççĕ. Çавна илтнĕ-и? Неуштă сывлăш тăрăх сăмахлаççĕ?..

— Е, манран çеç ыйт...— кулкалат Мĕтри. Тытăнат радио çинчен тĕлĕнтерме.

— Неуштă кунта Шупашкарта та итлеме пулат?

— Неуштă?! Лартасчĕ еппин ăна кунта та...

Канашлатпăр Мĕтрипе редакцийе радио лартма. Алендей те хĕтĕртет. Ниçта çук тĕлĕнĕве тăвасшăнах.

Пуçлатпăр ĕçлеме. Типографи рабочийĕсем хушшинче, редакци ĕçлекенĕсем хушшинче ирĕклĕн укçа пухатпăр. Мĕтри Мускава вĕçтерет прийомник илме...

Илсе килчĕ Мĕтри кирлĕ хатĕрсене. Апла та, капла та тытса пăхатпăр тĕлĕнӳ хатĕрĕсене.

— Ну, малала...

Типографири çамрăксемпе хăпартса лартатпăр редакци çурчĕ çине мачтă, çыхатпăр, тĕреклететпĕр. (Вăл мачтă халĕ те ларат-ха).

— Ну, малала, Мĕтри, мĕнле?..

Малали вара пирĕн темле тухмарĕ. Илсе килнĕ прийомник уçилитĕл пулнă мĕн! Ун чухне Мĕтри те, Алендей те, епĕр те радио хатĕрĕсене уйăрсах кайайман мĕн...

Кайран, пайтах вăхăт иртсен тин вара ĕçлекен радиоприйомник лартса радио йухăмне никĕс хутăмăр.

...Мĕтри пит хĕрӳлĕ çамрăкчĕ. Пур ĕçе те вăл чĕререн парăнса, пĕтĕм вăйхалне хурса ĕçлеччĕ. Çурçĕрте те, ирхине ирех 5—6 сехетре те, кăнтăрла та епĕ ăна çырса ĕçлесе ларнине курман мар.

Калаçма вара укпа пит хаклăччĕ. Çĕнĕ шухăшсем, çĕнĕ çулсем тупса параччĕ. Нумай пĕлеччĕ, хак хума пĕлеччĕ пурне те. Панăччĕ ăна çанталăк пысăк талант, пысăк ăс, пысăк чĕре...

Йулашки хут Мĕтрийе пĕлтĕр Шупашкара килсен куртăм.

— Мĕтри! Мĕнле? Сывă-и?

— Сывă-ха... Ху мĕнле? Мĕнле хыпарсемпе?—ĕлĕкхи пекех чăмăртат алла, ĕлĕкхи пекех тута вĕççĕн çеç кулкалат Мĕтри. Анчах темле çĕнни те пур Мĕтрире... Мĕн йапала, мĕн пулнă Мĕтрийе?

— Аха, Мĕгрин сасси пĕтнĕ... Пăшăлтатса çеç калаçать çке Мĕтри...

— Мĕн пулнă сана капла, Мĕтри?

— Темле, çапла сасă çухалчĕ... — Хура çĕленĕн хура шухăш пуçа шуса кĕрсе чĕтретрĕ пĕвĕме...

Халĕ çавăн пек ыраттаракан хыпар...

Литературăра пысăк ĕç турăн есĕ, Мĕтри. Вăл ĕçшĕн сана нумай пахалĕç. Епĕр кунта сана, тăвана, çывăх çынна, йулташа, тантăша асăнса пах...атпăр.

Нумай кĕтеттĕме.. санран, Мĕгри, пĕлегтĕн есĕ çырма ăста. Анчах... усал чир — чахуткă — пĕтерчĕ сана... Анчах есĕ çĕре кĕнипе пĕтмĕ санăн йурагнă ĕçӳ. Ç..мрăксем тăрĕç ĕретĕн сан вырăнна. Тăвĕç вĕсем сан ĕçне. Çутă пурнăç никĕсне хываса çитерсен — асăнăпăр сана лайăхрах.

Вырт, çывăр лăпкăн, тантăш Мĕтри.

Лашман Çт.

ИСАЙĔВ МĔТРИ ÇЫРНИСЕНЧЕН.

Вĕраннисем.

Çул çинче çырнинчен.

Чугунçул хĕрринчи егем лартса ӳстернĕ чăрăш вăрмантан тухрăмăр та, ман лавăçăн тĕви улăхри çемçе çулпа, курпунĕсене ластăртатса утăмне ӳстерчĕ. Кунти хресчен тĕвепе те, вăкăрпа та лаша вырăнне усă курать. Уйри тыррине те вĕсемпе пуçтарать, пасара та вĕсемпе çӳрет, хăнана та вĕсемпех кайать.

— Ак çак улăхсем ĕлĕк пĕтĕмпех улпутăн пулнă ĕнтĕ. Хаљ веçех хресченсен, пирĕн. Вăрманне те Совет çывăхри йалсене валеçсе пачĕ, — терĕ ман лавăç улăх çине кĕрсен.

Вăрман хушшинчи улăх тăрăшпе унта та кунта 20 — 30 лавлă утă куписем лартса тухнă, хăшпĕр утă куписене хĕррисенчен выљăхсем турткаланă.

— Çулла чĕрĕ, сĕткенлĕ курăк пур чухне выљăх типĕ ута ахаљ çийес çук. Ку утă куписене тăварланă, çавăнпа вăкăрсем туртаççĕ. Кашни купана 3 — 4 пăт тăвар сапнă, тăварласан ăна выљăх хĕлле лайăх çийет, нимĕн те хăвармасть, — тесе ăнлантарса пырать мана лавăç.

Пĕчĕк çырма урлă каçса, çаврака кӳлĕ хĕррипе тăвалла хăпарса кайрăмăр.

— Авă, куратна сăртра шурă çурт? Çавă ĕнтĕ ес кайакан совхоз, — терĕ лавăç, пӳрнипе тĕллесе.

— Сулахайри пӳртсем — пирĕн ертел „Вăрану“. Кăçал анчах тухнă-ха епĕр, çавăнпа ç..рсйĕр лайахах çавăраймарăмăр. Ку та улпут çĕрĕ пулнă, революц.. хыççăн ăна пирĕн йал илчĕ. Хаљ ĕнтĕ епĕр куçса лартăмăр, — терĕ те вырăс, урапа çинчен анса тĕвине хăраткалама хулă хуçса илчĕ.

Ĕлĕк улпутăн пулнă текен çĕр пĕтĕмпех улăхлă вырăнта, чи лайăх хура çĕр. Патша чухне кунта улпутсем хăйсене ваљљи чи

лайăх çĕрсене суйласа илнĕ. Хресчен çĕрĕ йе хăйăрлă, йе сăртлă вырăнсенче, хура пуса хăварсан ерĕм (армути) пусса илекен çĕр пулнă. Хресченĕн вара ирĕксĕрех, выçă вилес мар тесен, улпутăн аван çĕрне виç хут хак парса тара илмеле килнĕ.

(Лавăç урапа çине ларчĕ те, каллех калаçма пуçларĕ).

— Çĕнĕле пурăнас тетпĕр вĕт. Акă епĕр вунпилĕк çемйе ергеле тухрăмăр та, кăçалах пилĕк пусăлă уйа куçатпăр. Лайăх, таса суртлă вăрлăх акатпăр. Ертелпе трактăр илтĕмĕр. Кăçал уйрăм ĕçлетпĕр-ха. Çитес çултан пĕрлешсе ĕçлеме тытăнатпăр: трактăрпа сухине те тăватпăр, авăнне те çапатпăр. Ертелпе ĕçне те хавасрах ĕçлетĕн: пурнăç аваяланассăнах туйăнать, — терĕ те ман лавăç, аттине хыва пуçларĕ.

— Атта хывас пулать, кунта шыв урлă каçмала. Хывăр есĕр те, — терĕ вăл ман йенеле çавăрăнса. Вĕтĕ хăва катисем хушшинчен тухсанах Самаркă шывĕ сарăлса выртни курăнчĕ. Йĕмпĕççисене тавăрса, урапа çине тăрса шыв урлă каçса кайрăмăр. Малта, шыв хĕрринчен пуçласа вĕт вăрманлă сăрта çитичченех, пĕр çур çухрăм хушши ертелĕн хĕвелçавăрнĕш анисем сапсарă сарăлса выртаççĕ.

— Ак сан çак çулпа кайас пулать, хаљ инçе мар ĕнтĕ совхоз, пĕр çухрăм пулĕ-и, пулмĕ-и? — терĕ вырăс. Вырăса тавтуса кăтартнă çулпа, пиççе çитнĕ çĕмĕрт тĕслĕ, хура хĕвелçавăрнĕш пуçĕсем çине пăхкаласа совхоз ла йарăнтартăм. Вăраннă хресченĕн ырă шухăшĕсем чылайччен пуçран тухма пĕлмерĕç.

Самар кĕпĕрнинчи хресченсем хĕрсех çĕнĕле пурăнма тытăнаççĕ. Пур çĕрте те, вырăсĕ, тутарĕ, мăкшин. чăвашĕ — пурин хушшинче те: ертеле тухрăмăр, нумай пусăлă уйа куçрăмăр, трактăр илтĕмĕр, — тени илтĕнет. Çине-гăрсах çĕрĕç майĕсене çĕнетеççĕ.

Иртни — улпут, хĕсĕк çĕр, çĕре темиçе хут хаклă парса тара илсен те мăшкăл тӳсни.

Хаљхи — кашни хресчен хăй çĕрĕ çинче канлĕ ĕçлени, куљтурăшăн çунни, тата кашни вăраннă хресчен пуçĕнчех пĕр шухăш:

— Ех, тĕп пултăрах-и çав çĕрçăтман виçĕ пусăлă уй! . Тĕп пулĕ, тăвăпăр!..

Пузулук, Самар кĕпĕрни, 1927 çул.

„Хĕрлĕ пучах“.

Ç у л ç и н ч е ç ы р н и н ч е н.

Ирхине ирех — хĕвел те йуман çӳллĕш анчах хăпарнă, кăвак сутăпа пĕрле çӳрекен, çăтăк ашăк пек, вилшыв пĕлĕчĕсем сапса хăварнă тумламсем те типеймен — епĕр вăрман хушшинчи уйсем урлă кайакан çулпа „Хĕрлĕ пучахала“ çурранах чашлаттартăмăр.

Çулăн икĕ айккипе — пахчасем. Пахча тесен, Чăваш республик сынни куçĕ умне тӳрех улмуççи, чийе, хăмлаçырли йăвăççисем пырса тăраççĕ ĕнтĕ. Ку пахчасем урăх тĕрлĕ, кунта улмуççисеммĕнсем çук. Вĕсем вырăнне ку пахчасенче çавракa çулçăлă, катрашка кавăн аврисем мăнă сарă кавăнĕсене ыталаса выртаççĕ, кĕске туналă арбуз аврисем çĕр çумĕнче хăпаймасăр вĕлтĕртетсе

лараҫҫӗ. Каваҫна, иртсе ҫӳрекен тӳрех арбуз ӑни ҫине кӗрсе ан кайтӑр тесе, ҫул хӗррине лартнӑ. Каванран шалала вара ана тӑршшӗпех шурӑ-симӗс хупӑлӑ арбузсем, сап-сар дыңӑсем, йури пӑрахса тухнӑ пек, унта та кунта иртсе ҫӳрекенсен куҫӗсене илӗртсе выртаҫҫӗ.

Арбуз пахчисене хураллаҫҫӗ. Ҫултан пӗр ҫич-сакӑр утӑмра улӑм витнӗ хушӑ (ӳпле) умӗнче пӗр старик шултра ҫипрен тем каркалать.

— Вӑй патӑр! Мӗн тӑватӑн? — терӗ ман йулташ старике.

— Сӗрекепе аппаланатӑп, ахаљтен... Ӑҫтала кайатӑр? — терӗ старик ӗҫлеме чарӑнса. Ӑҫта кайма тухнине каларӑмӑр.

— Арбузпа хӑна тӑватӑн пулӗ ӗнтӗ пире! — терӗм старике. Старик хушша кӗрсе пӗр симӗс хупӑлӑ пысӑк арбуза ҫурмаран касса илсе тухрӗ.

— Кӑҫал тем вӗтӗрех пулчӗ хӑй... кун пеккисем сайра. Ҫӑва кӗрсенех пӗр вӑхӑт ҫӑмӑр пулмасӑр тӑчӗ, ҫавӑнпа вӗтӗрех пулчӗ пулмала, — терӗ те старик хӑйӗн ӗҫне ӗҫлеме тытӑнчӗ.

Пиҫсе ҫитнӗ хурӑн ҫырли пек хӗпхӗрлӗ, пылак арбуза ӗмсе малала утрӑмӑр.

Вӑрман витӗр сукмакпа шыв хӗрне пырса тухрӑмӑр.

— Кунта лутка пулаканччӗ те, хаљ ҫук пулсан начар пулать-ха пире, — тесе пырать ман йулташ, вулком ҫекретарӗ.

Пирӗн телейе пӗр шур сухалӑ старик лутка ҫине пӗчченех ларнӑ та, шыва майӑн йарӑнтарса килет. Ҫурӑмӗ ҫинче икӗ кӗпҫелӗ пӑшал, лутки хыҫӗнчен вӗшле йытти ишсе пырать. Хамӑр тӗлерех ҫитсен старике чӗнсе илтӗмӗр. Вӑл пире шыв урлӑ каҫарма кӑмӑл турӗ. Лутка ҫине ларсан, лутка тӗпӗнче икӗ кайӑк кӑвакал выртнине куртӑмӑр. Старик, ухагана ҫӳрекенскер, кайӑк кӑвакалсем пеме кайнӑскер пулнӑ.

Шыв урлӑ каҫса „Хӗрлӗ пучах“ комунӑ ҫӗрӗ ҫине кӗрсе кайрӑмӑр. Йӑвӑҫсем хушшинчен, инҫех те мар, комунӑн хӗрлӗ тимӗр витнӗ ҫурт тӑррисем курӑнчӗҫ. Лайӑхах пулнӑ ҫав кунга ӗлӗк улпута: шывӗ те ҫывӑх, ҫӗрӗ те лайӑх, вӑрманӗ те йӗри-таврах.

* *
*

„Хӗрлӗ пучах“ йатлӑ комунӑ вырнаҫса ларнӑ вырӑн ӗлӗк Костромитин улпут имениӗ пулнӑ. Ӗлӗк чух кунта хресченсем сахалах тӳсмен улпут мӑшкӑлне. Хресченӗ акапуҫ хыҫҫӑн хура тар йухтарса утнӑ. Улпут дачӑра тутлӑ апат ҫинӗ хыҫҫӑн хырӑмне шӑлкаласа шӗпчӑк йуррине итлесе савӑнса ларнӑ.

Комунӑн пурнӑҫӗ ҫултан ҫулах йусанса пырать.

— Улпутран ҫуртсемсӗр пуҫне нимӗн те йулман, ыттине пӗтӗмпех хамӑр алӑпа тунӑ, хамӑр туйаннӑ, — тет комунӑри йачейкӑ ҫекретарӗ.

Комунӑн икӗ чуллӑ вутлӑ арман 35 лаша вӑйлӗ двигӑтӗлпе ӗҫлет. Ҫак кӗркунне тата ҫу ҫапакан савӑт ӗҫлеме тытӑнать.

— Пӗр ҫӗр ӗҫӗпе ҫеҫ пурӑнма кирек-мӗнле пулсан та шанчӑклах мар. Ҫавӑнпа епӗр хамӑр хуҫайствӑна тырӑ пулмасан та, аптрамала мар тӑвас тесе тӑрӑшатпӑр. Акӑ, арман, ҫу савӑчӗ туса

лартрăмăр. Выљăх ытларах усрама тăрăшатпăр, ăраттисене лайăхлататпăр. Хаљ пирěн комунăра пурě аллă çын пурăнат. Аллă çынна пирěн аллă сысна, çирěм ěне, çичě лаша, сурăх çěре йахăн. Кăçал икçěр тěп улмуççи лартрăмăр, пахча чěртес тетпěр. Вунпěр вěллерен кăçал уйăрттарса 22 вěлле турăмăр, çийěнчен 20 пăт пыл илтěмěр...

— Чылай пулат-и есěр комуна организацилени? — тесе ыйтрăм епě йачейккă çекретарне калама чарса.

— Епěр комуна шуррисене хуса йарсанах тухрăмăр. Тухсанах Колчакăн кулаџки йулнă бандичěсем тăнтан йаратчěç.

Уйа ěçлеме кайас пулсан винтовкăсăр тухма çукчě. Сисмен, кěтмен çěртенех йе лашана, йе ытти выљăха хуса кайатчěç. Плуг хыççăн винтовкă çаксах утаттăмăр. Хаљ пурнăç аван. Тыррине те тăватпăр, налугне те тÿлетпěр: пěлтěр 10 000 пăт тырă турăмăр, 300 ытларах налуг тÿлерěмěр.

— Пирěн уй ултă пусăлă. Курăксем те акатпăр. Клевěра, љуцернăна иккěмěш хут çулатпăр ěнтě.

Комунăран айакра мар, уйра молотилкă кашлат. Ун патěнче тем пысăкěш улăм урисем чăсăлса выртаççě. Молотилкă тракторпа ěçлет.

— Кунне пин пăт çапма пултарат, çапнă тырра тÿрех миххе чыш, тасатсах кăларат, — тет йачейкă çекретарě, еп тем шухăша кайса çăвара карнинчен кулса.

— Хресченсем мěнле пăхаççě сирěн „Хěрлě пучах“ çине? — тетěп епě ăна.

— Хресченсемпе епěр аван пурăнатпăр. Акă çак йенче, инçех те мар-ха, пиртен курмалăх çывăхри йалсенчен виççě ертел тухса ларчěç. Трактăрсем илсе йачěç. Хресченсем пирěн маçтерскойа плуг-мěн вансăн гÿрлетме те килеççě.

Комунă çурчěсем хушшинчен трактăр çÿресе картласа пěтерне çул иртсе кайат.

Иртсе çÿрекен хресченсем комунă картишěнче ларакан çěрěç машинěсем çине чалăшшăн пăхкаласа иртеççě.

Пěр хресчен арăмě урапа çинчен анмасăрах:

— Сутлăх сысна çурисем пур-и? — тесе кăшкăрат.

— Пур, пур! сире миçе кирлě? — тени илтěнет ăна хирěç комунăран хěрарăм сасси.

— Мана пěр мăшăр...

Хресченсем комунăн ăратлă сыснисене пит килěштерчě. Комунăран сăнавлăх вěсем те ăратлă сыснасем усрама тытăнаççě.

— Вунпилěк, вунсакăр пăт туртакан пулат, çулталăкне иккě çурлат, тупăшлă выљăх вăл сысна, — терě йулашкинчен йачейкă çекретарě.

Пуэулук уйезě,
Самар кěпěрни.

Љупук çырăвĕ.

Ескис.

Љупук çырăвĕсем ман алла ăнсăрран кăна лекрĕç.

Ман тус, Çерук, пĕлтĕр рабфак пĕтерчĕ те, хаљ Мускавра аслă шкулта инженера тухма вĕренет. Нумайах пулмаст ман Мускава кайса килмеле пулчĕ, Çерук патне те кĕрсе тухрăм. Вăл мана хăйĕн йалти йулташĕ Љупук—комсомолкă ваљљи кĕнекесем парса йачĕ. Çав кĕнекесем ăшĕнчен Љупук çырăвĕсем тухрĕç. Епĕ вĕсене кайала йарас тесе тăнăччĕ, çаптарма шухăшламанччĕ те.

Пĕр ерне кайала Љупука курма тĕл килсе çитрĕ. Вăл Самара колхозницăсен сйезне делегат пулса килчĕ. Љупука курсанах ман çырусене пичетлес шухăш килсе кĕчĕ. Вăл шухăша каларăм ăна.

— Кай, етеме ан култар-ха? — терĕ вăл малтан. Калаçсан-калаçсан килĕшрĕ, анчах хăшпĕр вырăнсене кăларса пăрахма хушрĕ. Епĕ вăл каланă пек турăм, урăх нимĕн те тĕкĕнмен.

Айăпĕ те ман, кăшт пăртак литературла савалакаласа йакатни кăна Урăх ман перо тĕкĕнмен ку çырусене.

Акă вĕсем.

I.

Пайан сан „пысăк" çырăва илтĕм. Ђăнах та канвертне тытсанах, пит пысăк çыру илетĕп пулмала тесе, хĕпĕртесе кайрăм. Уçса пăхсан вара хучĕ кăна пысăккине куртăм. Уншăн та тав, вăл хут мана акă ху патнах çыру çырма йурарĕ.

.. Хĕрсе кайсах вĕренетпĕр тетĕн çке. Социалисăмла ăмăрту туса хăвăртрах та, лайăхрах та вĕренсе тухсан, питех те аван ĕнтĕ. Ес вĕреннĕшĕн епĕ пит хĕпĕртетĕп. Манăн та вĕренесчĕ те.. килте ĕçлекен çук-çке. Анне ватă... кун çинчен урăх чух та çырăп-ха.

Ес кайсанах епĕ санран пĕр-ик ерне хушши çыру кĕтсе purăнтăм. Вара, йамаст пулĕ, ку тесе, кĕтме пăрахрăм. Кĕтмен çĕртенех илтĕм, Çерук, сан çырăва

Ех, Çерук, сан çинчен шухăшласанах ман ăшчик вĕреме тапратат. Мĕн тĕрлĕ телейлĕ çынсем есĕр — Мускавра вĕренекенсем. Вĕренетĕр, пурне те куратăр, илтетĕр. Аслă çынсене, револђуцине йертсе пыракансене курса, итлесе савăнатăр.

Хаљ епĕ сана мĕнле ăсатнине çырас тетĕп.

Ес ларсан пуйăс тапранса кайассине кĕтрĕм... Пуйăс văш-văш тутарчĕ... куççуљсем шăпăр-шăпăр йухса анчĕç.

Вагунсем куçран çухаличченех пăхса тăтăм. Вара хамран-хам вăтанса, мĕншĕн макăрас-ха тесе, вакзал патнеле васкаса йарлаттарса утса кайрăм. Унтан-пуљмин мана хирĕç платформă патнеле пĕр çын чупса тухат, хăй çӳхе тумтирпе çеç.

— Мускавала кайакан пуйăс çакă-и? тет.

— Ку Хусанала кайаканни. Мускавала авă кайрĕ,—терĕм.

Пăртак çеç макăрса йамарĕ çав, ватăскер. Йапалисем веçех ес кайнă пуйăспа кайнă, тет. Вăл вакзал хыçĕнчи пасара çимели илме кайнă пулнă мĕн. Пит хĕрхентĕм старике.

Вара вакзалга Хура Ивана тӗл пултӑм. Вӑл кино ленгисем илме килнӗ, вакзала çула май лартса каймали пӑсажир тӗл пулмӗ-ши тесе кӗнӗ. Лартса килмели пӑсажирсем тупӑнмарӗç ун ваЂЂи, пӑсажир вырӑнне епӗ ларса тавӑрӑнтӑм вара унта.

Йурра ухатаскер вӑл, çул тӑрӑшпе йурлаcа тавӑрӑнгӑмӑр. Хирӗç пулаканнисене тавӑсси тесе çухӑрат тата. Кулгарса вӗлереччӗ...

Кунсем сиккипех чупаççӗ, Çерук.

Йал тапранчӗ. Кӗрлет кӑна. Тырӑ хатӗрлес ӗçпе пӗрле халиччен хускалманнисем те хускалса кайрӗç. Колхоз тӑвас теççӗ. Çӗмӗрлеççӗ хаЂ йалта. Кашни кун пуху, кашни кун тулли халӑх вуламали çуртра. Хам та ывӑнса çитрӗм ӗнтӗ пухусенче ларса. Çынсем темле ывӑнмаççӗ. Кашни кунех чӑк-тулли лараççӗ вуламали çуртра. Колхоза кӗрекенсем чылай. Епӗ те питӗ кӗресшӗн, анне итлемест.

— Ватӑ пуçпа унта кӗретӗп-и,—тет.

Çаплa, Çерук, еп колхозала туртӑнап, анне хӑй ӑçтала туртӑннине хӑй те пӗлмест. Ман сӑмахсене хирӗç ним калама аптрат те, турӑ çине йарат вара. Турӑ чарат ӑна колхоза кӗме.— Сана унта кӗрсен те, турра ӗненме кам чарат! тетӗп те, вӑл çапах хӑй ӗннех перет.

Вӗт-шаксене веçех хам йенне çавӑрса пӗтертӗм ӗнтӗ. Тимук пирӗн — пионер, аннене пӗрмайах:

— Анне, хушӑн пулмасан, маншӑн кӗр колхоза!—тесе ӳкӗтлет.

Темле пулат ӗнтӗ. Пӗр хутаç салам сана. Çыр. ЂУПУК.

II.

Сана каникула кӗтрӗмӗр.' Килмерӗн. Килнӗ пулсан пит тӗлӗнмеле ӗçсем кураттӑн. ХаЂ йал пӑтранат кӑна колхозсем пирки. Çурри ытла колхозра ӗнтӗ. Чиркӗве хупрӗç, чанне антарчӗç. Тепӗр тӗрлӗ хаЂчен пулман, курман пурнӑç пуçланас пек туйӑнат мана. Пӗр икерне хушшинчех тӗлӗнмеле улшӑнусем пулса иртеççӗ йалта. Çӗнӗ пурнӑç алки умнех çитсе тӑтӑмӑр-ши вара?..

Пирӗн килте хуйхӑ пулса иртрӗ. Анне пит макӑрчӗ вара, епӗ те тӳсеймерӗм. Ирӗксӗрех кӑмӑл хуçӑлчӗ.

Виçӗ ерне ытла иртрӗ ӗнтӗ вӑл ӗç пулнӑранпа. Пӗр ирхине армана кайас тесе хатӗрленнӗччӗ. Лашана кӳлес тесе вите патне пытӑм йӗвен çӗклесе.

Епӗ вите алки патне çитсенех, лаша ӳкрӗ те çавӑнтах вилсе кайрӗ. Анне макӑрат, епӗ лаша мӗнле вилнине... куçӗсене уçкаласа тӑратӑп. Вара йалсовет председателӗпе çекретар килчӗç пирӗн пата. Çекретарӗ сӗтел пуçне ларсах çырчӗ. Çырса пӗтерсен:

— Страх агента парӑр ку хута,— терӗ.

Вара епӗ лав тытса выЂӑх тухтӑрне илме кайрӑм. Çитрӗм выЂӑх тухтӑрӗ патне, килесшӗн мар:

— Ну вилнӗ, што-ш тӑвас ӗнтӗ, чӗртес çук,—тет.

Манӑн тарӑхнипе çав-гери çилӗ килсе кайрӗ, çав амбулаторинчех питӗ хытӑ вӑрçрӑм. Вара килчӗ, касса пӑхрӗ те:

— „Сибирская язва“ пулнӑ,— терӗ. Чӑвашсем çӗпӗр чирӗ теççӗ-и çавна. Вот урӑх нимӗн те çук, анчах пурнӑç „хутаçси“ пӗчӗкленсе йулчӗ. Анне пит те лайӑх сиcсе илчӗ пулас ӑна...

Ҫак ёҫ пулса иртнӗ хыҫҫӑн аннепе ҫине-тӑрсах каласма тытӑнтӑм. Кашни кунах тапратгаттӑм колхоз ҫинчен. Анне ҫапах килёшме уйламасчӗ.

— Унта Карсак Ҫеркисем, Счавай Кӗркурисем кӗрсе пӗтнӗ. Аҫу вӗсенчен ӗлӗк те тертленчӗ, халь кулхуза кӗрсен каллех вӗсен аллине лекетпӗр, — тетчӗ анне. Апла каласан ним калама аптарса тӑраттӑм вара хам та.

Лаша вилчӗ ак, ҫӗнӗрен туйанасси пулмаст пиртен. Ҫураки ҫывхарса килчӗ, кам акса парӗ-ха пире? — теттӗм те аннене, чӗнмесӗр шухӑша кайса ларатчӗ.

Пӗркунне хуларан рабочи бригади килчӗ Парти йачейки пуххинче нумай каласрӑмӑр колхоз пирки Епӗ те анне сӑмахӗсене тухса каларӑм.

Вара чухӑнсен пуххисем турӗҫ. Шавларӗҫ нумай... Колхоза веҫ х тустарчӗҫ. Кулаксене колхозран веҫех кӑларса ҫапас тесе йышӑнчӗҫ пухура. Йалти чухӑнсен пуххи пурте колхоза кӗретпӗр тесе йышӑнчеҫ. Вӗсем хыҫҫӑн чухӑн хӗрарӑмсене уйрӑм пухрӑмӑр. Вӗсем те ҫаплах йышӑнчӗҫ.

Пухусенче кулаксен пӳрчӗ-ҫурчӗсене, ӗни-лашисене туртса илсе веҫех колхоза памала, терӗҫ. Терӗҫ те, тепӗр куннех турӗҫ те.

Пурлӑхсене туртса илнӗ ҫӗре мана та йачӗҫ. Йачейкӑран. Манӑн Пракка Михали патне кайма лекрӗ.

Хаклӑрах йапалисене пӗтӗмпех пуҫтарса илтӗмӗр. Шӑкӑр-шакӑрсене хӑйсенех хӑвартӑмӑр. Кайри килӗнче тулӑ нумай тупрӗҫ. Пӳлмене айала тулӑ хунӑ, ҫийеле пӗр сий алланчӑк ыраш, сӗлӗ, вир хутӑш сарса хунӑ.

Веруҫӗ пит макӑрчӗ. Хӑй арчи ҫине выртсах макӑрчӗ. Ашшӗсене тем те пӗр каласа вӑрҫат:

— Пӗлтӗрех качча каймаллаччӗ, сире шуйттансене, итлесе каймарӑм, есӗр чартӑр. Халь кам илет ӗнте мана! — тесе йӗрет.

Пире вӑйӑсенче сурханахсем, тетчӗ ӗлӗк — Сирӗн кӗпӳсем те урай ҫумали трепке тума кӑна йурӑхлӑ, — тесе кулатчӗ...

„Сурханахсем" мартӑн 8 мӗшӗнче пӗтӗм йала тӗлӗнтерчӗҫ. Ҫӗр аллӑ хӗрарӑм ытла мӗн пур ӗҫхӗрарӑмӗ пуҫтарӑнса хӗрлӗ йэлавсемпе урамсем тӑрӑх ҫӳрерӗмӗр. Вара аластисен кружокӗн выставки пулчӗ. Сан йамӑку тӗрлӗрен шӑтӑкла тӗрӗсем ҫакнӑ. Ӑна преми пачӗҫ. Каҫхине колхоза кӗнӗ хӗрарӑмсем хӑйсем спектаклӗ лартрӗҫ. Курма хальччен ниҫта тухман хӗрарӑмсем те нумай пынӑ. Кайран кӗслепе хӑма купӑспа ташларӗҫ. Ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн питех те хавас хӗрарӑмсем.

Карсак Ҫерки хӑйӗн пӳртӗнчен хуса кӑларсан, пирӗн пата хваттер ыйтма пычӗ. Пит лайӑх калаҫат, хӑй унччен урамра мӗнте курсан-тусан та шурӑ куҫӗпе пӑхса иртсе кайатчӗ.

— ...Есӗр пире пӑртак тӑван та тиветӗр: пирӗн куккасен ӗлӗк ҫӑкӑр-тӑвар пӗрле пулнӑ, — тет.

Анне ним чӗнмесӗр кӑмака умӗнче мӗшӗлтетет Епӗ те чӗнместӗп. Анне мӗн каласса кӗтсе ларатӑп. Вӑл ҫӗлене тем тусан та киле кӗртес ҫук еп! Вӑрмантa утӑ ҫулнӑ вӑхӑтра, тепӗр чух ҫӗлене ҫавапа ҫурмаранах касса татан та, ҫапах сӑннине кӑларат сахасшӑн. Кусем те ҫавах халь.

Ыран совет влаҫӗ пӗтмеле тесен, вӑл пире тӑп-тӑр кӑнтӑрлах пырса пусат вӗт!

— Ну, киҫ, (аннене ҫывӑхрах пуласшӑн ки тесе чӗнет) килӗ иетпӗр-и? Пулӑшап сире, есӗр те лашасӑр-кэ, пӗрле лаша илӗпӗр. Сухине хам туса парӑп, — тет.

Анне чӗнмест. Кӑмакана хуирӗ те, урай шӑлма тытӑнчӗ.

— Кин, санс ӑмаху мӗнле? Хамӑр ҫын вӗт... — Тата тем каласшӑнчӗ Карсак Ҫерки, анчах анне шӑпӑрне ҫӗклерӗ те:

— Е-ее, хаҫ хамӑр ҫын-и? Вунҫиччӗмӗш ҫулта кам ҫынни? Темиҫе ампар тырру йатӑнса вырттатчӗ. Пӗр пӑт кивҫен ыйтсан пӗр пӑт памарӑн, — кӗлӗмҫӗ, тесе хута кӑларса йатӑн! Выҫлӑх ҫул кам ҫынниччӗ? Тырӑ илсе килсе парап тесе икӗ тӑрӑх ҫиҫе пир, кӗрӗк илсе кайрӑн та, вун кӗренке мӑйанлӑ ҫӑнӑх патӑн! Ун чух кам ҫынни пулнӑ епӗр? Намӑсна ӑҫта сугрӑн?! Алӑк урлӑ та каҫармастӑп... Хваттере йама мар, малашне ҫак алӑк урлӑ уру йарса пуснӑ ан пултӑр! — терӗ анне шӑпӑрпа сулласа. Карсак пӳртрен хирӗҫ пӗр сӑмах чӗнмесӗр тухса кайрӗ.

Алкумне тухсан тем каларӗ те, илтсе йулаймарӑмӑр.

Анне хӑйӗн авалхи йӑлипе ун хыҫҫӑн алкумне те шӑлса, ҫӳпҫапне урамах тухса пӑрахрӗ. Епӗ аннерен тӗлӗнсе хытсах кайрӑм.

Колхоз ҫинчен мӗнле тапратса йарас тесе шутлаҫа лараттӑм. Пӑхатӑп, анне чӑланта ҫӗнӗ кӗпе тӑхӑнса тӑрат.

— Хӑнана кайма шут тытрӑна мӗн? — терӗм.

Карсаксемпе, Снавай таврашсемпе тӑрса йулаймӑпӑр ӗнтӗ, колхоза ҫырӑнар кайса, тӑхӑн ес те, — терӗ анне.

— Вот такҫанах ҫав кирлӗ! — тесе ҫухӑрсах йатӑм епӗ. Анне кулса йачӗ.

Тӑхӑнтӑмӑр та кайрӑмӑр. Хаҫ колхозра ӗнтӗ епӗр, Ҫерук. Ну питӗ нумай ҫыртӑм, Ҫерук. Ехӗ ытла нумай тесе, вуламӑн та тата.

Анне те пир кумас тесе, кӑшкарсем йатса кӗчӗ...

* * *

Шӑлт тӗлӗнсе каймала!

Тӗлӗнмели саманара пурнатпӑр ҫав хамӑр та: кӗтӳҫрен инженер пулса тӑрат, ӗмӗр тӑрӑшне сухапуҫ хыҫҫӑн утнӑ чухӑнран — мӗнле те пулсан комиссар пулса тӑрат. Йумахри пек вӗт! Тӗрӗссипе каласан, ун пеккине йумахра та тӗл пулмасч епӗ. Пӗр ҫын, ик ҫын пулсан пит тӗлӗнмели те ҫукчӗ хут. Атту ҫӗршерӗн, пиншерӗнҫке-ха ун пеккисем! Пулат кам, самани те...

Аптӑранӑ йенне ҫапла шухӑшлатӑп вара хӑш чухне. Ӗлӗк патша самани чухне мӗн чухлӗ етем хӑйсем инженер, тухтӑр, агроном пулма пултарассине сисмесӗрех ӗмӗр тӑрӑшне вӑрӑм чӑпӑркка сӗтӗрсе иртернӗ-ши?

Самар, 1930 ҫул, март.

В. ДОЛГОВ-ХУДАР.

„Тăвалла" романпа унăн критикĕсем çинчен[1].

> „Тăвалла улăхма нумай вăй-хăват, хастарлăх кирлĕ. Нумай-нумай вĕренни кирлĕ".
>
> („Т ă в а л л а", 31 стр.).

I. Икĕ хак.

„Тăвалла" романа икĕ хак пачĕç. Иккĕшĕ икĕ тĕслĕ.

Пĕри. „Автăр тем тĕрлĕ тăрăшнă пулин те... питĕ пысăк йăнăшсем туса пĕтернĕ. Хăшпĕр паллă ыйтусене троцкисла çутатса ăнлантарма тăрăшнă, хăшпĕр ыйтусене веçех пăтартса пĕтернĕ"[2]. „Тăвалла" романăн тĕп шухăшĕсем Октябĕр революци чăваш ĕçхалăхне нимĕн те паман тенĕ елменĕн теорине тата рабочи клас революцине никçанта йертсе пыма пултараймаст, пĕр интеллигенцисем анчах революцине йертсе пыма пултараççĕ тейекен меншевиксен теорине çирĕплетеççĕ"[3]. „Мач шутпа «Тăвалла» пĕтĕмĕшпе илсен калама çук пăтранчăк, политик сулйĕрĕ тĕлĕшпе шăмшаксăр произведени. Унта троцкисла контрабандă та пур, сылтăм оппортунисăм та пур. Метод йенчен илсен — идеалисăм пуç пулса тăрат"[4].

Тепри. „Красновăн „Тăвалла" романĕ пролетари литературинче уйрăмăнах паллă вырăн йышăнса тăнине асăннисĕр пуçне епĕр ак çакна каласа хăварасшăн.

Пултарулăх методне илсен, Краснов хăйĕн романĕнче унта пулса пыракан ĕçсене йал хушшинчи çынсемпе, ушкăнсемпе, партипе совет влаçĕ кăларса тăратнă задачсемпе çыхса пырат. Тĕп тема тавра — колхоз йухăмĕ саралса кайас умĕнхи вăхăтпа йалта клас кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пыни тавра авгăр ытти ыйтусене те татса, уйăрса хăвармаст.

Краснов кĕнекинче çырнă ĕçсем пирĕншĕн çывăх, паллă, килĕшӳлĕ. Пирĕн хушăмăрти йулташсем те йалта Кĕркуç, Малттин, Кулине вырăнĕнче ĕçленĕ. Тен çавăнпах та романти ĕçсем чăн пулнăн туйăнаççĕ, ĕнентерӳлĕ.

Романа вуласа тухнă хыççăн Ухаљван пек кулаксемпе тата çирĕпрех кĕрешес килет, хавхалантарат[5]."[1]

---

[1] Ку статйана „Тăвалла" роман пирки сăмах хускатнă май çырнă.
[2] В. Кудревцĕв. „Канаш", 47-мĕш №, 25-II-1932 ç.
[3] Мраљкка Микихверĕ. „Штурм" (Куслав. р. хаçачĕ), 8(16)-мĕш №, 1932 ç. Туртни Кудревцĕвпа Мраљккан.
[4] С. Куташ ов. „Сунтал" 2-мĕш №, 1932 ç.
[5] Вăрнарти фосфорит савăтĕнчи литкружок членĕсем хушнипе Йануков, Николайĕв, Митуков, Волков, Сорокин çырнă. „Канаш", 164-мĕш №, 1931 ç.

Ийуљ уйӑхӗнче (1931 ҫ.) пулнӑ ЧАПП пленумӗнче йышӑннӑ резољуцире: „Чӑваш пролетари литературин халичченхи пек мар пысӑк произведенисем ҫапӑнса тухрӗҫ („Тӑвалла“, „Шуррисемпе ҫапӑҫни“ т. ыт. те) тесе ҫырнӑ[1].

Ҫакӑн пек „Тӑвалла“ романа панӑ хаксем.

* * *

„Тӑвалла“ роман ҫинчен сарлакантарах каласма вӑхӑт ҫитрӗ. Ӑна панӑ хаксем пирки ҫырма та вӑхӑт. Пирӗн „Тӑвалла“ романӑн лайӑх йенӗсемпе ҫитменлӗхӗсене ҫутатса памала[2]. Ку та сахал, пирӗн умра тата автӑра пулӑшас задач пӗтӗм хӑйӗн кӗлеткипех тӑрат. Манмала мар, — автӑра пулӑшман критика — критикӑ пулма пултараймаст.

Пирӗн чӑваш совет литературинчи пӗр-пӗр произведенийе хак панӑ чухне ун ҫине чӑваш совет литературин ӳсӗмӗсемпе ҫитменлӗхсем йенчен пырса пӑхмала. Ҫав вӑхӑтрах тата, автӑрӑн хӑйӗн творчӗствинче мӗнле ӳсӗмсемпе ҫитменлӗхсем пур, — ҫак ыйтусене те манас пулмаст. Пирӗн критиксем (епӗр кунта „Тӑвалла“ ҫинчен ҫырнисем пирки калатпӑр) хӑйсен статйисенче автӑра ҫапса хуҫасшӑн кӑна ҫырнӑ пек тухат; хӑшсем тата ытла ырласа тӑкасшӑн та пулнӑ. Кун пек туни иккӗшӗ те сийенлӗ. Автӑра вырӑнсӑр ҫапса хуҫни никама та усӑ пама пултараймаст. Вырӑнсӑр ырлани те ҫавах. „Тӑвалла“ романа: „Ку чи лайӑх произведени, лайӑххи чӑваш ӗҫхалӑх литературӗнче урах ҫук, пулас та ҫук“, — тесе калани те питӗ пысӑк йӑнӑш пулӗччӗ. Пирӗн малашне тата лайӑх, пысӑк произведенисем пулмала, пирӗн ҫул аслӑ, вӑй нумай, малашне нумай ҫитӗнӳсем пулмали те паллӑ. Ҫапах та, чӑваш ӗҫхалӑх литературинче „Тӑвалла“ пек пысӑк, тата ытписемпе танаштарсан, витӗмлӗ произведенисем сахал, теме йурат. Пуррисене те епӗр сахал тишкернӗ, тӗрӗс хак паман. Халӗ пирӗн задач — вӑй ҫитнӗ таран „Тӑвалла“ романӑн пӗрремӗш кӗнекиве анализласа, унти лайӑх йенсене кӑтартса, ҫитменлӗхсене тупса, автӑра пулӑшасси пулса тӑрат. Пирӗн совет писателӗн йӑнӑшсем йе ҫитменлӗхсем пурришӗн хӗпӗртесе ҫырмала мар, — ку ытла та йӑнӑш ҫул.

„Тӑвалла“ романа 1929—1930-мӗш ҫулсенче ҫырнӑ. Роман ваљљи 1929-мӗш ҫул чӑваш йалӗнче пулнӑ йе пулма пултарнӑ ӗҫсене илнӗ. „Тӑвалла“ пӗрремӗш кӗнекинчи тӗп ӗҫ—вӑл пролетари патшалӑхӗ ваљљи тырӑ хатӗрлени, унӑн тавра пулса пыракан класлӑ кӗрешӳ. Ҫак кӗрешӳре „Калина“ колхоз ҫитӗнет. Пӗтем произведени ҫырӑнса пӗтсен, романра колхоз строительстви тӗп вырӑн йышӑнса тӑнине епӗр курӑпӑр. „Тӑвалла“ колхоз йухӑмӗ ҫинчен калакан кӗнеке. „Тӑвалла“ пӗрремӗш кӗнеки романан пӗр пайӗ кӑна, унта романра пулас ӗҫсен пӗтӗм сарӑмлӑхӗ халӗ

[1] Ку резољуци „Сунтала“ ҫапӑннӑ.

[2] Кун пирки „Сунтал“ журнал: „Редакци „Тӑвалла“ романӑн методне, унӑн ҫитменлӗхӗсене малашне сарлакантарах ейтсейавма шутлат“ тесе ҫырат. (2-мӗш №, 1932 ҫ.).

çук-ха. Ана тăвасси, тĕрĕссипе çырасси, автăрган, тата епĕр автăра мĕн таран пулăшнинчен те нумай килет.

Совет патшалăхĕ валӈи тырпул хатĕрлес ĕç кĕрешмесĕр пулмаст. Тырпул фрончĕ—клас кĕрешĕвĕ фрончĕ Тырпулшăн кĕрешни—социалисăмшăн кĕрешни. Автăр çак условисенче йалхуçалăхăн çĕнĕ форми, çĕнĕ способĕ çитĕннине кăтартас задача лартат. Конкретнăрах каласан, „Калина" колхоз мĕнле организациленнине кăтартса парат. Колхоз организациленсен вара каллех клас кĕрешĕвĕн çĕнĕ сăлгавĕсемпе çĕнĕ меслечĕсем тухаççĕ. Йалта кĕрешӳ каллех вăйлăланат, вăл çĕнĕ тапхăра кĕрет.

Çапла вара, йалта колхоз йухăмĕ тавра пулса пыракан клас кĕрешĕвĕ „Тăвалла" романăн тĕп шăнăрĕ, унăн тĕп шухăшĕ пулса тăрат. Автăр хăйĕн умне çак класла кĕрешĕве илемлĕ произведени урлă кăтартса парас задача лартнă. Ку та сахал, автăр, пĕр йенчен клас тăшманĕсен усал ĕçне кăтартса парса вĕсене произведенире çапса çĕмĕрсе, тепĕр йенчен, çĕнĕ пурнăç паттăрĕсем тăшмансемпе мĕнле кĕрешнине тата вĕсене партипе совет влаçĕ мĕнле пулăшу панине кăтартса парса, хăй те çак произведени урлă классен кĕрешĕвне хастаррăн хутшăнат. Писатĕл илемлĕ произведенисем çырса пĕр-пĕр клас ĕçне тăват, клас ĕçне туман писатĕл çук та. Анчах мĕн калама пулат ку тĕлĕшпе „Тăвалла" роман çинчен?

Критиксем (Кудревцĕв, Кутăшов, Мраӈкка) каланă тăрăх, „Тăвалла" роман автăрĕ пирĕн класла тăшмансен ĕçне тăват, вăл троцкисăм, сылтăм оппортунисăм, контрабандă, елменĕвщинă медочĕпе социалисăм строительствине хирĕç кĕрешет.

Кусем ентĕ—политикла пысăк вывăдсем, вĕсене пирĕн критиксем хăйуллăн, тата хайаррăн тунă. Вăл вывăдсем тĕрĕс пулсан, чăнах „Тăваллара" „елменĕвщинă," „меншевисăм" тенĕ шухăшсем пулсан, вăл романа пичетлесе кăларма та кирлĕ пулман, ăна 1931-мĕш çулта пулнă литератур амăртăвĕнче преми те памала мар пулнă; ку та сахал, 1931-мĕш çул пулна ЧАПП пленумĕ те ку тĕлĕшпе йанăш туна, унăн резолюцийĕ те тĕрĕс мар пулса тухат Апла пулсан, вăл резолюцийе йышăнакансем хăйсем те йе çĕрĕк либералсем, йе троцкисла контрабандиссем пулнă?—пĕр çулте каланă критиксем кăна апла мар, вĕсем „Тăваллара" сахал мар „исăмсем" тупаççĕ. „Тăвалла" роман вĕсен шухăшĕпе ĕçхалăх массисене „вимле уса та памаст", сийен кăна кӳрет.

Анчах, Вăрнарги рабочисем панă хака, вĕсен сăмахĕсене аса илер. Рабочисем: „Романа вуласа тухнă хыççăн... кулаксемпе тата çирĕпрех кĕрешес килет", теççĕ. Пирĕн шутпа ку сăмахсем критиксен „исăмсемпе" тумлантарнă сăмахĕсенчен хаклă. Мĕншĕн тесен, вĕсене Кĕркуç, Малгтин, Кулине пек геройсем хăйсем каланă.

Çакăн пек „Тăвалла" романа пэнă икĕ тĕслĕ икĕ хак. Пĕр-пĕр произведени кĕрешĕве чĕнет пулсан—автăршăн вăл пысăк утăм пулса тăрат. Паллах, пысăк

утăм тесе, чарăнса тăма кирлĕ мар, пысăк утăм урлă тата пысăк утăмсем тумала,—кашни произведени кĕрешĕве чĕнтĕр!

II. „Тăвалла“ романри кулакла типсем, тата пирĕн критиксем.

„Тăваллара“ çутатса панă вăхăт—1929-мĕш çул терĕмĕр. Автăр тата хăш вырăнсенче 1929-мĕш çул умĕнхи вăхăт çинчен те каласа парат. Романра граждан вăрçи çинчен çырнă вырăвсем те пур.

Автăр хăйĕн произведенийĕнче Вăрнар районĕнчи йалсен йачĕсене асăнат: Кипек-Касси, Нурăс пасарĕ, Хапăс, Ирар-Ишак тăвĕ т. ыт. çинчен те калат. Тата 112-мĕш страницăра Вăрнар станци патĕнчи вăрман çинчен çырнă пек çырат. Романра кăтартнă ĕçсене автăр Кипек-Кассинче пулнă пек тунă, вĕсене унта пулма пултарнă пек туса катартнă.

Çапла, „Тăваллара“ кăтартнă ĕçсене чăваш условисенчен илнĕ. Роман геройĕсем те чăвашсенченех. Вĕсем класла сийсене уйăрăлса тăраççĕ,—кунта „халăх“ мар, классем. Лайăхрах пăхса тухсан, „Тăваллара“ виçĕ сий пулнине куратпăр: кулаксем, вăтамсем, чухăнсемпе батраксем; вайсем йенчен—„Тăваллара“ икĕ вăй: пĕрри—пĕр пĕринпе сойузра тăракан йалти пролетариле елементсемпе вăтамсем, тепри—йалти кулакла елементсем, капиталисăм тымарĕсем; çак кулаксем совет влаçне тем пекех курайманççĕ. Пĕрремĕш вăйа комуниссемпе комсомолĕссем йертсе пыраççĕ, малти ĕретре—комуниссем, комсомолĕссем, активиссем. (Пысăк çитменлĕхсемех романăн кунта пур, çук темеле мар, анчах ун пирки елĕр урăх вырăнта çырăпăр). „Тăваллари“ геройсен кашнин хăйĕн социалă вырăн пур, кашнин социалă пурнăçран, класлă интерессенчен килекен ĕçхĕл пур. Вĕсен психикле пурнăçĕ те, идеологийĕ те çав социала хутшăнусенченех килеççĕ. Мĕншĕн Ухăљвэн, унăн ывăлĕ Кенă, Михетер, пуп хĕрĕ Нинă т. ыт. те совет влаçне курайманççĕ? Мĕншĕн Малттин, Кĕркус, Кулине т. ыт. те совет влаçĕшĕн хастар тăраççĕ? Мĕншĕн тата хăшпĕр геройсем хăшчух иккĕленеççĕ? Çак ыйтусене романри геройсен пурнăçĕсем татса параççĕ, автăр геройсен ĕçхĕлĕсем пурнăçри материалљнăй условисенчен килнине кăтартса парат. Романран пурнăçри йавленинисем патне материалисăм вĕрентĕвĕ йенчен пыни автăр курăнат.

Совет писатĕлĕн пурнăçри ĕçсем çине тĕрĕслĕх йенчен пăхмала, ĕçхалăх массисен интересĕсене пĕр минутлăх та манмала мар.

Критиксен те романри ĕçхĕлсем çине ĕçмассисен интересĕсем йенчен пырса пăхмала. Вара романри геройсенчен кам тăшманне, кам тăшман марне часах пĕлме пулат. Çапла, писатĕл-и, критик-и, вулакан-и,—пуриншĕн те пролетарисен интересĕсем, ĕçхалăх ĕмĕчĕ малти вырăнта пулмала. Пирĕн литератур фронтĕнче малашне те ленинисăм йалавне çӳлĕрен çӳле çĕклесе пымалине манмала мар.

Романри уйрăм геройсене те маркçисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕ йенчен çутатмала; пирĕн вĕсен социалă вырăнне пĕлмеле.

Кам вăл Ухăљван? Вăл—кулак. Ухăљван революциччен ытла вăйлă пулнă. Революци çеç ăна амантнă. Ухăљван—вăл пирĕн тăшман. Ĕçхалăхĕн уншала килĕшӳ çук, пулма та пултараймаст Çавăнпа та, Варнарти рабочисем: „Романа вуланă хыççăн Ухăљван пек кулаксемпе тата хытăрах кĕрешес килет", теççĕ.

Мĕншĕн çавăн пек? Мĕншĕн ĕçлекенсем кулаксем çине çавăн пек пăхмалине В. И. Ленин аван калат:

„Кулаксем,—тет вăл,—чи хайар, чи усал, чи тискер эксплоататăрсем Вĕсем историре ытти патшалăхри çĕршывсенче пĕрре çеç мар помещиксен, патшасен пупсен, капиталиссен влаçне кӳнĕ. Кулаксем помещиксемпе капиталиссенчен те ытларах. Анчах халăх хушшинче кулаксем сахаллăн... Çак çын йунне ĕçекенсем вăрçă вăхăтĕнче халăх нушипе пуйрĕç, тырă тата ытти продуктăсен хакне те ӳстерсе вĕсем пин, темиçе çĕр пин тенкĕ укçа пухнă. Çак ерешменсем вăрçăпа начарланнă хресченсен, тата выçă рабочисен шучĕпе мăвтăрланса пынă. Вăл сĕлĕхсем (пийавкăсем) ĕçхалăх йунне ĕçнĕ, хулара тата хапрăкра рабочисем мĕн чухлĕ выçăхса пурăннă, çавăн чухлĕ вĕсем пуйанланса пынă. Çав йун ĕçекенсем хăйсен аллине улпутсен çĕрĕсене илнĕ, илсçĕ те, вĕсем каллех чухăн хресченсене пусмăрлаççĕ"[1].

Ленин кунта чи малтан революциччен вăхăт çинчен калат. Октабĕр революци хыççăн кулаксен кунĕ хĕсĕнчĕ, вĕсен ĕмĕчĕсем татăлчĕç.

„Епĕр çав йун ĕçекен ерешменсене весен експлоатацилĕ туртăмне хĕссе, картласа пырас политике тытнипе чăтса пытăмăр. Чăтнă, мĕншĕн тесен, кулак хуçалăхĕпе кулак производствине нимĕнпе те улăштарма çук пулнă, халĕ епĕр весен хуçалăхĕсем выранне колхозсемпе совхозсен хуçалăхĕсене тăратма пултаратпăр. Çав ерешменсемпе йун ĕçекенсене малашне те чăтма кирлĕ мар. Колхозсене тĕртсе çунтаракан, колхоз ĕçĕвчи хастарлă ĕçлекен йулташсене вĕлерекен, акана пăсма хăтланакан йун ĕçекенсемпе ерешменсене малашне те чăтни—рабочипе хресчен интересне хирĕçлени пулат. Çавăнпа та, кулаксене класĕпех пĕтерес политикă çине тăрса куллен кун большевиксем анчах пултаракан вайпа пурнăçа кĕртсе пымала" тет Сталин йулташ.

В. И. Ленинпа И. В. Сталин кулаксен класне социалаекономикла, тата политикла характеристикă параççĕ. Ухăљван та Ленинпа Сталин характеристикă пана кулаксен класĕ шутпех кĕрет. Анчах „Тăвалла" автăрĕ кулака мĕн чухлĕ тĕрĕс кăтартат? Автăр кăтартвă кулак тыпе мĕвле, мĕнле питлĕ, мĕн тĕслĕ, мĕнле шухăшлă?—çак ыйтусене çутатса парас тесен, романан пĕрремĕш кĕнекине тĕплĕрех вуласа тухса, анализ

[1] В. И. Ленин çырнисен пуххи, XX т., II пайĕ, 257 стр.

парас пулат. Романăн ытти кĕнекисем тухсан, „Тăваллари“ кулак мĕнле тип пулни татах та лайăх курăнĕ. Халĕ епĕр романăн пĕрремĕш кĕнеки тăрăх кăна çыратпăр.

Ухăљван — кулак, унăн „пуçĕнче çӳлĕ кăшăлă кăвак пустав картус, çийĕнче карас пĕрмелĕ кĕрен пурçăн кĕпепе хура диагоналљтен çĕленĕ шалпартарах шалавар; хул хушшинче йатне Кавказран кӳртернĕ хура туйа... Туйипе куçа çисе тăракан сакăр кĕтеслĕ аттиве çат-çат çатлаттарат... Тăрсан-тăрсан тăртанса кайнă аллипе сар пурçăн пек çемçе сухалне йакатса илет...“ („Тăвалла“, 3 стр.).

Автăр кунта ĕçлекенсен йунне ĕçсе пуйнă, ерешмен — кулак çипуçне, унăн сăнне кăтартат. Ухăљван революциччен калама çук пуйан пулнă. Империалисăм „вăрçи вăхăтĕнче вăл пушшех те пуйса кайнă“ — тет ун çинчен Кĕркуç (102 стр.). Халĕ вăл ун чухнехи пуйанлăха тĕлĕкре çеç курат. Паллах, вăл пуйанлăх кайала таврăнас çук ĕнтĕ. Тĕлĕкре вăл хăйĕн нилĕк-ултă çухрăма тăсăлнă уйне, вăрманне курат. Йалта унăн чулçурт, ерех хупахĕ, сат пахчи пулнă. Тарçăсем — батраксем ун патĕнче ĕçленĕ Вăл çынна вĕлерме те пултарнă. „Пуйан — намăссăр çын“ — тет Ухăљван çинчен каланă май автăр. — „Вăл пурлăх тесен, етем ывăљ-хĕр йунне те шерпет туса ĕçме йĕрĕнмен“ (66 стр). Елĕк ăна хирĕç пыракан саккун пулман. Пуйанлăх ăна темрен те хăтарнă. Халĕ самана урăх. 1917-мĕш çулти октаберте пролетарисен аслă революцийĕ пĕтĕм чуралăхра пурăнакан халăхсене ирĕке кăларчĕ Раççей империйĕнчи експлоататăрсем арканчĕç. Совет влаçĕ Ухăљвансемпе килĕшмест. Çавăнпа та, „Самани те урăх, пирĕн мар“ (8 стр.) — тет Ухăљван — ĕçлекенсен тăшманĕ, йун ĕçсе пурăннă ерешмен. Ухăљванăн ачийĕ те, тата ытти тăшмансен ачисем те çавнах калаççĕ. „Мĕнле аван пулнă елĕкхи пурнăç“ (15 стр) Халĕ: „Раскалăм çук“ — тет Ухăљван ывăле — студент Кенă, пуп хĕрĕшĕн тата халĕ „пурнăç веçех, веçех ишĕлет“ (17 стр . Мĕнле пурнăç çинчен калаççĕ çак сĕхĕлсем? Мĕнле пурнăç „веçех ишĕлет“? Епĕр çĕнĕ пурнăç тăватпăр, киввине аркатса, ишсе пыратпăр, халĕ епĕр кивĕ пурнăçăн йулашкисеве — унăн татăккисене тымарĕп лех кăкласа пыратпăр. Çак политика тăшмансене килĕшмест. Вĕсем революцичченхи пурнăçшăн, вĕсем халĕ те пулса пыракан революцийе хирĕç. Романра автăр çак вăхăта кăтартнă. Анчах, хăшпĕр критиксем çакна кура-тăркачах, „Тăвалла“ автăрĕ шучĕпе, йалта халĕ те революци пулман, теççĕ. Тĕлĕнес килет, мĕнле вĕсен хул çитет çавăн пек йапаласене шутласа кăларма? Мĕнле вĕсен суйас килет? Кирек кам та романа вуласа тухсан, автăр революци пулнă йала илни çинчен калама пултарат. Урахла пулсан, ăçтан-ха Ухăљвансем, унăн çемйисемпе унăн таврашĕсем авалхишĕн макăрса ларччĕр? Революци пулман йал çинчен ăçтан Малттин çакăн пек калама пултарат: „Вĕсенчен (кулаксенчен. — **Худ.**) вĕт революци сакăр çĕр деçетин çĕр туртса илчĕ. Контрибуци ..“ (42 стр.).

Паллах, революци Раççейри капиталисăма çапса салатрĕ. Анчах унăн тымарĕсем хăш çĕрте пĕчĕк, хăш çĕрте пысăкрах

вырансем йышанса йулчĕç, Ухаљван — капиталисамăн йалти тымарĕсенчен пĕри, вăл аманнă, анчах çак аманчăк тымар Кипек-Кассинче тытăнса йулни пĕрре те ку йалта револуци пулмаьнине пĕлтермест. Ку йалта та револуци пулнă, халĕ те пулса пырат вăл револуци. Ун çинчен колхоз йухăмĕ сăрăлса пынă май епĕр кулаксене класĕпех пĕтерни калат. Епĕр Ухаљвансен тымарĕсене куллен-кун çирĕпрех тытса кăклатпăр. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех йалта халĕ те револуци пулса пынине пĕлтерет. Романра çак ĕç пур-и? Çителĕклĕ кăтартман, анчах пур Пирĕн критиксем ăна кураешăн пулман, тĕрлĕ „исăмсем“ шутласа вăхăт иртернĕ.

Ухăљванăн 1928-мĕш çулсенче тырă- нумай пулнинчен те тĕлĕнмели çук. Ку çулсенче кулаксем пулнă, вĕсен производстви те, малтанхи çулсенчи пекех пулман пулсан та, пулнă, апла пулсан, йалсенче тытăнса йулнă кулаксен тыра та пулнă. Ун çинчен епĕр вĕсем çине çирĕп заданисем хуни те калат. Епĕр пĕрмайах кулаксен политикне çĕмĕрсе пынă, — вăл урăхла пулма та пултарайман 1929-мĕш çултан пуçласа епĕр вĕсене класĕпех пĕтеретпĕр.

Ухăљван пуйан. Вăл тыррине çĕр айне пытарат. „Çавăн чухлĕ йапала шăтсах тухас çук-ха. Шăтса тухтăр, çĕртĕр, пурĕ пĕрех вĕсене (Совета — **Худ.**) парас çук“ (61 стр.) — тет вăл тарăхса. Ку ĕнтĕ кулак политике, кулак идеологийе. Кун пек ĕçсем чăваш йалĕсенче те пулман мар. Мĕншĕн тесен чăваш йалĕсенче те револуцирен çĕмрĕк çунатпа йулнă кулаксем пулнă. Çавăнпа та, вĕсем хăшпĕр вырăнсенче кăшт ӳсме те пултарнă, ӳскеленĕ те.

„Тĕрĕс, кулаксем кăкланман-ха. Ĕлĕкхи кулаксем çумне çĕннисем те 12 çул хушшинче сахал мар ӳсрĕç“ — тет кун пирки Малттин (27 стр.).

Кудревцĕв çак вырăна тата романăн ытти вырăнĕсене кĕнекерен татăлтарса илет те, автора „ку — троцкисăм“ тесе айаплат.

Вал çырат: „Краснов (Асли) троцкисăм йенне аванах тайăлнине курма пултаратпăр. Кулаксене 1929-мĕш çулччен нимĕн те пӳлмен, ӳсме канаш ирĕкĕ чарман тесен никам та ĕненмĕ, анчах Краснов (Асли) çапла ăнлантарма тем пек тăрăшат.“

Йе тата. „Кулака хут хаçан та пӳлнине кăтартас вырăнне Краснов (Асли) веçех урăхла, троцкисла çуратса парат“.

Кудревцĕв каларĕ те хучĕ: „троцкисăм“ — терĕ вăл, унăн ĕçĕ пĕтрĕ. Анчах çак критике пирĕн пĕр пĕчĕк ыйту парас килет. Ухăљван 1928—1929-мĕш çулсенче те ĕлĕкхи пекех пуранат-и? Пирĕн шутпа, çук, вăл ĕлĕкхи пекех пурăнмаст, çук, пĕрре те ĕлĕкхи пек мар.

Ухăљванан ĕлĕк темиçе тарçă, темиçе батрак пулнă. „... Итем çинчи тарçăсем хĕрсе ыраш çапаççĕ“. Йе тата: „Тăххăрăн çапакан итем йурри Ухăљвана савăнтарат... Вĕсем тăххăрăн...“ (4 стр.)

1928—1929-мӗш ҫулсем тӗлнеле унӑн пӗр батрак кӑна, Ухӑльван патӗнче пӗр Кулине кӑна.. Паллах, ку факт та Кудревцӗв вывӑчӗсене хирӗҫ калат. Октябӗр революцийӗ кулаксене хытӑ силлерӗ, вӗсене лайӑхах амантрӗ, ҫунаттисене касрӗ, анчах вӗсен харпӑрхӑйлӑх ҫивче каштни кун ӳсме пултаракан тымарӗсем хӑшпӗр ҫӗрте йулчӗҫ.

Пролетари диктатури 1929-мӗш ҫулччен кулаксен експлоатациле туртӑмӗсене хӗстерсе пынӑ, анчах кулаксем хӑйсен умне, ҫапах та, мӗнле те пулсан тытӑнса йулас, мӗнле те пулсан ҫунатсене йусас, ата анас задача лартман темеле мар. Апла пулмасан вӗсем кулаксем мар пулӗччӗҫ. Хӑшпӗр вырӑнсенчен уйрӑм кулаксем ҫитӗннӗ те... Ҫавӑнпа та ку ыйту патне Кудревцӗв пек „вобче“ сӑмахсемпе пымала мар, конкретнӑй условисене шута илсе пырас пулат. Конкретнӑй условисене шута илмен ҫынсем ҫинчен В. И. Ленин: „Чентарти Раҫҫейра, Украйнӑ, Ҫӗпӗре шаблонлани, вӗсене пӗр шаблона пӑхӑнтарни чи пысӑк ухмахлӑх пулат“ тенӗ.

Кудревцӗвшӑн пур облӑҫсем те, пур йалсем те пӗр пек, вӑл пур облӑҫсемпе йалсем ҫине те пӗр кӳҫлӑх витӗр пӑхат (куҫлӑхӗ унӑн тӗрӗс кӑтартмаст): Чӑваш республикӗ-и, йе Тутар, Киргиз, Армен республикӗн, йе Украйна, Чентарти Раҫҫей, Ҫӗпӗр,—уншӑн пур ҫерте ҫав-ҫавах, пӗр условисем уншӑн, совет влаҫӗ пур — ҫавӑнпа та кулаксен ҫитӗнме шутлас ӗмӗтсем пӗтнӗ. Анчах чӑн-чӑн пурнӑҫ Кудревцӗв вӗрентнӗ пек мар. Чанчӑн пурнӑҫра тӗрлӗ условисем пур, чӑн-чӑн пурнӑҫ пӗрре те либераллӑ етемсем ҫырнӑ кӗнекесем ҫинчи пек мар. Ку ыйту ҫине пур йенчен те пырса пӑхмала. „Вобче“ урапи ҫине ларса пӑхсан, пурнӑҫа Кудревцӗв пек кӑна ӑнланма пулат. Ун пек кӑна ӑнланни ҫителӗклӗ мар, тата йӑнӑш та. Мӗншӗн тесен, хӑшпӗр кулаксем та хӑшпӗр йалта ҫитӗнме пултарнӑ, хӑшпӗр вырӑнсенче ҫитӗннӗ те.

Сталин 1925-мӗш ҫулта кун пирки ҫапла каланӑ:

> „Пулашки ҫул йалта кулака усӑлӑ улшӑнусем пулнине совета хирӗҫ пыракан елементсем сисеҫҫӗ, хӑшпӗр районсенче вӑтам кулак йенеле ҫавӑрӑнчӗ. Советсене суйлаччепех ӑна сисме пулатчӗ. Советсене суйланӑ хыҫҫӑн вӑл факт пулса тӑчӗ“. (И. Сталин. „Ленинисӑм ыйтӑвӗсем“, 205 стр.).

Паллах, ку положенине комуниссен партийӗ каплипех хӑварма пултарайман, ӑна вӑл ҫийӗнчех тӳрлетнӗ. Ҫапах та, вӑл епӗр кулаксене 1925-мӗш ҫулсенчех пӗтерсе пӑрахнине кӑтартса памаст. Кулаксем ӳсес шухӑша пӑрахман.

Кун пирки И. Сталин 1928-мӗш ҫулта ҫапла калана:

> „Пирӗн клас тӑшманӗсем ҫук, вӗсене ҫапса ҫӗмӗрнӗ тени тӗрӗс мар. Ҫук, йулташсем, пирӗн клас тӑшманӗсем пур. Пурӑнаҫҫӗ кӑна та мар, ӳсеҫҫӗ, совет влаҫне хирӗҫ тухма пӑхаҫҫӗ. Кун ҫинчен иртнӗ хӗлти заготовкӑн йӑвӑрлӑхӗсем каласа параҫҫӗ, йалти капиталисла елементсем совет влаҫӗн политикне ҫӗмӗрме пӑхрӗҫ“. (И. Сталин. „Комсомол ҫинчен“, 39 стр.).

Сталин йулташ ку ыйту ҫинчен 1929-мӗш ҫул (апрелре) татах каланӑ:

„Тырӑ хатӗрлес ӗҫри йӑвӑрлӑхсем мӗн кӑтартрӗҫ? Вӗсем кулак ҫывӑрманнине, кулак ӳсине, вӑл совет влаҫӗн политикне хавшатас майпа ӗҫленине, анчах ҫав вӑхӑтрах пирӗн парти, совет, копераци организацийӗсем, пурте пулмасан та, вӗсен пӗр пайӗ (Кудревцӗв пеккисем —**Худар**) тӑпмава йе курмаҫҫӗ, йе вӗсене хирӗҫ кӗрешес вырӑнне улшӑнса вӗсем майлӑ ӗҫлеҫҫӗ". (И Сталин „Партири сылтӑм сулӑнчӑк ҫинчен", 10 стр.).

Йе тата:

„Ҫак икӗ ҫул хушшинче мӗн пулса иртрӗ-ха?..

...Кулакла елементсемпе пуйансем ҫак ҫулсем хушшинче ӳсрӗҫ, темиҫе ҫул хушшинче тырӑ умлӑ-хыҫлӑ аван пулни вӗсемшӗн ахаљ иртмерӗ, вӗсем хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗрекленчӗҫ, капитал тавраш пухрӗҫ, халљ вӗсем—техникла кулљтурӑсемпе оборот туса, тырӑ хаклӑланасса кӗтсе ытлашши таварлӑх тыррисене хӑйсен аллинче хӑварса—рынӑкра ҫаврӑнкалама пултаракан пулчӗҫ". (Сталин, ҫавӑнтах, 93 стр.).

Паллах ӗнтӗ, Сталин сӑмахӗсем Кудревцӗв тата ун йышшисем пӑтратнине хирӗҫ калаҫҫӗ. Кудревцӗв „Тӑвалла" автӑрне ҫакӑн пек айӑплат: „Кулаксене 1929-мӗш ҫулччен нимӗнпе те пӳлмен, ӳсме канаш ирӗкӗ чарман тесен никам та ӗненмӗ, анчах Краснов (Асли) ҫапла ӑнлантарма тем пек тӑрӑшат". Паллах, совет влаҫӗ кулаксем ӳснине чарнӑ, анчах хӑшпӗр кулаксем ӳснине те пытарма ҫук. Краснов ҫакна ҫеҫ кӑтартнӑ, вӑл ниҫта та совет влаҫӗ кулаксене ӳсме чарман тесе, йе тата йалти кулаксем револљуцичченхи пекех пуҫ пулса пурӑнаҫҫӗ, тесе каламаст. Краснов кӑтартнӑ кулак „Самани те урӑх, пирӗн мар" тет (8 стр) Аҫтан-ха вара ӳсме чарман кулак ҫавӑн пек калатӑр?

Халӗ мӗн калас ӗнтӗ? Паллах, сылтӑм оппортуниссем ҫеҫ: „Пирӗн кулаксем ҫук, 1929-мӗш ҫулсемччен кулаксем ӳсме пултарайман, ҫавӑнпа та классен кӗрешӗвӗ те пулма пултарайман, пулмаст..." тесе калама пултараҫҫӗ. Кудревцӗв статйинче урра-револљуцилӗ сӑмахсем хыҫне сылтӑм оппортунисла шухӑшсем пит те лайӑх вырнаҫса ларнӑ.

Паллах, епӗр кулаксене хирӗҫ кӗрешмен мар, кӗрешнӗ! „Тӑвалла" роман та ҫавнах калат, вӑл урӑхла каламаст. Краснов ниҫта та хӑйӗн романӗнче кулаксене ан тивӗр, ӳсме ан чарӑр, тесе каламаст. Комуниссен партийӗпе совет влаҫӗ йалавах кулаксене хирӗҫ кӗрешсе пынӑ. Парти кулаксен експлоатациле туртӑмлӑхне хӗстересси ҫинчен хӑйӗн VIII-мӗш сйезӗнчех 1919-мӗш ҫулта каланӑ, ун ҫинчен XI-мӗш сйез (1921 ҫ.) постановленисенче те каланӑ, ӑна XV-мӗш сйез татах та ҫирӗплетнӗ. Каллех калатпӑр: парти ҫак вӑхӑтра кулаксене класӗпех пӗтерес задача лартман, йалта хресченсем ҫӗр тара илме те пултарнӑ,

ăна XV-мĕш сйез та çаплипех хăварнă, йалта çынсене тара тытса ĕçлеттерме те пултарнă. XIV-мĕш сйез тĕлне совет сойузĕнче батраксем виçĕ мĕлйун ытла пулнă, вĕсенчен профсойузра 1/4 пайĕ çеç тăнă. (XIV-мĕш сйезăн стенографилĕ отчоче, 1094 стр.). XV-мĕш сйез хăйĕн резолюцинче вĕсене кулакла хуçалăхсенче тара тытасси çинчен калакан саккуна çаплипех хăварнă. (XV сйезăн 1315 стр), стеногр. отчоче).

Çавăнпа та, Ухăлван патĕнче Кулине батрачкăра 1929-мĕш çулччене пурăннинчен те тĕлĕнмели çук. Кудревцĕвпа Мрăнька кăна тĕлĕнеççĕ. Тĕлĕнччĕр! — анчах пур тĕлĕнни те тĕрĕс йапала çинчен каламаст, — çакна та манмала мар!

Сталин йул. кун пек çынсем çинчен 1925 мĕш çул XIV-мĕш сйезра çапла каланă:

„Кулак вăйне пухат, паллах, кам та кам çакна кураймаст... вăл партийе асăрхăва çухатас хăрушлăх патне илсе пырат“ тенĕ (сйезăн стеногр. отчоче, 41 стр).

Йе тата XIV-мĕш сйезăн резолюцийĕ çапла калат:

„Съезд решительно осуждает уклон, состоящий в недооценке диференциации в деревне, не видящей опасностей, связанных с ростом кулачества и различных форм капиталистической эксплоатации“. (Стеногр. отчет XIV с'езда, стр. 517.).

1925-1926-мĕш çулсенче „пирĕн кулаксем çук, хăруш мар вĕсем“, — тени оппортунисăм пулнă пулсан, пайан: 1925/26-мĕш çулсенче тата 1929-мĕш умĕн пулнă вăхăт çинчен çавăн пек калани мĕн пулат-ши?

III. Кулаксемпе „Тăваллари“ ытти вăйсем.

Ухăлванпа пĕрле романри ĕçсенче Михетер пур. Михетер — есер пулнă етем, рабочисемпе ĕçхресченĕсен тăшманĕ. Вĕсемпе пĕрле тата Ухăлван ывăлĕпе пуп хĕрĕ пур. Иккĕшĕ те аслă шкула улталаса кĕнĕ. Кенă ашшĕ патĕнче пурăнакан батрачкăна, Кулинене пусмăрласа йăвăр çын тăват. Ку ĕç 1928-мĕш çулта пулнă. Кенă Кулинене ним вырăнне те хумаст. „Сысна!“ тет вăл ăна (12 стр.); йе тата: „ыр çынсене мĕнле пăхмалине пĕлместĕн. Навус!“ тет Капла кулак каламан мар, каланă.

Кулаксем усал, тискер. Кенă та, Нинă та çавах. Вĕсем развратниксем, вĕсенчен çĕрĕк шăршă кĕрет. Хăйсен класĕпе пĕрле вĕсем пур йенчен те çĕрсе пыраççĕ. Нинă 3—4 хут качча тухса çапкаланса çӳренĕ хĕрарăм. Кенă таçта та çапкаланса çӳрет.

„Каллех сана таван йăмăка йуратса чуп тунă пек чуп тăвассăм килсе кайрĕ, — тет вăл Нинăна (16 стр.) Çав вăхăтрах шутлат: „ку мана качча килесшĕн пулас, вăт ухмах“ (18 стр).

Çапла Кенă сăмахĕсемпе пĕр шухăш калат, анчах унăн пуçĕнче тепĕр шухăш пытанса ларат. Çапла, тăшмансем çĕреççĕ, анчах вĕсем пурнасшăн. Совет влаçĕ майлă, уншăн кĕрешекен çынсем çеç халĕ социалă çирĕп пурнăçпа пурăнма, хăйсен шухăшĕсем тĕлĕшĕнчен чи çӳлĕ вырăнта тăма пултараççĕ. Кенăсем çавăн пек вырăнта тăраймаççĕ.

Вĕсем улталпа пурĕнеççĕ. Кенăсем йалти комсомол йачейкине улталама план тăваççĕ, суйа справкăсем, отзăвсем илесшĕн çунаççĕ.

Çапла, Ухăљван, унăн арăмĕ Марук, Михетер, Кенă, Нина т. ыт. те ĕçхалăхне хирĕç пыракан етемсем, пĕр сăмахпа каласан, — вĕсем ĕçхалăхĕн класла ташманĕсем. Ромаңра вĕсенчен Ухăљван тĕп ырăн йышăнса тăрат. Автăр ун çинчен çырма та нумайрах çырнă. Калас пулат, автăр хайĕн произведенийĕнче кулаксен типне кăтартнă; вăл унăн пуйанлăхне, унăн тĕсне, шухăшĕсене кăтартнă, — кăсем пурте йут типсем.

Ухăљвансене хирĕç романра урăх типсем тăраççĕ. Вĕсем — Малттин, Кĕркуç, Кулине, Кĕçтук, учителĕ, комсомолĕссем тата ыт. те. Çак геройсем пирки те критиксем сахал мар ĕнтĕ сăмах купаларĕç.

Малттина илер. Кам вăл Малттин? Ун çинчен Мраңкка: „Малттин — Ухăљван тĕлĕкре курнă çын ачи", тесе çырат. Тĕлĕкре кăна курнă ача пулма пултарат-и, пултараймаст-и? Епĕр кун пирки çырса тăмăпăр. Анчах калас пулат: Малттин Ухаљван патĕнче револуциччен батрак пулса пурăннă çын ывăлĕ. Малттин ашшĕ çинчен Ухăљван хăйĕн тĕлĕкĕнче çапла калат: „Ах, ку мур Ивана, пĕртте ĕçлесшĕн мар çав, ахалех çемйипе ман ĕнсе çинче кўпсе вырта йуратат. Перкун та Анчăк ун çинчен, ытти тарçăсен пуçне темĕскерле йурăхсăр шухăшсемпе пăтратат тесе, систернĕччĕ-ха..." (4 стр.).

Ку — тĕлĕк. Анчах тĕлĕк нимсĕр-мĕнсĕр курăнмаст. Ухăљван кулакăн килĕ-çуртĕнче çавăн йевĕрлĕ ĕç хăçан та пулсан пулнах. Вал Малттин ашшĕне çавăн пек ĕçшĕн çапса пăрахнă, Малттина тăлăха хăварнă. Халĕ Ухăљван хăйĕн арăмне: „Малттин, çав Иван ачи, йала таврăннă вĕт-ха, тата вăл темскер айкаштарса ан пăрахтăр. Ăна путсĕре пĕртте шанма çук. Ех, çавăн чухнех вĕсене йăхĕ-тĕпĕпех пĕтернĕ пулсан, халĕ пĕр шиксĕр, райри пек пурăнмали çынсемччĕ вĕт, — тет (8 стр.). Йе тата: „Ашшĕ унăн çавăнтан кайран болницара вилчĕ-и çав?" тесе ыйтат хăйĕн упашкинчен Марук. Вара Ухаљван калат: „Болницăра вилчĕ. Арăмне аллинчи ачипе, ыйткалама хăваласа йатăм. Амăшĕ выçлăх çул Атраç йенче вилнĕ, терĕç. Ачи, çак Малттинĕ, пирĕн инкекшĕн, чĕрĕ йулнă" (8 стр.).

Кулак Малттина кураймаст, вăл Малттина хирĕç. Вал Малттина та ашшĕне пĕтерлех вĕлерменнишĕн тарăхат.

Çапла, Малттин — батрак ывăлĕ. Вал Шупашкарта рабфак пĕтерне, рабфаковĕц пулна. Мускава вĕренме кайса кĕнĕ.

Ыйтас килет: Малттина интеллигенг теме пулат-и?

Мраңкка кун пирки тĕлĕнтермелипех тĕлĕнтерет. „Пĕр нихçан та производствăра пулман Малттин анчах хуларан килет те, пуртăпа каснă пек çăт-çат каснă сăмаххисемпе, çăмаллăнах пурне те (мĕнле пурне те? Ухăљвана та-и? **Худар**) ĕнентерсе, йалта револуци пуçласа йарат"—тет. Ку, Мраңкка шутласа кăларнă шухăшсем тăрăх, „пĕр интеллигенцисем

анчах революцине йертсе пыма пултараççĕ', тени пулаť. Çапла, критик йулташ калана тăрах, Малттин интеллигент. Паллах, вăл интеллигент пулмала çын, совет интеллигенчĕ пулмала Анчах пĕр рабфакран вĕренсе тухнипех çын интеллигент пулаймасť. Тӳррипе каласан, рабфак çынсен социалă вырăнне (положенине) улшăнтармасť.

Тепĕр йенчен çакна калас килет: Малттин „интеллигент“ пулсан та, „интеллигенцирен“ мар. Малттин йала „революци“ тума килмен, йалта революци Малттин пĕчĕккĕ чухнех пулнă. Ку тĕлĕшпе Мраңккапа Ухăљван хăйсен сăмаххисене пĕр майлă вакласçĕ. Ухăљван калаť: „Малттина ашшĕпе пĕрлех вĕлерне пулсан, пĕр шиксĕр пурăнмалачĕ“, тет. Ун шучĕпе Октабĕр революци Малттинран килнĕ, революци пулман пулсан, райри пек пулмалаччĕ, тет. Мраңкка та çак шухăшранах тухаť, вăл та „Малттин йалта революци ȝăват“, тет.

Паллах, тĕрĕс мар ку. Кулак пурнăçа кулакла ăнланнишĕн автăра йатламала мар романра. Кулака пурнăç çине рабочи пек пăхакан тунă пулсан, автăра йатламалаччĕ.

Малттин йала отпуска килнĕ студент. Уйăх çурра килнĕ вăл йала (31 стр.). Вăл йалта ĕçлемен çын мар Саңук, —„кунта кĕнеке çинчи мар товариш' практикă“, теççĕ тенине хирĕç вăл: „Саңук, мĕн калаçатăн, епĕ йалта ĕçлесе пурăнман, тетним вара?“ (24 стр.), тесе калаť. „Епĕ батрак ывăлĕ“, тет тата вăл хай çинчен, „малтан пионер, кайран комсомол хуранĕнче вĕресе пиçнĕ“ (26 стр.), тет.

Малттин йалта чухăнсемпе батраксен группине организацилес ĕçе ура çине тăратаť. Йалта чухăнсемпе батраксем пулман мар, вĕсем çителĕклĕ пулнă. Вăл тата ытти комсомолĕссемпе, йалти активиссемпе, чухăнсемпе пĕрле пролетари патшалăхĕ ваљљи тырă хатĕрлес ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлет. Малттин хăйĕн йулташĕсенчен нумайрах пĕлет, вăл вĕреннĕрех çын. Çавăнпа та, унăн ĕçĕ те романра нумайрах курăнаť.

Тырă хатĕрлесси—пысăк ĕç. Вăл классен кĕрешĕвĕ фрончех. Вăл хаљхи кунсенче те кулаксене хирĕç вирлĕн кĕрешмесĕр иртмест. Тырă хатĕрлесси 1929-мĕш çулта та кĕрешӳсĕр пулман. Романра автăр çак вăхăта кăтартнă та.

Кипек-Кассинчи кулаксем хăйсем çине килнĕ заданине йалти чухăнсемпе вăтамсем çине сулса йанă. Комиççи пулнă, унта кулаксем кĕрсе кайнă (Михетер, Митук ывăлĕ т. ыт. те). Председатĕл те вĕсем майлă пулнă. „Председатĕл чухăн пулсан та, харавçă, пуйансенчен хăраť...“ тет Малттин (45 стр.). Вăл хăранă кăна та мар, вĕсем майлах ĕçленĕ. Йал çине кăтартнă виçене йатакпа сулса йанă вăл (52 стр.). Кун пирки вăтам хресчен Çпритун калаť: „Епĕ çак тырă çинчĕнех калаçасшăн. Ман çине 30 пăт хунă,—тет.— Ухăљванпа Митук çине те 40 пăт кăна хунă имĕш. Ку йапала ĕнтĕ пĕртте тĕрĕс мар. Епĕ нумайах та пулмасť 60 пăт государствăна леçсе патăм. Халĕ, тупата турă·шăн, пĕр пăт та ытлашши çук. Аçта унта 30 пăт. Пулсан ĕнтĕ епĕ кутăнлашса тăракан çын мар ĕнтĕ... Çак йенчен ӳпкев пур манăн... ытти йенчен... пĕртте тиркешместĕп ..“ (44 стр.).

Упаҫҫа кĕтӳҫ сине те 10 пăт хунă. Тĕрĕс ҫулпа пыракансем вĕсене „Совет власĕ хуман, ăна йалканашĕпе ҫав комиҫҫири кулаксемех хунă“ тесе ăнлантараҫҫĕ (45 стр.). Чăнах та, хăшчух хăшпĕр „работниксем“ Совет власĕн калама ҫук паха идейĕсене пĕтĕмпех лапăртаса пĕтереҫҫĕ. Кипекри йалканаш председателĕ Паҫук та ҫавăн пек етемех.

Ҫапах та, Ухăҫвансем хăйсен политикне пурнăҫа кĕртеймеҫҫĕ. Вĕсем йалти чухăнсемпе вăтамсене ҫĕнеймеҫҫĕ. Вĕсем ҫинчен Михетер калат: „Ĕмĕрне пухура ҫăвар уҫман сын та калаҫма тытăнчĕ те, ăҫта кунта ҫĕнтерме...“ (Ват кам тăват йалта „революци“!)

Ку ыйту ҫинчен татах уҫҫăн 71-мĕш страницăра ҫырнисем те калаҫҫĕ.

Унта ҫырнă: „Йулашкинчен Малттин тухса каларĕ:

— Йулташсем! каллех калатăп: есĕр пана тырă, тетӳсем, шăллăрсем, рабочисем патне кайат. Сире ваҫҫи трактăр, комбайн, супăҫ, сахăр, ситцă хатĕрлекенсем патне кайат.

— Правеҫна! — тесе кăшкăрчĕ пĕри. Кĕҫтук алă ҫупма тытăнчĕ. Ун хыҫҫăн ыттисем те...

Супăҫ, сахăр тесен, Михетер тепĕр хут сăмах ыйтрĕ. Пурпĕрех сăмах памаҫҫĕ. Еҫлекенсем хресченсене тулаҫҫĕ, тесе каласшăн пулчĕ вал.

— Тата виҫĕ сăмах калам-ха

— Есĕ калаҫрăн, ҫитет! Ав Кулине сăмах ыйтат! Ăна парас, — терĕҫ чухăнсем харăссăнах тенĕ пек кăшкăрса.

Кулине варахчен калаҫмарĕ.

— Тĕрĕс, тĕрĕс, Ухаҫван кулак ҫине пĕр 500 пăт хумала, Михетер сине 300—400 пăт.

— Правеҫна! ҫĕр сасă хурал пӳрт чӳречинчен тухса часовнийе кайса ҫапăнчĕ! (71-мĕш стр.).

Йулашкинчен вара „ҫирĕм-вăтăр сын сасси уҫă, тĕттĕм ҫĕре таҫта кайса саланчĕ“ (72 стр.).

Вот камсем тăваҫҫĕ „революци“! Малттин пачах пĕччен мар, иккĕн те мар, ҫук вăл массăпа пĕрлех! Еҫмассисем ĕҫе пĕрле тытăнсан, тем тума та пултараҫҫĕ, мĕншĕн тесен вĕсенче чи хăватлă социалă вăй. Кипек-Кассинчи чухăнсемпе вăтамсем кулаксене хирĕҫ тăраҫҫĕ. Вĕсем пухура та пĕр харăс кăшкăраҫҫĕ. Ку ĕнте пысăк вăй.

Ку ĕҫлемесĕр пулман. Тырă хатĕрлес ĕҫре комуниссем те хастар ĕҫленĕ. Ҫавăнпа та Ухăҫван арăмĕ комуниссемпе йатлаҫат. „Ах, ҫак комуниссене, шуйттансене, чĕрĕлех сийĕттĕм...“ тет вал (62 стр.).

Ухăҫвансене хирĕҫ Кĕркуҫсем хăйсен ĕҫĕсенче калаҫҫĕ: „Епĕр ҫак власшăн сахал мар йунăмăрсене тăкрăмăр. Ҫак хĕрлĕ йалав пире ахалех лекмерĕ. Хамăр кăкăрăмăрсене таптаса каймасăр епĕр ăна никама та парас ҫук!“ (121 стр.).

Ҫак паттăрсем Совет власĕ ваҫҫи хĕрлĕ обозсем организацилеҫҫĕ, 1 200 пăт ыраш Кипек-Кассинчен Совета леҫсе параҫҫĕ.

Çав вăхăтрах 30 хуçалăхран колхоз организацилеççĕ. Колхоз организацилес шухăш пĕр çын (Малттин йе Кĕркуç) пуçĕнчен сиксе тухман. Ун патне Совет влаçĕпе комуниссен партийĕ калама çук ăслă политикĕ илсе пынă; тата пролетари патшалăхĕ вальльи тырă хатĕрлес ĕçе колхоз йухăмĕнчен уйăрмала та мар.

Çапла, Малттин çӳлте кăтартнă ĕçсенче хастар ĕçлесе пынă, унăн вырăнĕ унта пысăк. Анчах вăл çак ĕçсене пĕрре те пĕччен туман; вĕсем, йалти чухăнсене организацилесе, вĕсене опора туса, вăтамсемпе сойуз тытса, кулаксемпе кĕрешсе пырса пулнă ĕçсем, — çавăн пек пулнă вăл çулсенче Совет влаçĕпе комуниссен партийĕн политикĕ. Çак ĕçсем пĕтĕмпех кĕрешӳ урлă пулса пынă. „Мĕн пур ĕç çав кĕрешессинче çеç... Тăшмансем нумай, мĕн чухлĕ çапăçмали участкăсем...“ — тет кун пирки Малттин (182 стр.).

Халĕ тата ытти йытусем патне куçар, ытти геройсене кĕскен пăхса тухар. Илĕпĕр Кĕркуçа. Кĕркуç та пысăк герой. Унăн ĕçĕ романăн çитес кĕнекисенче çеç пĕтемели курăнат. Çавăнпа та, ун çинчен татăклă сăмах калама хĕн.

Кĕркуç виçĕ çул çурă шахтăра çĕр-кăмрăк чавнă, икĕ çул хушши империалисăм вăрçинче пулнă çын. Вăл граждăн вăрçинче те пулнă. Вăтăрултă çулта. Активис. Вăл çĕнĕ пурнăçшăн, çав вăхăтрах унăн пурнăçĕнче кивви те çук темеле мар. Хăш чух Кĕркуçăн пуçне тĕлĕнмеле шухăшсем те пырса кĕреççĕ. Увăн нервăсем те çирĕпех мар. Мĕншĕн вăл апла пулнине унăн иртнĕ пурнăçĕнче пулнă условисем ăнлантарса параççĕ. Кĕркуç кив пурнăçа чĕререн кураймаст, вал çĕннишĕн.

Çак герой пирки те пайтах çыракансем пулчĕç. „Увăн нимле те пĕр тĕрлĕ политикла позици çук... Револьуци хăй çулĕпе пырат, Кĕркуçăн унта ĕç çук... Кĕркуç вăл пĕтĕмĕшпе револьуци урапи çинчен ӳксе йулнă çын, револьуцирен татăлса, активлă кĕрешӳпе ĕçрен уйăрăлса йулнăскер“, — тет Кĕркуç çинчен Ç. Куташов йулташ[1].

„Чăваш ĕçхалăхĕн хуçалăх ӳсĕмĕсем, реальнăй фактăсем Кĕркуç умĕнче çук... Кĕркуç умĕнче реальнăй фактă — чĕркуççи тĕлĕнчен çĕтĕлнĕ тăла-йĕм...“ — тет тата ун çинчен Мральккa[2].

Кудревцĕв тата: Кĕркуç „пайанхи еçе иккĕмеш вырăна хурат“ тесе вăрçат.

Чăнахах та, Кĕркуç критиксем каланă пек çын-ши? Çак ыйтăва ответлеме епĕр каллех „Тăваллана“ илĕпĕр. Калас пулат: романри Кĕркуç критиксен Кĕркуçĕ пек мар. Вăл йăлтах урах. Романри Кĕркуç граждăн вăрçинче хайар кĕрешнĕ çын. Ленин калана тăрах, граждан вăрçи — револьуцин чи çӳлте тăракан формийĕ, граждăн вăрçи те револьуцийех. Çак револьуцире Кĕркуç та малти ретре пулнă, револьуцишĕн хастар кĕрешнĕ. Ыйтас килет: позици-и ку, йе позици мар? Пирĕн шутпа, позици. Вăл позицийе примерсемпе кăтартăпăр.

1) Граждăн вăрçи вăхăтĕнче: „вилсен те çапăçса вилес тенĕ шухăш ала-урасене вăй пачĕ“ (162 стр.); 2) ун хыççăн: „Хамăр

[1] „Сунтал“, 2-мĕш №, 1932 ç. [2] „Штурм“, 8-меш №, 1932 ç.

кӑкӑрӑмӑрсене таптаса каймасӑр епӗр ӑна (Совет влаҫӗн хӗрлӗ йалавне — **Худар**), никама та парас ҫук“ (121 стр); 3) халӗ: „Пуҫланӑ ӗҫӗн вӗҫне тухман-ха. Нумай авӑрланса кӗрешмеле. Халӗ пирӗн фронт кашни йалтах, кашни ҫуртрах“ (99 ст, .).

Ҫакӑн пек Кӗркуҫӑн п о л и т и к л а позицийӗ. Ку позицийе Кӗркуҫ пӑрахмаст; хӑшчух вак буржуала шухӑшсем унӑн пуҫне пырса кӗреҫҫӗ, анчах ҫӗнни—кивввине ҫӗнтерет. „Кӗркуҫӑн чӗри Хусан патӗнче шуррисемпе ҫапӑҫнӑ чухнехи пек хӑватлӑ тапса илчӗ. Ун чух та малти ретре чӑрсӑрланса вилӗмрен хӑрамасӑр кӗрешнӗ, х а л ӗ т е в а л к а й р а м а р“ (102 стр.).

Анчах Кӗркуҫ умӗнче „реаљнай фактисем“ пур-и?—Пур. Акӑ вӗсем: 1) „Государства ӑна пулӑшать, пур йенчен те љготӑсем парать. Саккунсем ҫинче те ун ҫинчен сахал мар вуланӑ“. (100 стр); 2) „Хӑш йал хӗрлӗ обозӗ ку-у-у“?—тенӗ сасӑ Кӗркуҫа йӑвӑр михӗсем ҫине пусарса лартнӑ шухӑшӗсенчен вӑратрӗ.

— Кипек-Кассисен!..

— Миҫепе?

— Утмӑлпа!“ (102 стр.).

Хӗрлӗ обоз, утмӑл лав — 1200 пӑт тырӑ, — мӗн-ши ку реаљнай факт пулмасан? 3) Йе тата: вӑтӑр хуҫалӑхран организациленнӗ колхоз. Мӗн вӑл? Паллах — реаљнай факт. Классен кӗрешӗвӗ те реаљнай фактах, реаљнай фактӑсӑр пурнӑҫ та ҫук. Пӗтӗм пурнӑҫ — реаљнай факт.

Кӗркуҫ хаљхи пурнӑҫран пӗрре те кайала тарасшӑн мар. Автӑр та ун пек шутламаст. Ҫапла пулсан та, Кудревцӗв ҫырать: „Краснов (Асли) пайан кун мӗнле вӑйлӑ ыйтусем пуррине, клас тӑшманӗпе мӗнле хытӑ кӗрешес ӗҫе те хупласа хӑварма шухӑшлать“ тет. Мӗншӗн ҫавӑн пек калать вӑл? Мӗншӗн тесен, комсомолӗссене Кӗркуҫ хӑй йепле 1918-мӗш ҫулта граждан вӑрҫинче те ҫӳренине каласа панӑ хыҫҫӑн, пӗр комсомолес — „Ех, мӗншӗн унчух епӗ пӗчӗкҫӗ пулнӑ-ши? Епе те ҫапла ҫӳренӗ пулаттӑм“ — тет („Канаш“, 1932 ҫ.). Кудревцӗв „тӗрӗс-и ку?“ — тесе ыйтать те, „тӗрӗс мар, ку пайанхи ӗҫе иккӗмӗш вырӑна хунине кӑтартать“, — тесе ответлет. Автӑр ҫавӑн пек тӑвать, тесе, ӗнтересшӗн ӗнтӗ вӑл. Кулӑшла! Пит те кулӑшла Кудревцӗвӑн вывӑчӗсем.

Ыйтас килет: мӗншӗн ПСК(б)П Тӗпкомӗ р а б о ч и к л а с ӑ н и р т н ӗ п а т т ӑ р ҫ а п ӑ ҫ ӑ в ӗ с е н е „г р а ж д а н в ӑ р ҫ и и с т о р и й ӗ н“ с т р а н и ц и с е м ҫ и н е ӳ к е р е т“—тесе постановлени йышӑннӑ? (30/VII—1931 ҫ.). Мӗншӗн М. Горйки пуҫарӑвӗпе „й ы ш л ӑ ӗ ҫ х а л ӑ х м а с с и с е н е в а љ љ и 10—15 т о м л ӑ „г р а ж д ӑ н в ӑ р ҫ и н и с т о р и н е“ к ӑ л а р м а тытӑнчӗҫ? Мӗншӗн ку тӗлӗшпе тата ПСК(б)П Чӑвашобкомӗ августӑн 26-мӗшӗнче (1931 ҫ.) йатарласах постановлени йышӑнчӗ?

Мӗншӗн тесен:

„П и р ӗ н р а б о ч и п е х р е с ч е н ҫ а м р ӑ к ӗ с е н х ӑ й с е н а ш ш ӗ с е м й е п л е т ӑ р ӑ ш н и н е, в ӗ с е н п а т т ӑ р л ӑ п у л с а и р т н ӗ ӗ ҫ ӗ с е н е, т а т а п ӗ т ӗ м т ӗ н ч е р и п р о л е т а р и а т ӑ н м а л т а п ы р а к а н о т р е ч ӗ н а с л ӑ ҫ ӗ н т е р ӗ в н е

организацилене çĕрте рабочи класпа комуниссен партийĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине тĕпĕ-йĕрĕпех пĕлме кирлĕ“ (М. Горйки). Револуципе граждан вăрçи историйĕ те — болшевисăм историйех.

Çавăнпа та, вăл пирĕншĕн паха, пире вăл вăй парат, çĕклет, каллех кĕрешĕве чĕнет. Кĕркуç пек паттăрсем çук мар, вĕсене çамрăксен те пĕлмеле. Сăмах май, ку тĕлĕшпе епĕр çамрăксен поечĕ Митта Васлейĕ сăмахне кӳретпĕр. Вăл хăйĕн „Йухмара“ йатлă сăввинче çамрăксем Кĕркуçсем (граждан вăрçи паттăрĕсем) пирки мĕн шутланине каласа парат:

„Кам манĕ,
    çамрăксем,
Пиртен
    пĕр вунă çул аслисен
        йатне?
Кам манĕ
Вăрçăлă хирсен
    йунпа çĕкленнĕ
        хăватне:
Манмастпăр!
Çамрăксем, мала!
Ей, çамрăксем,
  калкалтарах!
    Мĕн пур тăшманлă
      калтаран
        çершыв
          çапçут
            тасалмала!

Манми —
    вутра арканнă
        Перекоп.

Манми —
    Çивашăн
        йунлă шывĕсем.

Асрах
    ес те,
        Арăслан пек
            Крепков!

Асра
    есир те,
        паттăр Кĕркуçсем!“

(„Вуниккĕре“, 89—90 стр.).

Çапла Кĕркуçа граждан вăрçи çинчен каласа парса, çамрăксене кĕрешӳ шухăшĕпе хавхалантарнăшăн пĕрре те йатламала мар.

Кĕркуç хăйĕн йунне ытти ĕçлекенсемпе пĕрле йухтарнă. „Мĕншĕн кĕрешнĕ?“—тесе ыйтат вăл хăйĕнчен хăй. Хăйех вара ответ парат: „Есĕ пирĕн герой, есĕ хуна ху шеллемесĕр, пĕр хăрамасăр çак уççăн сывлакан уйхиршĕн аллăна хĕçпăшал тытса кĕрешрĕн“... (98 стр.). Йе тата: „Есĕр кĕрешмен пулсан, калама та çук хаклă йун çырма пулса йухман пулсан, çакăн пек сывлама май пур уйхирте хура çăхансем çеç вĕçсе çӳремелеччĕ вĕт..“ (99 стр.).

Камшăн вăл çапăçнă? Малтан каллех сăмах критиксенчен пĕрне парар. „Геройшăн револуци хăйшĕн кăна“ (!?) тет критик. Кĕркуç хăй калат: „хушăн анчах кĕрешрĕне-и есĕ?“; ответ: „пур мăшкăл пулса пурăннă çынсемшĕн те“... (99 стр.). Ку тĕрĕс шухăш ĕнтĕ. Çавăнпа та çак герой „чи малтан çакна манмала мар“ тет, çав вăхăтрах тата: „епĕ хамăн пурнăçа та улшăнтарас тесе кĕрешнĕ“, — тет (99 стр.).

Ку сăмахсенчен епĕр мĕн куратпăр? Ку сăмахсем пирĕн критиксен вывăчĕсене тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа ывăтаççĕ Кунта „епĕ“ тенинех малти выранна лартни çук, малти выранна ĕçлекенсемшĕн кĕрешнине вăл лартат. Ку, пирĕн шутпа, тĕрĕс,

обчăла интерессемпе харпăр хăй интересĕсене пĕрлештерсе, обчăлă интересшĕн кĕрешсе харпăр-хăй интересĕсене те пурнăçа кĕртни пулат. Апла пулсан, ăçта-ши кунта „революцирен таталса йулни"? Паллах, Кĕркусăн йăнăш шухăшсем çук мар. Унăн вакбуржуалă, хресченле псхологи пĕтмен-ха. Анчах автăра уншăн айăпламала мар. Автăр „реальнăй фактсем" пурнăçра туллийех пулнипе етем мĕнле улшăннине кăтартасшăн пулнă. Ытла та лайăх кăтартнă темĕпĕр. Çапах та, автăр çавăн пек ыйтăва лартнине ырламала çеç. Романри Кĕркус, кĕре пÿ виттĕр кив пурнăçăн татăкĕсене пĕтерсе пырса, çитĕнет. Кĕркуç шухăшĕнче икĕ елемент кĕрешет: пĕри — кив пурнăç таткисенчен килекен шухăшсем, тепри — çĕнĕ пурнăç панă шухăшсем. Кутăшов кун пирки: „В. И. Красновăн кăшни герой ăшĕнче, — „ырăпа усал" кĕрешет, етемсен хушшинче те пĕри революцишĕн, совет влаçĕшĕн калаçат, тепри кулакла, контрреволюциле калаçат"—тет.

Кĕркуç пуçĕнче контрреволюцилĕ шухăшсем сукки çинчен калаçса тăмăпăр. Анчах унăн пуçĕнче вакбуржуалă шухăшсем пуррине те пытарма çук, пытарма та кирлĕ мар.

Кунта тата çакна калас пулат: Кĕркуç вакбуржуалă средара пурăннă, колхоза кĕнĕ пулсан та, индивидуала пурнăç Кĕркуçа хресченле, вакбуржуала шухăшсем патне илсе пыма пултарнă. Кун пек çынсем çинчен А. Безыменски поет питĕ лайăх калат:

> „Ведь не выпрыгнуть нам из нас же.
> Жизнь идет,
> А в груди нашей
> Хруст..
> Время сделало сердце наше
> Общежитием всяких чувств.
> Общежитие забито вещами,
> А в углах где-то есть тайники,
> Где скрываются чувства — мещане,
> Чувства — буржуи,
> Чувства — меньшевики". (А. Безыменский).

Безыменски ытлашши те калана темеле. Анчах та пурнăçра çавăн пек çынсем пур. Мĕншĕн тесен, ун пек çынсене кĕрешÿлĕ пурнăç хăйех тăват. Ун çинчен маркçиссем питĕ те аван кăтартса панисем пур

Çавăнпа та Кĕркуç пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем пулнинчен те тĕлĕнмели çук.

IV. „Тăвалла"-ри кулаксене хирĕç пыракан вăйсем пиркийех тата пĕр критикăн „барометăрĕ" çинчен.

Краснов батракĕсем тăлăх. Сăмахран, Малттин, Кĕçгук, Кулине. Упаньа та тăлăх пулнăскер. „Ăçта-ши тăлăх маррисем?" — тесе ыйтат Кудревцĕв. Çемйе тĕ батрак темшĕн тума пултарайман, тесе курат вăл йулашкинчен.

Ку „придиркă" ĕнтĕ, критика мар. Паллах, çавăн пек метăдпа пĕр-пĕр произведенийе нимле те тĕрĕс анализ пама çук.

Кулине батрак пулачченех тăлăха йулнă. Малттинсен çемйине Ухальвансем салатнă. Упаньа ĕнтĕ ватă. Ун çинчен калаçмали

те çук. 60—70 çула çитнĕ старике те тăлăх тесен, „уй варĕнчи тискер чул та кулса йарĕ“.

Упаҫа—кивĕ батрачĕствă хушшинчен тухнă тип. Вăл революцичченех кĕтӳ пăхма тытăннă. Авалхи йаласем унăн пурнăçне çирĕп кĕрсе ларнă. Вăл выҫăхсене те хĕнет. Кĕçтук апла мар. Вăл батраксен çĕнĕ типĕ. Кулине те çавах. Вĕсем иккĕшĕ те комсомолра. Çĕнĕ пурнăçшăн вĕсем. Краснов çакна кăтартат.

Кĕçтук: „Тасалăхшăн пайан кун вилме хавас“,—тесе калат (87 стр.). Кун çинчен Кудревцĕв „тантăшлăха“ кăмăлаççĕ вĕсем, тесе çырат. Ăçтан тупăннă-ши „тантăшлăх“ сăмах? Йе хăшпĕрисене „тасалăх“ сăмах çавăн пек курăнат? Пĕлме çук! Пĕлейместпĕр! Анчах мĕншĕн тата батраксем хушшинче йурату пулма пултараймаст? Кĕçтук Кулинене йуратат. Кулинене вăл качча илет. Вĕсем çĕнĕле пуранма тăрăшаççĕ. Куна епĕр иккĕмĕш кĕнекере курăпăр. (Сăмах май çакна калас пулат: Мраҫкка Кулине вилнĕ, тет. Кулине вилмен. Вăл кулаксем хĕненĕ хыççăн чĕрех йулат. Ку факт Мраҫкка „Тăваллана“ мĕнле вуланине те кăтартса парат).

Кĕçтук активиссен шутне кĕрекен комсомолĕс. Вăл райкомол пленумĕнче те пулат (88 стр.). Кĕçтук çинчен: вăл—ĕçлекенсен умĕнче тăракан задачсене тавçăрса илнĕ теме те йурат. „Телейе епĕр хамăр тăватпăр,—тет вăл.—Хамăртан килет. Емĕтсене манас пулмаст. Çамрăкрах-ха епĕр. Пурнăç та анчах курма пуçлатпăр. Кĕрешмен халĕ. Ман çав-тери хăлаçлансах кĕрешес килет“ (88 стр.).

Йе тата:

„Мĕн кăна курмастăн çак çут тĕнчере? Мĕн чухлĕ кĕрешмели фронт“ (92 стр.) „Кĕрешетпĕр“—тет Кĕçтука хирĕç Кулине.

Пирĕн шутпа, Кĕçтукпа Кулине йалта хайсен шухăшĕсемпе малта тăракан çамрăксем. „Рабочисене ирĕке кăларасси—рабочисен хăйсен ĕçĕ“, тенĕ К. Маркс. Ку тĕрĕс шухăш. Анчах, ыйтас килет: „Телейе епĕр хамар тăватпăр“, тени тĕрĕс мар-ши? Ку та тĕрĕс. Кĕçтук ăна Маркс пек калайман, çийелтереххĕн, начартараххăн калавă ĕнтĕ. Çавăншăн вара ăна Кудревцĕв виççĕр çул кайа йулнă çын туса хурат. Çук, Кĕçтук вăл хаҫхи çамрăках. Анчах вăл ытти çамрăксем пек мар. Вĕренеймен. Батрак пулнă. Çавă чарпă. Çапах та, вăл вĕренет, идеологи тĕлĕшпе çитĕнет.

„Тăваллари“ партийĕссем çинчен пĕр-ик сăмах каламала пулат тата. „Тăваллара“ парти çук, парти ĕçĕ курăнмаст“—тет Кудревцĕв. Епĕр, Кудревцĕв пек, пур йалта та парти йачейки пур, тесе каламăпăр. Анчах Краснов кăтартнă йалта партийĕссем пур, комсомол йачейки пурри те паллах.

Комсомолĕссем активлă ĕçлеççĕ,—унщăн Кудревцĕв: „ку—троцкисăм“, „барометăр“—тесе вăрçат. „Йалта пĕтĕмпе 4 комунис. Вĕсем ĕçлени (имĕннă вĕсем ĕçлени) паллă мар“,—Кудревцĕв „ĕçлемеççĕ“ тесе вăрçат. Вăл çавăн пек критик—ĕçл нишĕн те, „ĕçлеменнишĕн“ те вăрçат. Мĕнле ăна йурамала-ши?

Краснов романĕнче йалти комуниссен ĕçĕ, çителкĕлĕ мар пулсан та, пурах.

Ҫавӑнпа та, кулаксем пушшех тӑркӑшаҫҫӗ. „Комуниссене чӗрлех ҫийӗттӗм“, тесе вӑрҫаҫҫӗ кулаксем. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен, вӗсем „ҫӗнӗрен пуху туса, йал ҫине килнӗ виҫене (тырӑ вормине — **Худар**) пуйансем ҫине ҫеҫ хурасшӑн“ (62 стр.). Комуниссемпе комсомолӗссем кулаксем ҫине ҫирӗп задани хунӑ, ҫавӑн пирки ӗнтӗ чӑркӑшат кулак арӑмӗ. Тӑшмансем ӗҫлемен комуниссем ҫинчен пек каламаҫҫӗ, вӗсем ӗҫлекенсене хирӗҫ тӑраҫҫӗ, ӗҫлеменнисене ырлаҫҫӗ. „Тӑшмансем пирӗн ӗҫсем пирки кӗвӗҫни — епӗр тӗрӗс ҫулпа пынине пӗлтерет“, тенӗ хӑй вӑхӑтӗнче Франц Меринг. „Тӑваллари“ комуниссемпе комсомолӗссем те кулаксем ҫине ҫирӗп задани хурса (Ухӑҭван ҫине 600 пӑт хуна вӗсем) тӗрӗс тунӑ.

Романри чухӑнсемпе вӑтамсем хӗрлӗ обоз организацилеҫҫӗ. Пӗтӗмпе — 1200 пӑт. Ана организацилекеннисенчен пӗри — Кӗркуҫ — станцӑра райком секретарӗ патне кайат, парти райкомӗпе ҫыхӑнат. Митинга „Интернационал“ йурласа уҫаҫҫӗ. „Пин ҫынна йахӑн халӑх, пӗрин хыҫҫӑн тепри пусӗнчи ҫӗлӗксене хывса йанраттарчӗҫ йурра“ (116 стр.) Райкомран Уҫӑп тата райкомӑн ответлӑ ҫекретарӗ сӑмах калаҫҫӗ. Весем массӑ ҫине пӗтӗм чӗререн шанаҫҫӗ. „Пӗтӗм вӑйхал массӑра. Масса хӑй йунне тӑкса ҫӗрӗк трона ишсе антарчӗ. Ӗнси ҫинчи сӗлӗхсене силлесе сирпӗтрӗ. Вот мӗн тӑват тинӗс пек кӗрлекен ӗҫхалӑхӗ“ (119 стр.).

Кӗркуҫ хӑйӗн ответлӑ сӑмахне калат.

Унтан сӑмах вӑтам хресчен Ҫпритун Мирунч калат: „Совета та пулӑшмасан, кама тата пулӑшар? Хамӑр влаҫ вӗт. Пӗр кун епӗ 60 пӑт кӳрсе патӑм. Халӗ татах доброволҭнӑ хӗрлӗ обоз туса килтӗмӗр“ (121 стр). Ҫпритун Мирунч хӑйӗн сӑмахне „Сывӑ пултӑр Совет влаҫне ҫул кӑтартакан комуниссем“ — тесе пӗтересшӗн пулнӑ, анчах вӑл хавас сӗклевнипе урӑхла каласа йарат“. Сывӑ пултар комуниссен совечӗ!“ — тет вӑл.

Мӗне пӗлтереҫҫӗ ҫӳлте кӳнӗ сӑмахсем? Вӗсем чи малтан йалта комуниссен парти ӗҫленине пӗлтереҫҫӗ. Хӗрлӗ обоз организациленӗ хресченсемшӗн парти райком представителӗсем каланӑ сӑмахсем авторитетлӑ. Хӗрлӗ обоз — комуниссен партийӗ куллен ӗҫлесе пынипе пулнӑ ӗҫ. Паллах, автӑр парти ӗҫне, уйрам комуниссен ӗҫне ҫителӗклӗ кӑтартайман. Иккӗмӗш кӗнекере ку ыйту ҫине лайӑхрах ҫавӑрӑнса пӑхма кирлӗ.

Хале тата „Тӑваллари“ комсомолӗссемпе пӗр критик „барометӑрӗ“ ҫинчен кӑшт калӑпӑр.

„Тӑваллари“ комсомолӗссем мӗнле тухнӑ-ха? „Тӑвалла“ романри комсомолӗссем чӗрӗ, вӗсем комуниссен партипе Совет влаҫӗ пуҫласа иртерекен ӗҫсенче хастар ӗҫлеҫҫӗ. Анчах „Тӑвалла“ романпа килӗшме пултарайман Кудревцӗва произведенири комсомолӗссем те, вӗсен ӗҫӗсем те килӗшмеҫҫӗ. „Йалан комсомол ӗҫлет, — тесе тарӑхат вал. — Колхоз тӑвас ӗҫре, хӗрлӗ обозра, пур ҫӗрте те комсомол анчах“.

Пуринчен ытла Кудревцӗв Малттин хастар ӗҫленипе килӗшесшӗн мар. Калас пулат, кун пек критиксем темле вӑрҫсан та, комсомолӑн социалисӑм строительствинчи пысӑк активлӑхне

пытарма ҫук. Комсомол малти ĕретре пулнă, вăл малашне те малти ĕретрех пулат.

Мĕншĕн комсомол ҫапла ĕҫлет? Мĕншĕн тесен, „ленинла комсомол пирĕн революцин ҫамрăк резервĕ пулнă, халĕ те ҫавăн пекех..“ (И. Сталин—„Комсомол ҫинчен“, 17 стр.). Йе тата: „Комсомол пирĕн йалананах паттăрăн кĕрешекенсен малти ĕретĕнче тăнă. Комсомол хăҫан та пулин пирĕн революцилĕ пурнăҫăн событийĕсенчен айăкра тăнине епĕ пĕлместĕп те“ (И. Сталин, ҫавăнтах, 33 стр.).

„Тăвалла“ автăрĕ йалта ĕҫлекен комсомолĕсен ĕҫне кăтартса панă. Анчах комсомолĕссем йалта „малти ĕретре“ танине, вĕсем хастар ĕҫленине кăтартнине Кудревцĕв „троцкисăм“ тесе хурат. Ку ҫитменлĕх йĕрне йĕрлесе кайсан, епĕр Троцкин „барометăрĕ“ патне ҫитсе перĕнме пултаратпăр“ (? № 8)—тет вăл. Телĕнмеле те, тĕлĕнмелийех ҫук. Мĕншĕн тесен, Кудревцĕв хăйĕн статйинче формалисăм логикипе уса курат, формалисăм логикипе тем „патне те ҫитсе перĕнме пулат“, темле патака та шартах хуҫса пăрахма пулат. сивĕ, йе ăшă ҫĕре те ҫитсе ӳкме пулат, унта вара „барометăр“ анчах мар, темле „метăр“ та лартма пулат, —анчах... Ҫав анчах хăш чух ытла та кансĕрлет! Ҫапах та, калăпăр: „анчах мĕн усси пур ун пек „барометăрсенчен“?!

„Барометăр“ ҫинчен Троцки йалти ҫамрăксем тĕлĕшпе мар, комсомол тĕлĕшпе те мар, вăл ăна вĕренекен ҫамрăксем пирки каланă. Паллах, вĕренекен ҫамрăксем—„революци барометăрĕ“ тени тĕрĕс шухăш мар, вал—контрреволюционер пуҫĕнчен тухнă шухăш. „Тăваллара“ пĕр Малтгин кăна вĕренекен ҫамрăк, анчах ăна Троцки „барометăрĕпе“, тĕрĕссипе—Кудревцĕв „барометăрĕпе“ виҫме ҫук, виҫме кирлĕ те мар.

Романра комсомол ĕҫне кăтартни, вăл—романăн ҫитменлĕхĕ мар, кирлĕ йенĕ. Комсомол „парти организацийĕ мар, анчах вал партипе ҫыхăнса тăрат“ (И. Сталин, „Ком. ҫин.“, 25 стр.). Вăл партийе пулăшат, парти ăна йертсе пырат.

„Тăваллари“ комсомолĕссемпе комуниссем пролетари патшалахĕ вăйĕ тыра хатĕрлессишĕн кĕрешеҫҫĕ. Вагамсемпе чухăнсен массисене йертсе пырасси, вĕсене обчăла ĕҫе хутшăнтарасси, хĕрлĕ обоз организацилесси т. ыт. те „Тăваллари“ комсомолĕссем умĕнче тăрат; вĕсем хĕрлĕ обоз организацилесе станца тыра леҫеҫҫĕ. Ку ыйту пирки вĕсем райкомолра та калаҫнă, унта „райком секретарĕ аван каласа панăччĕ“ тет Саҥук (29 стр.). Ку, паллах, комсомолĕссем партирен уйрăм ĕҫленипе мар, парти йертсе пынипе ĕҫленине пĕлтерет. „Ҫамрăксем пирĕн партийе шанни пулмала, комсомола парти йенчен йертсе пыни пулмала...“ (И. Сталин, „Ком. ҫин.“, 18 стр.).

Йалта чухăнсемпе батраксем организациленнĕ пулсан (романри сăмах епĕр талккăшĕпех коллективизацине куҫас умĕнхи вăхăт ҫинчен пырат), йăвăр ĕҫсене те пурнăҫа часах кĕртме пулат. „Тăваллара“ комсомолĕссем йалти чухăнсемпе батраксене

организацилес ĕçе малти вырăна лартаççĕ. „Чухăна çийеле кăларас тесессĕн, епĕр комсомолĕссем алăсене усса, ланчашкаланса тăмала мар. Чухăнсен группиcене, вĕсен пухăвĕсене авторитетлă тума тăрăшас пулат“—тет Малттин („Тăвалла“, 27 стр.). Йе тата: „главни батраксемпе чухăнсене пĕр чăмăр тăвасси“ (24 стр.).

Кун пек тума парти политике хушат-и? Паллах,—хушат. Апла пулсан, ăçта-ха кунта „барометăр“?

Романри комсомолĕссем вăтам хресченсене те манмаççĕ (Троцки вĕсене манат). „Кивĕ пурнăçран çĕнĕ пурнăç çулйĕрĕ çине куçнă вăхăтра чухăнсемпе вăтамсен çыхăнăвĕ çинчен хытă асăрхас пулат“,—теççĕ вĕсем („Тăв.“, 30 стр.).

Тĕрĕс-и ку, комунисcен парти политикĕ йенчен пăхсан?

Тĕрĕс, Кудревцĕв й-ш! „Диктатурăн чи çӳлĕ принципĕ—вăл пролетариатпа хресченсен хушшинчи сойуза йĕркелесе пырасси; çапла пулсан, пролетариата, хресченсене йертсе пырса, патшалăх влаçне хăйĕн аллинче тытма çăмал“ (Ленин, XVIII т. 331 стр.).

Романри ĕç 1929-мĕш çул кĕркуннерехпе пулса иртет. Романра кăтартнă комсомолĕссем партин политикне тĕрĕс пурнăça кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. Краснов çав комсомолĕссене кăтартнă та. Вĕсем конкретнăй ĕçсем тăваççĕ, сăмахпа кăна иртмеççĕ ĕçсем патĕнчен. Акă конкретнăй ĕçсем: 1) хĕрлĕ обоз организацилени; 2) колхоз организацилени; 3) батраксене комсомола кĕртни (Кулине т. ыт. те); 4) вăйăсенче массăлă ĕçсем иртерни (36 стр.); 5) батраксем хушшинче ĕçлени (51 стр.); 6) кулак ывăлĕпе пуп хĕрне аслă шкултан кăларттарни (151 стр.); 7) Кулинене хĕненĕ хыççăн райкомол представителĕпе „Çамрăк колхозник“ корреспонденчĕ йала пырса ĕçлени... тата ыттисем те...

Йулашкинчен, ку ыйту тăрăх çакна калама тивет: комсомолĕссем романра хайсен вырăнĕнче, вĕсем пĕлсе ĕçлеççĕ. Паллах, пурте пĕр пек мар. Йăнăшакансем те пур. Кулак агĕнчĕсем те пур увта. Вĕсен шутне „кулаксен йурриие“ йурлакан Çĕмйун кĕрет (149 стр.). Çĕмйунăн малашнехи ĕçĕсем çинчен автăр иккĕмĕш кĕнекере кăтартассине епĕр шанcах тăратпăр. Çĕмйун пăсăк етем, йурăхсăр комсомолĕс. „Епĕр ĕнтĕ комсомол хушшинче пăсалнă елементсем пур тенипе хирĕç пулмастпăр пулĕ, вĕсемпе хайарран кĕрешмеле“ (И. Сталин „Ком. çинчен“, 41 стр.).

Вĕсене хирĕç комсомол организацийĕ мĕнле кĕрешнине кăтартасси те автăр умĕнче тăракан задачсенчен пĕри пулса тăрат.

Çапла, „Тăваллари“ комсомолĕссем активлă ĕçлеççĕ. Паллах, автăрăн çитменлĕхсем пур. Вăл комсомол ĕçне те пĕтĕмĕшпе тата çителĕклĕ кăтартнă темеле мар. Çук, пĕрре те епĕр автăр халĕ чăваш писатĕлĕсенчен никам тăвайман ĕçе туса çитернĕ тесе каласшăн мар. Малашне чăваш комсомолĕн хастарлăхне, унăн сӳнме пĕлмен ĕçхĕлне чăваш совет литературĕнче кăтартма кирлех.

Йулашкинчен тата тепĕр-ик сăмах.

Ҫапла, „Тăвалла“ романри тĕп шăнăр — вăл пролетари патшалăхĕ ваҫҫи тырă хатĕрлессишĕн кĕрешни, ҫак кĕрешĕвре колхоз йухăмĕ ҫитĕнсе пыни. Ку кĕрешӳре социалă вăйсем харпăр-хăй вырăнне йышăнаҫҫĕ. Вĕсем: 1) чухăнсем, батраксем, комсомолĕссем, комуниссем; 2) вĕсемпе пĕрле пыракан вăтамсем; 3) пролетари диктатурине хирĕҫ пыракан етемсем — кулаксем, есерла ҫынсем, тата вĕсем пулăшкан оппортунисла ҫынсем.

Романри ĕҫсем 1929-мĕш ҫулăн вĕҫнеле — „аслă у л ш ă н у“ (И. Сталин) пулнă ҫул — пуҫланса, тата 1931-мĕш ҫулан пуҫламăшĕнче пулса иртеҫҫĕ.

Епĕр романра Совет влаҫĕшĕн ҫапăҫакансем пурриҫинчен ҫыртăмăр. Унта ҫавсемпе пĕрлех тата оппортунисла етемсем те пур. Сăмахран, акă Саҥук. Вăл пĕрмайах и к к ĕ л е н ӳ л ĕ шухăшсем калат. Вăл Малттине хирĕҫ: „есĕ питĕ аван калатăн, вҫо еттă тĕрĕс, чухăнсен пуххине кайса пăх-ха, пурте кулак йуррине йурлаҫҫĕ...“ (28 стр.).

Ку герой сăмахĕсем. Геройĕ — оппортунис. Ҫапла пулсан та, вĕсене Кудревцăв критик Краснов сăмахесем тăват. Кудревцĕв метăчĕ тĕрĕс пулсан, произведенисенче оппортуниссене кăтартмали те ҫук. Кулаксем ҫинчен те ан та ҫыр. Пĕтес пулат (?) мĕншĕн тесен, Кудревцĕв пек критиксем автăра кулак теме те пултараҫҫĕ. Герой тепĕр ҫĕрте Совет аппарачĕпе вăрҫат. Кудревцĕв ăна та автăр ҫумне ҫыпăҫтарса хурат. Вара — ку т р о ц к и с ă м тет. Йулашкинчен вара: „Краснов (Асли) пăтратма тăрăшат“, — тесе вывăдлат. Йе тата: „Т ă в а л л а р и“ ҫ и т м е н л ĕ х с е н е, „й ă н ă ш с е н е“ т р о ц к и с л а к о н т р а б а н д ă р а н у р ă х й а т п а м а п у л т а р а й м а с т п ă р!“ тесе хурат[1].

Мĕнле ăнланас пулат куна? Есĕр ҫ и т м е н л ĕ х е (!) троцкисăм тенине ăҫта курнă? Тата пур йанăша та троцкисăм темеле-и?

„Тăвалла“ романăн ҫӳжечĕ начар. Ку ĕнтĕ ҫ и т м е н л ĕ х. Анчах вăл троцкисăм пулат-ши? Ҫук, троцкисăм мар! Хăшпĕр вырăнсенче „Тăваллан“ чĕлхи йака мар. Сăмахран, „нумай лавсене ҫапла йурласа пĕрлешӳлĕ вăйпа хĕпĕртерĕҫ“ (105 стр.). Йе тата: „ун пуҫĕнче ҫĕнĕ шухăшсем чăрмантараҫҫĕ“ (110 стр.). Ҫак ҫитменлĕх те троцкисăм-ши? Ҫитменлĕхе ҫитменлĕх, тесе йат парас пулат, урăхла йат пани килĕшмест. Епĕр парти историнче ҫ и т м е н л ĕ х е троцкисăм тенине курман. Тата пур й а н ă ш а троцкисăм тенине те курман. Кун пирки П. П Постышев пит те лайăх каланă:

> ...Вместо того, чтобы человеку, сделавшему ошибку, помочь и по-товарищески его исправить, его так отработают, что он становится выбитым из строя, или во всяком случае с подбитыми крыльями. Это неправильно“.

Йе тата:

[1] Ку ҫитменлĕх йĕрне йĕрлесе кайсан, „кам“ барометăрĕ патне ҫитсе перĕнĕши? — (В. Худар).

„Надо уметь различать отдельную ошибку человека от системы взглядов Конечно скрытые троцкисты имеются в рядах нашей партии, но одно дело вскрывать и разоблачать укрывающихся троцкистов, пользующихся иногда отсутствием надлежащей бдительности на том или ином участке, разоблачать и выгонять их из партии, а другое дело, ошибка того или иного товарища, которую тоже надо критиковать, но критиковать надо по-товарищески, чтобы он мог исправить ее, надо помочь ему исправить ошибку и этим предупредить других. Неправильно квалифицировать такого товарища, как уклониста. Делу этим не поможешь.. Критика нужна безусловно, бдительность нужна постоянная, большевистская и очень здоровая... Надо уметь отличать от троцкистов людей просто ошибающихся и ни в коем случае не стричь всех под одну гребенку".

(П. Постышев — „За марксистско-ленинское воспитание", изд. 1932 г, стр. 67—68).

Халӗ „Таваллан" „троцкисамӗ" ҫинчен ҫитӗ, ҫитменлӗхӗсем ҫинчен калар.

Вулакансем пире „Тӑваллана" пӗтӗмпех ырлат, йӑнӑшсене, ҫитменлӗхсене пӗрре те кӑтартмаст, тесе калама пултарӗҫӗ. Ҫук, епӗр пӗрре те „Тӑвалла" произведенийӗн ҫитменлӗхӗсене шӑлса лартасшӑн мар. „Тӑвалла" йанӑшӗссене те критиклемеле. Романра геройсем нумай. Романра хресченсен пурнӑҫне кӑтартнӑ. Анчах хресченсен пурнӑҫӗ ҫителӗклӗ курӑнмасть теме ҫук. Йалӑн чӑн-чӑн сӑн-сӑпатне автӑр кирлӗ таран ҫутатса парайман. Романра чухӑнсем, батраксем пур, — ку пӗр йенчен; тепӗр йенчен унта автӑр кулаксене кӑтартнӑ Анчах йалти вӑтам хресченсене автӑр кирлӗ вырӑна лартайман. Пӗр вӑтам пур (Ҫпритун Мирунчӑ), унӑн та выранӗ пысӑках мар. Калас пулаг, ку сахал: 1929-мӗш ҫулсенчи йал ҫинчен ҫырнӑ чух, вӑтам хресченсем ҫинчен ҫырмасӑр иртни калама ҫук пысӑк ҫитменлӗх, мӗншӗн тесен, вӑтам хресченсен массин вырӑнӗ йалта пысӑк пулнӑ, Автӑрӑн вӗсем классен кӗрешӗвне мӗнле хутшӑннине, мӗнле вӗсем патшалӑх ваҔҔи тырӑ хатӗрленине, мӗнле колхоза кӗнипе тӗплӗрех кӑтартмала пулнӑ. Ӑна вӑл кӑтартса парайман, Ҫпритун Мирунча та пысак, паллӑрах тип тӑвайман. Ҫаванпа та, романри Кипек-Кассиикӗ пайа уйӑралса тӑнӑ пек тухнӑ. Тӗрӗссипе каласан, ку ӗнтӗ йанӑш, автарӑн ун ҫине лайӑхрах пӑхса, ҫитес кӗнекере тӳрлетмеле. Мӗншӗн тесен, ҫак йӑнӑшран тата урӑх йӑнӑшсем, тата ҫитменлӗхсем тухма пултараҫҫӗ.

Тата автӑр комуниссем ҫинчен ҫырнине те пӗрре те ҫителӗклӗ темеле мар. Пӗтӗмпе тӑватӑ комунис. Вӗсем кашни мӗн туни, вӗсен кашнин конкретлӑ ӗҫӗ уҫҫӑн курӑнмаст. Йалта йачейкӑ пурри те паллӑ мар. Пурте кандидат-ши? Камсем? Хӑш геройӗсем партире тӑраҫҫӗ? Калӑпӑр, йачейкӑ пурри сисӗнет, анчах вӑл сахал. Тӑватӑ комунисӑн вырӑнӗ пысӑкрах пулмала.

„Тӑваллан" тата ҫужечӗ начар. Темӑ аван, ӑна автӑр лайӑх лартнӑ. „Тӑвалла" политикла чӗлхепе каласан: хресченсен массисем кӗрешӳ урлӑ колхоз йухӑмне мӗнле

хутшăннине кăтартса пани пулат. Кунта тĕп темăсăр пуçне пĕчĕк темăсем пур. Вăл темăсем пĕр-пĕринпе çирĕп çыхăнайман, хăшĕ-пĕрисем лайăх çыхăннă пулсан та, теприсем ытла та начар çыхăннă. Çапла, „Тăваллара“ геройсем хутшăнувĕсемпе çыхăнăвĕсем, унти ĕçсен сăлтавлă çыхăнусем—автăр ку тĕлĕшпе сахал ĕçленине кăтартаççĕ. Çырасса тем чухлех çырма пулат, анчах çырнине çыхма пĕлни те кирлех, произведенири образсен хăйсене тивĕçлĕ йĕрке пулмала. Кашни геройăн хăйĕн вырăн пулмала, кашни геройа, кашни событийе мĕнле те пулсан ĕçпе, шухăшпа çыхăнтармала Кашни герой кашни ĕç урлă шухăш каламалла, пурнăç кăтартмала. Произведенире автăр калана шухăшсемпе ĕçлекенсен массисене кĕрешĕве кайма хаваслăх памала.

„Тăвалла“ автăрĕ хăйĕн геройĕсем çинчен йĕркипе каласа пама пĕлмест. Хăш çĕрте вăл çырни калама çук вăйлă, тепĕр çĕрте апла мар, хăш çĕрте тата начар теме те йурат.

Çанталăка автăр лайăх кăтартса парат.

Геройсен портречĕ тĕксĕмтерех. Каллех пурин те мар.

Ухăљвана унăн портречĕ тăрăхьх, ку — кулак темеле.

Геройсем калаçви лайăх тухнă. Автăр вĕсене калаçтарма пĕлет Хăш çĕрте вĕсем вырăсла, тата чăвашла калаçаççĕ. Куншăн хăш-пĕрисем автăра йатлама та пăхрĕç. Анчах кун пек Краснов кăна çырман. Чăвашсен те, ытти халăх писатĕлĕсен те ун пек произведенисем пур. Ром нра пуп хĕрĕпе кулак ывăлĕ вырăсла калаçаççĕ Чăнах та, вĕсем çавăн пек ĕнтĕ, вăл вĕсене лайăхрах кăтартас тесе вырăсла калаçтарнă.

Тата хăшпĕр геройĕсем пĕр пекрех тухни. Малттинпа Кĕркуç пĕр майлă калаççĕ. Паллах, вĕсен уйрăмлăхсем нумай, анчах темшĕн пĕр манерăпа калаççĕ.

Çӳлти çитменлĕхсем çумĕнчех тата автăр плансăр ĕçлени сисĕнет. Ку, тен, автăр ытти ĕçсем айне пулнăран та килнĕ пулĕ. Анчах произведенишĕн материала çирĕп план тăрăх сарни кирлех. Произведенире çирĕп рамкă пулмала.

Епĕр кунта „сомсем“, „арлансем“ çинчен çырса тăмăпăр. Вĕсем çинчен ыттисем çырса култарни те çитĕ. Анчах „Тăваллара“ лайăх образсем, метафăрсем, епитетсем пур.

Вĕсенчен хăшпĕрисем питĕ лайăх теме те йурат. Кăшт примерсем кӳрĕпĕр. „Хĕвеланăç йенче татăк-татăк мăнтăр тăхлан пĕлĕтсем çакăнкаласа тăраççĕ“ (17). „Кипекен сакăр урам, саккăрĕшĕ те ват карчăксем пек кукăрăлса йĕркесĕр сапаланса пĕтнĕ“ (41). „Симĕс йăмрасем ăшне пытаннă кас Малттин çине тĕксĕмĕн пăхнăн туйăнат“ (41). „Варман салхулă кăшăртатса тайкаланчĕ. Типĕ туратсем такăртатса калаçса илчĕç“ (86). „Купăста, кишĕр, çарăк, кăшман, пурте çĕр кăкăрĕн сĕткенне ĕмсе тăртаннă“ (96—97). „Салхулă шухăшсем унăн ик хул пуççийĕ çине тийенме пуçларĕçĕ“ (98). „Упа сурчăкĕ пек çăмăр пĕрĕхет“ (160) Кун пек илемлĕ, картинлă вырăнсем романра тата та нумай. Хăшсем ун пек вырăнсене „анимисăм“ те терĕç. Анчах ун пек калани çак çынсем искусствăн илемлĕ литературăн уйрăмлăхне пĕлменнине çеç кăтартат. Илемлĕ

литературăн хăйне тивĕçлĕ уйрăмлăх пур, ăна пытарма çук. Вăл унăн спецификинчен килекен уйрăмлăх.

Хăш çĕрте самахсене тĕрĕс çавăрса каламан вырăнсем те пур ĕнте. Сăмахран, — „к у ч ч е н е ç л е т“ (117 стр.) тенийех. Çапах та, автăрăн шухăшĕсем „к у ч ч е н е ç л е т“ тенипех пĕтмеççĕ, вăл малала рабочи·емпе еçхресченĕсем пĕр-пĕрне пулăшни çинчен калат. Ку вара тĕрĕс, анчах уншăнах „троцкисăм“ тесе калама май та çук. Çакăн пек тикĕс мар, тĕнкес вырăнсем романра татах та пур. Романăн 1-мĕш кĕнеки пĕтме те шĕвĕрленсе пĕтет. Хăшпĕр шухăшсем саланса кайнă. Малашне автăрăн произведенин тĕп шухăшĕсене лайăхрах çыхса çырма тăрăшмала. Автăрăн шухăшсене маттур йамшăк пек тытса пымала. Хыпаланма кирлĕ мар. Хыпаланса çырни кансĕрлет кăна.

Çапах та, йулашкинчен çакна калас пулат: тем пулсан та, „Тăвалла“ — чăваш ĕçхалăх литературишĕн пысăк утăм. „Тăвалла“ чăваш совет литературинче пысăк „пирсенчен“ (полотно) пĕри пулса тарат. Вал — ĕçхалăхсен сисĕмĕпе тулнă произведени, унта — кĕрешӳ, кивви кĕрешӳ урлă ишĕлсе пĕтни, çĕнни сарлакан, хайаррăн çитĕнсе пыни,— çавăнпа та, чăнахах та „р о м а н а в у л а с а т у х н ă х ы ç ç ă н. У х ă ђ в а н п е к к у л а к с е м п е т а т а ç и р ĕ п р е х к ĕ р е ш е с к и л е т“.

Шупашкар, май, 1932 ç.

Р е д а к ц и р е н: В. Худар статйинче редакци В. И. Красновăн „Тăвалла“ романĕн 1-меш кĕнеки таврă хускатнă ыйтусене сӳтсе-йавнă май пичетлет. В. Худар хăйĕн статйине те ку таранччен „Тăвалла“ пирки пирен критиксем, ăраснах В. Кудревцев, М. Мраньккя, Ç. Куташов, тапратса йанă шухăшсем тарах, вĕсене тишкерсе çырнă. Асăннă йулташсем хăйсен статйисенче:

1) „Тăвалла“ роман 1 кĕнеке кăна тухмала маррине асра тытмасăр, романăн малали кĕнекисенче пулас ĕçсене, геройсен сăнĕсене ку кĕнекерех вĕçлеттересшĕн пулса,

2) писателĕ малтанхи кĕнекинчи çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса парса, романа малала çырма йулташла пулăшма кирлине манса,

3) йанăшсем шыраса, произведенири уйрăм герой сăмахĕсене илсе, автăрăн шухăшĕ çавăн пек тесе ĕнентеренчи пулса, „троцкисăм“, „идеалисăм“, „олменшчинă“ тата ытти сăмахсемпе выљаса, тивĕçлĕ мар вырăнсенчех автăра тĕрлĕ оппортунисăмлăхпа (пĕр вăхăтрах пуринпе те) айăплама пăхни те сисĕнет.

В. Худар й·ш хăйĕн статйинче çав критиксен положенийĕсене шĕкĕлчесе чыллайĕшне тĕрĕс хак парса тухнă пулин те, хăйĕн тĕп задачине вĕçне çитиччен татса параймăст. Вăл автăрăн чăн-чăн чылайăх пысăк çитменлĕхĕсемпе хăшпĕр йăнăшесем çинче сахал чаранса тăнă. Çитменлĕхсемпе йăнăшсем пуррине асăнат те, примерсемпе çителĕклĕ кăтартса памаст.

В. Худар статйи роман пирки калана йулашки сăмах мар. Малашне татах статйасем пулмала, тишкерĕве „Тăваллан“ çак альманахра çапăнма тытăнма II-мĕш кенекипе çыхăнтарса пыма хатĕрленетпĕр.

Е. ЗАХАРОВ.

„Тăвалла“ çинченех.

В. И. Красновăн „Тăвалла“ романăн 1-мĕш кĕнеки.

Ку кĕнекене автăр 1930 çулта çырнă. Произведенире 1929 çулăн йулашкипе 1930 çулхи чăваш йалĕнче клас кĕрешĕвĕ йепле пынине, унтан хуçалахпа политикăн чи паллă кампанисене — тырă пухса хатĕрлес ĕçпе колхоз строительствин малтанхи тапхăрне сăнласа кăтартнă.

Произведени хыçĕнчи „Автăртан“ тенĕ татăкра каланă:

„Ку кĕнекене епĕ çамрăк хастарлă паттăрсемшĕн çырас ĕмĕтпе пуçланă... Пирĕн чăваш ĕçхалăх литератури умĕнче пысăк ыйтусем тăраççĕ. Вăл ленинисăм принципĕпе çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешесси. Вăл револуци тăшманĕсене çапса салатасси... Халхи историлĕ тапхăрти пурнăçа çутатса парса, пур çитменлĕхсемпе те кĕрешсе, пур вулакансем те, çыракансем те тача çыхăнса ĕçлес пулат. Унсăрăн чăваш ĕçхалăхĕн илемлĕ литератури ӳсес çук.

Пĕрремĕш кĕнекен çитменлĕхĕсем нумайи паллах. Мĕншĕн тесен ăна питĕ йавăр условисенче çырнă. Обчăлă ĕçрен халтан кайса тавăраннă хыççăн, çывăрас вырăнне, минкренĕ пуçпах сăрхăнтăрса çырнă. Вал вăхăтра Вăрнар райком парти çекретарĕ пулса ĕçленĕ. Ку ĕç мĕнле йавăрри каламасăрах палле ĕнтĕ“.

Чăнах та, „Тăвалла“ романра çитĕнӳсемпе пĕрле пысăк çитменлĕхсем те сахал мар Вăл çитменлĕхсем романа идеологи йенчен те, форми йенчен те тĕпченĕ чухне палăраççĕ. „Автăртан“ йатлă халĕ кăтартнă татăкрах йанăш пур. Унта калaнă:

„Р е в о л у ц и   т ă ш м а н ĕ   х ĕ ç п ă ш а л   т ы т с а,   у р р а   к ă ш к ă р с а   килекен тăшманĕ çеç мар, пайан вĕсем апла килес те çук“... тенĕ. Кун пек сăмахсенчи йанăша Куташов Ç. статйинчех кăтартнăччĕ („Сунтал“, 1932, II).

Романра чăваш йалĕнчи пурнăçа сарлаканăн илсе кăтартнă. Сăнласа кăтартнă çынсенчен палăраххисем; Малттин, Саñук, Çеркуни, Палук, Кĕркуç, Кулине, Кĕçтук, Упана, Ухăлван, Михетер, Генă, Нина тата ытгисем те. Малтанхи виççĕш çинчен автăр калат: „Виçĕ тус пĕр-пĕрне шыраса тупрĕç. Виçе пĕчĕк çырма пĕрлешрĕç. Анлă çырма кĕр кĕрлесе а н а т а л а й у х р ĕ. Ансăртран шыранран ш ы в а к у с с а а н н ă ч у л м ĕ н в ă л у н п е к к ĕ р л е к е н ш ы в ш ă н? — Çӳпĕ. Çул çинчен пурне те тасатат, пурне те аркатат хăватлă шыв... Çапла вăл пысăк шыв. — Вăйлă...

Çĕнĕ пурнăçшăн пыракан клас кĕрешĕвне, героикăлă ĕçе çакăн пек çырма шывĕ кĕрлесе анатала йухнипе пĕр пек туса кăтартни — йурăхсăр йапала. Ăна автăр хăйех сисет, — малала вăл „анатала“ йухнине „тăвала“ туса кăтартат: „Кирек мĕнле пулсан та, вĕсен çулĕ тăвала. Тăвала улăхма нумай

вай-хăват, хастарлăх кирлĕ. Нумай, нумай вĕренни кирлĕ. Кивĕ пурнăçпа кĕрешес тесессĕн, унпа кĕрешмели меслетсене аван пĕлес пулат. Йăнăшсем тусассăн, вĕсене вăхăтра тÿрлетме тăрăшас пулат".

Паллах ĕнтĕ, ку йулашки таклаштару вырăнлăрах. Ахаљ мар, çĕнĕ пурăнăç тăвассине В. И. Ленин „çÿлĕ ту çине хăпарнипе" танлаштарнă Апла пулсан, малтанхи „анатала" йухакан шывпа танлаштарни кĕретĕнех килĕшÿсĕр.

Малттин — „Тăвалла" романăн 1-мĕш кĕнекинче тĕп вырăн йышăнса тăрат. Автăр кăмăлĕ пур тĕлте те ун йенне туртăнни — кĕретĕн палăрат. Унăн чĕлхи-çăварĕпе нумай вырăнта автăр хăйĕн шухăшĕсене уçса кăтартса парат. Малтгине ыгла та килĕштерне пирки, автăр ун çинчен кирлĕ-кирлĕмарринех пĕлтерет. Сăмахран, романăн йулашки икĕ сыпăкĕ — „Мусквара" тата „Ăçта каймастăн шухăшпа" йатлисем — вулаканшăн нимĕн тума та кирлĕ мар. Вĕсем чăннипех Чехăв каланă „пемен пăшалсем" пулса тăраççĕ.

Малттин — батрак ывăлĕ. Унăн ашшĕне — вăл Ухăљван кулак патĕнче тарçăра пурăннă чухне, хуçа хăйĕн йăвăр туйипе пуçран çапса суранланă та, вăл вара больницăра вилнĕ. Арăмĕпе аллинчи ачине Ухăљван ыйткаласа çÿреме кăларса йанă. Амăшĕ выçлăх çул вилнĕ, ачи Малттин — чĕрĕ йулса, çитĕнсен Шупашкарти рабфакра вĕренсе тухнă. Унтан Мускаври ВУЗ-а вĕренме кĕнĕ. Кĕнекере Малттин Мускавран уйăх çурăлăх Мăн Кипек йалне таврăнсан ĕçленине кăтартнă.

Малттин — хастарлă çамрăк комсомолĕс. Вăл револљуцишĕн, ĕççыннисемшĕн вăйне хурса ĕçлеме хатĕр, анчах унăн пысăк çитменлĕхĕсем пур. Вăл çитменлĕхсем романра аван палăраççĕ, анчах автăр хăй геройĕн аван йенĕсене анчах курат, мĕлке йенне вăл сисмест. Çакăн пирки вара, Малттин çитменлĕхĕсем „Тăвалла" романăн çитменлĕхĕсем пулса тăраççĕ.

Ака илер-ха романăн „Саљукпа Малттин" йатлă сыпăкне. Ку сыпăкра епĕр Малттинпе те, Саљук та паллашма пуçлатпăр.

Районнăй уполномоченнăйа кĕнĕ Саљук („Мускавра" йатлă сыпăкра, кĕнеке вĕçĕнче каланă тăрăх, вăл шахтор пулнă иккен) пуçа усса ларнине курсан, Малттин ăна хускатса çĕнĕ вăй кĕртме тăрăшат. Анчах „пеççимисăм чирĕпе чирленĕ" Саљук çăмă лăнах парăнмаст. Йулашкинчен вăл акă мĕн персе йарат: „А вçотки йалта нумай-ха çитменлĕхсем, çав-тери нумай. Й а л т а х а л ĕ р е в о љ у ц и п у л м а н п а п ĕ р е х..."

Çакăн пек елекле сăмахсене Саљук комсомолĕс, хăй кайран каланă тăрăх, кулак ывăлĕ Самсон учитĕл аллине лексе, ун хыççăн кайма пуçланă пирки анчах лаплаттарса хума пултарнă. Мускаври ВУЗ-ра вĕренекен Малттин комсомолĕсăн çавăн пек елек сăмахсемпе шухăшсене çапса çĕмĕрме йăвăр та мар темеле. Анчах, елеке çапса ватас вырăнне Малттин мĕн тăват? Вăл — куратăр-и! — „тарăн шухăша кайрĕ". Вăл акă мĕн çинчен шухăшлат:

„Епĕ батрак ывăлĕ. Малтан пионер, кайран комсомол хуранĕнче вĕресе пиçĕ. Кайарахпа хам хытă тăрăшнипе ВУЗ-а

лекрĕм. Мĕн чухлĕ батрак, чухăн ачисем вĕренейменнисем? Çавтери нумай, анчах комуниссен партийĕ большевиксене вĕрентес ĕç çине хытă пăхат... Мĕн чухлĕ çитменлĕх, мĕн чухлĕ, мĕн тĕрлĕ тăшман, çĕлен-калтасем пек чашкăрса тăраççĕ. А х, п у р т е х а м п е к п у л с а с с ă н...“

Кипек йалĕнчи мĕскĕн философăн — Малттинĕн кук пек каппайчăк сăмахĕсен пĕтĕм кулăшлăхĕпе киревсĕрлĕхне автăр хăй те сисмест! Айалтан туртнă сăмахсенче — ытла та пысăк йанăшсем палăраççĕ. Вĕсем акă мĕнре: 1) çăмăлттай Малттин, куратăр-и, ВУЗ-а „хăй хытă тăрăшнипе“ анчах лекнĕ-мĕн; 2) нумай батрак. чухăн хресчен вĕренейменнине куракан „философ“ Аслă Октабĕр çĕнтерĕвĕсем пирки мĕн чухлĕ нумай батрак, чухăн хресчен вĕреннине курасшăн, çавăн пекех тата, — 3) „таран шухăша кайнă“ Малттин „мĕн чухлĕ çитменлĕх“, тесе шухăшланă вăхăтра çитĕнӳсем çинчен нимĕн те шухăшласшăн мар, 4) „А х, п у р т е х а м п е к п у л с а с с ă н“, тенĕ сăмахсен йурăхсăрлăхĕ такама та паллă.

Аслă Октабĕр хыççăн 12 çултан „хам хытă тăрăшнипе“ анчах ВУЗ-а лекрĕм, текен „батрак“ Малттине акă мĕн астутармала: тӳсмеле мар суйатăн! Патша саманинче „хытă тăрăшакан“ батрак сахал пулман, вĕсем Малттин пек каппайчăк та пулман пулĕ, анчах вĕсенчен ВУЗ-а кĕрекен нумай пулнă-ши? „Ах, пурте хам пек пулсассăн!“ тесе кулăшла, суккăр автан пек сикиччен — революцицченхи саманара ĕççыннисем, батраксем те вĕсен хушшинче, — йепле йăвар условисенче пурăннине пĕлме кашт та пулин тăрăшсан, темĕн чухлĕ аванрах пулĕччĕ.

Кăтартнă сăмахсене вуланă хыççăн, вулаканшăн Малттинĕн çăмăлттайлăхĕ, каппайчăклăхĕ çителĕклĕ паларма пуçлат.

„Да, Саньук, йуратнă тантăшăм, йăвăр!“ — тет Малттин малала. „Кулаксем кăкланман-ха.. Анчах кунта алла усса танипе ĕç тухмаст. Ă р а с л а н п е к ч ă р м а л ь с а, ă м ă р т-к а й ă к п е к в ĕ ç с е, п ă в а н п е к ч ă р с ă р л а н с а, в ĕ с е м п е п и р ĕ н х ы т ă к ĕ р е ш е с п у л а т“.

Кулаксем кăкланман. алла усма йурамаст, — ку сăмахсем тĕрĕс. Анчах „ăраслан“, „ăмăрт кайăк“, „пăвьн“ йепле йурăхлă сăвлăхсем пулни çинчен кайарах каламала пулĕ.

Малала, Малттин, тата калат: „Чухăна çийеле кăларас тесессĕн, епĕр, комсомолĕссем, алăсене усса, ланчашкаланса тăмала мар. Чухăнсен групписене, вĕсен пухăвĕсене авторитетлă тума тăрăшас пулат“. Ку тĕрĕс, анчах комуниссен партине Малттин пĕтĕмĕшпех манса хăварат. Тĕлĕнмеле! „Чухăнсен групписене, вĕсен пухăвĕсене“ Малттин партисĕр йепле „авторитетлă“ тума шухăшланă-ши? Ку ĕнтĕ каллех суккарлах..

Кун хыççăн Малттин çинчен автăр калат: „Малттип хĕрсе кайрĕ... Кăшт м ă к ă р ă л с а т у х н ă т у т и ч ĕ т р е т. Ун чĕлхи-çăварне революци йурри не йурлама анчах тунă темеле“.

Малттин йурринче урмăшнă сасă та илтĕнме пултарнине епĕр куртăмăр. Кунта кашт çыру техники çинчен асăрхаттармала. Малттинĕн „мăкăрăлса тухна“ тутине асăннă хыççăнах, — ун чĕлхи-çăварне революци йуррине йурлама анчах тунă темеле“,

тесе çырни килĕшӳлĕ йапалах мар: вулакана вăл — „мăкăрăлса тухнă тутапа анчах революци йуррине йурлама май пур иккен“, тесе шухăшлаттарма пултарат. Тата пĕр çавнашкал çитменлĕх йунашарах. „Да-а: вăт пурте сан пек пулсанччĕ вăл!“ — тесе мухтанă Саҫук сăмахĕсем хыççăн, хĕрсе кайнă Малттине чарăнма та пĕлмест: „Главнăй, хамăр, мĕншĕн кĕрешнине лапăх ăнланса илес пулат. Ăна идеологи теççĕ (!?). Çав пролетарин идеологине хытă ĕмес пулат“. Унтан автăр кăтартат: „Саҫук чикаркă чĕртрĕ те, ĕмсе илсе, Малттинпе иккĕшĕн хушшинче йăсăрлантарчĕ“. Кун пек çырнине, паллах, мухтамала мар...

Романăн ытти сыпăкĕсенче — „Кама мĕн тивĕç“, „Асту ан ман“, „Вăтăр кĕмĕл пĕр тевет“ тата урăххисенче те Малттинĕн кун пек йăнăшсемех палăрмаççĕ.

Саҫук, шахтор пулнă комсомолĕс, йалти çирĕп пурнакан хресчен хĕрне — Верука — качча илнĕскер, малтан пуçне усса „пеççимисăмпа“, шанчăк сахаллăхĕпе чирлекелет, анчах кайран йусанат те, арăмĕ хирĕç тăнине пăхмасăр, тумали обчăла ĕçсене туса пырат.

Малттин ун патне малтанхи хут пырсан, Саҫук ытла та салхулă ларат. „Район уполномочĕннăйĕ“ унăн пулас килмест, — „Пустуй мана унта кӳртнĕ.. Тӳррипех каласан, ĕçлеме йăвăр, пулăшакансем сахал, ывăнтăм... Хресченсен тырă сахал. Рикран хесеççĕ. Ку, ман шупа, пĕртте тĕрĕс ĕç мар пек. Вĕсене çӳлте приказ парса ларма питĕ аван, кунта, есĕ пур, ĕçле тарна йухтарса“. Малттин,— кулаксен тыррине тупса илес пулат, — тесен, — Саҫук калат: „Чĕлхепе калама пит аван, — пырса туп-ха. Пуçне çурса парахĕç... Сут?... Сутран хăраççĕ тетнем есĕ?.. Сут ĕçне вĕсен йевĕрлисемех — бӳрократсем кĕрсе ларнă...“

Малттин — пирĕн пур ирсĕрлĕхсемне те кĕрешес пулат, тесен — Саҫук çапах парăнасшăн мар, вăл хайĕннех чăсат те, киревсĕр сăмахсемех персе йама тытăнат: „А вçогки йалта нумай-ха çитменлĕхсем, çав тери нумай. Йалта халĕ революци пулманпа пĕрех...“

Йулашкинчен тин Саҫук... „вăрăман сывласа... иккĕленӳлĕ шухăшсене кăларса йачĕ: „Да-а! Вот пурте сан пек пулсанччĕ вăл!.“ Анчах Саҫук çаплах хирĕçме чарăнасшăн мар. — „Есĕ пит аван калатăн, вçо это тĕрĕс. Чухăнсен пуххине кайса пăх-ха, пурте кулак йуррине йурлаççĕ... Сăмахпа пит те аван. Есĕ каласан ман чĕре темĕскерле вĕчĕлтетсе кайат. Анчах вара ĕç калама çук нумай, йăвăр, пулăшакан çук... Вĕсене унта, çӳлте, калама пит те аван. Ак кунта, йалта?..“

Кайран тин Саҫук Малттинпе килĕшет: „Чăн, тусăм, чăн — епĕ тĕрĕс мар, ултавла çулпа кайма пуçланă иккен“. Вăл хăйĕнчен хăй тĕлĕнет. — „Йепле-ха епĕ çав пустуй çĕрĕк Самсун учитĕл хыçĕнчен... Пуйан ачи, паллах, ĕлĕкхи саманашăн“. — Ваҫкă,— тет Саҫук Малттине, — спаçибă сапа, ман хунара çутатса йанăшăн. Епĕ санпа, малашне те санпах. Ан айăпла, хам та хама айăплап“, тет вăл.

Колхоза ҫырăннă чух та Саҙук каллех туртăнкаласа тăрат. „Еп хам ҫав-тери хавас, ун ҫинчен иртнĕ пухура та епĕ каларăм, анчах ҫав Верукпа тăн тухрĕ.. Чисти аптăрамала... Ку Верукпа ăм-м-ăм-м. Епĕ ăна ҫаврайас ҫук. Уҙки пулăшсан ҫеҫ... Ҫыр, „Калина колхозне епĕ хавассăн кĕретĕп.. “. „Шахтор“ пулнă Саҙука ҫакăн пек туртканнни питех килĕшмест. Кайран, автăр каланă тăрăх, Саҙук „пит чипер ĕҫлеме“ пуҫланă.

Ҫ е р к у н и, „виҫĕ тусран“ пĕри — Кипек шкулĕнчи ҫĕнĕ учитĕл-комсомолĕс, 21 ҫулхискер. Выҫлăх ҫулччен кĕтӳҫ пулса ҫӳренĕ. Хăрушă 1921 ҫулта Мускава ҫитнĕ. Унта прийутра тăрăшса вĕреннĕ, 1928 ҫулта техникум вĕренсе тухса учитĕле кĕнĕ. Обчăла ĕҫсене хавасланса хутшăнса ĕҫлет. Кипек шкулĕнчи виҫ учитĕлрен тепри — ватăлнă хĕр Софйă Павлăвнă, Совет майлăскер, виҫҫĕмĕшĕ — Самсун, революцичченхи самапара гимнази вĕренсе тухнă ҫĕрме пуйан ҫын ывăлĕ — Совет влаҫне курайманскер.

Палкаваш председателĕ П а ҙ у к — Ҫеркуни каланă пек — чухăн пулсан та, хăравҫă. Пуйансенчен хăрат. Ахаҙ мар ун ҫинчен пуйан Ухăҙван ывăлĕ Гена пуп хĕрне Нинăна калат: „Йалсовет пуҫлăхĕ Паҙук хамăр ҫын. Ачи пултараканскер, унпала ĕҫ тума пулат“. Клас ҫулйĕрне вăл ҫирĕппĕн тытса пыраймаст. Йалти кулаксен ҫпискине вăл туман. Малттин унран — „кулаксен ҫпискине пар-ха“, тесе ыйтсан, Паҙук ăна — „кив кĕнеке хуплашĕ ăшĕнчен йатсене ҫырнă хутне“ кăларса парат. Малттин: „Поҫелҙоннăй ҫпискă вĕт ку, есĕ мана кулаксен ҫпискине пар“. Паҙук, — „Ун пекки ҫук... Ҫырман“. Малттин: „Миҫе ҫын сан индивидуалă налог тӳлесе тăраҫҫĕ?“ — „Вуннă“. Малттин: „Ултă ҫĕр ҫурт хуҫинчен вуннă пит те сахал вăл...“

Тырă раскладки комиҫҫинче, Кулине пуйан Ухăҙван хăйĕн тыррине пытарни ҫинчен каласа кăтартсан, Паҙук калат: „Ху куҫпа курман вĕт есĕ. Ҫапах ун ҫинчен кунта каласа паран. Иван Иванчă кайран хăна сута пама пултарат“

Малттин комиҫҫи ларăвĕнче Ухăҙван ҫине 500 пăт тырă хурас тесен, пур членсем те кунпа килĕшеҫҫĕ, пĕр Паҙук ҫеҫ нимĕн те шарламаст. Малттин: „Ну, Паҙук, есĕ мĕнле пăхатăн?“ Паҙук: „Ара, епĕ комиҫҫи члене мар, вĕт. Вăл сирĕн ĕҫ, епĕ хам сăмаха каларăм“ (тет вăл, никам ҫине пăхмасăр). Малттин: „Кунта пĕчĕк ача пек вăл сирĕн ĕҫ, тесе ларни пĕртте килĕшӳлĕ йапала мар... йежĕли епер йăнăшатпăр так — кала...“. Кун хыҫҫăн тин, „Малттинĕн вĕри сăмахĕсем Паҙук ҫумне ҫилĕмпе ҫыпăҫтарнă пек ҫыпăҫсан“, Паҙук: „Вăл кулак, епĕ ăна нихăҫан та хӳтĕлеме тăрăшман“ тесе хурат. Ҫак кăтартнă картинăсенчен Паҙук кĕлетки пирĕн ума чĕрĕ пекех тухса тăрат.

К ĕ р к у ҫ — „Шуррисемпе ҫапаҫни“ йе „Вутра“ произведенири ҫынах. Кунта ăна чи малтан „Кама мен тивĕҫ“ йатлă сыпăкра кăтартнă. „Граждан вăрҫинче тимĕрлевнĕ“, — тесе аса илет ун ҫинчен автăр. Тырă раскладки комиҫҫин ларăвĕ пырат. Кĕркуҫ темле тăшмансемпе вăрҫнине аса илчĕ. Те вара ҫавăнпа, Кĕркуҫăн чĕрес пек чĕри лăпланас вырăнне сиксе вĕреме тытăнчĕ“.

Есер пулнă пуйан Михетер сасси „купасăн çӳхе хĕлĕхĕ пек, çепĕç, çийелтен найкăлтатнине“ илтнĕ хыççăн, Кĕркуç в рилен‹е кайат:

— „Ес тăшман, еп палларăм сана!“ — т›рĕ хайаррăн Михетер умне сиксе ӳксе. Çирĕп чăмарĕ хурат пӳрчĕн лутра сĕтелĕ çине йăвăррăн персе анчĕ.

— Тух, тух, пухуран, шăммуна шеллетĕн тĕк, тух! Пирĕн хушăра сан ваљљи вырăн хатĕрлемен!... Мантăрам есĕр сирĕншĕн кам йун тăкнине! Хаљ кирлĕ мар-им?..“ „Учителпе Кĕçтук хĕрелсе, нервăланса кайнă Кĕркуçа аран ӳкĕте кӳртеççĕ“.

Паттăр Кĕркуç граждан вăрçинче йепле маттур çапăçнине пире Краснов „Вутра“ йатлă произведенире кăтартнăччĕ. Çав кĕнекере (52—63 страницăсенче) сăнласа кăтаргнă Кĕркуç, тата Керим паттăрлăхне палартакан епизăда „Тăвалла“ романа та (155—164 стр.) кĕртнĕ Чăн, çамрăксене — Кĕçтука, Малттине, Улљкине тата ыттисене — граждан вăрçинчи героикăна астутарни пит кирлĕ.

Кунта акă мĕнле паллă туса хăвармала: граждан вăрçинчи паттăртан, „Вутра“ произведенири Кĕркуçран „Тăвалла“ романри Кĕркуç чылай инçе тăрат. Пĕр йенчен, Кĕркуç нервăланса йурăхсăра тухма пуçланă. Çӳлте кăтартнă сценăсăр пуçне вăл тата çак картинăран курăнат. — Комсомолĕссемпе йалти активиссен пĕрле туса иртерекен пуххинче Ухăљзан таврашĕ çинчен калаçнă чух, Кĕркуç сăмах илет те, çакнашкал çĕмĕрлет:

„Вĕсен çинчен калаçса çăвар тути те сайа йамала мар. Чортсене, епĕ вĕсене чĕреле çатма çинче жарит тумала. Ун пек влаç çукки пĕтерет. Çапас пулат! Çапас! . — Тимĕр пек çирĕп, пысăк чышкине чăмартаса Çĕмйун сăмси патне çывăхартрĕ: Ак! мĕн ку!? Батрак чышки çав. Комсомол ĕретне кулак йуррипе вырлама ирĕк парас çук...“

Ие тата: „лешсене адмотдела ăсатрĕç. Ун пек ирсĕр шуйтансене чĕрĕлех çисе йарас килет. Влаç çук, епĕ вĕсенчен арăма ваљљи урат çума мунчала туса памала. Ах, чорт, побери!..“

Кунта вырас писатĕлĕн Бутковскин „Девятьсот тридцатый“ йатлă романĕнче („Молодая Гвардия“ издатĕлстви, 1931 çулта кăларнă, кĕнекинче 357 страница, хакĕ 3 тенкĕ) Ветров йатлă „Левак“ калани аса килет:

„Я не могу... как начну ломать классового врага, удержу во мне нет. Даже затмение какое-то находит...“

Керкуç пирки Кутăшов Ç. тĕрĕс калат:

„Кулаксемпе кĕрешес тĕлĕшпе вăл (Кĕркуç) стихийла, анархисла, парти кăтартнă метăда пĕлмесĕр, çуйăхат. . Кĕркуç кĕрешӳ çинчен анархисла йе бандитла шухăшлат“ („Сунтал,“ 1932, II).

Тепĕр йенчен, Кĕркуç çинчен „Тавалла“ романра акă мĕн пĕлетпĕр:

1) Револљуциччен Кĕркуç пуйан шухăшпа анчах пурăннă-мĕн. Акă мĕн вăл аса илет: „Çамрăк чух йепле йун вĕрет. Пĕтĕм тĕнчене çаралăнах çавăрса илес пек... Ăçта Ухăљван? Унтан пуйанраххисене те хăваласа иртсе кайас пек... Çак алăсене шаннă вĕт... — çуркаланса ларнă

хура аллисем ҫине йӗрӗнсе кулам пек туса пăхрӗ“ (Кӗркуҫ). — „Пӗчӗк ҫурт туса, ун йӗри-тавра сат лартса, пахчаҫимӗҫ ӗрчетсе тутă пурнăҫ пуҫласа йарас, тенӗччӗ... Вара, мӗн ватăлса виличченех шăнкăрчăсем пек чӗвӗлтетсе, ăшăнса пурăнас тесе шухăшлавăччӗ. Империалисăм вӗрҫи сиксе тухрӗ. Унта илсе кайрӗҫ... Мӗнле кăна нуша курмарăм-ши? — Камшăн?.. Вот Ухăљвантан иртсе кай! Варҫă вăхăтӗнче вăл пушшех те пуйса кайнă.— Кӗркуҫ хăйне хăй калаҫса нумай сӳтсе-йаврӗ анчах унăн ӗмӗтленнӗ ӗмӗчӗсем пӗрин хыҫҫăн тепри ирӗлсе саланса пычӗҫӗ“.

Кун пирки тӳрех каламалла: романа вулакан ӗҫҫынни — Кӗркуҫ пуйса. Ухăљвавран иртсе кайайманвишӗн пӗртте кулянса, Кӗркуҫа хӗрхенме пултараймаст. Ҫав вăхăтрах, вулакан ӗҫҫыннин чӗри Кӗркуҫа асăрхамалах сивӗнме пуҫлать. Калама йăвăр: кăна автăр пӗлсе, ăслă-тăнлă пуҫпа тунă йе хăй сисмесер, ытлашши васкачипе, туса хунă. Вырăсла ун пеккине „развенчание героя“ теҫҫӗ.

2) Нервăланнăран пулас, „Тăвалла“ романри Кӗркуҫ йӗркелӗ шухăшлама пултарайми пулнă. Тырă пуҫтарасси ҫинчен сӳтсейавнă чухне Кӗркуҫ тарăхсах Михетер пек йӗкехӳре — ҫăтăрҫăсене ҫӗмӗрсе, — „капиталиссем вăрҫăпа кчлесшӗн, ӗҫхресченӗ ытлашши тыррине Совета памалах, паттăрсем кирлӗ, еп хам тен ыранах кайап“ — тесе тырă пухассишӗн тăрат. Пухнă тырри (1200 пăта йахăн) Нурăса илсе кайнă чух та Кӗркуҫ сул ҫинче малтан чиперех пырат. „Урапа ҫинче ларса пыракан Кӗркуҫ пайан канат. Тапак тивертсе йачӗ те, йӗри-тавра ҫанталăка ирӗккӗн, ӳпке тулли сывласа савăнса пăхрӗ. — „Ах! Мӗнле вăл пурнăҫ илемлӗ!?. Ҫакăнтах пурăннă, ӗҫленӗ, ӳснӗ, йепле-ха епӗ ăна сăнаман?“.

Анчах, кăшт вăхăт иртсенех ӗҫ пӗтӗмпех улшăнат. „Салхулă шухăшсем ун ик хулпуҫҫи ҫине тийенме пуҫларӗҫ... Ирӗксерлесех шухăшсем йатăнса кӗреҫҫӗ...

— „Мӗншӗн кӗрешнӗ!? — тесе ыйтрӗ вăл темшӗн хăйӗнчен хăй: за что-о?! — тепӗр хут вырăсла хушрӗ“. Кӗркуҫ пуҫӗнче икӗ хире-хирӗҫлӗ шухăш кӗрешме тапратаҫҫӗ. „Ывăнма пӗлмен хастарлă чӗри“ ăна калат:

„Есӗ пуҫласа йанă кӗрешӳ (Кӗркуҫ пуҫланă-ши ăна вара? — Е. З.) пӗтмен... Кӗрешӳ халӗ вăйланнă-ҫемӗн вăйланса пырат. Тăшман аманнă, анчах вăл вилмен... Нумай авăрланса кӗрешмеле Халӗ пирӗн фронт кашни йалтах, кашни ҫуртрах“. Анчах кăна хирӗҫ урăх шухăш калат: есӗ, Кӗркуҫ, хăвăн пурнăҫна та улăштарас тесе кӗрешрӗн вӗт. Государствă сана пулăшат, ҫапах та санăн пурнăҫу ҫăмăлланмаст. — „Арăмпа та аптрамала, ҫулсерен ача тăват. Йӗпе ҫиве сапа тенӗ пек, таҫтан тухат...“

Граждăн вăрҫи паттăрӗ Кӗркуҫ, Аслă Октябӗр хыҫҫăн 12 ҫултан, ыттисемпе пӗрле хăй те вăйне хурса пухтарнă тырра район центăрне леҫме кайнă чух ҫакăн пек — „За что-о?!“ тесе ыйни питех килӗшмест: Кӗркуҫа хăйне те килӗшмест, ăна сăнлакан автăра та килӗшмест.

3) Колхоз тăвас ĕçре Кĕркуç активлăн ĕçлени куранмаст. 1929 çулччен вăл колхоз тăвасси çинчен шухăшламан та Çак çул Кĕркуç пуçне колхоз шухăшĕ ăн:ăртран пырса кĕнĕ пек кăтартнă. Вăл акă йепле пулат: — Нурăса тырă леçме кайнă чухне, „хĕрлĕ обоз“ пĕр çырмана çитсе анат. „Кĕркуç лашине чарчĕ. Вăт ку ĕнтĕ чăваш Капказĕ. Хаљ, мĕнле улăхмала ĕнтĕ?“ Унтан Кĕркусăн çирĕм пăт тийенĕ лавне халăх кăткă пек сырăнса илет те, лаши мĕнĕпех тĕксе хăпартат. „Мĕнле вăл ертел вăйлă“! — теççĕ хăшпĕрисем. — „Чăнах, пĕччен пулсан ку лавпа лашапырши татăлса кайма пултарат“, — тесе хурат Кĕркуç та. Çакăн хыççăн вара Кĕркуç пуçне колхоз шухăшĕ пырса кĕрет иккен. „Кĕркуç малта. Халĕ вăл веçех иртнĕ пурнăç çинчен шутлама парахрĕ. Пĕччен. пĕр вăйпа, пыршă татăлаччен ĕçлесен те çăмăл, канăçулă пурнăç тума май çуккине вăл хăйĕн çанçурăмĕпе тахçанах сăнаса пăхнă. Ун пуçĕнче çĕнĕ шухăшсем чăрмантараççĕ. — Колхоз тусан мĕнле пулĕ-ши? Çавăнтах ту айккинче Машкă мĕнле нушаланнине аса илчĕ. „Мĕнле вăл туртса хăпартасшăн кайри урисемпе тĕрĕнсе тăчĕ.. Пĕççин шăнăрĕсем вĕрен пек пĕтĕрĕнсе хытрĕç. Çапах та вăл улăхаймарĕ... Вунпĕр çын кăна вĕт, аллисене урапа çумне çыпăçтарчĕç. Урапа хăй тĕллĕн улăхнă пекех çатăртатса хăпарчĕ Вот мĕнле вăл ертеллĕ вăй“.

Çакăн пек кăтартнă 1918 çулта граждăн вăрçинче активлăн кĕрешнĕ Кĕркуç пуçĕнче, 1929 çулта колхоз шухăшĕ пуçланнине: вăл — куратар-и? — Çырмаран хапарнă чух ертел вăйне курнă та, колхоз çинчен шухăшлама пуçланă!

Пĕтĕм етемлĕх историнчи палла ĕçе — коллективизацийе — çакăн пек, Совет сойузĕнчи ĕçхалăх хуçалăхĕпе культури çителĕклĕ ӳсние асăнмасăр, комуниссен партипе Совет влаçĕн коллективизаци тума хатĕрленес ĕçри ăнăçлă политикине асăнмасăр, колхоз йухăмне айакка хаварса, „паттăр Кĕркуç пуçне çырмаран хăпарсан, — за что боролись! — тесе кăшкăрнă хыççăн, таçтан, ăнсартран, колхоз шухăшĕ пырса кĕнĕ пек сăнласа кăтартни — калама çук пысăк çитменлĕх.

Кунта пире пĕр критик коллективизаци çинчен çырнă вырасла илемлĕ произведенисем çинчен калани аса килет:

> „Произведение, посвященное великому историческому процессу переделки крестьянского мелко-буржуазного хозяйства, не может не быть произведением о партии, так как только изображение организующей и руководящей роли коммунистической партии и может показать во всей глубине процесс движения масс к социализму. Тем не менее многие авторы, создавшие произведения о коллективизации деревни, все еще изображают этот процесс односторонне, надуманно. Они берут деревню, находящуюся в глуши, почти изолируют ее от советской действительности... и показывают „стихийный“ рост колхозного движения. А партия появляется на сцене только к концу произведения, чтобы похлопать по плечу активистов за хорошую работу“.

Колхоз шухăшĕ Кĕркуç пуçне çырмаран хăпарсан ăнсăртран пырса кĕнĕрен пулмала ĕнтĕ, вăл ун çинчен питех шухăшласа çунни курăнмаст. Комсомолĕссен йалти активиссемпе пĕрле туса иртерекен пухăва Кĕркуç пырса кĕрсен — унран ыйтаççĕ: „Кĕркуç, итле-ха, колхоз тăватпăр вĕт, вăтăрăн çырăнчĕç ĕнтĕ“. Кĕркуç... тĕпелти пĕчĕкçĕ кутник çине вырнаçрĕ. „Ну, есĕ мĕнле!“ — „Йа сукласçĕв! Ман çул çавăнта пăрăнат, лашам та çавăнталах сĕтĕрет“.

Тӳрех каламала: „Шуррисемпе çапăçни“ йатлă произведенине пĕлекеншĕн Кĕркуç колхозшăн çакăн пек ни ăшă, ни сивĕ марри кĕтмен йапала! вулакан çакăнта тин Кĕркуçа пĕтĕмĕшпе ăнланса илет. Чăн, кун пек типсем пулнă, халĕ те пур. Вĕсем куллен 1918 çул çинчен анчах шухăшласа çӳренипе, хаљхи социалисăм строитĕлствине активлăнах хутшăнаймаççĕ. Кĕркуç — çавсене пит çывăх тăрат. Кун пирки Кутăшов Ç. тĕрĕс калать: „Илер акă Кĕркуçа. Вăл хĕрлĕ партизан пулнă, анчах ытла та кăнттам йулнă. Унăн нимĕнле те пĕр тĕрлĕ политикăлă позици çук... Кĕркуç вăл пĕтĕмĕшпе революци урапи çинчен ӳксе йулнă çын, револьуциран татăлса, активлă кĕрешӳпе ĕçрен уйрăлса йулнаскер. Вăл хăйне тахçан пулнă револьуцилĕ кĕрешӳ кунĕсем çинчен аса илсе çеç йăпатат. Унăн пулнă кĕрешӳ романтисамлă культ пулса тăрат, вăл пайанхи кун револьуцине ăнланаймаст, хăй тавра мĕнле процесс пынине курми пулнă“.

Кулине — пуйан Ухăљван патĕнче тарçăра пурнакан хĕр. Ĕçĕ унăн пит нумай. Гевăна вăл калат: „Ĕнине сумала, кĕтӳ хăваламала, апат пĕçермеле, чĕпписене çитермеле, — ăçтан, ĕнтĕ пĕччен пурне те ĕл ерттĕп“. Кулине çĕмрен пек çӳресен те, пурне те туса ĕлкĕреймест. Йара куна ура çинче, вĕçĕмсĕр ĕç... Çĕрле те унăн куçĕ çурçĕрччен хупаймаст: йе ачи (хуçин — **Е. З.**) йĕрет, хăнисене те пăхмала, ăна кăна тумала. Мĕн тĕрлĕ йăвăр пулсан та, мĕскĕн Кулине чăтнă. — „Ăçта кайас тетĕн-ха тăлăхăн, ладнă тата çитерет, ланчашкине те пулсан — кĕпе пекки тахăнтарат“, тесе шухăшлат вăл, пурнăç йăвăрĕ хытăран хытă çапса хĕстернĕ хушăра.

Автăр Кулине çинчен çакăн пек çырни унăн йăвăр пурнăçне аван сăнласа парат. Анчах малала Кулине сăнлăхĕ ĕненмеле мар пулса тăрат. Вăл мĕнтен килни уççăнах курăнса тăрат: реалисăм метăчĕпе усă курса, тарçăра пурнакан чăваш хĕрне чăн пурнăçри пек, тĕрĕс кăтартас выранне, автăр, „сентиментал ă романтисăм“ текен реакцилĕ метадпа усă курса, пурнăçа „суйа илемлĕхпе“ илемлетсе сăнлама пуçлат. Ака мĕн вулатпăр „Пахчари чечексем“ йатла сыпăкра йăвăр условисенче асапланса пурнакан тăлăх Кулине çинчен: вăл хĕрсемпе пахчара йешĕл курăк çинче выртса йăпанат те, кайран — „тăрсан-тăрсан савăннипе, хуллен, çинçе сассипе йурласа йачĕ. Кулинен черчен сасси кĕслен çивçе хĕлĕхĕнни пек ачашшăн туйанат. Çур сехет ытла пахчари чечексем Кулине йуррине пуçĕсене тăп тайса итлесе ларчĕç.. Хурлăхпа пусмăра таптаса çĕнĕ çул çине тухакан тăлăх йуррине илтсен, тӳпери тăри те шапах пулчĕ“.

Ака Кулине вăрмана кайат. „Симĕс пурçăн пек йăлтăркка мăкпа витĕннĕ хăлхи патĕнче хуллен пăшăлтатса: „Епĕ те сана йурататăп“, тесе каланӑн туйăнчĕ. Пĕчĕкçĕрех, тăпăл-тăпăл тутисем кăшт пĕрĕнчĕç, шывланнă куçĕсем хупăнчĕç. Кулине, питне чĕрçиттипе хупласа, ĕсĕклесе йĕме пуçларĕ“.

Вăрманта Кулине хăйĕн савнипе, Кĕçтук кĕтӳçпе тĕл пулат. „Кулине пĕчĕкçĕ ача пек пуçне Кĕçуткăн чĕрçи çине хурса ĕсĕклесех йĕме пуçларĕ“. Кайрантарах „икĕ хăватлă тасалăхпа сывлакан ӳпкесем пĕр пек çăмăллăн сывларĕç“. Çамрăк кĕтӳç Кĕçтук ватă, Упаӊа йатлă, кĕтӳçе калат: „Упаӊа тете, сана çĕнĕ хаваслă хыпар калам. Итле, вăрман есĕ те, уйхир, йуратнă йăнаварсем, пурсăр та. Ташла, вăрман, ташла, çеçен хир, Упаӊа тете, есĕ те.. — Хăлаçланчĕ Кĕçтук, вуткăвар тăкакан сăвaç пек... — Çак çутçанталăк хушшивче пайан пирĕн туй“. Упаӊа: „Хавас, çав-тери хавас. Пехил сире, ачамсем“. Упаӊа симĕсленсе кайнă çăпати пуçĕ çине пăхса тарăн шухăша кайрĕ. Нумай йĕрпе йĕрленнĕ пичĕ çине вĕри куççулсем йĕр хывреç... Çакăнтан вара Кулине ват Упаӊан кинĕ пекех туйăнчĕ. Халĕ тĕнчере Упаӊа пек телейлĕ çын та çук ах пуль..“

„Виççĕрен пĕр тĕвĕ“ йатлă сыпăкри çакăн пек картинăсем вырăс писателĕ Карамзин 125 çул ытла ĕлĕкрех çырнă „сентименталлă куççулĕлĕ“ повĕçсене аса илтереççĕ, пуринчен ытларах „Бедная Лиза“ йатлă повĕçе. Карамзин каланӑ: „Епĕ ун пек произведенисемпе — „и крестьянки чувствовать умеют“ тесе, чухăн сынсен пурнăçне кăтартма шухăш тытрăм тенĕ Чăнах та, Карамзин повĕçĕсенче геройсем нумай куççуль тăкаççĕ, анчах Карамзин чухăнсен пурнăçне тĕрĕс кăтартнă тесе никам та каламаст. Вăл çĕрулпучĕ пулнă, хресчен пурнăçне вăл пĕлмен. Кайрантарах вырăс литературинче Григорович, Тургенев т. ыт. те, çĕрулпучĕсен класĕнчен тухнă писателсем, хресчен пурнăçне тĕрĕсех кăтартайман, вĕсен произведенисенче те „суйа илемлĕх“ сахал мар тĕл пулат. „Тавалла“ романри çӳлте асăнна „куççулĕлĕ вырăнсем“ — совет литературине килĕшмеççĕ: вĕсем чухăн хресчен пурнăçне тĕрĕс кăтартмаççĕ. Çавăнпа совет писателĕн ун пек йут стилрен часрах хăтăлас пулат.

Ухăльван кулак типĕ — епĕр халччен кулак çинчен пĕлни çумне çĕнĕрен нимĕнех те хушмаст. Илĕпĕр ака, тĕслĕхрен, роман пуçламăшĕнче кăтартнă кулакăн революциччен пурнăçне.

„Çӳлĕ чăнкă пысăк ту... Ун тӳпинче — Ухăльван, пĕр пĕччен (кăна Ухăльван тĕлĕкре курат.— Е. З.). Пуçĕнче çӳлĕ кăшăлла кăвак пустав картус, карас пĕрмелĕ кĕрен пурçăн кепепе хура диагональтен çĕленĕ шалпартарах шăлавар; хул хушшинче йатве Кавказран кӳртернĕ хура туна. Вăл йăланхи пекех савăнаçлă. Туйипе куçа çисе тăракан сакăр кĕтеслĕ атгине çатлаттарат. Тăрсан-тарсан тăртанса кайнă мăнтăр аллипе сар пурçăн пек çемçе сухалне йакатса илет. Ун умĕнче „Чиган“ йатлă йăм-йăм курнакан йытти хĕвел ăшшипе ачашланса выртат“.

Ку ĕнтĕ — ытлашши „обшчий“ сăнпуç темеле: кун пек кулак — вырăссен те, чăвашсен те, мордвасен те, марисен те, удмуртсен

те, украинцăсен те тата ытти халăхсен те пулма пултарнă. Çавах та, чăвашсемшĕн кун пек кулак сăнпуçĕ — типлă пулман. Кам кăшт та пулин револьуцичченхипе револьуци хыççăнхи чăваш йалне пĕлет, вăл Ухăльван сăнпуçĕ çинчен „типлă чăваш кулакĕн сăнпуçĕ“ теме пултараймаст.

Ухăльван Совет влаçне, йалти чухăнсене кураймасăр тăвакан ирсĕр ĕçсене илсен — тӳрех калама тивет: ку ĕçсем — чăннипех типлă ĕçсем, ун пек ĕçсем Совет сойузĕнчи халăхсем хушшинчи кулаксем пурте тума хăтланнă, тунă та.

Есер пулнă пуйан Михетере аван кăтартнă. Вăл „тырă пухакан комиççин“ членне кĕме те ĕлкĕрнĕ-мĕн. Комиççи ларăвĕнче чухăнсем тухса каланине курса ларкаласан, вăл шухăшлат: „Ĕмĕрне пухура çăвар уçман çын та калаçма тытăнчĕ те, ăçта кунта çĕнтерме?.. Ех, май çук. Вай пулсан, халех епĕ сире хар хыпса туртса çурăттăм“, тесе хăй ăшĕнче калат вăл, çиллине шанараймасăр. Пуйансен интересĕсене хӳтĕлес шухăшпа вăл „сарçу пек çемçе чĕлхепе“ комиççире çапла калаçат: „тăвансем, пурте кунта хамăр йал çыннисем. Пĕрне çăлса, тепĕрне путарма тăрăшмала мар. Пĕр икĕ пин пăтне йал çине илмесен луччĕ пулмĕ-ши? Совет влаçĕ уншăн нимĕн те аптарас çук. Пĕр-пĕрин çине йăвантарнипе пулакан йапала мар ку... Вĕт. пурĕпĕр, тырă йут патшалăха кайат...“

Пуйансемпе чухăнсемсĕр пуçне, романра вăтам хресчене те кăтартнă: вăл — Çпридун Мирунчă.

Ухăльван ывăлĕ Генăпа пуп хĕрĕ Нинă — ВУЗ-сене суйа докумевтсемпе лекнĕ йурăхсăр çынсем. Кайран вĕсене унтан каларса ывăтаççĕ.

Кĕнекере социалисăм çулĕпе тăвалла пыма пуçлакан чăваш йалĕ çинчен сахал мар материал панă. Содержани йенчен чи пысăк çитмелĕхсем çаксем:

1) Револьуци 12 çул хушшинче чăваш йалне мĕнле улшăну кĕртни палăрмаст;

2) Комуниссен партин йалти ĕçĕ курăнмаст, парти организацийĕ йертсе пыни çук;

3) йалти чухăнсемпе вăтамсен масси колхоз йенне çаврăннине тĕрĕс катартайман;

4) Малттин студента ытлашши паттăррăн кăтартма пикенсе, ун çинчен кирлĕ-кирлĕ маррине те каласа тулгарни тата ыт. те.

Кĕнекере пиçсе çитеймен вырăнсем сахал мар. Тĕслĕхсем:

1) Пуйан Ухăльван пахчине санласа кăтартнă хыççăн, автăр çырат: „Кам çакăн пек илемлĕ пахчара хĕвел ăшшипе йăпанса, хăвасем чĕлтĕртетсе калаçнине итлесе тутлă ăйха кайасшăн мар? — Пурте çапла. Пурте çавăншăн тапаланса малала тем-тем ĕмĕтленеççĕ“. Ку сăмахсем тĕрĕс марри пур ĕççыннине те паллă.

2) Нурăсри райком çекретарĕ хĕрлĕ обозпа пынă хресченсем умĕнче çакăн пек сăмахсем калат: „Чăваш ĕççынни! Пăх-ха есĕ хăвăн тумхахлă, йунпа пĕвĕннĕ иртнĕ çулна калла çаврăнса! Пăх!“ „Пĕр сиккелемесĕр итлесе тăракан халăх оратăр тĕллесе кăтартнă йенне çаврăнса пăхрĕ“, тет автăр.

Кунта автăр хăйĕн шухăшне чипер, йĕркелĕ каласа паман пирки, вулакан çапла ăнланма пултарат: халăх хăйĕн Нурăса килнĕ çулĕ çине çаврăнса пăхнă, — ăна райком çекретарĕ тĕмĕншĕн „йунпа пĕвĕннĕ“ çул тесе каланă.

4) Малттин калат: „Арăслан пек чăрмаласа, ăмăрт-кайăк пек вĕçсе, пăван пек чăрсăрланса, вĕсемпе (кулаксемпе) пирĕн хытă кĕрешес пулат“.

Çак танлаштарусем пит йурăхлах марри уççăнах курăнат. „Чăрмалакан арăслан“, „вĕçекен ăмăрт-кайăк“ „чăрсăрланакан пăван“ — ку сăнлăхсем кĕрешекен мĕлйунлă ĕçхалăх массишĕн килĕшӳсĕррине автăр йепле сисмест-ши? Вĕсем — индивидуалă кĕрешекен „паттăрсемшĕн“ анчах йурăхлă...

5) Ĕçхалăх массишĕн йурăхсăр танлаштарусем, сăнлăхсем тата урăх та нумай:

а) Шур сухаллă ватă уйăх... ыраш капан тăррине кармашса хăпарчĕ те, хăйĕн хĕвелтен вăрланă чăлтăркка хĕлхемĕсене уçăлма кăларса йачĕ;

б) кушак чĕрни йевĕрлĕ йаш уйăх, сивĕ, тăхлан тĕслĕ курăннă пĕлĕтсене сире-сире таçталаваскат.

Ку сăнлăхсем — ытлашши курнăçланкаласа, сăмаха авкаласа тунăскерсем. Усси вĕсенчен çук, сийенĕ пур: вулакана вĕсем пуçтуйах тытăнса тăрса вăхăта пĕтерттереççĕ...

(Чăваш илемлĕ литературине вĕренмели кĕнекерен).

Вл. ПАЙМЕН.

Идейлăхпа маçтăрлăха çӳлти сыпăка.

Тукташăн „Вăкăр çырми" повеçĕ пирки.

Повеçрен çĕнĕ сывлăш вĕрет.

Чăваш литературинче йулашки вăхăтра Тукташ повеçĕ паллă вырăн йышăнчĕ. Ку повеç çине тĕрлĕ куçпа пăхакансем пулчĕç, тĕрлĕрен калаçса илчĕç, курăнат. Ку, паллах, çĕнĕ произведени çинчен сăмах хусканмалах, ăна пирĕн общественнăç хак памалах. Тукташăн повеçне обйективлă хак пани, ăна марксисăм-ленинисăмла методологи тĕлĕшĕнчен, писатĕлĕн маçтăрлăхĕ тĕлĕшĕнчен анализлеме кирлех, — вăл автăршăн та, çамрăк писатĕлсемшĕн те усăлă пулмала.

„Вăкăр çырми" повеçран çĕнĕ сывлăш вĕрет. Повеç, тĕпрен илсе пăхсан, начар мар. Повеçре хаљхи кунсене, хаљхи çынсене, хаљхи ĕçсене кăтартнă. Вĕсене илемлĕх (образ) витĕр кăтартнă чух, автăр схемăпа шаблона çĕнтерсе, таврари ĕçсене тинкерсе тивĕç формă шырас çул çине тухса тăнă.

Тукташ ку повеçре Вăтам Атăлăн пĕр пĕчĕк кĕтессинче, Василйĕвка йатлă поçолкăра социалисăмлă улшăнусем пуçланса кайнине кăтартасшăн. Автăр хăйне вајљи пысăк мар, конкретлă облăç картса илет. Писатĕл хăйне вајљи кун пек пĕчĕк, конкретлă облăç картса илни пĕр йенчен çăмăллатат, тепĕр йенчĕн йăвăрлатат те унăн ĕçне. Пĕчĕкрех участкăри ĕçсем синчен çырма çăмăлрах пек пĕрре пăхсан. Вырăнпа та, вăхăтпа та, ытлашши сапаланма кирлĕ мар, образсем çирĕпрех тĕвĕленме пултараççĕ. Ĕçсем çине таранрах пăхса, вĕсен ун тымарĕсене шыраса тупма май пур. Анчах конкретлăхпа пĕтĕмлĕх (конкретное и общее) диалектикăлă çыхăнура, пĕрлĕхре тăнине манмала мар.. Пурнăçăн конкретлă йенне илнĕ пулсан, вара çав конкретлă момент урлă, унăн пĕтĕмлĕхĕ (общее) йенне кăтартса парас пулат. Василйĕвкă поçолкăри ĕçсем урлă социалисăмлă улшăнусен процессне тĕпрен илсе кăтартас пулат, Василйĕвкăри ĕçсем витĕр мĕн пур Совет сойузĕ социалисăм çулĕпе пйатилеткă утăмĕсемпе утса пыни курăнса тăтăр. Çавăнпа та, темине конкретлă илнĕрен, Тукташ задачи пурнăçа кĕнĕ çĕрте чылай пысăк çитменлĕхсем те, политикле йăнăшсем те пулнă. Вĕсем çинчен сăмах кайран хускатăпăр. Мĕнле пулсан та, Тукташ хăй темине лайăх алла илме, хăйĕн умне темăран тухакан проблемăсем лартса, илемлĕх прийомĕсем урлă ĕçсем çиве ăнланмала ответсем пама тăрăшви палăрат.

Повеçри етемсем — чĕрĕ етемсем, вĕсем чăнахах чăваш ĕççыннисем, вĕсене епĕр кулленех курнă. Повеçре вĕсемпе паллашнă чух, паллакан çынсене тĕл пулнă пекех туйăнат. Пуринчен

ӑнарах панӑ обрӑзсенчен кунта Микише, Йуса, Иатруса тата Татука кӑтартмала пулат. Вӗсене ҫав йышши ҫынсен характӗрлӑрах йенӗсене пӑхса, пӗрлештерсе тунӑ. Ҫав вӑхӑтрах вӗсем оригинала. Уйрӑмлӑхпа пӗтӗмлӗх пӗррелӗхне ҫак обрӑзсем урлӑ автӑр аван кӑтартнӑ

Ку повӗҫрен Тукташ хӑйӗн маҫтӑрлӑхне ӳстерес тесе ӗҫлени те палӑрат. Повӗҫ умӗн вӑл ҫак темӑпах „Пӗрремӗш ҫӗнтерӳ" йатлӑ очӗрк ҫырса пачӗ. Очеркпа повӗҫне иккӗшне танлаштарса пӑхсассӑн, вӗсен уйрӑмлӑхӗ раснах палӑрат. Лере — чӗрӗ, писмен материал кӑна. Лере — уйрӑм, пӗр пултарулӑх идейипе пӗрлешмен фактӑсем Кунта — писсе ҫитнӗ, илемлӗ литература картне кӗнӗ произведени. Вӗсен иккӗшӗн хушшинчи уйрӑмлӑх количӗствӑлӑ уйрӑмлӑх кӑна мар. Повӗҫӗ очӗркран качества йенчен уйрӑлса тӑрат. Повӗҫе ҫырнӑ чух, очӗркӗ материал кӑна пулнӑ. Ӑна писатӗл хӑйӗн пултарулӑх лабораторийӗнче вӗретсе, пӗтӗмпех урӑхлатса кӑларнӑ. Повӗҫре ӗҫсем те, етемсем те урӑх мар, — очӗркрисемех. анҫах вӗсен обрӑзӗсем урӑх, произведенин вулакан ҫине тивекен вӑйӗ урӑх, произведенин илемлӗхӗ, пахалӑхӗ урӑх. Ҫак пӗтӗмпех автӑр хӑйӗн маҫтӑрлӑхне ҫӗклесшӗн ӗҫлениинчен килнӗ.

Фактӑсене курса вӗсене фотографилесе кӑна пыни — илемлӗ литературӑ туни мар-ха вӑл. Ку, литература тӑвас ӗҫӗн пӗр пусӑмӗ кӑна. Фактӑсем йӗркеленесси, вӗсен социалӑ сӑлтавӗсем палӑрасси, действителнӑҫран унӑн илемлӗх сӑнне тӑвасси — кусем пӗтӗмпех писатӗлӗн лабораторийӗнче пулмали ӗҫсем. Ҫак ӗҫсен процессӗ художӗствӑлӑ обобшченин процессӗ пулат. Ҫак процесс майӑн писатӗлӗн пӗгӗм идейлӑх тасалӑхӗпе маҫтӑрлӑх пуйанлӑхӗ мобилизациленет. Ҫак процессран вара фактӑсем те, етемсем те, тӗрлӗ йавленисем те пӗтӗмпех ҫӗнелсе — самахра, обрӑзра, ҫтилре кристалланса тухаҫҫӗ.

Тукташӑн лабораторийӗнче те ҫак процесс пулса иртнӗ. Унӑн повӗҫӗнче илемлӗх (художӗствӑ) йенчен питӗ ҫӳлте тӑракан вырӑнсем пур. Вӗсенчен „Тӑхлачӑсем" йатлӑ пайӗпе Микишпа Татук ҫейӑлкӑ илме кайни ҫинчен ҫырнӑ вырӑнсене уйрӑмӑнах кӑтартса пама пулат. Ку вырӑнсем автӑрӑн пултарулӑх вӑйне лайӑх палӑртаҫҫӗ.

Анчах, илемлӗ литературӑн пахалӑхне ҫак сыпӑксемпе кӑна виҫмеле пулсан, Тукташӑн повӗҫне пит те лайӑх произведени теме те пулаччӗ. Идейлӑхӑн тасалӑхӗ йенчен пӑхсассӑн, социалисӑмлӑ реалисӑм метӑчӗ мӗнле вырӑн йышӑнса тӑни йенчен пӑхсассӑн повӗҫӗн пахалӑхӗ нумай ҫухалат. Кун пек калави идейлӑх маҫтӑрлӑхран уйрӑлса тӑнине пӗлтермеле мар — идейлӑх ҫитменлӗхӗсем маҫтӑрлӑх ҫинче те палараҫҫӗ. Произведенийӗн пахалӑхне ҫӗклес ӗҫре вӗсем иккӗш те паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсен вӑйӗсем пӗрин ҫине пӗри сарӑлаҫҫе. Ку статйара пирӗн Тукташ повӗҫӗн ҫитменлӗхӗсем ҫинчен тӗплӗрех чарӑнса тӑмала пулат, м. т. пирӗн ҫитменлӗхсене лайӑхрах палӑртса, писатӗле вӗсене ҫӗнтерсе пыма пулӑшса, произведенисен пахалӑхне ҫӗклеме тӑрӑшас пулат.

Йăвашшăн вĕрет çил Тукташшăн.

Социалисăмла реалисăм метăчĕ Тукташ пултарулăхĕнче мĕнле вырăн йышăнса тăрат? —тесе ыйтсассăн, отвечĕ паллах пулмала. Ку метăд Тукташ пултарулăхĕнче нимле вырăнах та йышăнайман: Тукташ поезине аса илер-ха. „Тукташ сăвăç пултарулăхĕ символисăмпа миçтицисăма пырса перĕнет“ тенĕччĕ епĕр унăн пултарулăхне сăнаса тухнă май. —Калани тĕрĕсех. Сăвăсенче Тукташ пăççивлă созерцатĕл пулса тăрат, вăл таврари реалĵнăй ĕçсенчен уйăрăлса, хăйĕн çунатлăх çимвăлĕсемпе таçта çитех вĕçсе кайат, вăл сырнă чух форма пăхăнса, абстракцилĕ, естетлă образсем урлă реалисăма хирĕç тухат. Тукташ пултарулăхĕн методологин тымарĕ меншевисăмла идеалисăмра выртат.

Хăйĕн повĕçĕнче те Тукташ çакăнтан инçех кайайман, прозăра та вăл романтисăм метăчĕ урлă хăйĕн идеалисăмлă методологине палăртат.

Повĕç пролоѓĕ çак йенчен питĕ кăтартулă. Повĕçре Тукташ колхоз йухăмĕ пуçланса кайни çинчен, револĵуци тарăнланса йалхуçалăхне тĕпрен улăштарас тапхăра кĕни çинчен çырат.

Йалхуçалăхне тĕпрен улăштарса социалисăмлă туса пыни — ку тĕнчере халĵччен пулман историлĕ, аслă процесс. Çак процесс стихийăлă иртсе пыма пултараймаст. Револĵуцилĕ народниксем йалхуçалăх хăй-ăссĕн социалисăм çулĕпе кайма пултарат, тетчĕç. Револĵуцилĕ маркçисăм çак шухăшсене хирĕç кĕрешсе, йалхуçалăхшĕн тĕрĕс çул кăтартса пачĕ. Пролетариатпа унăн авангарчĕ — болĵшевиксен партийĕ кăна йалхуçалăхне социалисăм çулĕ çине тăратма пултарат.

Йалхуçалăхĕнчи процесс хăй-ăссĕн, стихийăлă пуçланма пултарайманни халĵ пирĕншĕн паллах. Пĕтĕм Совет сойузĕпе çак процесс, парти массăсене тĕрĕс йертсе пынипе, пилĕкçулăх тапхăрĕнче пуçланса кайрĕ. Пур вăйсене, пур мелсене шута илсе, парти хăш районта, хăçан мĕн таран коллективизаци пулмалине малтанах кăтартса хучĕ. 1930-мĕш çулта вырăнти ĕçлекенсен пуçĕсем „çавăрăнма“ тытăнсан, парти вырăнта ĕçлекенсен çак йăнăшне хăвăрт тӳрлетре.

Анчах Тукташăн повĕçре колхоз йухăмĕ стихийăлă килсе лекнĕ йапала пулса тухнă. Колхоз йухăмĕн сăлтавĕ — çил. „Çил вĕрет, çил шăхăрат“, тет Тукташ „Вăкăр çырми“ пролоѓĕнче. Çакăн пекех пуçланмаст-и вара çимволиссен чи паллă представителĕн, А. Блок поетăн „Вуникке“ йатлă поеми.

Ку поемăра Блок Октябĕр револĵуцийĕ çинчен çырат. Поемăри ĕçсем Ленинград хуливче пулса иртеççĕ. Револĵуцилĕ çил столицă тăрăх уласа çӳресе пĕтĕм тĕнчене çаварса илесшĕн. Револĵуцийе çил пек, стихийăлă килсе лекнĕ вăй пек йышăннă Блок. Ун поеминче револĵуцире йертсе пыракан çук. Револĵуци тăвакансем „вуниккĕ“. Вĕсем хресченсен салтаксен массин рйадовой çыннисем, вĕсем стихийăлă, лавă пек йухса килекен çил-тăвăл çыннисем. Вĕсене йертсе пыраканĕ Исус Христос. Блокăн револĵуцилĕ романтисăмĕ кунта та миçтицисăм тыткăнĕнчен хăтăлайман.

Тукташăн та пилĕкçулăх тапхăрĕнчи процесс, стихийăлă процесс пек туйăнат.

„Кĕрешĕве йыхăрат
Вичкĕн çил,—
У-у-ух!
Кĕрешĕве-е-е!

Çил вăл — кĕрешӳ сăлтавĕ. „Вичкĕн çил" кĕрешĕве йыхăрмасан, колхоз йухăмĕ те пуçланса кайайас çук. Ку пролог тăрăх Тукташ Блокран нимпе те уйăрălса тамаст.

Революцийе çил урлă образлани вăл ахальтен мар. Блок революцичченхи ĕçсем çине те паççивлă — созерцательнă пăхса тăнă, вăл хăй таврари ĕçсенчен айакра тăнине хăй те сисет.

„Халăх ĕрлет — вĕçĕмсĕрех еп сивĕ,
Халăх чĕнет — еп чĕмсĕр те хускавсăр".

Блок кун пек паççивлă пулнин социалă сăлтавĕ çук мар. Блокăн класла тымарĕ — çĕре пуçланă дворйанствăра, вăл тĕрлĕ майпа феодаллă аристократипе çыхăнса тăрат. Çийелтен пăхсассăн, Блок дворйанствăран тахçанах уйăрălнă пек, анчах ун социалă тымарĕсем пĕтĕмпех татăлса пĕтмен. Вăл капиталисăм йĕркипе килĕшмест, анчах унпа кĕрешмелĕх ун вăй çук. Çавăнпа та Блок таврари ĕçсенчен уйăрălса çимволисăмпа романтисăм урлă канăç йе капиталисăмчченхи, йе капиталисăм хыççăнхи пурнăçра пырат. Улпутла йĕрке вилме хатĕрленнине курат Блок, çавăнпа çĕнни пĕр йенчен, — хăрушшăн туйăнат уншăн. Вăл хăрат пулас улшăнусенчен:

„Сисеп ес пуласса. Çулсем шуса иртеççĕ.
. . . .
Анчах хăруш мана: сан улшăннă сăну.

Çавăнпа та Блок „Вуниккĕ" йатлă поемăра революцин чăнчăн пафăсне сисмест. Çавăнпа та Блок 1921-мĕш çулта хăйĕн çывăх йулташне „Вуниккĕ" пе „Скифы" поемисем кĕнĕ сборникне „Хура кун" йат парас тесе калань.

Тукташ та таврари ĕçсем çине пăхса тăратчĕ. Унăн:

„Уй-хирте хурçă йăйăр кĕçенет..."
„Ан тив, ударник уй-хирте
Трактăрпала
Поемă çыртăр"

Улшăнусем пуласса поет курат, анчах çак улшăнусен ĕçне хăй хутшăнасшăн мар. Ку улшăнусем поет кăмăлне питех каймаççĕ пулĕ, мĕншĕн тесен çав хушăрах вăл ĕлĕкхишĕн, киввишĕн куççуль йухтарма тытăнат.

Тукташ паççивлăхĕн те социалă сăлтавĕ пур. Кун пек мотивсемпе поет социалисăмлă ĕçсене хирĕçлĕрех те, кулакла настроенисене палăртат.

Методологи тĕлĕшĕнчен кун пек паççивлăх, Гегĕлĕн „самодвижение понятий" йатлă теорипе çыхăнса тăрат. Çак теори тăрăх таврари материалă ĕçсем, йавленисем абстракцилĕ поньати усăлса, конкретлă йеверленнĕрен пулаççĕ. Поньати усăлса пырас процесс, хăй-ăссĕн пыракан процесс. Етем ку ĕçе хутшăнса процесс çулне улăштарма пултараймаст. Çавăнпа Гегĕлĕн „мĕн

кирлĕ — çав пулнă“ мĕн пурри — пĕтĕмпех кирлĕрен пулнă. Ку Гегĕл философин чи реакцилĕ йенĕсем. Мĕн пуррине улăштарасшăн кĕрешме кирлĕ мар. Улăштармали пулсассăн вăл хăйех улшăнĕ — Тукашăнни пек:

„Кивĕ йал çухалĕ, кив йăла путланĕ“.

Колхоз йухăмĕ те Тукташăн çавăн пекрех — хăй, стихийăлă пулнă факт. Колхоз йухăмĕ — çил. Анчах çак çил çине пурте пĕр пек пăхмаççĕ. Çил пурне те пĕр пек туллашмаст. Тукташ çилĕ шăхăрат. .

„Йăвашшăн та,
Хайаррăн та,
Хăрушшăн та“.

Блокăн та çил иккĕлле вĕрет. Пĕрисемшĕн вăл:

„Куçĕсене вичкĕн çилĕ
Шур тусан пĕр май сапат,

Пĕрисемшĕн вăл:

Тăвăл, тăвăл...
Ура çинче етем тăраймаст.
Тăвăл, тăвăл
Пĕтĕм тĕнчере.

Теприсемшĕн çил урăхла:

„Çил вăйăра.
Йур вĕçвелет.
Вуникĕ етем
Пĕр харăс килет“.

Кусемшĕн çил усал мар, çавăн пекех Тукташ çилĕ те:

Пĕррисемшĕн — йăваш:
Теприсемшен — хăруш.

Мĕншĕн йăвашне, мĕншĕн хăрушне автăр малала ăвлантарса парат:

Йе пурнăç,
Йе вилем кунта“.

Камшăн хăрушши саллă ĕвтĕ — кулакшăн хăруш. А камшăн йăваш? Чухăнсемшĕн, батраксемшĕн, вăтамсемшĕн пулас. Пĕрисене „вичкĕн çилĕ шеллемест, теприсене тĕкĕнмест: „пурнăр еппин“ тесе хăварат пулмала. Çилĕ пуриншĕн те йут, таçтан кĕтмен çĕртен килнĕ йапала. Анчах пĕрисемшĕн ăраскал — вĕсене тĕкĕнмест вăл, вĕсемшĕн йăваш вăл. Сăвăра Тукташ Октябĕр революцийĕ çинчен те çакăн пекех калатчĕ:

„Кĕрле, хăрушă çил, кĕрле!
Гĕнче пайан
Такамшăн урнă“.

Кувшăя Ложникăв йул. Тукташа мухтаса „Революци хумĕ хăрушă пулсан та, поета хăратмаст“, тесе çырнăччĕ. Кам вăл революци хумĕнчен хăрассипе хăрас марри çинчен шухăшлакан? Кам вăл „тавта-пуç! Революци мана тивмесĕр хăварнă“ тесе савăнакан. Вак буржуаран урăх никам та пулма пултараймаст.

Повеç прологĕ çинче нумай чарăнса тăмала пулчĕ, м. т. повеç тăрăх пытанса сапаланса пĕтнĕ шухăшсене, кăмăлсене автăр прологра питĕ кĕскен, питĕ уççăн, концентрацилесе каласа панă.

Шикленет чӗри Тукташӑн.

Ҫил пирӗншӗн хӑруш та мар, йӑваш та мар. Ҫил (революцилӗ ӗҫсене обйазатӗ вӑ ҫил урлӑ сӑнлас тесен) пирӗншӗн сасартӑк, стихийӑлӑ килнӗ йапала мар. Ҫил вӑл — историлӗ, кирлӗ йапала, ку ҫиле епӗр хамӑр пурнӑҫа лайӑх тӑвасшӑн, парти йертсе пынипе, хамӑрах тӑватпӑр Халь политпайсен тапхӑрӗнче ку питех те паллӑ пулмала.

Революцийе стихийӑлӑ килсе тухакан йапала пек ӑнланни пирӗн класла тӑшмансене пулӑшат.

Повӗҫри тӗп шухӑшсем пӗтӗмпех прологри ҫак мотивсемпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ

1930-мӗш ҫултанпа ҫуркунне большевикленчӗ. 1931-мӗш ҫулхи ҫуркувне 2-мӗш большевикле ҫуркунне. Пултарат-и хӗвел йепреме ҫуркунне ҫывхарнӑран? Пултарат-и йӗрме тӗнче иккӗмӗш большевикле ҫуркуннере? Пирӗншӗн ҫук — Тукташшӑн пултарат.

> „Мерчен тумламсем куҫҫулӗсене шӑпӑртаттарма пуҫларӗҫ.
> Йепрет хӗвел.
> Йӗрет тӗнче".

Повӗҫ пуҫламӑшӗнчех автӑр куҫҫуллӗ тон парат. Ваҫилйӗв сӑри пулас улшӑнусемшӗн „аванссӑм" йӗрмест-ши тӗнчи? тесе ыйтас килет.

„Шап-шурӑ шупӑрпа шукӗлленсе ларатчӗ" йал, „пӑчӑхнӑ кӑмакасем" ҫинче „ӗне пек мӗшӗлтетсе" выртатчӗҫ мужиксем, пӳрт умӗсенче шӑкӑлтатса каласса ларатчӗҫ вӗсем. Ҫангалӑк тӑп, ним те хумханмаст. Никамшӑн хӑрушлӑх ҫук. Сасартӑк кӗтмен ҫӗртен килсе тухат ҫил, тытӑнат туллама.

Анчах ҫилӗ мӗнле сасартӑк тухсан та, пӗр самантa та пулин унӑн „буревестникне" курса йулатпӑр епӗр. Унӑн — буревестникӗ — матрус Микиш. Ҫак повӗҫри ӗҫсем пуҫланса кайнӑ кун, йурийех тӑхӑнат вӑл хӑйӗн 14 ҫул усранӑ брйуки-кльошне, шурӑ пиншакне. Аса илет матрус иртнӗ кунсене. Пуринчен ытла матрус пуҫӗнче ийуль кунӗсем тӑрса йулнӑ. Октабӗр ҫинчен вӑл майӑн кӑна асӑнса илет. Анчах ӗҫсыннисем революцилӗ паттӑрлӑхшӑн, Ленинпа большевиксен ҫӗнтерӳлӗ руководствишӗн — Октабӗр ийультен кӑтартулӑрах пулнине автӑр асӑрхамаст. Октабӗр революци вӑхӑтӗнчи матрус „Аврорӑн" чаплӑ ӗҫӗсем ҫинчен пуринчен малтан каласа памалла пек. Анчах ийуль кунӗсем, массӑсем хӑйсем йӑтӑннипе, большевиксен руководствипе пуҫланса кайнӑ Октабӗр кунӗсенчен ытларах кӑмӑллӑ пулас автӑршӑн. Ҫавӑнпа та вӑл Октабӗр ҫӗнтерӗвӗсен сӑлтавӗсене те тӗрӗс мар ӑнланат.

„Отчайнӑй пулман пулсан, революци те пулман пулӗччӗ", — тет автӑр Микиш чӗлхипе, — Париж комунарӗсем питрех те отчайнӑй пулнӑ, анчах вӗсем ҫӗнтереймен, м. т. большевиксен партийӗ пек тӗрӗс йертсе пыракан парти ун чух пулман. Октабӗрте революцилӗ массӑсене большевиксен партийӗ йертсе пынипе, хӗҫпӑшалла восстани вӑхӑтра пуҫланса ҫӗнтерӳлӗ пулчӗ".

Хӑйӗн калавӗ хыҫҫӑн матрус колхоз пирки сӑмах хускатса йарат. Ҫакӑнтан пуҫланса кайат Ваҫилйӗвка поҫолкишӗн усал хыпар. Ҫакӑнтан туллама тытӑнат тӑвӑл хресченсене.

Ни парти организаци, ни комсомол, коллективизаци ĕçĕнче йертсе пырас вырăн йышăнса тăни çук, ни уйрăм работниксем 1931-мĕш çулхи çуркуннеччен колхоз тăвас пирки ним ĕç те туман, ни чухăнсемпе батраксем (2-мĕш большевикле суракиччен) нихçан та хăйсен пурнăçне колхоз урлă лайăхлатас тесе шухăшласа пăхман. Колхоз хыпарĕ те, колхоз йухăмĕ те, матрус хăйсем 1917-мĕш çулта мĕнле „отчайный" пулни синчен каласа халь те „отчайный" пулса çĕнĕ пурнăç тума чĕннинчен пуçланса кайат.

Ахальтен мар автăр пĕтĕм 1-мĕш пайне (5 главана) „Матрус калавĕ" тесе пĕрлештернĕ. Вăт мĕн тума пултарат иккен матрус калавĕ!

Васильевкă çыннисемшĕн колхоз хыпарĕ йут хыпар—усал хыпар, кулаксемшĕн кăна мар, пуриншĕн те. Колхоз хыпарĕ хусканнă вăхăтра посолкинче сийсем пачах пулман пек автăр шухăшĕпе, пурте „кашкăртан хăранă пек" хăраççĕ колхозран. Йалти чи малта пыракан етемсем те колхозран шикленеççĕ.

„Усал хыпар утпа çӳрет.
Ырă хыпар çуран çӳрет".

Колхоз хыпарĕ те Васильевкăри чăвашсемшĕн[1] кашкăртан та тискер (!) туйăнса кайрĕ пулмала...

Кун пек калани—пĕтĕмпех тĕрĕс мар, ку—чухăнсем, батраксем, вăтамсем синчен елеклесе калани пулат. Колхоз хыпарĕ кулакшăн кăна „кашкăртан та тискеррĕн" туйăнма пултарат. Кун пек калани хресченсене, сылтăм уклонла, пурне те „пер клас" тесе шутланинчен килет.

Хресченсем çĕнĕ хыпартан харанине кăтартма краскăсене шеллемест автăр. (Рзайан „Утам" альманахра пичетленнĕ „Тăпра калаçат" повеçенчинчен пĕрре те кайа мар).

— Васпути, çырлахах!..
— Пӳлĕхçем, хăтарах!..
— Краву у-ул!..
— Канхв-у-у-ус!..
— Кол-хо-он!..

Хăватлăн, хăрушшăн, тискеррен йанраса кайрĕ çак сасă...

Мĕн ку? Мĕнле хăрав ку? Класла хăрав-и ку? Çук. Кулакĕ кун пек хăраса кăшкăрмаст. Йе, кулаксем лайăх ĕçленипе, ĕçхресченĕсене пурне те колхозран хăратса пĕтернĕ-и? Çук. Кулакĕ ку хыпара пуринчен кайран илтнĕ:

„Пуйан Карук хăлхине те çитсе кĕчĕ ку хыпар".

Ку хăрав социалă категорийе шăнăçмаст, кун пек хăрани биологиле закунсенчен килекен паника пекех пулса кайат.

Кунта каллех „Октабĕр çилне" астумала пулат. „Тĕнче пайан такамшан урнă" тени кунта та килет. Писатĕл чăнахах та пĕлмест тĕнче камшăн „урнине". Вăл вак буржуазилĕ хăравçă кăмăлĕпе колхоз хыпарĕнчен хăрасах ӳкнĕ. Кайран тин шикленешиклене çилпе паллашма тăрăшат. Унтан писатĕл хăшне-пĕрне йăпатса лăплантарма тытăнат, пурин те хăрамала мар, вĕт çил „пĕрисемшĕн йăваш", — тет вăл.

[1] Епĕ сайралатнă — В. П.

Пухура та хресченсем пĕр, класла уйăрălса тăман массă. Малтан пурте колхоза хирĕç, пĕр батрак та, пĕр чухăн та Микиш майлă тухса калаçмаст. Микишĕн пĕртен-пĕр „сойузникĕ“ — кулак Карук кăна колхоз майлă пек пулса тухать. Çавăн самахĕ хыççăн хресченсем колхоза çырăнма тытăнаççĕ. Тен, кулак пулăшман пулсан, колхоз та тевĕленменччĕ-и? Кулак сăмахне пурте итлеççĕ. Колхоза çырăнакансен девизĕ: „Йалти йатлă çынсенчен епĕ йулмастăп“. Чухăн Йакур та кулак сăмахне итлесе çырăнат, анчах вăл колхоза çыраннă вăхăтра та колхозран хăрама чарăнман, хăй кулкалат пулсан та, „пĕтсен пĕтет шленкем, тата суккăр арăмăм, урăх манăн нимĕн те çук“, — тесе çырăнат. Ыттисем те „шиклене-шикленех çырăнкаларĕç колхоза“. „Кашкăртан, тискер йапаларан“ йепле „шикленмĕн?“

Ку çитменлĕхсем — идейлăх çитменлĕхĕсемпе маçтăрлăх çитменлĕхĕсем тачă çыхăнса тăнине лайăх кăтартса пăраççĕ. Çакăнтанах пултарулăх метăчĕпе автăрăн мировоззренийĕ уйăрălса тăманнине те курма пулат.

Автăр ку повеçре йалхуçалăхĕн социалисăмлă процессне обйективлă кăтартса пама пĕлмен. Вăл уйрăмлăх урлă пĕтĕмĕшне (общее) кăтартса парас задача алла илеймен. Вăл поçолкăри ĕçсем урлă Совет сойузĕнчи коллективизацин кăтартулăрах йенĕсене илсе кăтаргайман. Çийелтен пăхсан, ку çитменлех метăд çитменлехĕнчен кăна килет темеле. Анчах, Васçилйĕвкăри ĕçсем автăр кăмăлĕпе килĕшӳлĕ пулмав, пулсан, вăл вĕсене урăх çыхăнулă кăтартма тăрăшĕччĕ. Коллективизаци процессĕшĕн кăтартулă мар фактăсене йе кăларса пăрахĕччĕ, йе урăхла çутатса парĕччĕ. Çакна туманнин сăлтавĕсем — маçтăрлах çитменлĕхĕнче кăна мар, — идейлăх тасалăхĕ çителĕклĕ марринче те пурах.

„Упана та ташлама вĕрентеççĕ“, тет Тукташ.

Идеалисăмпа механисăм, пĕрре пăхсан, пĕринчен-пĕри раснах урăх йухăмсем пек туйăнат, анчах, йулашки хисепре, вĕсем иккĕш те пĕрлешеççĕ. Вĕсен пĕрреяĕхлĕ вырăнĕсем питĕ нумай. Маларах епĕр Тукташ пултарулăхĕн методологи тымарĕ меншевиклевекен идеалисăмра тенĕччĕ, анчах ун пултарулăхĕнче механисла ăнлант русем пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Улшăнусен сăлтавне Тукташ тĕрĕс кăтартса памаст. Улшăну салтавĕ, Тукташ шухăшĕпе, йапала, йе йавлени тулашĕнче. „Упана та ташлама вĕрентеççĕ“ тени ахаљтен каланă йапала мар. Йапалана улăштаракан вăйсем йапала тулашĕнче выртмала тесе ăнлании çак пословицăран лайăх курăнат. Упана вĕрентнине дрессурă (дрессировка) теççĕ.

Упа мĕн те пулин тума вĕренни — упа вĕренес тесе тăрăшнинчен мар, хуçи тăрăшса, упине хĕне-хĕне условни рефлĕксем палăртнинчен килет. Хресченсене те çĕпĕле пурăнма условни рефлĕкс метăчĕ урлă вĕрентес тет-им, повеç автăрĕ? Автăрăн çакăн пек йăнăшсем — улшăву проблемине механисла ăнланнинчен килеççĕ. Ленин вăтам хресчен çинчен мĕн вĕрентнине автăр аса илмест. Капиталисăм вăхăтĕнчи вăтам хресчен кăмăлĕ

иккӗленчӗклӗ. Пролетариат диктатури тапхарӗнче пролетариат пулӑшнипе (хушнипе мар — пулӑшнипе!), парти йертсе пынипе, ватам хресчен вак-собственник кӑмӑлне ҫӗнтерсе, социалисӑмлӑ пурнӑҫ йенеле туртанат, вал колхоз формине пертен-пӗр тӗрӗс форма тесе йышӑнат. Колхоза кӗнӗ хресченӗн условни рефлёкс мар, ун кӑмӑленче ӑшӗнчи улшӑну процессӗ пулса пынине хаљхи ӗҫсем питӗ уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ.

Упана ташлама вӗрентни ҫинчен каласа хӑварни — ахаљтен каласа хӑварнӑ йапала мар. Ҫак шухӑша килӗшӳлӗ вырӑнсем повӗҫре тата та нумай.

Мӗншӗн лайӑх ҫын тет автӑр Лексейа? Мӗншӗн тесен „Лекҫейран есӗ нихӑҫан та хирӗҫле сӑмах илтеймӗн. Мӗн хушнӑ — тӑват“ (18 стр.).

Кун пек, инициативсӑр, пӗр сӑмах чӗнмесӗр мӗн каланине итлени — кулакшӑн кӑна идеаллӑ етем пулма пултарат. Кун пек ҫын автӑрӑн механисла шухӑшӗсемпе килӗшӳлӗ, ҫавӑнпа ӑна вӑл „лайӑх ҫын“ тет.

Хирӗҫлӗ сӑмах, хирӗҫӳ — ҫаксем автӑр кӑмӑлне кайман йапаласем.

Ҫавах та, йалта социалӑ хирӗҫӳ пулмалине сисет автӑр, анчах ӑна тӗрӗс кӑтартса пама пӗлеймест. Повеҫӗн 1-мӗш пайӗнче кӗрешӳ ҫук. Кӗрешӳ 2-мӗш пайра кӑна пуҫланат. 2-мӗш пайӗн йачӗ те „Кӗрешӳ пуҫланчӗ“. Унччен Ваҫилйӗвкӑ поҫолкинче кӗрешӳ пулман, хирӗҫӳ пулман курнат. Пурте лӑпкӑ пурӑннӑ. Колхоз ҫилӗ пырса тухсан, пурте колхоза хирӗҫ пулнӑ. Кулакпа батрак хушшинчи, кулакпа чухӑн хушшинчи ӗмӗрхи клас кӗрешӗвӗ Ваҫилйӗвкӑ поҫолкине тӗкӗнмесӗр иртсе кайнӑ.

Карук кулакӑн кӑна клас сисӗмӗ пур. Ыттисем пурте—ӑҫта кирлӗ унтала ҫапкаланаҫҫӗ, хӑт хӑш йенеле ҫавӑрса йама пулат вӗсене. Кулак каланине итлесе колхоза кереҫҫӗ, ҫавӑн сӑмахне итлесех колхозран тухаҫҫӗ, „уполномоченнӑй“ Сурикӑв килсен — кулака хирӗҫ кӗрешме тытӑнаҫҫӗ Вара (каллех сасартӑк, каллех ҫтихийӑлӑ) повӗҫӗн 40-мӗш стр. ҫинче пуҫланса кайат кӗрешӳ.

„Урса кайсах тулашаҫҫӗ пӗр-пӗринпе етемсем те. Пӗрне-цӗри пыртан шӑлпа кӑшласа татасшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ.

Кӗрешӳ! .

...Ҫил. Тӑвӑл.

Тӑвӑл. Ҫил...“

Кӗрешӳ ҫинчен вӑйлӑ сӑмахсемпе калана, анчах кӗрешӳне пӗрре те кӑтартман. Кам кампа туллашат, кам кама „пыртан шӑлпа кӑшласа татасшӑн“? Туллашаҫҫӗ хӗрарӑмсем. Кама хирӗҫ? Кулака хирӗҫ. Мӗншӗн? Кулак вӗсене колхоза астарса кӗртнӗшӗн. Мӗн тесе туллашаҫҫӗ? Колхозран тухас тесе, кулака хирӗҫ, Сурикӑва хирӗҫ, колхоза хирӗҫ. Пыр та калаҫ унпала! (диалектика!)

Ҫилӗ сасартӑк тухса кайнӑ: „Кӑнтӑрла тӗлӗнче таҫтан ҫӑва тӗпӗнчен вичкӗн ҫил мӑкӑрланса тухрӗ“. Ҫавӑн пекех сасартӑк иртме тытӑнат вӑл. Кӑнтӑрла колхозран тухас тесе кӑшкӑракан

Татук, уполномочĕннăй Сурикăв пичĕ çини суракан Татук, касçхине колхоз майлă агитацилеме сăмах парат.

Хĕрарăмсем хушшинчи ĕç çине автăр Татук куçĕпе пăхат. „Хĕрарăмсене што-о, вĕсене љубă-два! Вĕсене пĕр кун хушшинче чутласа çитерме пулат".

Клас кĕрешӳне пĕтĕмĕшпе илсессĕн, ун çине те „љубă-два" йевĕрлĕ пăхат Тукташ. Кун пек пăхни каллех механисла концепцирен килет.

Чухăн кулак май ĕçленине, батрак колхоза кĕрес умĕн иккĕленсе танине Тукташ катартна Анчах вăтам фигури повĕçре сук. Вăтам хăйĕн иккĕлевчĕкне çĕнтерсе колхоз йĕрки май çирĕп çавранса танине Тукташ катартайман.

Кĕрешекенсен силуечĕсем.

Хресченсем хушшинчен колхоз май çирĕп кĕрешекен кăтартулă фигурасем повĕçре çук Писатĕл меслечĕсем ытти çынсем тавра купаланнă. Вĕсенчен чăмăртанарах палăрнисем Карукпа Йус. Кусем повĕç пуçламашĕнчех хайсен умне пĕр телльлев лартса, çав тĕллев патне çитесшĕн хытă кĕрешеççĕ. Анчах кулак тактикине кунта тĕрĕсех катартман. Кулак, колхоза кĕрсе ăна ăшĕнчен пăтратма тытăнас умĕн, колхоз тĕвĕлевес ĕçе мĕн пур вăйĕпе чăрмантарма тытăнат. Хресченсем колхоз йенеле татăклă çаварăнса тарсан тин, кулак хăйĕн тактикине улăштарат. Кунта ĕçсем пĕтĕмпех тӳнтерле пулса пыраççĕ. Хресченсем пурте колхоза хирĕç,—кулак колхоз май. Хресченсем „кăраву-у-ул, калхву-у-ус" тесе кăшкăраççĕ, кулак колхозшăн ӳкĕтлесе тăрат. Кун пек тӳнтерле пулса тăни — Карук-кулак ытла чейе пулса, хăйĕн тактикине таврари ĕçсене курса малтанах улăштарса хунă тесе ответ парĕ мана автăр Повĕçре те çаплах калат вал. Чейерех кулаке айванрах кулакне хăйех каласа парат çакăн çинчен:

„Нивушлĕ таврала мĕн пулса иртнине ăнланмастăн? Урăх мел кирлĕ пире, урăх меслет". Кунпа килешме пулĕччĕ, анчах повĕçĕн тепĕр пайĕнчех кулак тактики сасартăк улшăнат. Повĕçĕн 1-мĕш пайĕнче Карук Йуспа хăй умне çакăн пек задач лартнăччĕ:

„Хамăран та колхоза кĕрсе ăна шалтан ĕмме тытăнмала. Пĕтĕм сĕткенне типĕтсе çитерсен, çеçкисем хайсемех хăрса кайса сапаланса пĕтĕç".

Анчах Йус устав çирĕплетсе килнĕ çĕрех Карук тактики улшăнат. Аста унта „сĕткенне типĕтсе" лартасси. Карукăн директивĕ хаљ çакан пек: „çак çитес кунсенчех татăлмала пирĕн вĕсемпе.

— Вара? — ыйтат тĕлĕнсе Йус

— Вара колхоза тытса силлесе пăхма та йурат", — ответлет Карук.

Çакăн хыççăн вара колхоза салатас кампани пуçланса кайат. Çаксене „типĕтсе хăртса салатас" вырăнне, сасартăк „тăхлачăсен" тактики сиксе тухат. Каллех тӳнтерле. Кунта драматуркĕ лайăх çырнă, режиçорĕ вачартарах хатĕрленĕ пйессăн действисене, тулкăçăр сценарист пăтратса кăтартса пĕтернĕ пекех.

„Тӑхлачӑсен“ тактики — колхоза тӗвӗлес умӗнхи тактики, колхоза „шалтан ӗмес“ тактики — колхоз тӗвеленнӗ хыҫҫӑнхи тактика вӑл. Ҫаксене автӑр пӗтӗмпех пӑтратса пӗтернӗ. Кулака кӑтартас ӗҫ кӗнекин йулашки глависенче вӑйлӑланса пырат, кайран тин кулак сӑнне тӗрӗс метӑдпа кӑтартма тытӑнат автар, анчах унта та тӗлӗнтерекен вырӑнсем тӗл пулаҫҫӗ. Мӗн пур хӑй шӳхашлисене пухат Карук вӑрттӑн канашлува, колхоза хирӗҫ ӗҫсем тума. Ҫав вӑрттӑн совешчанине вал Микиша та чӗнтер-т. Микиш — колхозшан кӗрешекенсене йертсе пыракан.ˇ Микиш — колхоз хыпарне хускатса йаракан. Карук пек чейе кулак Микиша чӗнсе, хӑйсем ӑҫта пухӑннине палӑртас ҫук. Икӗ хире-хирӗҫ тухнӑ вӑйсем хушшинче килӗшӳ ҫук. Ҫакна кулак тахҫанах анланса илнӗ. Вӑл Микишсене хӑйсен канашлуне чӗнсе тӑмӗ, вӑл Микишсене вӗлерме пӑхат. Карук та Сурикӑвпа Микиша вӗлерес тесе шухӑшланӑ, анчах унӑн меслечӗсем ҫитмен.

Тӗрлӗ тӳнтерчӗклӗ вырӑнсене аса илмесен, ытти йенчен повӗҫре Карукпа Йус фигурисене лайӑх кӑтартнӑ. Кусем чӑнахах та колхоза хирӗҫ пӗтӗм вӑйпа, мӗн пур меслетпе, мӗн пур класла хайарлӑхпа, чейелехпе кӗрешеҫҫӗ. Кулаксем ҫинчен ҫырна йулашки вырӑнсем — вӑйлӑ вырансем. Вӗсем кӗнекен ытти вырӑнесенченраснах уйралса тӑраҫҫӗ

Микиш — иккӗленчӗкӗр, пӗтӗм вӑйа хурса колхозшӑн кӗрешекен ҫын. Микиш — матрос. Матрос йӑлисене вал 14 ҫул хушшинче те манса пӗтмен. Уҫӑ кӑмӑллӑскер, хӑйӗн тӗллевне уҫӑ куракаӑнскер, вӑл ҫав тӗллев патне тӳрех, умри чӑрмавсене сирсе, класла хирӗҫекенсене ҫӗнтерсе пырат. Микиш парти членӗ пулма та тивӗҫ. Анчах вӑл парти члене те мар, кандидат та мар. Ваҫилйӗвкӑра пӗр партийца та, пӗр комсомолӗс та ҫук. Коллективизаципе ҫураки еҫӗнче парти мӗнле йертсе пыни повӗҫре курӑнмаст. Ҫӗнтерӳграммӑ повӗҫӗн пирвайхи страници ҫине ӑнсӑртран килсе ларнӑ йапала, мӗншӗн тесен, ҫӗнтерӳграммин содержанине поҫолкӑри ӗҫсем урлӑ уҫса паман.

Комсомол повӗҫри кунсенчен пӗтӗмӗшпех тухса ӳкни пире тӗлӗнтерсех пӑрахат. Ҫак харсӑр, паттӑр поколени ура пусман шӑтӑк-ҫурӑк ҫук Совет сойузӗнче. Комсомол коллективизаци ӗҫӗнчен парӑнса тӑнине ӗненместпӗр епӗр. Повӗҫре комсомол мар, ҫамрӑк поколенин пӗр представителе те ҫук. Ку — тӗрӗс мар. Ку — пирӗн кунсене суйа куҫ-кӗски витӗр кӑтартни пулат

Татук инкен сӑнне, ун ӗҫӗсем витӗр лайӑх кӑтартва. Татук арҫынсемпе тан кӗрешекен. Анчах мӗнле вӑл ҫак кӗрешӳ ҫулӗ ҫине пырса тӑнине кӑтартман Кӑнтӑрла — вӑл колхоза хирӗҫ кӑшкӑрса Сурикӑвӑн пичӗ ҫине сурса та хунӑ, каҫхине вӑл хӗрарамсене колхоз май агитацилеме кайнӑ, „кӗрешӳ ҫулӗпе пӗр утӑм йарса пусна!“ Повӗҫри хӗрарӑмсем ҫинчен каланӑ вырӑнсем херарӑмсем хушшинчи ӗҫӗн йӑвӑрлӑхӗсене аса илмесӗр, вӗсем ҫине ҫӑмӑллӑн пахнине палӑртаҫҫӗ. Хӗрарӑмсене машкаланӑ сӑмахсемпе выљани те автӑр хӗрарӑмсем ҫине ҫӳлтерехрен пӑхнине кӑтартат. „Двухстволка“ те :е калакансем анланман ҫынсем мар, вӗсем — пӗри автӑр хӑй, тепри Сурикӑв.

Сурикӑвне „рабочий Сормовского завода, 25-ти тысячник“ тенӗ. Анчах Сурикӑвӗ рабочиле ӗҫлемест. Вӑл поҫолкӑрах — ӗҫсем хӑш йенеле туртӑннине, ӗҫӗн чӑрмавӗсем, сӑлтавӗсем мӗнре выртнине курайман. Райкомра вӑл кӗрешӳ ҫинчен конкретлӑ каласа парас вырӑнне, агитацилеме тытӑнат, райком ҫекретарӗ патӗнче вӑл, сантиментаљнӑ сӑмахсем каласа ларат.

„Пайан есӗр мана ҫунат хушса йатӑр... Епӗр пӗччен мар Пирӗнпе ӗҫхалӑхӗ. Чухӑнсемпе батраксен масси пирӗн йенче... Епӗр вӑйлӑ, епӗр ҫӗнтермеле“...

Ку сӑмахсем край уполномочӗннӑйӗпе райком ҫекретарӗ хушшинче калаҫса лармали сӑмахсем мар ӗнтӗ. „Епӗр ҫӗнтермеле“ тесе парти тахҫанах каланӑ. Сурикӑвӑн сӑмахӗсем тӑрӑх, Сурикӑв хаљччен епӗр ҫӗнтерессе ӗненсе, ӑна вал райкомра тин ӑнланса ӗненсе илнӗ теме те пулат.

Сурикӑв кӗрешӳре, хӑйне-хай рабочиле мар — интеллигентла тытат. Ку, паллах, Сурикӑв сӑнне автӑр рабочирен мар, ытларах хӑйӗнчен ҫырса илнӗ пек тухат.

Ку автӑрӑн пултарулӑх призводствин ҫекречӗ пулӗ та-ха, анчах ҫак ҫекрета уҫса параканни — автӑр хӑй. Тукташ пӗр темӑпах 2 произведени ҫырнӑ. Пӗри — очӗрк, тепри — повӗҫ. Очӗркра уполномочӗннӑй — автӑр хӑй, повӗҫре — „Сорӑм савӑтӗнчи рабочи Сурикӑв“, йатне улӑштарнӑ, — сӑнне улӑштарса ҫитереймен. Куратпӑр ӗнтӗ, — пултарулӑх ҫекретне уҫса йанӑшӑн айӑп ман ҫире мар.

Хрупцов урлӑ автӑр мӗн кӑтартас тени паллӑ мар. Йулашкинчен Хрупцов — коллективизаци ӗҫӗнчи, клас кӗрешӗвӗнчи чӑрмавсен сӑлтавӗ пек пулса тӑрат. „Колхоз йухӑмӗ малала кайманшӑн кулаксем кӑна мар, йалти совет та айӑплӑ“.. Унтан айӑпӗ совет ҫинчен Хрупцов ҫине куҫат. Хрупцов айӑпне йышӑнат. Хрупцова улӑштараҫҫӗ — ӗҫ майланса кайат.

Хрупцов айӑплӑ, вӑл колхоз йухӑмне чӑрмантаракан сӑлтав. Ҫав вӑхӑтрах вӑл кулаксемпе ҫыхӑнса тӑни виҫтан та курӑнаймаст, вӑл хӑй те кулак мар, — вӑл ҫураки вӑхӑтӗнче чи кирлӗ вӑхӑтра колхоза калама ҫук пысӑк пулашу парат. Совет вачар ӗҫлевӗшӗн айӑпӗ Хрупцовра мар (вӑл советпа колхоза хирӗҫ пыракан ҫын мар), айапӗ Ваҫилйӗвкӑра парти руководстви пулманнинче, анчах ҫакна автӑр пӗртте асӑрхамаст.

Йатрус урла повӗҫ автӑрӗ иккӗленчӗклӗ вӑтам хресчене кӑтартас тенӗ. Анчах Йатрус — вӑтам хресченсемшӗн кӑтартулӑ сӑнах мар. Йатрус, пӗр вахӑтра подкулачник пулнӑскер, йулашкинчен колхоз май ҫаврӑнат. „Йатрус пирӗн“ тесе мухтанат автӑр повӗҫӗн 3-мӗш пайӗнче. Анчах Йатрус сӑнне тулашӗнчен кӑна катартнӑ. Кулакпа пӗрле ӗҫленӗ хыҫҫӑн колхозник пулса тӑни — механически пулакан ӗҫ мар. Ун пекех сасартӑк етем хӑйӗн кӑмӑлне тӗпренех улӑштарма пултараймаст. Йатрус колхоз май ҫирӗп ҫаврӑнсь тӑнине тӗпрен илсе, улшӑну процессне пӗтӗмӗшпех кӑтартмала пулнӑ.

Ни вӑтамшӑн, ни чуханшӑн, ни батракшӑн кӑтартулӑ, вӑйлӑ илемлӗх, обрӑзсем повӗҫре ҫук. Колхозниксене автӑр повӗҫӗн 1-мӗш кӗнекинче „выходвой рољсем“ кӑна ытларах панӑ,

колхозниксем хаҫ „выходной роҫ“ мар, вĕсем чаплă, историлĕ, тĕнчере хаҫчен пулман геройсен ролĕсене выҫаççĕ. Писатĕлĕн çав роҫсене тĕрĕс кăтартса памала.

Пултарулăх меслечĕсен йухăмĕсем.

Чăваш литературин (прозăн питрех тата) ĕмĕрхи традицийĕсем, шкулĕсем çук. Ку çитменлĕх пире куҫантарсах тăмала мар. Совет литературĕ куллен сарăлса, тарăнланса пырат. 16 çул хушшинче Совет сойузĕн илемлĕ литератури калама çук пысăк утăмсем туса хучĕ. Совет сойузĕнчи литература, форма йенчен кирек-мĕнле пулсан та, содержани йенчен тĕрлĕ пулма пултараймаст. Содержани йенчен, совет литературине пĕтемĕшпе илсен те, унăн хăйĕн традицийĕсем пур, унăн пĕтĕм тĕнчери литературăшăн кăтартулă йапаласем пур. Совет литературин паллăрах произведенийĕсем 25 шер патшалăхра пичетлене-пичетлене тухнă. Содержани йенчен пĕтĕм тĕнчешĕн паллă совет писатĕлĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренмеле пирĕн те. Тукташ çак задача ăнланса илнĕ. Ун повĕçе çинче Замойскин, Панферăвăн, Шолоховăн влийанисем палăраççĕ. Содержани йенчен тĕрлĕ писатĕлсен тĕрлĕ произведенийĕсем влийани панипе, Тукташăн повĕçĕ ула-чăлалăрах пулса кайнă. Пуринчен ытла ку повĕç çинче Замойскин „Лапти“ йатлă романăн „Ловин дол“ йатлă уйрăмĕн влийанийĕ палăрнă Анчах вĕренес ĕç çамăл ĕç мар, вăл пултарулăхла инициативăсăр пулмали йапала мар, çавна Тукташ асăрхаман, паллă маçтăрсен меслечĕсене критиклесе йышăнма пĕлеймен.

Нациле форма йенчен меслетсене хамăрăн çĕнĕрен тумала. Ку тĕлĕшрен пирĕн кăтартулă йапаласем çук-ха. Тукташăн „Вăкăр çырми“ повĕçĕ — вырăсларан куçарнă литература астутармаст. Ăна оригиналлă, чăвашла формăн принципĕсене асăрхаса çырнă. Формăн национала елеменчĕсем содержанийе хирĕçле мар, вĕсем содержанипе тачă çыхăнса тăраççĕ Форма йенчен повĕçре Тукташăн хăйĕн меслетсем чăмăртана пуçланă. Вĕсене вăйлатса, çав вăхăтрах идейлăх тасалăхĕшĕн вăйлă кĕрешсе хăйне тивĕç стил палăртассишĕн ĕçлемеле.

Чĕлхе йенчен те повĕçре уйрăм çтил палăрнă. Повĕç чĕлхи çăмăл, ăнланулă, содержанипе килĕшӳлĕ.

Уйрăм сăнсене уйăрса палăртасшăн автăр вĕсене индивидуалатат. Ку ĕçре автаран çитеӳсем те пур. Микишăн „йеҫоххă-воххă“, Йусăн „кипиткă“ Хрупцовăн „снаш“ сăмахесем питĕ вырнаçулă пулса тăнă. Индивидуалăха пĕр-пĕр сăмахпа палăртни сахал, кунрая пуçне ăна уйрăм тиçсен ашри пурнăçĕн пĕчченлĕ йенĕсем урла та кăтартас пулат.

Автăр ку произведени урлă йалх.çалăхĕнчи социалисăмлă процесса тĕрĕс кăтартас тесех тăрăшнă. Хăй задачине вал пĕтĕмпех пурнаçа кӳртеймен. Социалă улшăнусен тенденцине произведени урлă палăртса, социалисăмлă действительнăçа объективлă кăтартса, социалисăмлă реалисăм çулĕ çине çирĕп тухса тăрас задача Тукташ çĕнеймен. Час-часах унăн методпа методологи çитменлĕхĕсем ăна çултан парса йама тăраççĕ. Ку

субйективлă кăмăлран мар — писатĕлĕн политикăпа методологи йенчен пĕлӳлĕх çитменрен килет пулĕ, теме те пулат. Маркçисăмпа-ленинисăм методологи пелӳлĕхне çӳле çĕклесе, илемлĕ литературăн техникине алла илсе, халхи кунсене, ĕçсене тивĕç, содержанипе — пролетарилĕ, формăпа — нацилĕ произведенисем туса парасси — кашни писателĕнех чаплă задач. Çак задача пурнăçлас çулпа Тукташ пĕрремĕш утăм турĕ. Утăмĕ тĕрĕсех мар, çирĕпех мар, ăна çирĕплетсе, умри тĕллеве лайăх курса, пур чăрмавсене те çĕнтерсе малала йарăнса утасса Тукташран кĕтетпĕр.

Самар, 1/X-33 ç.

А. ТАҪКОВ.

„Вăкăр çырми çинченех“.

Вулакан çырăвĕ.

Колхоз йухăмĕн вăйлă хумĕ 1929/30 çул сепче вăйлăн сарăлса кайрĕ. Çав çулсенче Вăтам Атăл крайĕнче шăтса тухнă „Краснофлотец“ колхоз çинчен И. С. Тукташ „Вăкăр çырми“ йатлă повĕç çырса пачĕ. Повеçĕн 1-мĕш пайĕ кăна тухрĕ-ха, иккĕмĕшне автăр халĕ çеç çырат пулмала.

Ку повĕçе йалсенче вуласа тухнă тĕле Вăтам Атăл крайĕнчи Песевтĕк (Безенчук) колхозникĕсем Сталин йулташ патне йанă çыру—повĕçре катартнă ĕçсем тĕрĕс пулнине çирĕплетекен документ пулса тăрат. Çакă терĕслĕх—пирĕн илемлĕ литературин пайанхи лозунгĕ.

„Вăкăр çырми“ повĕçе, унăн пит те пысăк çитменлĕхĕсене, пиççе çитеймен вырăнсемех те пуррине курах, епĕр чăвашсен совет литературин çĕнтерĕвĕсенчен пĕри, тетпĕр.

Тукташ колхозшăн кĕрешнине тарăн содержанилĕ илемлĕ образсемпе, çăмăл, массăна ăнланмалла чĕлхепе çырса парасшăн пулнă. Вăл колхоз йухамĕ çине айакран çеç пăхса таракан писатĕл мар. Вăл вак харпăрлăхлă хресченсем, социалисăмла мелсемпе ĕçлекенсен массине курса пынă историлĕ пысăк тапхăрти ĕçе хăй хутшăнса ĕçлет. Çавăнпа та вăл Ваçилйĕвкăри клас кĕрешĕвĕн хăшпĕр тапхăрĕсене пит те çивчĕн илсе кăтартма пултарнă. Вуласса та повĕçе чылай пысăк интереспе вулатăн.

Коллективизаци йухăмĕнчи йăвăрлăх вăл—вак производства никĕсĕ çинче темиçе ĕмĕр пурăннă вак харпăрлăхлă хресченсен кивĕ интересĕ. Çак йăвăрлăх колхоз ĕçĕнче чи пысăк чăрмав. Тукташ чи малтан çав харпăрхăйлах йепле чармантарса пынине тепĕлĕн кăтартса парат. Вак харпăрхăйлăх, стихийă аллинче вăтам хресченсем нумай тыткăнра пурăннă. Вăтамсен представителĕ—Йатрус, вăл иккеленсе, ăçтала сулăнсан аванрах-ши?—тесе тăнине автăр аван кăтартнă. „Ăçтала туртăнат унăн камăлĕ?“ тесе ыйтат автăр. „Микиша курат—колхозшăн чĕрине парат, Карукпа йус умĕнче—весен чури пулма, вĕсен ĕçне шутарма хатĕр“ тесе ответлет хăйĕ. Йатрус çинчен вуланă вăхатра—вăтам хресченсем нумайĕшĕ колхозсем организацилевĕ чухне: „темех тумала ĕнтĕ?..“ тесе, хăйсен вак харпăрхăйлăх картинчен тухаймасăр, иккĕленсе тăни куç умне лайаххăн тухса тăрат.

Ку иккĕленӳлĕхпе халĕ те пит те пĕлсе, çине-тăрса кĕрешсе пырса, хресчен тĕп массине воçпитани памала. Повĕçе вулакан хăйĕн ĕçĕнче чи малтан çакна хытă астумалине лайăх ăнланса илме пултарат. Ку—вăтам хăйĕн харпăрхăйлăхне хĕрхенсе иккĕленсе тăнине тĕрĕс кăтартса пани—Тукташăн повĕçĕнче хаклă, паха çĕнтерӳ.

Повӗҫӗн аслӑ геройӗ — колхоз организатӑрӗсенчен пӗрийӗ — матрус Микиш. Микиш парти членӗ мар (ун ҫинчен повӗҫре нимӗн те каламан, ҫавӑнпа вӑл парти членӗ мар тесе хӑйуллӑнах калама йурат). Унӑн ӗҫӗнче малтанах парти йачейки, райком пулӑшса пыни курӑнмаст (Тукташӑн кунта ҫитменлӗх пурах). Ҫавӑнпа Микиш колхоз тӑвас ӗҫе те тӗрӗс ӑнланмаст. Вӑл калат: „Упана та ташлама вӗрентеҫҫӗ, йеҫохха-вохха. Салтакра епир темиҫе пин ҫын килӗштерсе пурӑннӑ... Йалта та ҫаплах унӑн йӗрки" тет. Упана ташлама вӗрентнӗ чухне тимӗр урай ҫине тӑратса, урайне айалтан вутпа хӗртсе тӑраҫҫӗ, теҫҫӗ. Упа, урана пӗҫертнипе, ташланӑ пек: пӗрне йӑтат те тепӗрне пусат; ҫав вӑхӑтра купас каласа тӑраҫҫӗ. Кайран упа, урамра та купӑс сассине илтсен, каллех урана пӗҫерет тесе, ташланӑ пек, урисене ҫӗклеме тытӑнат. Хресчен упа мар. Хресчене ун пек майсемпе колхоза кӗртеймӗн — вӑл перегиб пулат. Тата салтакри пурнӑҫпа колхоз пӗр йапала маррине те манмала мар. Микиш ӑна питех уйӑрсах тӑмаст.

Повӗҫре кӑтартнӑ тӑрӑх — колхоз тӑвас тӗлӗшпе малтан хатӗрленӳ пулман пирки, хресченсене колхоз ҫинчен лайӑх ӑнлантарса паман пирки, колхоз тӑвас тӗлӗшпе пухакан пухӑва темиҫе хӑваласа та ҫынсем пухӑнмаҫҫӗ.

Йулашкинчен, кулак Карук хушнипе, „кооперативран йапаласем валеҫмеле тесе" халӑха суйса пухаҫҫӗ.

Колхоз хыпарӗ сарӑлсан, кулаксем те хусканма тытӑнаҫҫӗ. Вӗсем те, хӑйсем колхоза кураймаҫҫӗ пулин те, колхозшӑн алӑ ҫӗклесе, унта кӗме тӑрӑшаҫҫӗ.

Анчах мӗнле шутпа вӗсем унта кӗреҫҫӗ-ха? „Пирӗн хамӑрӑн пӗр чӑмӑр пулмала" тет Карук, — „унтан хамӑран та колхоза кӗрсе, ӑна шалтан ӗмме тытӑнмала. Пӗтӗм сӗткенне типӗтсе ҫитерсен, ҫеҫкисем хӑйсемех хӑрса кайса, сапаланса пӗтеҫҫӗ".

Ҫак сӑмахсемпе Тукташ ку вӑхӑтри кулак сӑнне, унӑн шухӑшне тӗрӗс ӳкерсе катартат. „Плакатсем ҫинчи тискер кайӑк сӑнсӑпатлӑ, пысӑк шӑллӑ, тачка майлӑ, алӑра обрезлӑ ҫын йевӗр" (Сталин „Йалта ӗҫлесси ҫинчен") туса кӑтартмаст.

„Йалти хаҫхи кулаксемпе подкулачниксем, Совета хирӗҫ елементсем пуринчен ытла „лӑпкӑ", „ылак", „ҫветуй" пек ҫынсем" (Сталин).

„Вӑкӑр ҫырминчи" кулаксем те ҫавӑн пекех. „Пысӑк хырӑмне каҫӑртса, хура сухалне шӑлса тӑракан кулак ҫук пайан куҫ умӗнче. Уриве те ҫӑпата кӑна сырса йана авӑ" (37 мӗш стр., „Трактӑр", 3-мӗш №). Хӑйсем халӗ весем пачах „долой колхоз" тесе кӑшкӑрмаҫҫӗ. Вӗсем колхоз майлӑ, йӑвашшӑн, „пӗр ҫемйери пек пурӑнмала" тесе „тутлӑ" йурлаҫҫӗ. Анчах тӗттӗм кӗтессенче хӑйсен тискер ӗҫӗсене тума пӑрахмаҫҫӗ.

Темле тӑрӑшсан та, колхоза саламма май килмен пирки, кулаксем ҫӗнӗ май шыраса тупаҫҫӗ. Вӗсем тепӗр йалти кулаксемпе, вӗсен йыттисемпе — сектантсемпе пӗрлешсе, вӗсене Ваҫилйӗвкӑ йалне ыйткалакансем пек тумлантарса, хресченсене хӑратса ҫӳреме, „турӑ пиллӗхӗсем" сарса ҫӳреме кӑларса йараҫҫӗ. Ку

майпа та колхоза салатаймаççĕ. „Хыпарçă-тăхлачăсене“ Микиш хăйĕн аллине çавăрса илсе района ăсатат.

Кулаксем çектантсемпе, контрреволюцилĕ елементсемпе çыхăну тытса, колхоз ĕçĕнче такăнтарса пынă. Вĕсем тата „промпарти членĕпе — Вĕшлепе çыхăну тытса „ĕçлесе пурăннă“. Вĕшле вăл — „промпарти“ членĕ пулнăскер, вредитĕл. Вăл малтанах Мускавра темĕвле савăтра ĕçленĕ. Кайран, промпарти членĕсен сучĕ пуçлансан, суйа документсемпе Вăтам Атăл крайне килсе лекнĕ. МТС-ра аслă бухгалтер вырăнче „ĕçлесе“, Микишсем колхоз ваљљи çейăлкăсем илме пырсан, „Пирĕн çейăлкăсем çук“ тесе суйса, колхозсен çураки планне вăхăтра тултарас ĕçре чарса тăрат. (Анчах кунта Тукташ унăн чейелĕхне, „промпартиле“ тăшмансенчи сийенлĕ йенне тĕплĕн кăтартма пĕлейменниве те асăнмала).

Йулашкинчен, нимĕнле майпа та такăнтарма май килмен пирки, кулаксем „киреметпе“ те пулсан хăратма тарăшаççĕ. Çапах та „ĕç“ тухмаст. Колхоз йухăмĕн хирĕçле хумĕ вĕсене чыхăнтарса йарат

Кулаксене, вĕсен тискер ĕçĕсене плакатсем çинчи пек кăтартманни — Тукташăн повĕçри иккĕмĕш пысăк çĕнтерĕвĕ. Кунта Тукташăн пĕр çитменлĕх пур — кулаксем чи малтан, хăйсем колхоза кĕмесĕрех, колхоз тума чарасшăн мĕн пур вăйне хурса кĕрешнине пачах асăнман.

Тукташăн хăшпĕр çитменлĕхĕсене илер.

Колхоза кĕнĕ кулаксем колхозран тухса, ăна салатса йама тытаннă вăхата, Ваçилйĕвкă йалне парти Крайкомĕ йала пулăшма йанă 25 пин çынсенчен пĕрне — Сормăври рабочийа Сурикăва йараççĕ. Колхоз организатăрĕ Микиш çинчен те, Сурикăв çинчен те, вĕсем ĕлĕк камсем пулнă, мĕнле ĕçпе пурăнни çинчен те автăр уççăн кăтартса параймаст.

Кулаксен агитацийĕпе, вĕсем колхозран тухнипе çех мар, хăшпĕр вырăнта вăйпа организациленĕ колхозсем, Сталин йулташ „Çитĕнӳсемпе пуç çаварăнни“ статйи тухнă хыççăн, хăшпĕр колхозсем саланма пуçларĕç.

Сталинăн çак историлĕ статйи çинчен, вăл статйа колхозсене тĕрĕс çул çине тухма мĕнле пысăк пулăшу пани çинчен, Ваçилйĕвкăри колхоз çав вăхăтра организациленет пулсан та, Тукташ ун çинчен пĕр сăмах ту асăнмаст. Çакна кăтартманни автăр хăйĕн произведени çинче сахалрах ларни, ăна хыпаланса çырнине кăтартат.

Повĕçĕн тепĕр çитменлĕхĕ тата — вăл повĕçре партипе комсомолăн йалти ĕçне кăтартманни.

Повĕçри колхоз мĕнле çуралат-ха? Ăна камсем тăваççĕ?

Хресченсемшĕн хĕн-хуртан тухмали пĕртен-пĕр çулĕ — темĕн пысăкĕш сарăлса, сапаланса выртакан вак производствăлă хресченсен массине колхоза пĕрлештернинче иккене хресченсем ăнланса илнĕ хыççăн çех колхозсене талкăшпех кĕме пуçларĕç.

Чухăнсемпе батраксем, вăтамсем ĕнерхи куна аса илсе, унăн тискерлĕхпе хăрушăлăхне лайăх ăнланса, колхозра çех пурнăçа йусама пуррине тĕплĕн шута илсе, колхозшăн алă çĕклерĕç.

Тукташăн „Вăкăр ҫырминче“ апла мар. „Вăкăр ҫырминчи“ колхоз, пĕлĕт ҫинчен татăлса аннă пек, вулакан пуҫĕ умне тухса тăрат. Повĕҫре чухăнсем, батраксем, вăтамсем тата кулаксем те колхоз тăваччен мĕнле пурăнни ҫинчен ҫырни паллах мар. Тен, вĕсем пурте ҫителĕклĕ пурнăҫпа пурăнна. тен чухăнсемпе кулаксем хушшинче революциччĕн, тата революци хыҫҫăн малтанхи ҫулсенче нимĕнле кĕрешӳ те пулман? Колхоз тума пуҫлаччен нимĕнле хатĕрленӳ те пулман Вăл ĕҫре йертсе пыракансем те — парти членĕсемпе комсомолĕссем ҫук. Ваҫилйĕвкă йалĕнче пĕр партийца та, комсомолĕс та ҫук. Чăнах та ҫавăн пекех пулнă-ши?

1929/30-мĕш ҫулсенче ун пек йалсем пулни ҫинчен ĕненме хĕн. Вал ҫулсенче кашни йалтах пĕр комсомолĕс та пулсан пулнах, тесе калас килет. Ҫавăн пекех Татук ҫинчен ҫырнă йеркесем те ĕненчĕксĕр туйăнаҫҫĕ Ăна повĕҫре вăйпах герой туни курăнат. Татук сăнне ӳкерсе кăтартнă чухне ҫутăрах сăрсемпе ытларах усă курни палăрат.

Йулашкинчен повĕҫри геройсен йачĕсем пирки те кĕскен калас пулат.

Классиксем, халҫхи писатĕлсем те геройсене лайăхрах хушамат, лайăхрах йат парассине пысăк вырăна лартаҫҫĕ.

Перков — „Работа классиков над прозой“ кĕнекере ҫырат: „Чехов следил за тем, чтобы герою было дано существующее имя, и советовал своим корреспондентам выбирать имена, сообразуясь с благозвучием и избегая общепринятых шаблонов“.

Нимĕн вăтанса тăмасăр калас пулат: Тукташ геройсене кирлĕ йатсем парасси ҫине ҫителĕклĕ ҫавăрăнса пăхман.

Карук! Ку йат мĕнле, миҫе произведенире пулман-ши? Кулака кăтартас пулсан, йатне Карук тесе ҫеҫ памала мар. Йус йатлă герой Трубинан та „Килет“-ре пур (типĕ те ҫавăн йевĕрлĕрех), ҫавăнпа ун йатне урăх тунă пулсан, лайăхрах пулна пулĕччĕ.

„Вăкăр ҫырми“ ҫинчен сӳтсе-йавса, теплĕ хаклав пама та вăхăт. Ун ҫинчен ҫырмали вумай, ҫырмала та. Ăна кашни колхозник патне ҫитерме тăрăшмала. Повĕҫĕн тивĕҫлĕхĕ пĕчĕкех мар.

16/I-1933 ҫ., Ҫĕмерле.

Е. ЗАХАРОВ.

М. Трубинан „Ĕç тухмарĕ“ калавĕ çинчен.

„Ĕç тухмарĕ“ ятлă калавра М. Д. Трубина колхоза çирĕплетсе вăйлăлатас ĕçре сийĕн кӳрекен кулак таврашĕн усал ĕçĕсене кăтартса панă. Пирĕн умра кунта колхозник çемйи — Хветут, унăн арăмĕ Мариç, тата вĕсен 12 çулхи ывăлĕ Ларивая. Хветут икĕ çул ĕнтĕ колхоз арманĕн заведуйушчинче пурăнат. Вăл шанчăклă çын, арман йĕркине аван пĕлет, ĕлĕк арман хуçи патĕнче мелникре пурăннăскер, çавăнпа ăна колхозниксем армана шанса панă. Арманта вăл тĕрĕс ĕçленĕ, арман ĕçне вăйлалатнă: хуçа чухне ĕлĕк икĕ чул анчах авăрнă, халĕ виçĕ чул авăраççĕ. Колхоз тата кĕрпе арманĕ, çăм тапакан машинă майлаштарса йарасшăн тăрăшат. Хветут çак ĕçсене пĕтĕм вăйне хурса, арман колхозшăн тупăшлăрах пултăр тесе, тăрăшса туса пырат Арман тупăшĕпе колхоз йалта електрицă çутатса йарасшăн. План тăрăх колхоз пуçланса кайни виçĕ çул тултарнă çĕре електрицă пулмала. Хветут та, Мариç те, ытти пур колхозниксем те кашни пӳртре Илйич лампи пулассине кĕтсе пурнаççĕ.

Арманта кĕреçе çăнăхĕ талăкне 20 — 25 пăт пухăннă. Арман çакнашкал аван авăрнă чух Хветут пĕр пăт çăнах мар, ытларах илсен те паллă пулас çук, анчах Хветут нихăçан та армантан çăнăх вăрттăн илсе уса курман. Мĕн чухлĕ тырă авăрнине тĕрĕс шутласа çырса пынă, кĕреçе çанăхне тĕрĕс, пĕр кĕренке пытармасăр правленине парса тăнă. Хветут хăй те, унăн арăмĕ Мариç та тӳрĕ, йамăта (йантана) хапсăнман çынсем.

Мариç Хветут арманта аван йĕрке туса пурăннăшăн пит кăмăллă пулнă, анчах ăна пĕр йапала кăмăлсăрлатнă: хутранситрен, темиçе çул хушшинче пĕрре Хветут ĕçкелеме тытăннă. Çавăнтан Мариç хăраса пурăннă Хветут, ĕлĕк арманта хуçа патĕнче тарçăра пурăннă чух, тарăхнипе пуљ, ерех ĕçкеленĕ, анчах револђуци пулнăранпа ĕçсех кайман. Ĕлĕк ӳсĕрпе Мариçне те çапкаланă, халĕ çапма пăрахнă. Мариç халĕ — активлă делегатка. Перре Хветут Мариçе ӳсĕрпе çапкаласа илнĕ, — Мариç Хветута çавăншăн йалкавашне илсе кайса намăслантарнă Çавăнтанпа Хветут арăмне усĕрĕлсен те пĕр сивĕ сăмах та калама пăрахнă.

Мариç Хветута ĕçме чарса пурăннă. Вăл Хветут укçине те шута илсех пурăннă, çавăнпа Хветутăн ĕçме те май пулман.

Пĕр-ик виç уйăхранпа Хветутсен йалне пĕр Московкинă йатлă хĕрарăм пырса вырнаçнă. Вăл 30 — 35 çулхи пĕр пĕччен пурăнакан хĕрарăм. Документсем тăрăх Московкинă мал йĕнчи чăваш хĕрĕ, чухăнскер. Вăл кукăљсем пĕçерсе сутă тунă, унтан сăра туса сутма пуçланă, кайран тата ерех иле-иле сутма тапратнă.

Çак хĕрарăм патне Хветутăн та пырса кĕмеле пулнă. Вăл пĕрре, арманта Кавĕрле йатлă хресченпе кунĕпе ĕçленĕ хыççăн, ăна кăшт ĕçтерме шухăш тытнă. Хăй укçине пĕтерес килмен пирки, Хветут арман çăнăхне пĕр пăт илсе кайса ĕçме шут тытнă. „Нумай мар вĕт, пĕр пăт çитет пире... Халĕ илем те, урăх нихçан та илмĕп“, тенĕ Хветут хăйне хăй

Çапла вара вăл Кавĕрлепе Московкинă патне кайса ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ. Кавĕрле тухса кайсан, Хветут Московкинă патĕнчех йулнă. Кайран вăл киле ӳсĕр таврăннă. „Йалта автансем шарлаттарса аватаççĕ... Кĕрхи сивĕ ир çывхарат. — „Арман урапи йусарăмăрçке-ха пайан — тет Хветут арăмне. — Кавĕрлепе ĕçлерĕмер. Ĕç пĕтернĕ çинчен пĕр-ик черке сыпрăмăр... Епĕ хамăнне пĕр пус та ĕçсе пĕтермен, хăт укçана шутласа пăх...“ Мариç укçа кушелккине салтса пăхрĕ. Кушелккере укçа каçхине 42 тенкĕ те 17 пусчĕ. Халĕ те укçа çав-çавах, пĕр пус та катăлман... „Ара, арманти çăнăха сутса ĕçнĕ пулĕ-çке кусем? — тесе хыпăнса ӳкрĕ Мариç... — „Ай-йай! Тем курса ларас пулĕ Хветут ĕçме тытăнсан... Вăрра тухса кайат-çке вара пирĕн Хветут. Колхоз пурлăхне салатаканни, колхозăнне ĕçсе кӳпсе пурăнаканни!“

Тепĕр кунне Хветутăн „ĕçлес килмест, пуç ыратат, чĕре ырăнта мар пек“... Вăл каллех Московкинă патне кайат те, каллех ӳсĕр пулат. Московкинă ăна ерех ĕçтерсе хăналаса, арман çăнăхне хăйĕн патне йатма вĕрентесшĕн... Анчах „ĕç тухмаст“. Мариç упăшки хыççăн Московкинă патне пырат те, Хветута унтан киле кăларса йарат, хăй Московкинăна калат: „Астусарах пурăн. Çăнăхшăн пулсан, ан,чăрман, ĕç тухмĕ“, — тет. Унтан вăл.— „Вăт сана“! — тесе, пĕтĕм сĕтел çинчи йапаласене шакăр! çĕреле сăтăрса тăкат.

Тепĕр кунне те Хветут Московкинă патне кайнине кура, хăйĕн упăшки колхоз арманĕнчен çăнăх илсе ĕçме пуçлани çинчен Мариç колхоз правленине пĕлтерет. Колхоз правленийĕ çав кунах армана тĕрĕслеме комиççи йарат. Комиççи тĕрĕслесе тухнă хыççăн çăнăх çитейменнине палăртат. Колхозниксен пуххинче Хветут тархаслат: Халиччен... пĕр-пĕрчĕ çăнăх та вăрламан. Халђ кăна... пĕр пăт çăнăх илсе тухрăм каçарăр“, — тет.

Хыçалтан пĕр хĕрарăм сасси, çивĕч çĕçĕ каснă пек, илтĕнет: „Колхоз пурлăхне салатакана каçару çук!“ Ку сăмахсене - шапшурă пулса кайнă Мариç хăйĕн упăшкине айăпласа калат. Пухура Хветут пирки çапла йышăнаççĕ: „Хветута арман заведуйушчинчен кăларас, колхоз пурлăхне салатма тытăннăшăн ăна сута парас“. Тата, колхозра хĕрарăмсем ыйтнипе, Московкинă тĕлĕшпе çапла йышăнаççĕ: Московкинăна йалтан кăларса йарас тесе пайанах йалканашне пĕлтерес.

Çав кун каçхине Московкинă патĕнче ухтару тунă та, документсем тупнă. Вĕсем тăрăх Московкинă лишенка, раскулачит тунă çын арăмĕ пулни кĕретĕнех курăннă.

Ирпе, Московкинăна милиционер район центăрне илсе кайнине курсан, Мариç калат:

— „Тухăçлă çын тупрăм, терĕ пуђ Хветута сыпçăнса та... анчах ĕç тухмарĕ“, — тет.

Çакăн пек пĕтет Трубина Мархвин „Ĕç тухмарĕ“ йатлă калавĕ. Кунта пире çĕнĕ пурăнăç тăвас ĕçре кулак таврашĕсем колхозниксене пăсса кивĕ пурăнăç çулĕ çине тăратассишĕн тăрăшнине сăнласа кăтартнă. Колхозниксен хуçалăх йĕрки — çĕнĕ йĕрке, социалисăмлă йĕрке, анчах колхозниксен ăстăнĕ çĕнĕ пурнăç йĕркипе тан урăхланса çитеймен. Пĕтекен клас тăшманĕ çакăнпа усă курма тăрăшат. Çавăнпа пирĕн колхозра, хуçалăха çĕнĕ — коллективлă — йĕркепе организацилесе çирĕплетнипе пĕрле, колхозниксем хушшинче кулътурăна сӳлерех хăпартас тĕлĕшпе çанăсене тавăрсах ĕçлес пулат. Иккĕмĕш пилĕкçуллăхра пирĕн умра капиталисăм елеменчĕсене економикăра та, çынсен тăнпуçĕнче те пĕтермеле.

Çакăн çинчен астутарат пире Трубина Мархвин калавĕ.

Е. ЕЛЛИЙЁВ.

Уççыру — чăваш писатĕлĕсем патне вулакантан[1].

Шанмалăх пур-и?

...Халь пурте шантараççĕ. Пуринчен ытла, пуринчен „хăватлă“ Хусанкай шантарат:

> ...„Ман алла
> сăмах савăтне
> шанса панă республик“ („Магнитту“).

Чăнах-ши? Суймастăн-и?—епĕр ыйтатпăр. Ăçта шантару хучĕ? Шантару хутне ес пире кăтарт. Хăçан, хăш вăхăтра, кампа, хăш çĕртре догăвăр турăр: республик сана çавхатер пысăк, çавхатер аслă, çавхатер ответлă ĕçе — сăмах савăтне — шанса парĕ? Панă-ши вара? Памасăрах, панă тесе çӳреместĕн-и? Парсан та, сана кăна-ши, не ыттисене те-ши? Вăхăтлăха-и, йе пусĕпех-и? Парсан та, çитейĕ-ши вăйхалă савăта тытса тама? Çитменнине тата пирĕн çĕршывра, республикре, савăтсем халах алливе куçнине аванах пĕлсе таратпăр. Мĕнле-ха вăл «шанса пани»?

Çĕр тĕрлĕ ыйту, йулташсем! Ан шухăшлăр: епĕ вăл сăмах метафăрă иккенне пĕлмест, тесе. Пĕлетĕп, пит лайăх пĕлетĕп. Анланатăп та Хусанкай мĕн калас тенине. Анчах ытла ирĕккĕн сăмахсемпе выльаççĕ-çке, „хуçа“ выранне ытла ирĕккĕн йышăнаççĕ-çке. Никамран ыйтмасăр-тумасăр, никампа килĕшмесĕр, килĕштермесĕр. Ирĕксĕр ыйтатан: мĕншĕн-ха Хусанкайа панă шанса, Шăпчăк та вĕт хăйне „чи палăрса çитнĕ писатĕл“ выранне картат („Сунтал“, № 8), Паймен унта, Йулин Васлейĕ тахçанах вĕт хайсене «аслă писателе» кӳртрĕç. Тата сахал-и унта аслисем, асли пулма ĕмĕтленекеннисем, чи аслине тухма тăраканнисем, чăн аслине кĕме пикеннисем. Вĕсем килĕшĕç-и Хусанкай савăта çавăрса илнине? Хусанкайа „кăларса“ те вĕсем те: „ман алла савăт шанса панă“ тейĕç. Мĕн курĕ-ха унчухне вăл савăт? Килĕштерĕç-ши „савăтçăсем“!

Çук, йулташсем, шӳт тумастăп...

Мĕнле-ха вăл пирĕн чăваш литературинче, хăт те мĕнле произведенийĕ те „епĕ“ пе „ман“-па пуçланат. Хăшпĕрисен пĕр сăвă та çук-тăр „епĕ“ кӳртменни, хăйне мухтаманни... Ну, Хусанкайĕ ĕнтĕ вăл лирĕк. Ыттисем те пур вĕт-ха мухтанаканнисем. Çынсем мухтамасан та, хăйсем хăйсене мухтаççĕ.

Каларăшне, кĕтсе тăр-ха унта çын мухтасса!

Ытла хăйсем çине шанаççĕ-çке пирĕн çамрăксем. Вăл лайăх та-ха пĕр йенчен, анчах „Тартарен из Тараскона“ пулса ан кайтăр. Пĕр мухтанмали ĕççĕрех вĕçсе ан лартăр.

Пĕр çамрăк ача, КÇШ-ра вĕренекенскер, нумай пулмаст-ха ыйтат манран: — „Вырăсла çырма тытăнам-ши“,—тет.—„Чăва пла

[1] Творчества ыйтавĕсене сӳтсе-йавна май пичетленет. — Ред.

кăна ҫырам ши“? Романсем ĕнтĕ, повĕҫсем паллах. Чăвашла ҫырсан... мĕн ĕнтĕ вăл — мĕлйун ҫурă халăх пĕлни. Вĕсем, чăвашсем, мухтĕҫ ĕнтĕ, анчах чавашла ҫырвипех тĕнчипе паллă писатĕл пулас ҫук.. Чăваш чĕлхиве пĕлмеҫҫĕ вĕт-ха ытти халăхсем.

— Мĕнле пултаратăн, ҫапла ҫыр,— терĕм ним калайман йенне.

— Пултарассинче сăмах ҫак унта,—пуҫне ҫĕклерех вăл мана ответлерĕ,—ет м пултарман йапала ҫук вал. Анчах вырăссен Пушкин, Толстой пур-ҫке-ха... вĕсене ҫитерсен те, вĕсенчен иртсен те, вырăссем вĕт вĕсене манас ҫук. Пурĕпер Пушкинпа Толстой хыҫĕнчен тăмала пуле, мĕн тĕрле чапа тухса та.. Чи малти пулас ҫук. Чи малти пулмасан, тытăнас та килмест...

— Да-а!..— текелесе тăратăп ĕнтĕ епĕ.

— Ҫук,—терĕ вал, ассăн сывласа —Чăвашлах ҫырмала пулат пуљ, ахăр. Чăвашсен Пушкин та, Толстой та ҫук-ха. Унта ним те мар мала тухасси.

Мĕн калаййăн-ха хирĕҫ. Пуҫа султăм та пăрантăм. Каласах пулат ĕнтĕ: вет ҫырман-ха хăй ним те паллăрах йапала. Редакцийе йанă сăввисене калле йараҫҫĕ. Вал вĕсене пухат, ҫĕлет пысăк папкă:— генийа тухсан пичетлĕҫ-ха... Пĕри те ҫухалмĕ? Хăйсенех, хаљхи ухмахсене, намăс пулĕ,— тесе мăнкăмăллăхве пусарат. Шухăшлăр ĕнтĕ хусамăр! Ҫавăн пек шакла пуҫран, чикесĕр ĕмĕтле, хăвăл пуҫпа пурте капланса кĕреҫҫĕ те литература, кăшкăраҫҫĕ хăлхана хупласа:

„Ман алла
сăмах савăтне
шанса панă республик“.

Шавтараҫҫĕ вĕт пире, вулакансене, ҫине-тăрсах шантараҫҫĕ. Хăт те менле пултăр: ĕҫĕ пур-и, ҫук-и? Шаямали пур-и? Ҫук-и? Шан. Ан тавлаш.

Шанас килмест вĕт, йуратнă писатĕлсем, так нимĕнсĕрех. Шанаймастпăр шанас тесен те... Есĕр пире сăмахпа мар, ĕҫпе шантарăр. Ун чух епĕр ененепĕр.

Ан ҫухăрăр! Хуллек каласан та илтетпĕр.

Пуҫлам-ха курнине:

Перре техникумра ачасемпе „Сунтал“ журнала пăхса тухрăмăр. Тенепле Хусанкай сăввипе тĕл пулчĕҫ ачасем. „Интервйу“ йатлăччĕ-и сав? Ахаљ пулсан, астумаҫтчĕҫ те пуљ ачасем, анчах литератур урокĕ хыҫҫăнччĕ. Ҫавăнпа калаҫса кайрăмăр.

— Мĕншĕн-ха,—теҫҫĕ ачасем, — Хусанкай сăввисене ҫавхатер сапаласа ҫырат. Шур йур ҫинчи чăхă ҫĕрех ĕнтĕ Вулама ҫук вĕт-ха ăна

Епĕ, паллах, калямалине каларăм ĕнтĕ. Ҫапла та ҫапла... Трибунă чĕлхи, ҫĕнĕ сăвă мелĕ, оратăр мехелĕ... Тата тем те пĕр...

— Ҫук,—терĕҫ мана ачасем пулсе.— Апла пулмала мар вăл. Вăл укҫа ытларах илесшĕн кăна хăтланат пулмала. Строкаран шутласа пахалама пулĕ. Кашни строкки виҫĕ тенкĕ. Мĕн чухлĕ укҫа. Вăл ҫапла пулмала вулама ҫырман ăна, Хусанкай кăмăлне курса кăва ҫырнă.

— Мĕнле вулама сырман? — сине-тăрсах тытантăм. — Ăна ак çапла... кăшкăрса вуламала!

Анчах виçĕ йĕрке вуларăм-и? — такăнтăм; тăваттăмĕшĕнче темĕскерле ăнланман сăмах сиксе тухрĕ (чăваш сăмахех): пиллĕкĕмĕшĕнче чĕлхе çакланчĕ.

— Ха-ха-ха! —кулса йачĕç ачасем. — Ху та вулаймастăн вĕт. Тӳрех калама тӳр килет: вулаймастăп. Чăваш чĕлхине пĕлмен çын та мар ĕнтĕ, илемлĕ сăмаха йуратакан та, — вулаймастăп пурпĕрех; мĕн тăвассу пур? Час-часах ыйтатăн вара: епĕ кăна вулаймастăп-ши? Пăр епĕ кăна чăвашсен хушшинче çапла ăнланми суралнă-ши? Йе ман иккисем, ăнланманнисем татах та пур-ши? Пур-тăр, йулташсем пур-тарах? Пур-тăр кăна мар, çук-тăр ăна ăнланакканни! Çук-тăр ăнланма мар, ăнланма тăрăшаканни те? Çук-тăр ăнланма тăрăшаканни мар, вулаканни те! Пур-тăр вăл вулас текеннисем те, анчах, паллах, вулаймаççĕ. Тем тĕрлĕ тăрăшсан та вулаймаççĕ. Тӳрех калатăп: хăшпĕр çын ăна вуличчен хатĕр тухса чул касма... Вуласан та вулаççе пуҫ ĕнтĕ редактăрсем (кусем тарăхса çĕ те вулаççĕ; ăçта кайан: материал вĕт); тата вулаççĕ пуҫ критиксем (кусем те макраççĕ те вулаççĕ: вуламасăрах вĕсем çинчен статйа çырас çук); йулашкинчен тата, емсех вулаççĕ пуҫ çамрăк тин вĕренекен поетсем (кусем вĕренес теççĕ ĕнтĕ, журналта мĕн çырнине вуламасăр хăвармаççĕ).

Ыттисем вулаççĕ Шантарма пултаратăп: вулаççĕ. Чăнах, хăшчух тытса та пăхаççĕ, пĕр-ик йĕрке вулаççĕ те, анчах куç чăлпар саланса кайсанах, сăмахсем сиккеле пусласанах, пăрахаççĕ те, кĕнекине ахлатса йараççĕ.

— Ей, çыраççĕ те!!!

Унтан кăшт тĕлĕреççĕ.

Мĕне кирлĕ-ха пире, чăваш ĕççыннине, çаван пек сăвă çырни! Камшăн çыратпăр? Халах вуламаст, вулама та пултараймаст... Мĕншĕн-ха тертлентеретĕр редактăрсене, пăчăхтаратăр критиксене, пăсатăр çамрăк тытăнакан поетсене... Пролетари литературĕ тăвасшăн-и? Анчах ыйтат-и вара çавнах пролетари литературĕ? Архива хăварасшăн-и? Калаччĕр, имĕш пĕр çĕр çултан: „ех! аташнă та вĕт ĕлĕкхи çынсем, тесе... Анчах, уншанах аппаланни килĕшет-и? Пĕлместĕп, нимĕнех те пĕлместĕп.

Вырăссемшĕн пулсан татах? (Вĕсем те ахаҫ йуратсах каймаççĕ). Вĕсен икçĕр çулхи литература. Вулакана вĕсен йака çенĕç тоникка çистеми çапах йăлăхтарнă, хускатми, пăлхатми пулнă ĕнтĕ Вет Пушкинтан вара пĕр тĕрлĕ. Пушкинган вара вырăс поези пысăк улшăну курман. Весене çавăнпа çĕнĕ, кĕм сĕрке, чуна витерекен мелсем кирлĕ. Ахаллĕн хускатас çук вулакана. Вĕсем çавсене шыраççĕ те. Майаковски Пушкинтан малтан çуралайман. Малтан Пушкин çуралмала пулнă, унтан тин Майаковски хăйĕн оратăрлă сăввисемпе.

Пирĕн вара?

Пирĕн Пушкин та çуралман ха. Пирĕн халҫхи литератур та вырăссен Пушкинччченхи литературĕ çеç (ăсталăх йенчен илсе калатăп). Пушкиншăн, чаваш Пушкинне хатĕрлемели вăхăт

кăна. Пирĕн литератур пуçланни те „çулталăксăр ерне". Епĕркашкăрашмасăрах. Пушкин стихĕпе те вулакансене макăртма та, пăлхатма та, култарма та, савăнтарма та пултаратпăр Пушкин стихĕпе çын çине çĕнĕ шухăш, çĕнĕ ĕмĕт кӳртме пултаратпăр. Пирĕншĕн вăл та-ха çĕнĕ.

Илтетĕп, пĕлетĕп, йуратнă йулташсем, есĕр мĕн кала сине. Есĕр калар: стил пурнăçпа çакăнса тăмала,—тейĕр. Пурнăç йепле хуçалат, стил те çапла хуçалат,—тейĕр Халђхи тапхăр стилĕ те çавăн йыш ни тейĕр Çук ĕнтĕ,—епĕр те калатпар,—пурнаç хуçăлни иртрĕ ĕнтĕ, епĕр хуçăк гелте мар; епĕр халђ хуçнă вырăна касса çĕнĕ ĕмĕтпе автантарнă кашласа ӳсекен йăвăç синче Пирĕн халђ,—епĕр те калатпăр,—бетонпа хурçă стилĕ; хурçă тултарса бетона сыпăçтармали стил. Патне те пымаст вăл сапаланчăк, сыпăçман шăтак-çурăк, кăшкăрашулă литератур стилне. Ахалђ мар—халђ социалисăмлă реалисăм синчен вумай калаçассĕ. Социалисăмлă реалисăм пулас çуках ĕнтĕ орттăр сăмахĕ пек. Ун никĕсне хунă та ĕнте Сталин йулташ. Халђхи тапхăр стилĕ Сталин сăмах стилĕнчен пуллă. Мĕншĕн-ха Сталин чĕлхи сывăх, халăха ăнланмала чĕлхе. Ăна учонăйсенчен пуçласа шкул ачи таранччен ăнланаççĕ? Мĕншĕн тесен, вăл тапхăрпа сыхăннă сти, халђхи вăхăтра чи кирлĕ стил Мĕншĕн-ха Сталин йулташ доклачĕсене Майаковски чĕлхипе тумаст? Мĕншĕн тесен Сталин йулташ лайăх пĕлет тапхăр стилне, массăна кирлĕ чĕлхене.

Епĕр те, есĕр те, писателсем, туймала çавна, вĕренмеле Сталин йулташран Нумайах пулмаст-ха „Литературная газета" синче „Литературные образы на службе генеральной линии" йатлă статйа тухрĕ; автăр: Сталин йулташ йепле пĕр кăшкарашмасăрах, сăмахсене тата-тата ыватмасăрах, хăйĕн сăмахне художĕствăлă илемлетнине кăтартса парат

Унтан тата. Халђхи вахăтра „мĕн пур халăха поези чĕлхине калаçтармали проблема" тарат пулсан, ăнланмала мар поези чĕлхине тимле пуçласан—кама виçĕ пуслăх уса парăпăр. Усă пулĕ-и мĕн пур чăваш ĕççыннине Хусанкай чĕлхипе калаçтарма пуçласан. Пурте кашкăра пуçласан, пурте кăкрисене çапа пуçласан, тилĕре пуçласан,—мĕнле пурнăç вара вал? Вĕт пер минутра пуçу минренсе кайĕ; ылханан „поезине" те, мĕн пур литературана та. Кай! Ан кăтартăр ун пек аçапа! Ан кăшкăрсамар! Хуллен каласан та илтĕпĕр! Поези поезийех пултăр вăл: çепĕç, киленӳлĕ пултăр ун чĕлхи. „Савăг хуçи" пултăр иккен—кăларăр унтан ăшă, çавăракан, лăпкăн тухса та кĕрешме чĕнекен сăмах.

Çавна епĕр сиртен кĕтетпĕр!

Çыратăр-и?—Çыратпă-ă-р!

Творчĕствăшăн чикĕ çук тенĕ. Пултарулăх егемĕн хисепсĕр. Авчах етемсем пурте мар пĕр пек пултарулă. Пур вĕсен хушшинче—ă та та çул уçна пултаракансем, пур вĕсен хушшинче çав сул уçакансем хыççăн тапалтатса пыракансем те... Милтисем çĕнĕрен çĕнĕ шухăш тупаççĕ, çĕнĕрен çĕнĕ мелсем

кӳртеҫҫӗ, ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫутатмали тӗлсем тупаҫҫӗ. Кайрисем вӗсен шухӑшне чӑмлаҫҫӗ, вӗсен мелӗсене куҫараҫҫӗ, хӑйсем ҫине, малтисем йӗрӗнчен мӗнле тапаҫлансан та тухаймаҫҫӗ

Ҫавӑн пекех литературӑра та... Талант тени пӗр каланӑ шухӑша тепӗр хут каламаст, пӗр ҫутатнӑ тӗле тепӗр хут ҫутӑ ӳкермест, пӗр усӑ курнӑ меле урӑх хӑй произведенине кӳртмест. Ҫӗнӗрен ҫӗнӗ шухӑш ун пуҫӗнче вӗрет: ӑна вӑл виличчен те каласа пӗтерейместь; унӑн вӗҫҫӗр темӑ: виличчен те ҫырса пӗтерейместь. Чӑнах, пултарулӑх вӗсен чикесер.

Теприсем вара, епӗ тонсем тейӗкевни, ӗмӗрне иртереҫҫӗ пӗр шухӑша ӗмсе, пӗр сӑмаха ласкаса... Весемшӗн, чӑнах, пултарулӑх чикелӗ, тӑвӑр... Вӗсем темӑ та тупаймаҫҫӗ, мелсем те вӗсен йалан пӗр манерлӗ, сӑмахӗсем те кивелнӗ, йӑлӑхтарнӑ сӑмахсем.

Ҫавӑнпа чӑн писатӗл пулас тесен,—изобретатӗл пулмала. Писатӗлсен—вачарри те Едиссон пек пулмала. Йепле изобретатӗл шухӑшласа кӑларать ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ӑс, тӗлӗнмеле машинсем, етем пӗлмен хатӗрсем, ҫавлах писатӗл те кашни хӑйӗн произведенинче мӗн те пулсан ҫӗнӗ шухӑша каламалах, мӗн те пулсан епӗр пӗлменнине пӗлтермелех, мӗн те пулсан епӗр астуманнине астутармалах. Писатӗл куҫӗ—пирӗн куҫ мар: курать вӑл епӗр курманнине; писатӗл хӑлхи—пирӗн хӑлха мар: илтет вӑл епӗр илтменнине; писатӗл чӗри—пирӗн чӗре мар: туйать вӑл епӗр туйманнине. Писатӗл вӑл чӗрӗ куҫлӑ, чӗрӗ хӑлхалӑ, чӗрӗ чӗрелӗ; пурне те вӑл пуҫтарать, пурте ӑна пӑлхатать, пуриншӗн те вӑл ҫунать Ҫырма ларать те вӑл—каламалине каламасӑр чӑтайми пулса, ҫын пӗлменнине пӗлтермесӗр тӳсейми пулса Ҫавӑнпа та унӑн шухӑшӗ те ҫӗнӗ, сцени те ҫӗнӗ, кашни сӑмахӗ те епӗр хаҫчен илтмен, сисмен сӑмах пек йанрать... Паллах, кусене ытла ҫӗкленсерех каланӑ, анчах унта тӗрӗсси те пур

Мӗн-ха пирӗн писатӗлсем ҫӗннине калаҫҫӗ? Мӗнпе вӗсем пире тӗлӗнтереҫҫӗ? Мӗнпе вӗсем пире шухӑша йама пултараҫҫӗ? Вӗсем хӑйсем те пиртен ытла курмаҫҫӗ, пиртен ытла илтмеҫҫӗ, пиртен ытла туймаҫҫӗ Калатӑп ытларах та: вӗсем хӑйсем те пиртен ытла пӗлмеҫҫӗ.

Мӗн ара унта... мӗне те пулсан 13—14 ҫулхи ача ларать те, ҫырать сӑвӑ. Лайӑх, кирлӗ темӑ ҫинчен ӗнтӗ. Ну, трактӑр ҫинчен, тейӗпӗр. Пӗрре ларса ҫырса пӗтерет те, йарать хыпаланса „Сунтал“ журнала... Лере пичетлемеҫҫӗ. „Темӑ лайӑх, маҫтӑрлӑх ҫук“ теҫҫе. Ку каллех ҫырса йарать кирлӗ темӑ ҫинчен. Лере каллех пичетлемеҫҫӗ. Хӑш чухне ответ та памаҫҫӗ. Ку хирӗҫет вара... Ун шухӑшӗпе: редакцинче ӗҫлекенсем хӑйсенне ҫеҫ пичетлеҫҫӗ, хӑйсем айала йулассран хӑраса ҫамрӑкс не йури ҫул памаҫҫӗ иккен. Йурӗ. Унтан пурпӗрех асла тухатӑп тесе, гени вӗренсен вӗренмесен те ҫийеле тухмала тесе, ҫырать те ҫырать, ҫырать те ҫырать...

Ҫыртӑр та-ха ... Ҫырикана чарма шухӑш ҫук пирӗн, анчах шухӑшлат-ши ҫав „гени“ уп сӑвви кам чӗри патне те пулин пырасси ҫинчен, кама та пулин тӗлӗнтересси ҫинчен, кама та пулин шухӑша йарасси, кама та пулин емоцилӗ органи-

зацилесси ҫинчен. Шухӑшламаст. чӑнах шухӑшламаст. Уншӑн пичетленсе пултӑр. Унта вулаҫҫӗ-и, вуламаҫҫӗ-и — уншӑн пурпӗрех.

Анчах вӑл чирпе „пулассисем“ кӑна мар, „пулнисем“ те чирлеҫҫӗ. Ҫырса парса журнала кӳртесси вӗсемшӗн ним те мар. Вӗсем ҫырман йапала ҫук. Клас кӗрешӗвӗ те, строительствӑ та, колхоз та—пери те йулмаст тимесӗр вӗсен перинчен.

— „Мӗн ҫинчен ҫырас-ха?“ — шухӑшласа лараҫҫӗ-ларҫҫӗ те, куран, тупаҫҫӗ те мӗн те пулсан, ирӗксӗр хайсене хӑваласа, пушӑпа хистесе ҫырса пӗтереҫҫӗ пулас. Унтан пичетлеҫҫӗ. Ҫапла вара „паллӑ произведени“ пулса та тӑрат.

— „Мӗн ҫинчен ҫыраҫҫе-ха“ — вуласа ларҫҫӗ-ларҫҫӗ те, вулакансем, нимӗскер те тупаймасӑр, и ӗксӗр хӑйсене хӑваласа, пушӑпа хистесе вуласа пӗтереҫҫӗ. Унтан манаҫҫӗ. Ҫапла вара „паллӑ произведени“ вулани пулса та тӑрат.

Ҫыратӑр? — Ҫыратпӑр! Вулатӑр? — Вулатпӑр! Кама усӑ? Чӑн, аслӑ писатӗлсем, епӗ илтнӗччӗ ӗлӗк, хайсен чӗринче ҫуралнӑ шухӑша пӗр ҫул, ик ҫул, виҫ ҫул тарихччен ҫитӗнтерсе, сыхласа, сухатмасӑр ҫӳреҫҫӗ. Йулашкинчен кӑна, ӑша тулман вырӑн йулмасан ҫеҫ пӑлханса, вӗресе туха пуҫласан ҫеҫ, ҫунтарса, каламасар канлӗх пами пулсан ҫеҫ, — писатӗл ручкӑпа хут тытнӑ. Ха, — ун чухне те: „чӗре сивӗнсенех ҫырма пӑрахнӑ“. Толстой калат: „шухӑш пуҫран ҫеҫ туха пуҫласан, чӗререн килмесен, епӗ ҫырма пӑрахатӑп вара... ҫырмастӑп“, тет. Тӗрӗс, кӑна пӗтӗмӗшпех йышӑнма пултараймастпӑр епӗр, мӗншӗн тесен епӗр искусства, литература класлӑ практикӑри пысӑк спецификлӑ хатӗр тесе пахалатпӑр, ҫавӑнпа епӗр искусства, литература фронтӗнчи хавӑртлӑх ҫине те, писатӗл хӑйӗн ӗҫне мӗнле организацилесси ҫине те (т. ыт. те) ал сулса пӑхмастпӑр. Анчах, епӗ акӑ мӗн каласшӑн:

Писатӗл хӑй ҫав ҫутатакан шухӑшпа ҫунмасан, пӑлханмасан, каласа ӗлкӗреймесӗр антӑхмасан, — кам-ха унне вуласа палхӗнӗ? Кам-ха ун шухӑш хӗлхемне хӑй чӗрине кӳртӗ? Каманне вӑл выртакан, тӗлӗрекен вӑйсене хускатӗ? Кам-ха унне вуласа пӗтерсенех: Чӑнах вӗт! Ак мӗншӗн кӗрешмеле! — тейе. Кӗнекине хупиччен ҫеҫ мар. ӗмӗрлӗхе хӑй чӗринче, хӗлхем усрӗ!

Вӑт ҫавна кӗтетпӗр писатӗлсенчен.

Ӗнентерӗр пире!

...Пӗрре епӗ курнӑччӗ пӗр етем, чӑвашла пӗлекен етемех, пӗр „паллӑ произведенийе“ йепле вуланине.

Уҫрӗ вӑл кӗнекене, чӗлӗм тивретрӗ, вырӑн ҫине кайса тайанчӗ.

— Та а-к! — терӗ те, вулама пуҫларӗ

Вуларӗ пӗр страницӑ сиккеленмесӗрх. Унтан сасартӑк хытгӑн вула пуҫларӗ: „Вал вара чунӗне вӗри ҫагма ҫинче парҫа ӑшаллянӑ пек ӑшаланма хатӗр пулна Совет влаҫӗшӗн!“

— Охо!!! — тесе йачӗ таса. Кулат тесен, кулмали ҫын мар: комунис. Ӗненмест те мар ун пек ҫын пуррине: Пӗлет — пур; анчах кӗнеке ҫинче ӗнентермеле тухман. Ҫава „охо“ тетерсе тутине йӗрӗнтерсе пӑрӑнтарат те...

Татах вуларĕ-ха... Ăшăнче вуласан-вуласан татах кăшкăрса йачĕ:

— „Вăл вăра пĕтĕмпех çĕнĕ етем пулса кайнă".

Ёнсине хыçрĕ ку йулташ:

— Пăх-ха есĕ ăна? Мĕн хăтланат вăл!

Хаљ те пăрахмарĕ-ха кĕнекине. Вуласа ларчĕ тата пăртак. Унтан сасартăк çĕкленсе. кĕнекине те çӳле тытса йури артис пек вула пуçларĕ:—„пĕр харăс. пĕр чĕре пек, пĕр ура пек, пĕр пыршă-пакарта пек (кăна ахăрне. хăй хушрĕ).. вĕсем хавaслăн. хастарлăн, савăнăçлăн ĕçле пуçланă. Çĕнĕ тĕнче çитсе тăнă вăра".

Çакăнта çитрĕ сес. кĕнекине пăрахрĕ. Ассан сывласа йачĕ.

— Ей-кай. Хăтланаççĕ етеммисем те!

Шухăшлăр-ха. Вулаканĕ—комунис ответлă ĕçре ĕçлет. Кулас çук пек ентĕ çав повĕç синче тĕслекен ..хастарла" геройсем çинчен. Пĕлет пек ĕнтĕ чунĕпе Совет влаçĕшĕн тăракан çынсем пуррине. Курат пек ĕнтĕ етем çуралнине. Мĕншĕн йĕрĕнетхи вăл повĕçри геройсенчен? Мĕн пеп вулас ки места ун пеккине. Мĕншĕн тесен, пуçламĕшĕнчен тытăнса вĕçне çитичченех фалљшивă. Йĕрентерет. култарат, тăвăнтарат сăмахсем фалљшивă йаныпани. Ĕнеӳ çукки. Ырă сăмахсемех, вĕсемпе уса кура пĕлмесен, йĕклентереççĕ. Ырă сăмахсем те вĕсене çутата пелмесен, култараççĕ, йĕрентереççĕ. Витĕмлĕх çук! Енер ĕненес тесен те, ененместпĕр... Ăспа пĕлетпĕр те вăл çапла пуласса. чĕре ĕненмест.

Мĕн тумала ха, хаклă писатĕлсем? Епĕр айапла-и?

Тата тепĕр тĕслĕх:

Шкул. Чăваш чĕлхи урокĕ Вулатпăр Агакăван .Инкесем" йатлă калавне. Арăмсем шкула тума тытăнчĕç Çĕмереççĕ ĕнтĕ пĕтĕмпе..

— Ха-ха-ха! — кулса йачĕç сасартăк ачасем! — Ап па-па-пав...

— Мĕн? Мĕн пулнă? - калава та, вулакана та хисеплеменшĕн кӳреннĕ пек. епĕ çиленсе ыйтрăм

— Ара, — теççĕ, — пăх-ха есĕ: сутрĕç, турĕç. ларгрĕç,— пĕр минутрах. Мĕнĕ пӳрчĕ апла час туса лартсан? Çитменнине пĕр арçын та çук.

Ăçта кайнă вĕсем?

Мĕн калайăн-ха? Калатăп ĕнтĕ: йепле повĕç пулни çинчен. Çапла та, çапла.. композици, фабула, çужет... Анчах ăçтан ĕнентерен-ха сăмахпа: калава вуласа ененмен çынсене. Хăнк туса лараççĕ вĕсем.

— Мĕншĕн-ха, — теççĕ, — апла суймала?

-- Суймаст вăл,— катартса парат.

— Суйат вăл!

. Ĕненмĕччĕç-ши ĕнтĕ ачасем хĕрарăмсен пултарулăхне, ĕненмĕччĕç-ши шкул çапла лартса—ĕненмеле çырма пулсан? Вĕт çав ачасемех „Хĕнхур айĕнче" вулана чух куççулĕсене чарайман. „Ку чăн пулнă ĕнтĕ" тесе чĕтресе итлесе лараççĕ. Вĕсем вал поемăна емĕрне те манас çук

Ĕненмеле çырман. Хавăрта айăп. Ĕнентермеле тăвăр ăпнетулашне, итти пурте пулĕ. Тек калăр, Агакăв пек, калав

хыççăн шантаракан сăмах, тек кăтартăр фактăсем çине (çав-çав йалта çапла пулнă..), тек тупа тăвăр, пурпĕрех сире ĕненмесçĕ Художĕствăла произведении ăшĕ ĕненчĕклĕ пулмасан, сăмахпа каласа ĕнентерес вĕçне тăрса йулсан,—нумайах мар вара унта. Ĕнентерĕр кăтартса. Ун чухне: Ак художник! тейĕпĕр вара. Чăн-чăнах художник тейĕпĕр.

Кăтартнине ан кăтартăр, вĕрентнине ан вĕрентĕр.

Музыка илер. Чи малтанах пулат пĕр кĕвĕ. Лайăх композитăр çав пĕр кĕввех çĕр тĕслĕ калат. Кашни çĕнĕ, кашни çынна çавăрмали, илтмен кĕвĕ... Хăйсем пурте пĕр кĕвĕрен пулнă. Çав урăхран урăх калакан сăмахсене, урăхран урăх калакан кĕвĕсене варийацисем теççĕ.

Çавăн пекех художĕствăлă литературта та... Никам та тавлашмаст: хаҕхи вăхăтра чи кирлĕ, чи паха темăсем: клас кĕрешĕвĕ, социалисăм строитĕлстви, классăр обчă тăвасси. Анчах вĕсем çинчен ытларах та нумай çырнă ĕнтĕ... Татах та çырĕçха. Çапах та вĕсем талантлă писатĕл аллинче йаланах çĕнĕ, йаланах витермели темăсем пулса тăраççĕ. Кивĕ темăн çĕнĕ варийацисем пулса тăчĕç. Вĕсем йаланах чĕре патне пычĕç.

Анчах куçасшăн мар-ха пирĕн палăрса çитнĕ писатĕлсем варийацисем çине, пĕрмай ĕвĕрлеççĕ тĕп темăна: пĕр улăштармасăр, пĕр çĕнĕ кĕвĕсем, мотивсем кӳртмесĕр.

Мĕн терлĕ хитре йурă пулсан та пĕрмай ĕнĕрлесси йулашкинчен йăлăхтарат; хăт те мĕнле усăлă, вырăнлă темă та пĕрмай шăйăрттарсан, пĕр манерлĕ çутатсан, пăлхатми, хускатми пулат.

Çав вăхăта çитрĕмĕр те ĕнтĕ епĕр. Çыра-çыра нумайа вĕрентрĕç ĕнтĕ пире. Епĕр пĕтĕ нумай „пĕлтĕмĕр“ кулаксем çинчен, чухăнсем çинчен, вăтамсем çинчен.

Епĕр пит лайăх, çавхатер пит лайăх, калама çук лайăх пĕлетпĕр (писатĕлсем вĕрентрĕç): кулак—усал, кулак—мăнхырăмлă, кулак—кĕреçе сухаллă, кулак—çахан, хулăм сасла калаçат.

Епĕр пит лайăх, çавхатер лайăх, калама çук лайăх пĕлетпĕр (писатĕлсем вĕрентрĕç): чухăн—типшĕм, чухăн—йăваш, чухан—„качака сухаллă“, çинçе сасллă калаçат.

Епĕр пит лайăх, çавхатер лайăх, калама çук лайăх пĕлетпĕр (каллех писатĕлсем вĕрентрĕç): вăтам—вăтам çын; вăтам—вăтам сухаллă; вăтам—вăтам кăмăллă, вăтам сасна калаçат.

О! Епĕр-ха! татах та пĕлетпĕр. Епĕр нумай пĕлетпĕр! Епĕр мĕн пур плакат çинчи сăнсене пĕлетпĕр. Чĕре, пурнăçра пур пурăнакан çынсене кăна пĕлместпĕр.

Епĕр татах-ха пĕлетпĕр: партийца пулсан. вăл çĕр çывăрмасăр ĕçлет. (Мĕскĕн! Мĕншĕн-ха ăна автăр çав-тери асаплантарат; çывăрма пур çинче çывăрттармаст); кулак хĕрне йуратат те, йăнăшасран хараса пăрахат; калаçмаст,—пĕрмай доклад тăват; кулмаст, пĕрмай ĕç çинчен шухăшлат

О! Епĕр куна çеç мар пĕлетпĕр. Татах-ха нумай пĕлетпĕр. Епĕр татах-ха пĕлетпĕр: кулак пулсан,—пăлĕсене шак-шак-шак шаккаса йун ĕçесшĕн çӳрет; подкулачниксене ерехпе хăй

йенне çавăрат; калаçмаст, — пермай тилĕрет; кулмаст,— пĕрмай партийца вĕлересшĕн шухăшлат.

О! Епĕр ăна кăна та мар-ка пĕлетпĕр. Татах та-ха нумай пĕлетпĕр.

Епĕр татах-ха пĕлетпĕр: колхозник пулсан, вăл „таран шухăша" кайат; уйрăм хуçалăхлă çынна каласа аплантарат; пăртак иккеленет; калаçмаст,—пĕрмай мухтав йурри йурлат; ĕçлемест, пĕрмай савăнат, хĕпĕртес ушкăнпа.

О! Епĕр тем те пĕлетпĕр. Епĕр мĕн пур плакат çинчи сăнсене пĕлетпĕр Пĕр—чĕрĕ çынсене кăна, чĕре пултарула та, çитменлĕхлĕ те, савăнăçлă та, хуйхăлă та, калаçакан та, кулакан та—пĕр сăмахпа „пурăнакан çынна" пĕлмесгпĕр. Ыйтатпăр вара антранă йенне. Чăнах-шим, мĕн пур етемсене çав калăпсемпе виçсе туна-ши? Чăнах та çук-ши тĕнчере (пурнăçра) мăнтăр чухăнсем, типшĕм кулаксем, канса ĕçлекен партийцасем, шăлне шаккамасăрах хăйĕн ĕçне тăвакан кулаксем?

Пур-тăр вĕт вĕсем! Пур! Кăтартăр пире тата çавсене. Кашни етемшĕн клас кĕрешĕвĕнче хăйĕн пĕчĕк çулĕ. Çав пĕчĕк çулсем пĕрлешсе, аслă, çĕнтерекен класăн пĕр çулĕ пулса тăраççĕ. Епĕр куратпăр çав аслă çула çеç. Унта илсе пыракан пĕчĕк сукмакĕсене астумастпăр. Çавăнпа та пирĕн произведенисенче пуринче те пĕр манерлĕ фабулă. Пĕр манерлĕ фабулă пулсан та, çĕр тĕрлĕ çужет пулма пултарат. Анчах кунта та мухтанма пултараймастпăр. Пурин те çужет пĕр манерлĕ. Кама йăлăхтарман ĕнтĕ кулак пытарнă тырă, тырă тупни, кулак тĕрмене кайни...

Тўп тўрĕ çул. Пĕр пăрăнчăк та, пĕр сиктĕрме те... Темшĕн çавăн пек произведенисене вуланă чух типĕ, шăрах çулпа пынă пек туйăнат. Куçа кантарма çĕмĕрт йавăççилĕ тарăн вар та çук унта; хăлхана йăпатма шăнкартатса йухакан шыв та çук; „канса выртма" пилеш йавăç сулханĕ те çук. Типĕ. пĕтĕм лех типĕ... „Тарăн шухăша" кайма хăт кăвак пĕлĕт те çук! Утас килмест çав çулпала...

Парăр пире пурне те: çĕмĕрт çеçки те, шăнкăртатса йухакан йухăм шыв та, кавма пилеш сулханĕ, шухăша кайма кăвак пĕлĕт те... Пуринчен ытла кăсăк çул парăр: кайнăçем кайас килтĕр, утнăçем утас килтĕр, ĕçленĕçем ĕçлес килтĕр. Парăр пире интереслĕ фабула. Тўрĕ çулсене пĕлсе пĕтернĕ.. Вĕсемпе утас килмест Илсе кайар вăрттан çулсемпе, каламасăр мĕн курассине.. Тĕ еннĕçем гĕлĕнер епĕр, курнаçем курас килтĕр...

Парăр пире касăк интереслĕ кĕнеке.

Вĕçне пыратпăр, çĕвви ан курăнтăр!!!

Художĕствăлă произведенин хăйĕн виçи пур. Вăл „каласа панипе" „катартни". Ăна чыхварпа виçме те пулат. Пулат иккен произведенивче „катартни" 30% çеç, йулашки, „каласа пани" 70% пулсан — вăл начар произведени; ун çинчен каламали те çук. Пултăр каласа панипе катартни алла çине аллă— вăл пырат-ха. Кăтартни 70% çитсен, каласа пани 30 çеç йулсан, — вăл вара совçемех аван. Анчах генисем 90% çитереççе.

Толстой каласа ҫех нимĕскерле сценăна та иртерсе йамаст. Нимле йăвăр вырăна та весем каласа парса кăна иртермеҫҫĕ. Каласа пани пулсан та, вĕсен фон ваҔҔи кăна, фоншăн кăна пулат, урăххишĕн мар. Пирĕн оригиналлă произведенисенче кăшт урахларах тухат; катартни фон вырăнĕсенче ҫеҫ, чан малта автăр каласа пани тăрат. Чи йăвăр сценăсене каласах иртерсе йараҫҫĕ. Те вăй ҫукран, те йăвăрлăхран хăраса. Вĕт пирĕн чи чаплă „Тăвалла“ романра та ҫав инкек сисĕнет: чи кăтартмалли вырăнсене каласа кăна иртнĕ. „Рутра“ ҫинче те ҫавах. Унта ĕнтĕ ҫавхатер „рассуждени“ нумай. Вĕсемсĕр те повĕҫ идейĕ ҫавхатер паллă Ыттисем те ҫавах. Пирĕн произведенисен чи пысак инкекĕ вăл ҫăмăл тĕлсене ширани, йăваррисенчен пăрăнни. Вырăссем каларăшне „по линии наименьшего сопротивления“ ҫыраҫҫĕ. Чăн писател пĕтĕмпех тепĕр майлă, шират чăн йăвăр май. Хăйĕн стилĕшĕн те, композицишĕн те. Вуланă пуҔ Горйкин „Клим Самгин“ повĕҫне: унта вĕт ҫынсен идейĕсене интеллигент „Клим Самгин“ ăнлавăвĕ урлă ҫутатса панă. Горйки, тен, йури, ҫăмăллан ан пĕлтертĕр тесе, ҫав ҫула суйласа илнĕ пуҔ. Ҫапах та, хăйне ик-виҫ контроҔ лартсан та, Горйки пĕр ытлашши сăмах кăлармаст. Мĕн пур сăмах унăн вырăнлă, кашни сăмах ҫутатат пĕр вăхăтрах: герой шухăшне те, Клим ăнланăвне те, Горйкин хайĕн ăнлантаракан идейĕне те ..

Пирĕн, чăвашсен, ҫук-ха вăл. Пирĕн сăмахсене тыткалаҫҫĕ тирпейсĕр. Кирлĕшĕн те, кирлĕ маршăн та турткалаҫҫе... Вырăнлă та, вырăнсăр та усă кураҫҫĕ. Ҫаванпа, чĕлхере (стилте) пулат ҫавхатер нумай ҫӳпĕ-ҫапă. Вĕренес пулат пирĕн сăмаха тирпейлĕ тытма. Пĕр сăмахăн пĕр вырăн анчах, ик-виҫ вырăн ҫук. Ҫинонимсем (чаваш чĕлхинче пухман пулсан та) ҫук вĕсем; мĕншĕн т сен, пĕр сăмаха тепĕр самахпа улăштарма ҫук. Вăл ҫеҫ мар: цер самах та тĕрлĕ ҫын ҫăварĕнчен пер пек илтĕнмест: «й у р а т а т ă п“ самах, хĕре йуратакан каччă ҫăварĕнчен тухсан, пире киллентерет, пуп ҫăварĕнчен тухсан—йĕклентерет. Сăмах пĕр кăмăллă мар.

Епĕр, сăмахсемпе мар, сценăсемпе те тирпейсĕр выҔатпăр. Нимле економи ҫук Хăшпĕр произведенисенче: ҫырат-ҫырат те автăр кăтартса, унтан ҫавăн ҫинченех каласа пама тытăнат. Те пире ăнланмаҫҫе, теҫҫе; ача вырăннех картаҫҫĕ. Ăнланатпар, писател йулташсем! Кăтартнипе те ăнланатпăр?

Ăнланăпăр пурне те, анчах катартма пĕлĕр; курăпăр пурне те, анчах уҫса катарта пĕлĕр; касăхапăр сирĕн произведенипе, анчах... й у п т а р а пĕлĕр. Ан манар: есĕр илемлĕ, йуптарулă сăмах ăстисем; ан манăр: есĕр илемлĕ сăмахпа пирĕн шухăша, ĕмĕте йертсе пыракансем, епĕр йуптарнипе туймасăр „айван“ ача пек, итлесе ларакансем. Курна-и есĕр: ача халлап йепле итлет: куҫне чарса пăрахат, аллине хускатмаст, сывлăшне ҫавраймаст . Санан ҫавартан тилмерсе мĕн тухасса кĕтсе тăрат. Ун чухне халлап йаракан та „импровизатăра“ тухса кайат: пĕрре сассипе хăпартат, тепре антарат... Куҫне кирлĕ пек выҔатат, аллисене тăсат... Кăтартат! Йепле те пулсан кăтартасшăн

тăрăшат. Ача манăçат вара ун чух, манăçат пĕтĕмпех... Урăх тĕнче, çутă тĕнче, садсем, кайăксем, сĕтлĕ кӳлсем, ӳпле кайăксем ун куç умĕнче выљаççĕ. Таçта, такшин илĕртет: ырă, ырă ун чух.

Епĕр те ачасем вĕт сирĕн кĕнекĕре вуланă чухне, епĕр те пурнăçа мĕн пур ун хуйхипе, савăнăçĕпе, кĕрешĕвĕпе, илемĕпе — пурнăçа, чĕрĕ пурнăçа хамăр умма илсе килес тесе, вулатпăр. Епĕр те вĕт „айван" вулатпăр? Тĕпчесе тăмастпăр: ку пулнă-и, ку пулман-и? тесе. Ĕненесшĕн епер сире, есĕр тăвакан пурнăçпа пурнăçшăн! Епĕр те ача пулар: епĕр те курар сирĕн геройăрсене, ача „сĕтлĕ кӳл" курнă пекех, вĕсен куçне курар, вĕсен тути кулнине курар. Вĕсен шăршине, вĕсен сывлăшне туйар. Манăçар пĕтĕмпех! Ан тив, есĕр çыракан йапала пулман пурнăçах пултăр, епĕр ăна туйар мар. Пырат иккен сирĕн геройăр хĕрпе пĕрле — епĕр курар, ун чĕри тапнине туйар, пыраççĕ иккен çулпа — чечек тĕшрĕлнине курар, вĕсем пăшăлтатса чăмăртаннине курар. Аспа кăна мар, куçпах курар, хăлхапах илтер.

Толстойăн пур пĕр сценă: Хĕллехи каç.. Çуна... Лашасем. Шанатăр-и? Йур лаша урипе чăкăртатни илтĕнет, шарт илтĕнет. Лаша тулхăрни, пăр сирпĕнни, пуçне суллани — пурте, пурте куç умĕнче. Вулатăп та: шарт ак ху пыратăн çуна çинче, хыçалти лаша сывлăшĕ кăтăклат сана, çуна чашкăрат, ак çывăх, инçе мар, йăмралă йал, хватер, ăшă пӳрт...

Çава вăл художĕствăлă иљљузи! Çавна кĕтетпĕр, писатĕлсем! Çавна кĕтетпĕр!

Манар епĕр: есĕр писатĕл иккенне, есĕр çав калава маçтăрлăхпа килтерсе мĕнле-мĕнле çыпăçтарнине. Пурне те манар. Йалтах, тĕппипех сирĕн ирĕке кĕрсе ӳкер. Есĕр йертсе çӳрĕр пире. Йулашкинчен кăна, пире аташсан-аташсан, тĕрĕс çула илсе тухсан, кĕнекен йулашки йĕркине вуласа тухсан тин епĕр астуса илер епĕр кĕнеке вуланине, астуса илер те тăсар кĕнеке çинчи шухăша! Чăн художĕствăлă произведени ĕмĕрне йаланах çапла: вăл йертсе пырат; пĕр-пĕр проблема çутатат, çутатса парат, унтан сасартăк татат те, сан умна шухăшлама тепĕр пысăк проблемă кăларса тăратат. Художĕствăлă произведени хăт те хаçан та шухăшлама вырăн хăварат.

Çаксем пурте: — художĕствăлă иљљузи те, естетикăлă киленӳ те, идейăн таранлăхĕ те, — пурте пулма пултараççĕ произведени вутпа шăранса, станокпа саваланса тухсан çеç. Пĕр çурăк, пĕр сава тивмен вырăн, пĕр йĕр, пĕр çĕвĕ ан пултăр. Ан курар епĕр сирĕн произведени çĕввисене, çыпăçтарнă тĕлсене, çилĕм тивмен çĕрсене. Йуптарар, анчах вĕçне пытарăр: курар епĕр вĕсене...

Вĕçне куртăн иккен, йĕр-йĕр вĕçĕсене астурăн иккен, — унтан вара илемлĕх „пуç çаврăни" пĕтет: унпа вара тăранаймастăн, унпа вара киленейместĕн!

Хăвăра хăвăр тупăр!

Икĕ тĕслĕ тĕсленеççĕ геройсем.

Талантлă автăрăн геройĕсем çывăх. Вĕсем сан пĕлĕшӳсем... Калаври герой — сан чи çывăх тусу; калаври тăшман — сач чи

курайман тăшман; калаври хĕр—есĕ чи йуратнă хĕр. Ун чухне вĕсен кашни утăмĕшĕн пăшăрханатăн, кашни йăнăшшăн макăратăн, кашни савăнăҫшăн савăнатăн. Ырă куҫҫуљ, ҫăмăл, тутлă куҫҫуљ килет ун чухне пыр тĕпне; ыррăн тăвăнтарат, ыррăн куҫ айне йухса анат. Вулатăн ун чух чĕтресе: ах! мĕн пулат. Ах! мĕн пулат, ах, мĕнле тухат герой инкекрен, ах, ҫĕнтерет! — тесе. Герой мĕн пур чăрмава ҫĕнтерсен, тăшмансене ҫĕнтерсен, йулашки страницăра вара геройпа пĕрле ху та йăл кулатăн, ирĕклĕн канса сывлатăн

Ырă ун чух! Киленетĕн ӳтпе те, чĕрепе те... Илемлĕх килентерет.

Урăхла пулсан: — сан йуратнă геройу йе тăшман аллине, йе тĕттĕмлĕх чĕрнипе пурнăҫран уйрăлат пулсан, вилет пулсан, ху та ун вилĕм тĕтревне туйатăн; сан ҫан-ҫурăм тăрăх та вилĕм хăрушлăхĕ сăрăлтатса иртет. Кам чĕтремесĕр вуланă пуљ „Нарспийе“? Кам ылханман пуљ Тăхтамана, Михетере? Вĕсен вилли те шел мар вĕт вуланă чухне. Вĕсем тăшман. Ун ырăнне камăн кăмăлĕ хуҫăлман пуљ Нарспи вилли йуман ҫинче сулланса тăнине сăнласан... „Нарспи“ вăл, ҫапах: йăвăр шухăш, тĕтрелĕ, пуҫа ыраттаракан шухăш анчах хăварат. Ниҫта та чĕнмест, ниҫта та хăваламаст, нихăш йенне те ҫул кăтартса памаст.

Хаљхи вăхăтра пире кирлĕ йăхăракан, ҫапăҫма чĕнекен, кĕрешме тимлекен произведенисем. Анчах ахаљ сăмахпа кăна ан чĕнĕр. Апла пухусенче те чĕнессĕ. Систермесĕр, вăрттăн, айаккинчен чĕнĕр! Чейепе чĕнĕр! Чĕнĕр кăтартса, тĕслĕх, сăнлах кăтартса. Чĕнĕр сапла: вулакан, хускалма йуратман вулакан та, ҫын сăмахне итлеме йуратман вулакан та, хăй сисмесĕрех ҫаврăнтăр сирĕн йенне!

Ҫăмăл мар ҫапла ҫырма! Йăвăр апла ҫырма! Сивĕ чĕрепех ҫапла ҫырас ҫук. Писателĕн хăйĕн куҫҫуљ йухтармала, ҫыннăнне кăларас тесен; хăй черниллпа мар, йунпа ҫырмала, ҫын йунне пăлхатас тесен; хăй ҫулăм ăшăнче ҫунмала — ҫын ăшне тивертес тесен.

Апла пултăр тесен, писатĕл хăйĕн сăмахне, хăйĕн ҫыру майне, хăйĕн шухăшне, хăйĕн ырăнне тупмала. Кашни писателĕн хăйĕн уйрăмлăхĕ пулмала, хăйĕн тĕсĕ пулмала. Хăйĕн тĕсне, хăйĕн ырăнне тупаччен писатĕл нимĕскерле шухăша та, нимĕскерле сăнлăха та татсах калаймаст. Ҫырăр ҫапла: епĕр сирĕн произведенийе вуланă чухнех, йатăрсем патне ҫитиччене, малтанхи йĕркене вуласанах: „куна ҫавă ҫырнă!“ тейĕр. Кашни писателĕн хăйĕн ҫырмали мелсем, хăй йуратарах паракан самахсем, хăй куракантарах пурнăҫ тĕввисем пулмала.

Ҫаван чухне кăна есĕр тĕслекен геройсем ҫывăх пулĕҫ сирĕншĕн те, пирĕншĕн те... Ун чухне тин вĕсем таҫтисем, палламан ҫынсем пулмĕҫ; повĕҫ айакри, пурнăҫран инҫе йапала пулмĕ. Ун чухне тин вулакан вуласа пĕтерсен: Ан тив! Хăтланччăр ĕнтĕ! темĕ. Сирĕн сăмахăра тин итлĕ.

Сӑмах саватҫисем! Ан ҫиленӗр! Пӗлни те пулӗ, пӗлменни те пулӗ, анчах сӳтсе-йавнине мӗн ҫитӗ! Епӗ каларӑм, есӗр калӑр. Савӑт панӑ сире шанса. Анчах савӑт ӗҫхалӑхӗн Унта есӗр мӗн тӑвас тенине хӑвӑр ирӗкӗпе тӑвас ҫук. Ҫӗр куҫ, пин куҫ сире сӑнат.

Усӑ курма пӗлӗр! Усӑ кӑтартма та пӗлӗр!

Сӗнчел, 1933 ҫ.

Ответлӑ редактӑр **Н. ВАҪАНКА.**

Редколлеги членӗсем: **И. Кузнецов, А. Золотӑв, Иван Мучи, Уйӑп Мишши, Е. Захаров, Митта Ваҫлейӗ, П. Оҫипӑв.**

Тех. редактӑр **Н. Йангас.**

ТУПМАЛИ.

стр.

1. **Е. Еллийӗв.** Чӗн тилкепе (калав) 3
2. **Илле Тукташ.** Ҫанталӑк (сӑвӑ) 14
3. **Валентин Ахтубай.** Ҫ у р а к и с ӑ в в и с е м:
   1. Ҫурхи кӑмӑл 16
   3. „Христус воскрес!" 17
   3. Саванӑҫлӑ вӑхӑт 18
4. **Аркади Ӗҫхӗл.** В ӗ р и ӗ ҫ ҫ и н ч е (сӑвӑсем):
   1. Тӗксем кӑвак кӗпелӗ ир... 20
   2. Хирти йурату 21
5. **В. И. Краснов.** Тӑвалла (роман, иккӗмӗш кӗнекин малали сыпакӗсем) 22
6. **Уйӑп Мишши.** Т и н ӗ с с ӑ в в и с е н ч е н:
   1. Тинӗс тӳлеккен тӗлӗрет.. 49
   2. Тинӗсрен илемлӗн... 50
   3. Каҫпи каҫе 50

ПУРӐНСА ИРТЕРНИ.

7. **Пав. Йермолайӗв (Иленгей).** Шуррисем Тӗрлемеҫре (асаплӳ) . . . 51
8. **П. Хусанкай.** Улмуҫҫилӗ Тӗрлемес (поемӑ) 68

ЛИТЕРАТУРӐ АРХИВӖ.

И с а й ӗ в М е т р и ҫ и н ч е н:

9. **П. Комиссаров (Киремет Петти).** Исайӗв Мӗтрипе Мускаври ача ҫуртӗнче пӗрле ӳснӗ йулташран (асаплӳ) 74
10. **Лашман Ҫт.** Метрийе асӑнса 76
11. И с а й ӗ в М ӗ т р и ҫ ы р н и с е н ч е н:
    1. Варанисем 78
    2. „Хӗрлӗ пучах" 79
    3. Ҫупук ҫыравӗ 82

ТЕОРИПЕ КРИТИКӐ.

12. **В. Долгов-Худар.** „Тӑвалла" романпа унӑн критикӗсем ҫинчен . . . 86
13. **Е. Захаров.** „Тӑвалла" ҫинчен 111
14. **Вл. Паймен.** Идейӑлӑхпа ҫастӑрлӑха ҫӳлти сыпака (Тукташӑн „Ӑкӑр ҫырми" повеҫӗ ҫинчен) 123
15. **А. Таҥков.** „Вӑкӑр ҫырми" ҫинченех 137
16. **Е. Захаров.** М. Трубиван „Ӗҫ тухмарӗ" калавӗ ҫинчен 141
17. **Е. Еллийӗв.** Уҫҫӑру — чӑваш писателӗсем патне вулакантан 144

Ответ. редактор Н. ВАСЯНКА.
Техн. редактор Н. Янгас.

Сдано в набор 3/XII—33 г. Подписано к печати 25/XII—33 г.

Формат 62×94/16. Тираж 4 000 экз.
Изд. листов 10 В одном изд. листе 52 000 знаков.

Индекс Х—3 Чувашгиз № 212. Заказ № 2935.
Уполн. Чувашлита № 1182.

Типография № 2 Чувашского Государственного Издательства в гор. Алатыре, Чувашской АССР.